# трактăр

ЧĂВАШ СОВЕТ ПИССАТТĔЛĔСЕН
ЛИТТЕРАТТУРПА КРИТТĔК АЛЬМАНАХĔ

ПИЛĔКМĔШ
КĔНЕКЕ

ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР 1933 ҫул

Отпечатано в типографии № 1
ЧУВАШГИЗА
г. Чебоксары, Канашская, 16

# ÇАРАН ÇИНҪЕ

ОҪҪЕРК

**Е. ЕЛЛИЙĔВ.**

Ҫĕтревлĕ лаҫака, хĕрлĕ хурăнлăх... Хăймаллă кăвак пĕлĕт... Текерлĕк найкăшат кӳлĕсем çинҫе. Савăк та, киҫем те...

Тăнăç, тĕттĕм каç вăрманĕсем ăшĕнҫе. Кавак «уйçутти», шĕвĕ шурăмпуç... Таврара «Ҫăваш тĕнҫи», пĕтĕмпех хăйне май ҫăваш тĕнҫи кунта! Йалĕсем те: «Çирĕклĕ»; «Хĕрлĕ Шур», «Вăрмантей»...

Çак ҫаваш, «тĕп ҫăваш» тĕнҫинҫен сиксе тухнă йурă:

«Саврăш пуçĕнҫе, вăрман ăшĕнҫе,
Еп çуралнă ҫăваш йалĕнҫе...» *)

Пĕлмелле:—Ҫăваш йалĕ вăл—тĕне кĕмен ҫăваш йалĕ; ҫăваш та тĕне кĕменни çеç—ҫăваш, теççĕ кунта. Тĕне кĕнисене вĕсем ҫăваш вырăнне картмаççĕ.

Саврăш пуçĕ тавра ҫăмăртаннă çиҫĕ йал—Аксу районĕнҫи «Пĕҫĕк ҫăваш оплăçĕ»: Саврăш пуç, Çирĕклĕ, Хĕрлĕ Шур, Ишелйел, Атлаш, Акташ, Йалттан. Ҫăмăртаннă та,—тĕне кĕнисенҫен йутшăнса, тĕнҫерен ппрĕнсе пурăннă вĕсем авалтанпа хăйсен пурнăçпе, хăйсен йалипе, хăйсен ĕмĕҫĕпе...

Çирĕклĕх... Кукăр-макăр çырма... Хăмăр анасем... Сĕлĕ, пăри, унтан татах пăри... Çырулă ҫулсем, «Валем хуçа» тĕтрелĕ халапĕ... Çакăнтан сиксе тухнă:—

«Авалхи йăла, тĕттĕм пурăнăç,
Хупларĕ-çке çамрăк телейе...»

...Татах лаҫака, татах шурлăх... Вĕсен тăрăх аслă улăхсем, вĕççĕр çарансем... Шурути, тĕкĕрҫен, татах шурути... Çакăнта йурра кăларакан Калинĕн йĕкĕтĕн пуçне (Саврăш пуççем) кĕпĕ пуҫ йурă:

«Ваш-ваш çил вĕрет, аслă улăхра
Еп савнипе çӳрепĕ ҫухнe...»

«Аслă улăхра» пайан кун пуçланҫĕ лӳп-лӳп ăшă çилпе. Ырă, йăваш ир... Çамрăкăп кăмăлĕ пекех. Ун пек ир ытла ырă ута çулма.

Ҫанах та, илтĕнҫĕ улăх ăшĕнҫен:

---

*) Анҫах йурă кевв͏ипе шухăшне те ырăслинҫ͏и мешҫенле «Кирпичики» йурăран илнĕ. **Рет.**

— Вшик! Вшăк! Вшшик! Ваш-шăк!—Ун хыççăн тепри, тата тепри... Çыхланса лапсăртатрĕ çава сасси. Çиҍĕ çын, çиҍĕ çава... Кашни çын аллинҍе хăйне тĕрлĕ йанрат.

Хăш çын аллинҍе вăл кĕвĕлет хĕпĕртесе, хавхаланса; хăшин çави йанрат савăннă-савăнман, макăрнă-макăрман; хăшин аллинҍе макрат вĕт çава, макрат ҍăн хуçăлнă сасăпа, ĕмĕтсĕр, шанҍăксăр.

Пур çава сассинҍе те йумах.

## «ÇАВА САССИ—ÇЫН ТĔСĔ...»

Акă çава сасси. Тăсăк, виçелĕ, хисеплĕ, сивĕ. Йăпатмаст, ăшăтмаст ҍĕрене. Паллатăп Пуçар çави, пĕлетĕп çави тăрăх çыннине. Хăшпĕр етем питкуçне алăк пек хупма пĕлет пулсан, çак етем питĕрме те пĕлет. Пăхат вăл йавăррăн, куçне аран-аран çĕклесе. Мĕн çинҍен шухăшлат-ши? Колхос çинҍен-ши? Сархĕр Ернеç çинҍен-ши? Мĕн тĕрлĕ пиҍĕ çине тилмĕрсе пăхсан та,—пĕлес çук.

Ун çава сассинҍе ҍăн-ҍăп кирли кăна палăрат. Ҍĕре те çук, кăмăл та çук.

Уççăн, ăшшăн, çемçен йанрат иккĕмĕш çава. Уççăн, ăшшăн çемçен йанрат етеммин сасси те. Пĕлетĕпçке Елмеш вăл. Ҍăмăр етем, пĕтĕмпех ҍăмăр. Пуçĕ те, питкуçĕ те, шăмшакки те... Пиҍĕ çинҍи сирĕлми кулăвĕ те тухат ҍăмăр, кусса каймалла... Куссах та кайат вăл кам та пулсан култарсан. Кĕмĕл пăрçа шуç çинҍе куснă пекех кусат.

Малти Сертиван Пуçар питне питĕрнĕ пулсан, ку, вара, уçса хунă ăна камшăн та. Нимле шухăш та палăрмаст ун çинҍе. Курăнат çеç: пурăнăçа вăл пуранăç халлĕн йышăнат, килĕшет вăхăтпа, тавтăват халҍхине, пĕлсе кĕтет ыранхине... Çавăнпа вырăнлă ун кулăвĕ, çавăнпа вăл телейлĕ...

— Ҍăррăм! Ҍаррам!—туртат вăл лапаткине, ҍăмăррăн кусса кайат çава сасси: çемçе, ăшă... Çавăн пек çава сасси ўстерет пуҍ вире.

Уйрăммăн, хĕр кулăвĕ пек, купăс кĕвви пек йанрат **Ернеç** çави. Çамрăк хĕр-ха вăл, иккĕмĕш çул çеç çулма тухат. Пурне те-ха вăл тĕплĕ, вĕçне çитерсе тăват. Лапаткипе те уйарса, тăстарса хăйрат. Çулнă ҍух та лайах кастарса. меллĕ выртарма тăрăшат. Мĕн пур çаран, мĕн пур тĕнҍе ăна пайан куçлат. Çапла пек туйăнат ăна. Çавăнпа ун пиҍĕ çинҍе сирĕлмест телейлĕ кулу. Çавăнпа ун куçĕ пĕрмай сават çынна, ĕмĕтлентерет.

Ернеçе çитсе пырат **Айслу**. Тĕрĕлĕ пир тĕртет тейĕн ăна: çави ун аллинҍе выҍат ăскăç пекех. Ăсат тейĕн унпа ылттăн,—çавхатер çунат савăнăçпа унăн питкуçĕ. Çемйе пек, ырă çемйери хисеплĕ ама пек сават вал пурне те, пашăрханат пуриншĕн те.

Çыннăнни пекех (пĕртте уйрăм мар) йанрат пиллĕкмĕш çава. Унпа **Кăҍăк** çулат. Уйрăмĕ унăн хăй сăнĕнҍе те çук, çава тыткаларăшĕнҍе те, паккус пăрахтарнинҍе те. Ан пăх та ун çине — пурĕпĕрех ним те уйласа илес çук. Савăнат-ши вăл ĕçпе, йе куҍанат-ши? Ĕмĕтленет-ши мĕн те пулсан, йе ўкĕнет-ши? Ним те паллă

мар. Тен тарăхат пуђ çак ерттиллĕ ĕçпе, йе хăш ђух вăрăммăн сывласа, çамкп çинђи тарне шăлса калат пуђ: «Ĕнтĕ çынна мĕн—мапа çавă...»

Хăш ђух племсĕр сасă йурра кĕрсе пăсат кĕвве. Çавăн пекех хирĕнсе кĕрет Ђапук çавп сасси те. Киђем вăл, хайар. Ахăрнех етеммп те çавăн йышши пуђ.

Пурте лапаткаласа пĕтерсен, çавасем ђашланă вăхăтра пĕђђен, пит киревсĕр ђăсăлат Пархун çавп. Йышран йулнă çава сасси йаланах йулхавлă йанрат. Вырăнсăр вăл, тĕлсĕр.... Унта тарăху та, хирĕнў те, паллă мар кĕрхи тăнăç, канлĕх кĕтни, шанманни тата елле темĕскер.

## ÇУЛАÇÇĔ.

Йулашки çава сасси тăнăçа çурса вĕçсе карĕ те мукалђĕ инçетре, хурăнлăха перĕнсе шăранђĕ, путлăхра путрĕ. Вăшăлтатса пите сĕртĕнђĕ çепĕç çил. Пеђĕ нўрлĕ, кăтăклакан шăршă.

Çил хистенине итлерĕç тейĕн:—акă çулакансем хуçкаланђĕç, карăнђĕç; сулăнса Пуçар уçрĕ каçалăк, ун хыççăн шурĕ Елмеш, мелĕпе йĕркеленсе тăсăлђĕ çулакансен йĕрки.

Илемлĕçке çын йĕрки хумханни. Акă вăл пĕрĕнет, унтан тăсăлат, туртăнат шерепеллĕ реçинкă пек. Пĕр тĕлте татăлат, тепĕр тĕлте сыпăнат, капланат, карăнат.

Вăхăт ђупат. Хĕвел те ђупат. Тата темĕскер ђупат çанçурăм тăрăх. Çĕклет вăл, çăмăллатат.

Курăк выртат йавăнса, сана парăннă тăшман пек куçран пăхат. Кĕтет.

Паккус вăрăм, вăрăм. Ĕмĕтленес те килмест-ха вĕçне тухасса. Инçе вăл.

Çиђĕ çын—çулакан. Пĕр ĕç. Анђах вĕт çиђĕ пуç, çиђĕ шухăш, çиђĕ ĕç мелĕ. Ах! Кĕрейĕттĕм вĕсен пуçне, вĕсен шухăш шăналăкĕ ăшне, çуркунне хĕр вырăнĕ çине вăрттăн кĕрсе выртнă пек. Мелĕпе ђуптуса, кăкрисенђен савса пĕлесђĕ вĕсен пуçри шухăшне, умри ĕмĕтне. Çăвартан çăвар каласса уçтарасђĕ вĕсен ђĕрине.

## «ĔÇЛЕСЕН ĔÇЛЕ ĂНА...»

Хăшђух сасартăк етем уçăлат. Пĕр тухан сăмахпа пĕр пусан пусăмпа шалт! уçăлат етем ђунĕ; уçăлат те курăнат вара шалти ђĕре, тĕпсĕр шухăш, тăсăк ĕмĕт...

Уçăлат те çавăнтах хупăнат. Тепĕр сăмах, тепĕр утăм ăна пĕтĕмпех пăтратат, тĕксĕмлетет; йулашкинђен паллă мар сисĕм çеç йулат тĕтрепе витĕнсе.

Акă—Пуçар. Акă вăл сулăнат сивĕ питкуçпа. Акă, ара, куратăн вăл мĕнле çын иккенне.

Йăлăхтарнă ăна пурте. Йăлăхтарнă та темелле мар ăна пурнăç, анђах темле сивĕтнĕ, лăпкăлатнă, кĕттермест нимĕскер те.

Йаланах вăл çапла: Çут тĕнђене мĕн ђухлĕ етем ђыслă килет, мĕн ђухлĕ пуйан çуратат ăна тĕнђе, çавăн ђухлĕ ђас етем унтан

йутшӑнат, ҫавӑн ђухле ђас унпа тиркешет. Мӗн кӑна ӗнтӗ ҫитмест Пуҫара. Вӑл илемлӗ, хура кӑтралӑ, йаштака, хӗрарӑма пӑхӑнтаракан салху питкуҫлӑ. Хаљђђен вӗт вӑл хӗр тиркенине курман.

Вӑл вайпитти, тӳсӗмлӗ, хастар, мӗнле ӗҫре те кайа йулса курман; йаланах малта, йаланах ҫулпуҫӗ, йаланах йертсе пыракан... Хаљђђен ӑна ҫын:—кунтан пулмаст!—тесе калайман.

Вӑл ӑслӑ, ҫивӗђӗ, витӗмлӗ, хаљђђен те ҫын сӑмахӗ айне пулман, ҫын ун ҫӑварне хупайман, вӑл каланӑ сӑмах хыҫҫӑн етем ђӗпеймен; вӑйӑра-и, ташӑра-и, ӗҫре-и, ҫырура-и?—вӑл хӑйпе пӗр тан ҫын курайман.

Ҫапах та вӑл йалан салху, ҫапах та вӑл йалан темӗскер кӗтет; кӗтмест те,—темрен тиркешет, йӗрӗнет, урӑххине кӗтмелли ҫук пек те иртнишӗн куљанат, те ҫуккишӗн...

...Колхоса кӗђӗ кайран, нумай пулмаст-ха кӗпи. Тӑхтаса тӑђӗ кӗмесӗр мӑн кӑмӑллӑхпа ҫеҫ, ҫын, вал мар пуҫланӑран, ҫын унтан иртнинђен. Колхос ӳснӗ ҫемӗн Пуҫар пушнех вӗђехнӗ, кӗвӗҫнӗ,—вӗт унсӑр пуҫнех ун тантӑшсем тӑвасҫӗ ҫӗнӗ ӗҫ.

Темпе пӗтнӗ пулӗђђӗ ҫавӑн пек «самолюбие» Елмеш пӗр ӑшӑ ҫурхи каҫ вӑтантарман пулсан. Тӗл пулђе вӑл киле тавраннӑ ђух, сасартӑк нимӗнпе ҫыхӑнтармасӑр, йал хыпарсем каласнӑ хушӑра, ҫыпӑҫтарса хуђӗ:

— Мӗншӗн-ха есӗ, ађа, кӗместӗн колхоса?

Пуҫар ҫӑвар уҫиђђен татах ђӑмӑррӑн кустарђӗ:

— Ан та кала... Пӗлетӗн, пӗлетӗн мӗншӗн кӗменнине... Хӑйсем турӗҫ тетӗн ӗнтӗ ес... Манран иртрӗн, тетӗн. Курам-ха мӗнле ӗҫлӗр—тетӗн. Ҫапла вӗт Пуҫар, йа?

«Тӳрӗ сӑмах хирӗҫтерет» теҫҫӗ. Анђах Пуҫар хирӗҫмен, вӑл йаланах Елмеш сӑмахне вырӑна хунӑ. Ҫинђен тата пурӗпӗрех ђӑн малтан «вӑсам» ун патне пынӑ пек туйӑннӑ. Вӑл ҫавӑнтах ҫемҫелнӗ, ӑшшан Елмешпе калаҫнӑ хыҫҫӑн, ҫав каҫах сайавлени ҫырнӑ. Правленийе пама Елмеше леҫсе панӑ.

Йутшӑнарах, хӑйусӑртарах пырса кӗнӗ вӑл ђӑн малтан колхоса. Анђах ђас йараннӑ ӗҫе. Ҫав вӑхӑтрах Елмеше колхос пуҫлӑхне хунипе Пуҫара прикатира суйланӑ.

Пуҫар ӗҫе тытӑнсанах колхоҫнӗксем урӑх сывлӑш, урӑх алла сиснӗ. Ҫухалнӑ Елмеш ђухнехи хӗрӳлӗх, ӗҫ ђарсӑр вуђӗ. Ҫынсем ӗҫленӗ, тӑрӑшнӑ, тӗплӗ ӗҫленӗ, нумай тӑрӑшнӑ, анђах иурне те ђӗрепе ҫунмасӑр, кӑмӑлпа ӑшӑтмасӑр. Елмеш ӗҫӗнђе пулман тахҫан шухӑшласа хунӑ мел, тытӑнсан ҫеҫ ҫынсем тупнӑ кирлӗ ӗҫ майӗ; ӗҫ хӑй шухӑшлаттарса, хӗртсе, ӳсӗртсе йанӑ. Ӗҫленӗ май етемсем тупнӑ ӗҫӗн мелне, ҫавӑнпа хӑт те хӑш ӗҫ те кӑсӑк пулнӑ.

Пуҫар шалтах урӑхла ӗҫе йӗркелесе йанӑ. «Ӗҫлесен ӗҫле ӑна ӗҫ пек...» тенӗ вӑл тӑрӑшма хистесе; «кашни ӗҫӗн хӑйӗн мелӗ пур» тенӗ вӑл ӗҫ мелне кӑтартса.

Хӑйӗн те унӑн хӑт те мӗнле ӗҫре те, калаҫӑвӗнђе те, хӑтланӑвӗнђе те, ӑҫта та пӗр йӗрке, вӗреннӗ мехел, хӑнӑхнӑ меслет, сивӗ,

лăпкă йĕрке пулнă. Çавăнпа Пуçар ӗçĕ йаланах тĕплĕ пулнă, анҫах сивĕ; ÿсĕмлĕ пулнă, анҫах илĕртмелле мар.

Илĕртмест вăл çынна хăй сăнĕпе те. Çынтан йаланах кирлине, тумаллине ыйтса, вăл урăх унпа калаçман, хăйне çынпа çывăх тытман.

— Хайар пирĕн Пуçар,—теççĕ ун çинҫен. Анҫах хайарах мар вăл. Пĕлмест çеç вăл çынпа пурăнма, çынпа татту пурăнса килеме, пĕлмест пĕрлешÿ тутлăхĕ мĕн иккенне. Акă вăл сулăнат. Сулăнна май хуллен çак сăмаха пăрахат:

— Çакна пĕтеретпĕр пайан. Леш прикатăран иртеретпĕр.

Ăна хирĕç никам та ҫĕнмест. Пурте пĕлеççĕ:—Пуçар каларĕ иккен—пĕтеретпĕрех. Унта иккĕленмелли çук.

## «МĔНШĔН-ХА ИТЛЕС МАР ҪĔРЕ ХУШНИНЕ?»

Пуçар хыçĕнҫех, Пуçартан йулмасăр, Пуçарпа пĕр харăс сулăнат Ернеç.

Çурхи кÿлĕнҫĕк шывсем çинҫи выҫакан хĕвел пекех хумханса сават Ернеç кăвак куçĕ. Лăпкăн ăшăтат вăл, нÿрлĕ çутăпа çутăлса мĕн пур кĕлеткине кĕттерет пысăк киленÿ, тĕнҫене шăнăçман киленÿ. Пырсан, пырсан пăхат вăл йĕри тавра, Пуçар çине, Елмеш çине, хĕвел çине... пăхат те кăшт пуç çаврăннă пек пулат куран—куçĕ хупăнат, çÿхе тути хăйĕссĕн уçăлат.

— Пуçар! Çулатпăр-и?

— Илтеретпĕр, Ернеç,—Пуçар кăшт çемçетет питне. Анҫах пĕр вăхăта çеç. Ҫас татах питĕрет.

Ан шухăшлăр калаçу пулмарĕ тесе. Вăл пулҫĕ. Вăл пулҫĕ сăлахсарах. Пуçар сисет: Ернеç каласшăнҫĕ: «Ырă вĕт, савни, çулма... Çĕркхине астăватни? Ах! Йепле ырă! Илтмесĕрех Пуçар сăмахне те туйрĕ Ернеç. Вăл: «Çул! Ата! Татах пулĕ халĕ...»—терĕ вĕтĕ. Етем пĕлмен ҫĕлхе, ҫĕре ҫĕлхи вĕсен хушшинҫе. Сăмах тен кирлĕ те мар тăр.

Пуçарпа вăл паллашнă... паллашнă мар ĕнтĕ, туслашнă темелле-и?—виçĕм çул, пĕр тĕттĕм çулахи каç. Уйав пĕтсен Елмешпе, (малтанхи савнипе) пĕрене çинҫе ҫăмăртанса ларнă ҫух ăнсăртран хыçри касăран сиксе тухрĕ Пуçар.

— Ларатпăр!!!

Урăх ним те ҫĕнмерĕ. Ларҫĕ çума. Пĕлмест Ернеç халҫе,—вăл ларсанах темĕскер, кăмăл пăсăлҫĕ, тăвăнҫĕ кăкăр. Тем кĕтрĕ карăнса мĕн пур шăмшак...

— Лар!

Пуçара вăл йаланах курнĭ. Анҫах халҫҫен Ернеç ун тĕсне тÿсеймен. Вăл вайара вăйă пуçлăхĕ пулни, кĕрешÿре паттăра тухни, калаçура етем сăмах çийĕпҫен, хутшăнтармасăр, уйрăм, вырăнлă кÿртсе хуни, пуринҫен ытла çав Пуçар йалти ҫи ҫиппр Ернеç çине çаврăнса пăхманни—пурте Ернеçе çилентернĕ, кÿрентернĕ. Пулкалана йаланах,—Пуçар пырса лексенех Ернеç пăрăннă урăх çĕре, тарнă.

Ҫапла килёштерейместсё малтанлăха икё вăйлă, ҫынна кусрав пăхтарма вёреннё, пус пулма пёлнё сынсем. Килёштерейместсё вёсем пёрре хире хирёс тăрса, тавлашса, хăш ђух тавлашмасăрах, пёр-пёрин вăйне виҫсе пёлиђђен.

Кёсёр те Ернес, Пусар пырса ларсанах, киле кайатăп тесе тăрса кайма тапранђё. Анђах Пусар алăран хыттăн тытрё, пăрђё, калла хăй сумне вăйпа лартрё.

— Ăста хыпаланатăн, Ернес? Ађу макăрмаст пулё вёт-ха. Елле манпа ларасшăн мар-и? Ларар-ха пăртак.

Ернес «касса пăрахма» пикеннёђђё, анђах семсетрё ырă, ђёрене перёнсе лештёртеттерекен, халђђен илтмен Пусар сасси. Мёншён тёр-ха,—вăй пётрё, хал семселђё.

— Ну,* епё кайатăп,—терё Елмеш, кётсе пăхрё Ернес сине. Ернес хускаласшăн пулђё, анђах Пусар хытă тытнă, ситменнине вăйпах туртăнас та килмест.

«Ма ларас мар-ха? Сисех вёт йамё?»

Сёрёпех, автансем иккёмёш хут авăтађђенех сав кас ларнă. Каласман та нумай. Ђёнмесёр,—куспа, кулупа пёр-пёрин шухăшне ăнланатăн. Йаланах сапла хăш сынна. Савăнпа тăр Ернес йуратнă Пусарпа ларма. Пусар нумай каласман ђёрине нихсан та усса паман, ђунё патёнђи пёр кётессе никама та кăтартман, савăнпа та ăна хёрарăм кăсăхнă, пёлес тейе-тейех йурата пуслана.

Халђђен те пёлмен ăна Ернес. Туйнă ђёрипе сес: Пусар йурăхлă, ăслă, йуратмалли сын. Илтёнмелле пекех ђёре калана: «Сакă санăн... пёрле ёмёр иртермелли етем».

Ернес иккёленмен,—ёненнё вăл ăшри сăмаха. Ăспа шухăшламан Ернес, ситнё мён пурин патне ăшри туйăмпа. Туйнă вăл,—ђёри унăн курăнми сыхăпа сыхăннă таврари тёнђепе, ак сак йешёл саранпа, кёмёл силё сырмапа тасла тўпери хуллен ёселенсе йăваланакан пёлётпе. Пурте вёт вёсем—етемшён, етемшён пулсан—Ернесшён.

Акă ашкăрса ларат кикен. Ернес ђарăнат, тата пёр кикенне: «Пулас ађа ывăл-и, хёр-и?» Саврăнса пăхат Пусар сине. Телейлё, савăнăслă кулат.

Тата пёр-ик утăмран кукша курăк хумханса лараt.

— «Упăшка ман кукша пулат-и-ха?» Татах пăхат Пусар сине. Вёрет те ывăтса йарат.

Кам пёлет? Сак кикен, сак курăк, сак пёлёт, сак тёнђе, маншăн кăна, мана курасшăн сес ўснё пулђ,—шухăшлат те савăнтах тата шухăшне.—Сук, апла мар. Тёнђе тёнђешён, етем те тёнђешён, курăк та, ђеђек те... пурте телейшён, пурте ђёрё, тулăх пурăнăсшăн, пурте, пурте... Етем те, курак та... Етем те киленме суралнă, етемпе етем пёрлешсе, кулса, каласса киленме суралнă.

Мёнле-ха туймассё савна етемсем? Тарассё телей сăлёнђен—етемрен? Хупăнассё, кёрессё хăйсен ăшне. Акă Пусар! Палăртмаст вёт-ха вăл хăй ђёрине. Пёлетёпске-ха,—ун ăшёнђе ырă, сутă кăмăл. Ылттăн кăмăл. Ун ăшёнђе те, Ђапук, Кăђăк, Пархун ăшёнђе те илемлё, семсе ђёре. Кашни етемре, кашни сынра... Тёнђери етем-

лĕх хăй ăшĕнђен ырра пĕр сасартăк пĕрĕхтерсе кăларсан,—тухĕђђĕ çавхатер аслă, вĕçĕмсĕр, вĕççĕр ырă çутă; вăл çутă çумĕнђе хĕвел çутти те тĕксĕммĕн курăнăђђĕ. Мĕн пур етем ђĕринђи вута, хĕмленекен, çулăмланакан вутта пуçтарса мĕнпе те пулсан ђĕртсен,—вĕт ирĕлмелле пăрлă тинĕс, ирĕлмелле мĕн пур тĕнђери ирçĕрлĕх, хурлăх, курайманлăх... Çук-çке-ха анђах. Пытараççĕ-çке-ха етемсем кăмăлне шала. Вăтанаççĕ ырра кăтартма.

Енер-ха акă. Каç пулнă. Йулташсем паккуссене тухса, тухни пĕри кайса ларђĕç канма. Епĕ кайрађђĕ: çынпа тухаймарăм. Пуçар та ман умран тухрĕ. Тухрĕ те,—хама ђĕнмесĕрех мана пулăшма пикенђĕ, çавине те хăйрама пуçларĕ, анђах сасартăк темĕскер ăншăрђĕ пулђĕ, çаврăнђĕ, çавине çĕклерĕ, кайрĕ. Пăхмарĕ те. Вăтанђĕ пулас хăй астумасăр пуçланинђен. Сисрĕм вĕтĕ: пулăшасшăнђђĕ, хаваспа пулăшасшăнђђĕ. Анђах, мĕн тăван? Мăнкăмăллăх! «Мĕн калĕç ларакансем? Мĕн шухăшлĕ хĕр? Тен ђунсăр йуратат тесе шухăшлĕ, хăй ђури çине пăхма пуçланă пек пуçлĕ. Çын мĕн калĕ? Йат сарăлĕ... Тата ыт. те, тата ыт. те, тата ыт. те». Акă мĕнле ыйтусем ун пуçĕнђе пĕр самантра иртсе кайрĕç. Хутшăнђĕ ăс. Çавăнтах пăсрĕ ђĕре туртăмне, тавăрђĕ вăл сулăннине.

Вĕт нумайăшĕ çапла.

Ђапук та акă. Унăн ырă кăмăлĕ пĕтĕмпех ђарусăр, вал пайан кун хатĕр мĕн пур ђунне, ђĕрине кăларса пама, пайан кун хатĕр ыталама, итлеме çынна, анђах пĕртен пĕр условипе—ан кулђђăр. Ун ĕçĕнђен кулса етем кăшт çеç тутине пăртăр—вăл çавăнтах вăрă-хураха, çынна шеллемен çына, çынна вĕлерме хатĕр етеме тухса кайат.

Кăђăкра та çавах. Кăђăк нÿрлĕ çын. Анђах вĕрсе кÿрт-ха ун ăшне ђĕрĕ пурнăç вутне, çунтаракан ĕç вутне—паллаймăп çыннуна: вăл та тăрăшакан, пултаракан етем пулмалла.

Мĕншĕн-ха итлес мар ђĕре хушнине? Мĕншĕн-ха унпа ырас мар? Вĕт вăл йаланах тĕрĕс калат, ђĕре ăсран куçлăрах. Мĕншĕн-ха пăхмалла йалана, тĕшмĕше, çын сăмахне, тата тем те пĕре.

Каллех пĕлме çук!—тавçăрса илет Ернеç.—Тен, çапла кирлĕ тĕр те. Тен хађхи кĕрешÿ тапхăрĕнђе ăса çеç итлемелле тĕр. Ăспа шутласа çиленмелле пулсан çиленмелле тĕр, йуратмалла пулсан йуратмалла тăр.

Ех, пуласђĕ... пуласђĕ çавăн пек çын! Пĕрре пăхнипех етемме ху йенне çавăрма пĕлесђĕ. Ун ђухне! Ех! Ун ђухне пĕрни хыççăн теприне, пĕр ушкăн хыççăн тепĕр ушкăна, пĕр халăх хыççăн тепĕр халаха, пурне те, пурне те çаврăттăм, пăхтарăттăм куçран, вулăттăм кĕмĕл сассăмпа.

— Есĕр мана йурататăр! Пĕлетĕп вĕт, йурататăр! Йуратсан—итлĕр ман сăмаха. Йуратар хăмăран ушкăнри ĕçĕмĕре мана йуратнă пекех, ырлар ĕç ађисене пурне те пĕр йевĕрлĕ. Пурăнар-и çапла, тусăмсем! Савнисем! Йуратнисем! Астăвăр вара!

Пулса кайĕђђĕ вара çурхи кун пекех илемлĕ, çутă тĕнђе.

Çапла ĕмĕтпе хăйне илĕртсе Ернеç астумасăр те, çынсенђен

татах йулнӑ. Пуҫар малтах. Ун хыҫӗнҫе Елмеш. Кайра ҫынсем капланнӑ ун хыҫне..

Ҫивӗҫҫӗн сулӑна пуҫларӗ Ернеҫ. Сасартӑк, темӗскер, вӑй кӗнӗ пек туйанҫӗ. Алӑсем сулӑнаҫҫӗ, ҫава вашлатаҭ, ҫӗре спкет: ҫулатӑн, йе ҫунатӑн... Акӑ вӑл ҫӑмӑллӑх, акӑ вӑл киленӳ. Ҫӑнах та ӗҫ вутпа сунсан ҫеҫ—малта ҫутӑ ӗмӗт; ӑшра—вӗҫӗмсӗр вӑй; ҫӗрере ху телейпе хӑпаракан ӑшӑ. Ӗҫ пултарулла пултӑр,—ытти унтан...

## «УНТАН ВАРА...»

Курӑк хумханаҭ ҫил елекне итлесе. Таҫта, айакра кӑшкӑраҭ ҫарлан. Пӗрре, иккӗ, виҫҫӗ... Кӳл ҫийӗ ҫӗтрет вӗлтӗр-вӗлтӗр катан пек. Ҫӑмӑл, ҫӗтревлӗ шухӑш кӗрет ун ҫух. Аса килет темшӗн аҫа ҫухнехи. Ҫӳлти хӗвел, ырӑ,- ӑшӑ хӗвел тӑкаҭ ҫӗтревлӗ ылттӑнне виҫесӗр, хисепсӗр... Курӑк, йӑвӑҫ, ҫӳлти тӑрри пурте тулнӑ халҫхи савӑнӑҫпа. Ӑҫта та ирӗклӗх, ӑҫта та тулӑх, ӑҫта та хисепсӗр тивлет. Пурте пайанхи, ҫак самантри ырлӑхпа тӑраннӑ, тулнӑ. Курӑк! Вӗҫкӗн ҫеҫки! Ак ку акӑ. Халҫ ҫава айне пулаҭ вӗт, пӗтет. Шухӑшламасҭ вӗтха вӑл ун ҫинҫен, пӗлмест, сисмест те пӗр самантран пуҫне ҫухатасса. Акӑ ҫеҫек! Вӗҫкӗн ҫемҫе ҫеҫек! Телейлӗ вӑл, шухаш ҫук ун, хеперенҫе те ҫук. Ҫап йулашки самантҫенех вӑл телейлӗ.

Телейлӗ ҫке-ха мӗн пур ҫӗрӗ ҫун. Телейлӗ тӗпҫеменнипе, тишкӗрменнипе.

Пӗр Кӑҫӑк ҫеҫ, ҫак пӗҫӗккӗ, тарӑн куҫлӑ етем йышӑнмасҭ ҫав ырӑ тулӑха, туйаймасҭ те... Кӑшт ӗҫпе киленсе манӑҫа пуҫласанах, кӑшт ушкӑн тивлетне тутансанах, кӑшт хӗперсӗр телей пырса кӗрсенех Кӑҫак пуҫне силлет, пӑхаҭ йӗри-тавра, йулташсем ҫине, йал ҫине... ӑҫта та ҫав курӑках, ҫав хӗвелех, ҫав ҫарланах кӑшкӑраҭ.

Ну, кӑшкӑртӑр! Хӗрттӗр хӗвел. Ну, ӗҫлер, «телейлӗ пулар» Елмеш каларӑшне. Унтан вара? Йепле сивӗтес мар-ха ҫав кулӑшлӑ телейе? Йепле ыйтас мар:

**Унтан вара?!**

Каларӑшне, ну ҫулар тӑрӑшса, «хастарлӑ». Пуйӗ колхос—калӑпӑр. Вӑйлӑланӗ. Унтан вара? Унтан вара? Пирӗншӗн-и? «Ӗҫпе, ӗҫшӗн ҫун, унтан тупӑн телей» тет ҫав Елмешех. Ну, ҫунӑн. Пайан ҫунӑн, ыран ҫунӑн... Унтан вара? Ҫунсах кайӑн. Кам сана шеллӗ? Ак Пуҫар! Малта пырса тупаҭ-им ӗнтӗ телей? Ну малта? Ну, туп телей! Унтан вара?

Елмеш ҫав вӑхӑтра ҫаврӑнса пӑхаҭ ун ҫине. Сисет Кӑҫӑк—пӗлет Елмеш ун шухӑшне.

Кӗмит ҫав Елмеш те,—каллех шухӑшлаҭ вӑл пӗҫҫен,—пӗтӗмпех паранн**ӑ**-ҫке-ха ҫак ӗҫе, кӳлӗннӗ, ҫапах унпӑн пӗтӗмпех вырӑнлӑ, пӗтӗмпех ӗмӗтлӗ, пӗтӗмпех кӗтнӗ пек. Ӗҫре-и вӑл, калаҫура-и? Ӑҫта та ун пӗрпекленнӗ, виҫеллӗ кӑмӑл. Ха! Йенле-ха вӑл шухӑшламалла мар? Пӑшӑрханмалла мар-ха йепле? Пулӑшӑн та вӗт—пур

шыв та пĕр мар. Сунтăркат вĕт-ха кӳлĕ пулли те ăнсăртран лексен йухăм шыва.

Епĕр те пулăсем. Пире вĕт, пире, кӳл пуллисене кӳртрĕç те йаҫĕç ҫере йухăма. Йухат йухăм шыв, кĕрлет, пăтранат; кашни çул, кашни кун, кашни сехет çĕнĕ шыв, çĕнĕ шыв хумĕ, çĕнĕ шыв çӳппи... Ăçта кăларса пăрахĕ? Ăçта çитĕпĕр? Шухăшлат-ши çавна Елмеш? Тен, йухса кĕрĕпĕр вĕççĕр сарлака тинĕсе. Пире, тăнăç кӳле вĕреннĕ пулăсене мĕнле йышăнĕ-ши ҫикĕсĕр тинĕс? Тен, çухалăпăр унта, ҫике тупаймасăр. Тен унта, малта, епĕр йухакан çĕрте нимĕскер те çуктăр, тен хăйăр çине, типĕ вĕри хăйăр çине тухса ӳкĕпĕр. Кам пĕлет?

Ытла лайăхҫĕ вĕт-ха тăнăçра, кӳлĕре. Пурне те пĕлетĕн. Мĕн тумаллине, мĕнле хырăма тăрантмаллине, пĕлеттĕмĕр ыранхи пулас куна, пĕлеттĕмĕр пурне те, пурне те...

Халĕ вара? Пĕлетĕп-и епĕ? Ыран, тен, колхос пĕтмелле? Йул вара лашасăр, урапасăр. Тен, акă тытĕç те, хăваласа кăларĕç колхосран. Тен, ыранах выçă лармалла тăр. Ех! çыхрĕç, пурантарĕç пурăнăça. Вĕçне нихçан та шыраса тупас çук пек. Тĕвĕ хушшине хĕстерҫĕç пире... Тапаланатăн, хăтăлаймастăн...

Кăҫăк çав çыхăсене хаҫ пур пекех туйат. Хаҫ акă нӳрлĕ вĕрен çан çурăм тăрăх, алă урлă йăваланнăн туйăнат.

Вот çыхăнтăм. Мĕншĕн çыхăнтăм-ха? Кам хушрĕ-ха мана?

Кĕмерĕç вĕт-ха хăшĕ пĕри. Пурăнаççĕ. Аванах мар, çапах пурăнаççĕ. Ирĕкре хăт. Вĕсемех курайманççĕ-ха мана. Ах! курайманççĕ те...

Пĕр кун пыратăп çулпа. Каçхине. Ҫĕлĕм тивертме вут кирлĕ. Йакамас, хамăр йалсем, пуйан, пырат çулпа.

— Вут пур-и, Йакамас пиҫҫе!

— Колхосран кайса ил,—татса пăрахрĕ мана.—Колхоçнĕксене вут та памалла мар вĕсене. Йал йыттисем!

Унтан пăртак ҫаранҫĕ, пăхрĕ вăрăммăн хĕсĕк куçĕпе:

— Ех! Кăҫăк! Мĕн ĕçлеме кĕтĕн çав колхоса. Ӳкĕнĕн те-ха.. Кайран пулĕ. Йунăрсене ĕçĕпĕр—вăхăт кăна çиттĕр.

Çавранҫĕ, пăрахса карĕ. Çĕнтерне пек пăрахса кайрĕ.

Ҫăнах та, халех вĕсем апла та. Йе вăл-ку тухсан. Тӳрех сенĕк тăрне . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . . .

Йăвăр шухăшсем пĕтĕмпех халсăрлатаççĕ Кăҫăка. Аран-аран çулса пырат. Ăна пăрахса хăварнă паккус кайра.

— Темĕскер калĕç тата,—именет вăл хăйĕнҫен хăй.—Срываттĕл тейĕç. Ĕçлес пулат ĕнтĕ. Кĕнĕ ĕнтĕ çавăнта. Ĕçлес пулат. Çĕнтерес пулат. Пайан кун пурăнатпăр вĕт-ха. Ыран та пурăнăпăр... пурăнăпар-ха.

Шухăшласа пынипе вăл каллех астумаст. Йулташсем тахçанах тухнă. Çаран вĕçне, урăх паккус çине утаççĕ йулташсем.

Кăҫăк калле-малле пăхкалат те, паккусне ансăрлатат, унтан татах пăхкалат те, кукăртат те тухнă пек туса хурат:

— Тухнă-тухнă! Кам сăнат унта!

Хĕвел çаплах хĕртет.

## «ТУЛӐХ ПУРАНӐҪ...»

...Ҫулма тытӑнмалла йакрака*). Хытӑ йалтракан пралук пек курӑк. Ҫава илмест.

Нумайах та мар вӑл, анҕах хӑратат; никамӑн та ун ҫине ӳкес килмест. Мӗншӗн-ха манӑн ҫулмалла,—шухӑшлаҫҫӗ кашниййӗ—пӗр-ик паккусранах тытӑнат те йешӗл ҫемҫе шурути.

Паккуссене тухнӑ пӗри йури ҕӑрманарах ҫависене тӳрлӗтеҫҫӗ, йури вӑрахрах хӑйраҫҫӗ—ӳкес килмест йакраклӑ вӑрӑм паккус ҫине. Ҕӗнмесӗр кӗтеҫҫӗ кам та пулсан ӳкессе.

Елмеш виҫҫӗмӗш тухрӗ вӗҫне. Ҫитрӗ ҫӗнӗ паккус вӗҫне тӑрӑнтарҕӗ ҫӗре ҫавине, сӗрҕе лапаткипе пӗрре, иккӗ, виҫҫӗ. Ҫулакансем ҫине пӑхрӗ, йӑл кулҕӗ.

Ӗмӗр тӗмерсе ҫӳрекен те ирӗлет хӑш кулӑпа. Ирӗксӗрех манат тӗмермелли йӑлине, тӗшмӗшне, хӑйне ҫын хушшинҕе тытмалли йӑлине... пӑхат те кулакан ҫын ҫине—кулса йарат. Ҫавӑн пек манӑҫтаракан кулупа кула пӗлет Елмеш. Аҕа кулӑвӗ пек вӑл. Ӑна курсан савас килет, йӑпатас килет, калас килет ӑшӑ сӑмах.

Акӑ вӑл тытӑнҕӗ йакрак паккуса. Пӗр сӑмах та ҕӗнмерӗ, анҕах вӑл пуҫласса кӗтсе тӑракансем пурте сисрӗҫ хӑйсен айӑпне, васкаса ӳке пуҫларӗҫ хӑйсен паккусне.

Ӑна «кути-мати»*) вырӑнне хуракансем—вӑтанҕӗҫ.

Ҫулат вӑл хыпаланмасӑр. Ҫулат хӑйне пӗр йевӗрлӗ. Пуҫар пек ҕикесӗр вӗҫӗлӗ мар, Ҕапук пек тилӗрсе мар, ҕан-ҕан хӑй пек, темӗскерле, ҕӑмаррӑн, хӑйне пӗр тӗрлӗ, калӑн, ҫавапа мар вӑл ӗҫлет, каранташпа, руҕкӑпа ҫырат пултарулла йапала. Ирӗккӗн, ирӗккӗн тытат шӑмшакне, ирӗккӗн, выҕаса тенӗ пекех ывӑтат ҫавине, выҕансах купаланса пыраҫҫӗ ҫулнӑ утӑмсем. Калӑн, ишет вӑл симӗс ирӗклӗхре, пулӑ пек ҕамат, пулӑ пек киленет. Сулӑннӑҫем хӗрет, сулӑннӑҫем ыйткӑнат ҫивӗҕӗрех, анҕах ыйт-ха кайран: мӗнле мел вӑл пӗлет, мӗншӗн иртет, мӗншӗн ывӑнмаст?—хӑй те ӑна пӗлеймест.

Пурте тӑрӑшаҫҫӗ ун хыҫҫӑн тӑма. Мӗншӗн тӗр,—ҫӑмӑл вӗт-ха ун хыҫҫӑн ҫулма. Тепрев хыҫҫӑн, ак Ҕапук хыҫҫӑнах канҫӗр ҫулма, сулӑнма пӗлмелле мар: пӗрре хӑвӑрт, тепре хуллен. Елмеш ҫавипе ӗмӗрне килӗштеретӗн, ҫавӑнпа ҫулма ҫӑмӑл, ывантармаст те...

Вӑл ҫех мар. Елмешпе йаланах сӑмах килӗшет. Ҫавасем килӗшнӗ пекех сӑмахсем те мелленсе халап йӗркипе выртаҫҫӗ. Калаҫасса та вӑл хӑй йевӗрлӗ калаҫат. Калаҫу йӗркисене тиркесе вӑл хӑй шухӑш йӗрӗсене ҫеҫ йӗрлет.

Итлемест те ҫынна... ҫапах та тӗлӗнмелле,—вӑл йӗр килӗшет ҫынсен шухӑш йӗрӗпе. Ҫынсем ҫур сӑмахранах ӑна ӑнланаҫҫӗ. Ҕапук: «Суйланма пуҫларӗ ӗнтӗ» тейет пулсан та, кут хыҫӗнҕе «сӳтӗлсех кайат» теҫҫӗ пулсан та, калаҫнӑ ҕух ӑна итлеҫҫӗ.

Пайан та таҫтан асне илҕӗ Каҕӑк сӑмахне. Теп, вӑл сӑмаха Кӑҕак каланӑ пуҕ ӗнер, теп, виҫӗмкун, тен, пӗлтӗрех. Теп, вуҫҫӗ каламан тӑр та. Сисет кӑна пуҕ Елмеш Кӑҕӑк ҫапла каласса. Туйат пуҕ сӑнӗнҕен, ӗҫӗнҕен.

— Камшăн ĕçлетпĕр, тетĕн есĕ, Кăђăк! Тахшиншĕн ĕçлетпĕр, тетĕн...

Кăђăка путишле, сасартăк ăна тытнăран.

— Хăçан каланă-ха? Мĕн есĕ сӳпĕлтететĕн?

— Çук! епĕ питлесе мар. Сăмахран кăна. Йепле камшăн, тесе ыйтмалла-ха, йепле?

Кăђăк хăйулланат.

— Ей! пĕлетĕп-çке есĕ мĕн каласса. Паллах ĕнтĕ: çĕнĕ тĕнђешĕн, çутă пурăнăçшăн, тата темтепĕршĕн, анђах хамăршăн мар. Илтнĕ ĕнтĕ çĕр хут та...

Елмеш ĕлĕкхи пекех лăпкă пуçлат.

— Çук, тăванăм! Епĕ ăна каласшăн мар çав-ха. Çĕнĕ тĕнђешĕнне çĕнĕ тĕнђешĕн. Вăл тĕрĕс. Анђах çĕнĕ тĕнђешĕн тăрăшатпăр халђхишĕн пурăнса. Халђхи...

Елмеш ђарăнат, шырат сăмах, йурăхлă, ăнланулă сăмах, хăвăншăн мар, çыншăн ăнланулă сăмах, анђах тупаймаст. Тарăхат вăл йурăхлă сăмах тупайманшăн. Уншăн çавхатер уçă пек ĕнтĕ, çавхатер ăнланмалла пек... анђах ăшра, ђĕрере... Ђĕлхе вĕçне çитсенех шухăш антрат, тупаймаст кирлĕ сăмах.

Вĕт етем пурăнат «тулăх пурнăçшăн»; ђĕре те, ăста ĕмĕтлĕ ĕçпе çунсан, вăл ĕçпе тăрансан, тулсан, пушă вырăн йулмасан,— ун ђухне тин етем хаклат пурнăçа. Каламаст: «Мĕншĕн пурăнатпăп-ха» тесе. Револђутсионерсем ĕлĕкхи йăвăр вăхăтра «тулăх пурăнăç» тупнă виђкĕн, хăрушă кĕрешӳре. Унпа вĕсем пурăнăçне тултарнă. Урăх пурăнăçпа, мешђенле пурăнăçпа вĕсем, тен, килĕшмĕђђĕç те.

Халĕ урăхла. Халĕ пĕтĕмпех урăхла. Халђхи кĕрешӳре епĕр пурăнăç тулăхне тупмалла. Мĕн ђухлĕ халђхи вăхăтра çĕнĕ ĕç, етемлĕхшĕн тăрăшмалли ĕç, аслă ĕç. Пиçсем есĕ халђхи ĕçре, çунсам халђхи хĕрӳре,—акă тупăн пурăнăç тĕлевне, пĕлĕн вăл мĕншĕн иккенне. Пулассишĕн мар пурăнатпăр, пулассипе çутатмалла çеç, çĕнетмелле çеç... Ун ђухне пурăнăç тата телейлĕрех, тата тивлетлĕрех.

Ђанах та Елмеш тытăннă ĕç хăт те хăçан та çĕкленнĕ, хĕрӳлĕ пулнă. Мĕнле ĕçе те вăл çĕнĕ ĕç пек, тин хĕрсе тытăнса, çĕнĕ мелсем тупса, çĕнĕ тĕлевсем шыраса ĕçленĕ. Тасатнă ĕçе Елмеш ăшăнђи вут. Çавăн пек пулнă ĕнтĕ Елмеш, тупа пĕлнĕ вăл пурнăçра хăйĕн вырăнне; хăйне хăй тупа пĕлни—етемшĕн пит пысăк телей.

Ђас-ђасах пулат çавăн пек. Ыйтаççĕ Елмешрен: «Мĕн-ха есĕ пит çунатăн колхосшăн? Пĕтĕмпех вĕт ђунна панă».

Ним те тавăрса калаймаст ун ђухне Елмеш. Каларăшне, мĕн калайăн-ха? Сисĕмпе сисетĕн, туйăмпа туйатăн колхос тăванлăхне. Мĕн-ха калайăн упта сăмахна.

Пурте çулаççĕ. Пĕр харăс сулăнаççĕ, пĕр харăс пусаççĕ. Ĕç шăраннă вăхăт. Никамăн та ђĕнес килмест. Тен, пĕр тапхăра та пулин пурте Елмеш пек туйаççĕ пуђ ĕç тивлетне, сиплĕхне... Тен, ăна тин астивсе манăçнă пуђ телейпе. Ахăрнех çаплатăр. Елмеш авă туйат ăна. Вăл сасартăк кустарса йарат.

— Çапла... Çапла. Ĕç вăл хăй... Хăй. Ĕççĕр йепле-ха... Шухăш капланат. Акă вăл ђĕлхе вĕçĕнђех тем ђухлĕ. Пăтранаççĕ, тĕрмешеççĕ тухасшăн. Анђах мĕнле кăларан-ха «вăсана»*). Пĕрне калама пуçласанах тепри хуплат. Самахсем те ђĕнес килмеççĕ. Тем тĕрлĕ акă вăл калĕђђĕ:

«Çак ĕç... аслă тĕлевлĕ, аслă тапхăрти ĕç хăй вĕт параг сиплĕх, канăçлăх, киленÿ... Ĕçре вĕт хăйĕнђе тÿлевĕ. Ĕçленĕ ђух çунни, ес те пысăк ĕçĕн пĕђĕк пайне туни, вăл ĕçпе йăпанни—вăл хак марим? Вăл ĕçленĕшĕн панă телей мар-им? Вĕт епĕр çĕнĕ тĕнђешĕн тăрăшатпăр пулсан, пурăнатпăр хађхишĕн. Хађхи тапхăр пирĕншĕн телейлĕ пулмалла. Пайанхи пурнăçрах—пуласлăх тĕнђен панĕ те пур...

Калаймаст çавна Елмеш. Шухăшĕнђе çеç пур.

— Ĕçлетĕп çав ĕнтĕ,—килĕшет Кăђăк та.—Ĕçле ĕçлех çапла хытăпăр пĕрерĕн, пĕрерĕн.

— Çавă çав-ха вăл,—хутшăнат Ђапук та.—Тен, пĕр ик çултанах тÿнĕн кайăн. Кайса пăрахĕç çăва çине. Кам сапа пĕр сăмахпа та пулин асăнĕ. Хытрĕ, тейĕç, тек тĕнкĕлтетсе çÿретђĕ, тейĕç. Ĕçлерĕ, ĕçлерĕ тейĕç, тĕнђе пурĕ пĕрех тытаймарĕ, тейĕç. Вот çĕнĕ тĕнђе тăватпăр тейĕн вара. Унта, çĕнĕ тĕнђере, епĕр тунă çĕнĕ тенђере пуранаканнии асăнђе те пулмĕ. Выртĕ çисе, килеисе... Çавсемшĕн тăватпăр çĕнĕ тĕнђе. Çавă пур-ха вĕт. Елмеш татах лăпкă пуçлат.

— Вилсен ара...—Пăртак ђарăнат сăмах шыраса. Аплах калаймĕç вĕсем Ђапук.

— Калама кăна мар...

— Калĕçин тата. Калатђăр. Мĕн мапа вĕсен сăмахĕ. Епĕ ахађте телейлĕ. Вилнĕ ђух та епĕ вилес уммĕн тунă ĕçĕн хĕрĕвĕне апăнса вилĕп.

Татах-ха вăл калĕђђĕ:

«Пирĕн хыçран пайанлăх, пайанхи çынсем йулмаççĕ,—епĕр тăрăшнипе те, урăхланнă етемсем, пурăнăç, ĕмĕр йалкăшакан, ĕмĕр тăсăлакан, ĕмĕр телейлĕ пурăнăç йулат. Çав пурăнăçшăн кĕрешсе, çав пурăнăçра епĕр кăшт та пулин усăллă йĕр хăварсан—епĕ телейлĕ, урăх мана ним те кирлĕ мар. Епĕр çеç мар, мĕн пур пирĕн тăрашакан ÿсĕм ырă йĕр хăварсан—епĕ ун ђухпе те телейлĕ. Ерпеç акă мана йуратмаст, Пуçара йуратат. Ан тив! Епĕ телейлĕ вăл ăна йуратнипе. Кашни хăйĕнне тумалла. Ерпеç—маншăн мар. Пурăнăçра епĕ кашни телейлĕ çыншăн хавас. Илемлĕ улăхшăн хавас, ирĕклĕ тенђешĕн хавас, хăватлă етемлĕхшĕн хавас.

Каллех никам та ђĕнмест. Пĕр хĕвел çеç, ĕмĕр улшанми, хăй тĕнђене улăштаракан хĕвел ăшшăн пăхат çĕр çинђи пурăнăçа. Куç хĕсе йăпатат пек пĕр май мала кайакан, пĕр май çитĕнекен пурнăçа.

## «РАС КОЛХОС ТУНĂ ИККЕН—ПАМАЛЛА»

Кăмăлсăр пайан иртеннех Ђапук. Ним те ăна пайан илĕртмест. Илĕртме мар, пурте хирĕçтерет, кĕвĕçтерет.

Хĕвел çулте шалне йĕрсе пăрахнă. Те Ђапукран, пархатарсăр кулат. Куракĕ, кĕпçи, ђавка пуçĕ—пурте Ђапука астумал пек тÿп

тӳрĕ лараççĕ. Ха! Тайэлаççĕ, пăшăлтатаççĕ. Те çилпе пĕрле Ђапука тăрăхлаççĕ. Çилĕ вĕрет-и,—пиђе çинђи тарне куçа кӳртет: касат куçа. Шăна вĕçет-и,—кăлăхсăр сĕкĕнет куç патне. Таре тата йухат çурăм тăрăх: нӳрек, ырă мар... Пурте, пурте Ђапука хирĕç. Пурте йĕкĕлтеççĕ, пурте хирĕçтересшĕн. Пуçарĕ, çĕр çăташшĕ, таçта хыпаланат—çитме çук. Елмешĕ те кĕлĕмçĕ—йуласшăн мар унтан. Ех! çапасђĕ çав сарлака çурăмĕнђен. Мĕн тесе васкатат-ши? Мĕн-ха ăна пит кирлĕ тĕр? Пуçарĕ хăт ĕç кунĕ паттăрĕ. Икĕ куна хăваласшăн. Ку! Елмешĕ? Уншăн вĕт çуркун çыраççĕ-и, пĕр кун-и—пурĕпĕрех.

Ку шуйтанĕ тата, Кăђăкĕ... Вăл та хăвалат, пусса пырат, имĕш. Вăл та вĕт-ха. Ех! Кăђăкĕ, шуйтан. Ђасрах тухса киле кайасшăн пуљ ĕнтĕ. Ех! хаман утă мар тет тĕр. Паллах, çапла калат—куçĕнђен курăнат.

Кăђăк хăваласа çитнĕ çеммĕн Ђапук кăмăлĕ пăсăлат. Çави те мукалса çитрĕ. Туптамалла. Кашни утăмран лапаткала. Лапаткалас килмест. çава пуштех илмест, паккус таса тухмаст. Пăхас та килмест паккус çине. Çук! Пĕр ĕç хирĕçсен—ан кĕт вара пархатар.

Кăђăк çитрĕ. Тулса çитрĕ кăмăл та. Темĕскер капланђĕ Ђапук ăшăнђе, тăвăнђĕ, пыра ларђĕ.

— Пĕт! Есрелĕ çави, шуйтан! Виле çех саппа суйламалла.

Ђапук çавине çĕклерĕ те таçта çитех вăркăтса йађĕ. Тăлăххăн йаирарĕ çава.

— Мĕнле ере вăл колхос? Çулакан машинă мар. Çава та ĕретлине илсе параймаст те. Çапах калаççĕ вĕтĕ. Таватпăр, тăватпăр! Турăр!—Илемсĕр, ирсĕр вăрçу вырăсла тухат ун çăварĕнђен.

Хыçалта лăх-лăх кулса тăрат Кăђăк.

— Лăх-лăх-лăх-лăх! Çавăна! елле, хăйне хăй тĕллĕн çулма йатăн-и? Колхос тесе çулипђĕ вăл хăйĕссĕн.

— Пӳрократсăсем! Кусарсем çавасен вырăнне илсе параççĕ. Çава-и вăл? Мĕн пур хулăм йулмарĕ. Сăтăрçăсем!

Ку сăмахсем Кăђăк ђĕрине те ăшшăн кĕреççĕ.

— Кам илсе памалла, ара? Кам камшăн ара пит тарăшат. Правленийе кирлĕ тетĕн-и есĕ? Сурат вăл çаву çине. Хăй вăл çулмалла-им уппа? Етем вĕтĕ пурте хăйĕншĕн кăна?

— Апла пулмалла мар çав вăл! Рас суйланă вăсана—тăрăшмалла. Рас туна иккен колхос—тупђăр.

Кађăк ĕнтĕ итлемест те Ђапука.

— Мĕн ђухлĕ çулатпăр, есĕ çавна кала. Ĕлĕк пĕтĕм йал çулпине, хаљ, епĕр пĕтĕмпех çулатпăр. Камшăн çулатпăр? Пĕрер купа хăт парĕç-ши хамăра. Тĕнђе таран, тĕнђе таран çавăрса илнĕ. Вĕçĕ хĕрри те çук. Ĕçле пурпе те колхос. Ђăт! колхос—ђатма пулнă тăк.

Кунпек сăмах çаврăнăçĕ Ђапук кăмăлне кайсах пĕтмест. Пĕлет вăл лайах Кăђăка. Пĕлет аçта туртнине. Ахаљ ђух вăл калаçас та çук уппа. Хаљ ђĕре ытла тулнă вахăт.

— Ӗҫе ӗҫлӗн ӑна. Епӗр ӗҫлеме вӗреннӗ. Анҫах ӗҫлеттеретӗн иккен—туп лайӑх ҫава, лайӑх лапатка, тавай лайӑх ҫиме!

— Кам туп! Кам унта хатӗрлемелле сан ваҫҫи?

— Рас тунӑ иккен колхоса—тупҫӑр! Паҫҫӑр! Мӗнле вӑл апла колхос пулат.

— Какшӗ-мошнӗ! Ара, ҫапла... Тем тӗрлӗ унта пирӗншӗн ҫунаҫҫӗ. Ай тур, теҫҫӗ пуҫ, Ҫапукӑн ҫави наҫарҫҫӗ, илсе парас хӑвӑртрах, теҫҫӗ пуҫ.

Кӑҫӑк ассӑч сывлат.

— Пире ӗҫлеттерсе пултӑр. Ҫапла, Ҫапук! Пирӗншӗн тӑрӑшмалли курӑнмаст-ха. Ав тӑрӑшмастпӑр-им ӗнтӗ, ӗҫлеместпӗр-им? Кам ҫапне илет? Утарниксем! Утарниксем вӗт пирӗн пур. Ҫавсем ҫапа тухаҫҫӗ—епӗр ӗҫленипе. Епӗ маннӑ та... Есӗ те утарник мари-ха ҫав?

Ку ӗнтӗ пӗтӗмпех Ҫапука тӑрӑхлат.

Вӑл хӑй утарник. Калаҫат иккен урлӑрах—тивӗҫлипе. Ҫынсен пекех ӗҫ ӑнса пырсан пӗр сӑмах та калас ҫук. Кӑҫӑк хӑй шухӑшлӑ ҫын пекех калаҫма пуҫларӗ. Вот йытӑ! Те мана та «кулак хӑри» тӑвасшӑн. Ну! Ҫук!

— Пулсан пулмасан сан мӗн ӗҫ? Утарниксем ӗҫлемеҫҫӗ-и сан ҫухлӗ. Мӗн шӑлна хӑйраса тӑратӑн. Темӗскер ӗҫлесе каплантарнӑ ӗнтӗ колхоса кӗнӗренне. Ҫапах: «Епӗр ӗҫлекенни, епӗр ӗҫлекенни...» Мӗн ҫынтан иртермелле ӗҫлерӗн-ха. Хуралта выртрӑни? Ҫуласси тутлах мар-им? Хуралта выртасси мар-им? Кулак хӑри!

Кӑҫӑк кӗтсех кайманҫҫӗ капла ҫысласса.

— Есӗр кӑна ӗҫлеттӗр ӗнтӗ!

— Ӗҫлетпӗр ҫавӑ!—Сасартӑк ҫухӑрса йарат Ҫапук. Сан пек мар, ҫани! Ҫапах... калаҫса пырат.

Тата пайтах ҫухӑрашат Ҫапук. Вӑйлӑскер, ҫивӗҫӗскер вӑл кӗрешӳре кӑна телейлӗ, тавлашура кӑна киленӳ тупат, хирӗҫ тӑрсан ҫеҫ хӑй вырӑнне тупат.

Хаҫ вӑл Кӑҫӑка хирӗҫ тӑҫӗ. Тӳсеймест Кӑҫак йӗпӗлтетсе ҫӳренине. Вӑл колхосшӑн. Колхоса хурлакана хаҫ ҫиксе пӑрахма хатӗр. Пур ун ӑшӗнҫе хирӗҫ тӑмалли йӑла. Сӑмахран, Елмеш йе Пуҫар колхоса мухтаса каланӑ пулсан—вӑл пурӗпӗрех хирӗҫ тӑнӑ пулӗҫҫӗ. Тен, ун ҫухне хурлӗҫҫӗ колхоса—астумасӑрах. «Ей?—тейӗҫҫӗ вӑл.— Колхос, колхос теттӗр. Мӗншӗн-ха паҫар ҫитереттӗр? Есӗр вӗт-ха колхос етем пурӑнӑҫне ҫӑмӑллатат, теттӗр. Ӑҫта ҫӑмӑлланҫӗ ӗнтӗ. Ех! сӑмах ҫӳпҫисем!»

Мӗн пур пурӑнӑҫӗ ӳнӑн тавлашура иртнӗ. Ӗлӗкех ӑна страшниксем нукайкӑпа хӗртнӗ пулнӑ—влаҫа хирӗҫ калаҫнӑшӑн. Револютси иртсен те вӑл пӗрре «ларса» пӑхрӗ ҫӗлхе вӑрам пулнӑшӑн.

Колхоса та вӑл «хайне супуй» тенӗ пек кӗрсе кайнӑ. Астӑват-ха вӑл Пуйан Синтимӗр патне пухӑннине колхос органисатсиленӗ вӑхӑтра вӑл Пуйан Синтимӗр пайтах ун ҫух ӳкӗтленӗ «ҫывӑх ҫынсене». Йулашкинҫен ҫапла пӗтернӗ:—пӗр вӑхӑтра ҫӑтар-ха, тӑвансем. Пурпӗрех ку пумайа пырас ҫук. Акӑлҫан тапраннӑ тет ӗнтӗ. Каллех самана урӑх-

лансан вĕсене епĕр вĕрентĕпĕр «çĕнĕ тĕнҫе» тума. Çĕнĕ йупа çинҫе «çĕнĕ тенҫене» курсах кайĕç.

Çӳç-пуç вирелле тăнă Ҫапукăн çавна илтсен. Сасартăк вăл урнă пекех тытаннă:

— А-а, есĕр апла иккен. Апла иккен есĕр? Есĕр пире ваҫҫи иккен хатĕрлеттĕр «çĕнĕ йупасем». Епĕ, ухмах, спре çын тесе сирĕн пата килетĕп. Ата! Хатĕрлĕр! Хатĕрлĕр! Есĕр йун ĕçме вĕреннĕ ĕнтĕ... Ĕçĕр! Кӳпĕнмĕр-и тен. Тен хатĕрленĕ «йупа» хăвăршăн кирлĕ пулмĕ-и?

Тĕлĕнсе кайнă ушкăн çăвар уçайман. Ҫапук хăтăрма пултарнине вĕсем ĕлĕкех пĕлнĕ, анҫах капла хатĕр тилĕрессе кĕтмен.

—...Вунсаккăрмĕш çул мар! Кăтартăттăм спре «йупасем». Кăтартăттăм! Ну, ҫим-ха! Хаҫ те лекĕр-ха... Лекĕр-ха пурĕпĕрех.

Çав каçах кайса колхоса сайавлени панă.

...Хĕвел йĕрнĕçем йĕрет вутлă шăлне. Мукалнăçем мукалат çава. Тулнăçем тулат ăшра вĕри çилĕ.

Тухайман çилĕпе, ним тăвайманнипе лештĕртетет мĕн пур ӳт-пӳ. Алла çĕклеме вăй йулмаст. Тата пĕр самант çеç—хатĕр тĕнҫе тĕлĕнмелли, етем курман, çын илтмен ҫăрсăр харкашу хускатма...

Тăвăнат пĕтĕмпех етем.

Çитменнине тата, ав претçетаттĕл тайкаланса килет. Ăна мĕн? Уншан çулаççĕ. Веçă калат те вĕт мĕнле:

— Шту, Ҫапук! Çава наҫар штоли? Пит таса мар çулатăн вĕт, йа? Йепле ҫăтас ĕнтĕ купта? Йепле «тилерес» мар...

— Таса! Таса çумалла иккен. Кусар илсе памалла та, таса çултармалла. Спре тăсăлса çӳреме аван. Ăçта, претçетаттĕл пулнă та... Портфĕл хул хушшинҫе, алă кăсйара! Çĕнĕ улпутсем пултăр ĕнтĕ... Ан сик пит çӳле, ҫапи? Сап çинҫен те пĕлетпĕр!

— Улпут тетĕн-и? Ес те улпут пулса пăхас тетни? Нуккă пар-ха çавуна! Епĕ çулса пăхам.

Претçетаттĕл пĕлет Ҫапук кăра кăмăлне—хирĕçмест.

— Пар-ха! Ку çавапа епĕ килĕштерекенҫҫĕ!

Претçетаттĕл тытат çавана. Мелленет. Çулăнат.

— Аван плетçке-ха çава! Кунпа выртарах çулмалла. Шăлне сыртса Ҫапук тытăнат çулма çĕнĕ çавапа. Пăхат йĕри тавра. Ăçта та йĕрке. Пĕр пек сулăну, пĕр пек ыткăну... Çавхатер тăвăр, çавхатер йавăр туйăнат çав йĕрке. Ҫăтма çук.

—«Ҫапах та пурте ыра кăмăлпа, телейлĕ çулаççĕ-ши? Пĕрин пуçĕнҫе те шухăш çук-ши? Епĕ кăна çапла хирелеп-ши?».

Çĕнĕ çава ҫăнах аван иккен. Лайах çава вĕт çулас килтернĕçем килтерет. Çемçелет ăшҫик те уп ҫухне. Кăкăрта тăвăннă çилĕ кашни сулăннăçеммĕн йухăм йухăм йухса тухнă пек сĕврĕлет. Паккусне тухнă ҫух Ҫапук пĕтĕмпех сивĕнет.

Нимĕскер те ҫĕнмест вăл.

Кăкăрта çеç темĕскер тутăхнă пекки йĕкĕлтет ăнсăртран.

Хĕвел тин ăшшăн пăхма пуçларĕ.

## «МӖНШӖН ЫЙТАС МӖНШӖННЕ?»

Ушкӑнра пулат пӗр ҫын. Ӑна пурте хисеплессӗ, пурте сума сӑваҫҫӗ, пурте ђысласҫӗ. Ун патне пурте астӑварах, йӑпатарах пыраҫҫӗ. Ун кӑмӑлӗ—ушкӑн кӑмӑлӗ. Ун савӑнӑҫӗ—ушкӑн савӑнӑҫӗ. Кӑмӑлсӑрланат кана хӑш ђухне ҫав етем, кӑмӑлсӑрланат те ирӗксӗр, ушкӑн кӑмӑлне пӑсас килмесӗр,—анђах пурӗ пӗрех ун ђухне ушкӑнра сӑмах килӗшмест, пурте салху, пӗри те пӗлмеҫҫӗ мӗн туса тӳрлетмеллипе. Куна пӗлеҫҫӗ ушкӑнри етемсем те, ҫавӑнпатӑр ун умӗнђен астуса, пӑхса иртеҫҫӗ: ђеђен ђеђек, ырӑ, пӑсма йураман йапала умӗнђен иртнӗ пек иртеҫҫӗ.

Ҫавӑн пек ҫын Айслу инке.

Пӗр вӑтӑрти ҫын, хаљ-ха вӑл Ернеҫ пекех ҫамрӑк, патвар. Тулли питкуҫлӑ, шенкер куҫла, кӗлетки те ун пӗтӗмпех ђӑваш хӗрӗ кӗлетки. Сӑмахпа та калас ҫук ӑна, анђах «ҫывӑх» вӑл, таван вӑл. Ҫамки ҫинђе палӑрса тӑракан виҫӗ йӗр вӑл пурӑнӑҫ сӗткенне тутаннипе палӑртат. Тата ӑнсӑртран етем ҫине ӳкекен куҫӗ йалкашат ӑшшӑн каҫарса, нимрен тӗлӗнмесӗр, пайтах йапала курса йӑлӑхнӑ пек.

Вӑл хӑй те йуратат ушкӑна. Ђунӗпех йуратат ҫак колхосри шавлӑ, хӑш ђух вӑрҫулӑ, хӑш ђух савӑнӑҫлӑ, пӗр май шӑвакан, ђӗрӗ ҫунакан пурнӑҫа. Вӑл лайӑх ӑнланмаст те колхос тӗлевне, ыйтмаст те ун ҫинђен; Елмеш пекех ђӗрепе туйат: колхос ҫӗнӗ ӗҫ, тӑван ӗҫ, колхос ӳсӗмӗ пирӗн ӳсӗм; колхос инкекӗ пирӗн инкек.

Хӑй ҫинђен, хӑй ывӑлни ҫинђен вӑл пӗрте шухӑшламаст те. Ун канӑҫлӑхӗ ушкӑн канӑҫлӑхӗпе ҫыхӑннӑ. Вӑл савӑнат ҫынсем савӑнӑҫлӑ пулсан, вӑл ђунтан хуйхӑрат ерттелти ҫын телейсӗр пулсан.

Ушкӑнри ҫынсем ҫине те вӑл пахат ырӑ амӑшӗ хӑй ырӑ ађисем ҫине пӑхнӑ пек. Уйӑрмасӑр, тиркемесӗр вӑл пӗлет кама мӗн кирлине, кашни мӗнпе пурӑннине; кашниншӗн тӑрӑшат, кашниншӗн пӑшӑрханат.

— Ҫави нађар куран ку Ђапукан,—шухӑшлат вӑл ун ҫине пахса.—Хирӗҫет пулӗ ӗнтӗ. Пӗрмай пырсанђӗ хӑт пӗтерињђен. Айӑплат тӑр ӗнтӗ колхоса, претҫетаттӗлӗ... Илсе парасђӗ ӗнтӗ пӗреххут лайӑх ҫава. Те хамӑн ҫавана парас ӗнтӗ. Ен ҫулкалӑн йепле те пулсан.

— Пуҫарӗ тата ытла хӑварт кайат. Каҫпарах ак ывӑнӗ-ха. Ӳкӗнӗ тата «мӗне пӗлсе вӑлхатер тӑрӑшатӑп», тесе. Ҫуласђӗ пӗрмай. Кађаке тата... Вал та вӑрҫат пулӗ ӗнтӗ. Темӗскер вӑл салху. Перре калаҫас пулӗ-ха хамӑн унпа...

— Ернеҫпе Елмеш! Ха, йепле пытереҫҫӗ вӗсем. Ернеҫ парахнӑ теҫҫӗ Елмеше. Мӗн кирлӗ пулнӑ-ши ӗнтӗ Ернеҫне. Елмеш ментен нађар ӗнтӗ Пуҫартан. Хӗр ҫав ӗнтӗ... Пуҫарӗ Елмеш ђухлӗ йуратмаст та пулӗ халӗ. Калаҫса пахас-ха Ернеҫпе. Ей! пӗреххут кама йуратат ҫавна кайтар. Пуҫарӗ те ӗнтӗ... Ӑҫта ун пек ҫын тупма.

— Мӗн шухӑшлат-ши Пархун. Ђан хыҫала йулђе вӗт ӗнтӗ. Кахалтарах ҫав ађа пӑртак. Ӗнтӗ пиҫӗ-ха.

Ҫапла шухӑшласа пырат вӑл. Пӗлмест те: меншӗн-ха йуратат ҫав ҫынсене. Пӗлесшӗн те ҫунмаст. Ернеҫпе иккеше вӗсем пурнӑҫа кађђа йуратнӑ пекех йуратаҫҫӗ.

Ыйтмастăп вĕт унчухне: мĕншĕн йуратап, тесе.

Анчах Ернеç хăйне ачашласан çеç çынна аван, хăйне савсан кăна çынна йуратат, ĕçре те вăл хăй ĕçĕпе çеç йăпанат. Айслу пĕтĕмпех ўрăхла. Çилентер-ха ăна—вăл савăнтах тупат каçармалли сăлтав; «çавăнпа ĕнтĕ тунă ăна» тет. Ĕçĕ унăн—хăй ĕçĕ çук. Çын ĕçĕ ўсĕмлĕ пулсан—унăн та ўсĕмлĕ пырат.

## «ЕЙ! ЙАРА ПАР!»

Каç пулат. Хĕвел анат! Анат-и-ха ара? Тен анасшăн мартăр. Мĕншĕн-ха шеллемесĕрех тăкат хăйĕн ылттăнне. Тен унпа парнелесе тăсасшăн хăйĕн вăхăтне, тата вăрахрах çутатасшăн çутă тĕнчене.

Çĕр те—сарă хĕр тейĕн. пумай каччă курнă хĕр тейĕн! Хĕвел савнине кĕтет тивĕçлĕ пек. Йăлăнмаст, хапсăнмаст. Çил вĕрет ун пичче çинче—йăпатакан кулу саралат: пĕлĕтсем шăваççĕ,—тарăн шухăш палăрат; шыв шăнкăртатат,—калат вăл савăнăçлă, ĕмĕтлĕ хыпар. Лайăх пурăнма çак тĕнчере. Тата лайăх ушкăнпа, ушкăн ĕмĕчĕпе, ушкăн хавасĕпе пурăнсан.

Пилĕк сын сулăнат те сулăнат. Çук пилĕк сын. Пур пилĕк кăкăр, пилек алă, пилĕк çава.

— Ей! кам унта кайарах йулат!!! Харăс сулăнăр! Каллех çĕкленет çава—пилĕк çава; сулăнат хул—пилĕк хул; уçăлат паккус—пилĕк паккус. Те йухатăн, те вĕçетĕн... Те ху чăматăн курăк ăппе—çава мар. Нимĕн те, нимĕн те туймастăн!

— Вшт! Вăшт! Вăшт!—Сулăнатăн. Сулăннă май тулат кăкăр, кĕрет вăй.

Ах! йепле ырă! Ав тата кўршĕ прикатă йарăнса çеç çулат.

— Чапук! Кăшт хытăрах сулăн! Йăвăр харăс çулмасан!—Чапук çаврăнат. Ах! Кăна Айслу калат-çке. Мĕн-ха калас ăна хирĕç? Йăл çеç кулат Чапук. Карăнат вăл, тумра хĕлĕх пек карăнат. Йанрат пуç мĕн пур шăмшак та, ўт-те, тир-те...

— Ей! Йара пар!!!

Шăп!

— Вшт! Вшт! Вшт!

## «ЙĔРКЕ ХĂВАЛАТ».

Пархун тухман-ха малти паккусне те. Нечен ĕселенет.

— Ну, ан-тив!—шухăшлат вăл хăй ăшенче,—пĕр паккус ытларах пултăр вĕсен. Темĕскерех мар. Епĕ виçĕмкун ун вырăнне пĕр паккус ытларах çулнăччĕ-ха.

Йанраççĕ çавасем хыçалта. Инçе мар. Çитеççĕ. Татах ĕнтĕ тăрăхлаççĕ йулташсем, тарăхламаççĕ те, темĕскер, ырă мар-ха çапах. Айслу унта пăхат тĕллесе—хăйĕн йулхав ачинчен вăтаннă пек. Çук! Ку пулас çук! Çавсене çитеретĕн-и?

— Вшт! Вшт! Вшт!—тутараççĕ хыçалтан.

— Тăрăш! тăрăш! тăрăш!—тенĕ пек илтĕнет Пархуна.

Акă çитеççĕ. Хум пек хыçалтан килеççĕ. Вутлă хум пек!

Ђим-ха! Акӑ ара ђӗрене ҫав вут хӗлхемӗ ӳкрӗ. Акӑ йӑлкӑшат, акӑ йалкӑшат. Ҫук! Урӑх йулмаст Пархун.

— Вшт! Вшт! Вшт!—урӑх йурӑ халђ ҫава сассинђе те.

— Ну, йурат!—шухӑшлат ӑна хӑвалакан Пуҫар.—Халђ хӑвалаcа ҫитес ҫук ӗнтӗ. Тытӑнтӑр кӑна вӑл...

### ВӖҪНЕ ҪИТНӖ ЂУХ...

Йаланах ҫапла.

Пуҫласанах пурте ырӑ ҫулаҫҫӗ. Пурте-ха ҫӗнӗ вӑйпа, тин туптанӑ ҫавапа, лайӑх кӑмӑлпа.

Варринђен иртерехпе туртӑнат ҫулаканcен йӗрки. Татӑлат хӑш тӗлте, пӗрӗнет, тӑсӑлат. Паккус вӗҫне тухарахпа каллех майлашӑнат йӗрке, ђӑмӑртанат.

Ђӑмӑртанат ун ђухне етем вӑйхалӗ те; йулашки сулӑнусем етеммӗн ђӑтӑмлӑхне, халсӑрлӑхне кӑтартаҫҫӗ.

Ахалђ мар ун ђухне етем ҫӳпӗлтетмест сӗре, ывӑтат ҫавине пӗр йеверлӗ, пӗр май.

Акӑ Пуҫар! Хӑвалаcа ҫитсе вӑл ҫапах Пархун паккусе ҫине ӳкнӗ.

— «Икӗ ӗҫкӳнӗ пайан! Ку уйӑхра 35 пулђӗ. Пӗтӗмпе ҫӗралла ҫитет. Сатаннйе тултарнӑ: Таси паха!

Ун хыҫӗнђе Пархун.

— Ҫапах йулмарӑм Пуҫартан!—шухӑшлат вӑл. Ҫавӑнтах мӗн пур шӑмшаккинђе сарӑлат ӑшӑ йӑпану.

Ђӑмаррӑн ђӑмат Елмеш.

Нимӗскер те вӑл шухӑшламаст. Ҫемҫелнӗ вӑл. Ђунӗ те, ӳђӗте лӑпкӑн киленет. Каҫхине, ӗҫе пӗтерсе килелле лашапа килнӗ ђухне ҫапла килепет етем.

Вӑл киленет пурнипе те: анакан хӗвел илемӗпе те, тем ђухлӗ ҫулса пӑрахнӑ ҫараппа та, ҫак етем ушкӑнӗпе те, иртнипе те, ҫитессипе те...

— Кулђи ҫулмастӑн ӑна—ҫава лайӑх пулсан, ушкӑн лайӑх пулсан—паҫар хирӗҫнинђен вӑтанса пӳплешет Ђапук. Ним те урӑх ђӗнеймест. Вӑрҫӑ пулмасан вӑл ђӗлхесӗр.

Вӗр ҫӗнӗ, илемлӗ, халђ тин шухӑшлаcа кӑларнӑ вӑййа выђаса вӗҫне тухасса кӗтнӗ пек вӗҫне кӗтет Ернеҫ. Ав! Хӗвел! Ернеҫ ывӑннӑ тет пулӗ ӗнтӗ... анат васкаса. Ҫукҫке, хӗвелӗм! Ывӑнман-ха! Те Ђапукӗ те мана ывӑнна тесе мелӗперех ҫула пуҫларӗ. Курӑксем те веҫ мана шелleҫҫӗ. Хӑйсемех кӗтсе тӑраҫҫӗ ҫуласса. Килте атте, анне... кӗтеҫҫӗ пулӗ. Каҫхине вӑйӑ... Ах! ырӑ-ҫке!

— Ернеҫ! Ҫавупа лапаткалаcа парам мар-и?—ыйтат унтан Айслу.

— Ҫук-ха! Лайӑх витет!

Айслу татах пӑхат те, татах мӑкӑртатат:

— Ҫиме мӗнле пӗҫерђӗҫ-ши пайан? Ытла аван пайан ӗҫлерӗҫ. Вӑрҫмарӗҫ. Харкашмарӗҫ. Каҫхине тата апатпӑн хирӗҫмесен тата...

— Татах каҫа йулатпӑр ӗнтӗ. Кӗҫӗр хам паранка ҫырса пӑрахас тенӗђђӗ. Такки йулат те йулат...—тарахса пырат хыҫри Кӑђӑк.

Вĕçĕ. Пуçланаççĕ симĕс анасем, айакра шурлăх, хурăнлăх... Тăсăлаççĕ сĕлĕ анисем... Елмеш кĕмĕллĕн кустарат̆.

«Сĕлĕ хумханса пуç кăларнă ҫух
Сăмах паҫĕ еп санăн тесе...»

Унтан тата пурте харăс:

«Сĕлĕ хумханса...»

Елмеш пăхат̆ Ернеç çине. Ернеç тем астăват̆, вăрттăн пăхат̆ Пуçар çине...

«...Пуç кăларнă ҫух...»—

уççăн йанăратса йараççĕ, шăрантараççĕ.

Ах! ним те, ним те кирлĕ... Пурне те йурататăп: Елмеш сана та... Пурте çывăх... Пурте пĕр çемйе... Пурте савăнар пĕрле... Пурте...

Ҫăнах та, пурте манăçнă йурăпа...

...«Комсомол хатарҫĕ мана...»

ывтăнтарҫĕçĕ таврана.

Татах пурте...

«Усал вилĕмрен, вĕçсĕр хуйхăран,
Комсомол вĕт хăтарҫĕ мана...»

хаваслăн, пур кăмăлпа тĕвĕлентерҫĕçĕ...

---

Йĕрке вĕт хăвалат̆. Йĕрке вĕт хутшăнтарат̆. Çулакансем хутшăнса пĕрпĕрне хистесе, йĕрке хистенине итлесе ҫăмăртанса тухнă пекех... мĕн пур колхоçнĕк, мĕн пур ĕçхалăхĕ йулашкинҫен тухĕ аслă ĕçсен вĕçне, ырă, çутă сотсиалисăма.

Çакăн пек шухăш кĕрет пуçа.

Саврăш, Аксу районĕ, Т. Р.

# ÇАМРĂК ВАЙ

## МАЛТАНХИ ПОЕМĂ

## АРК. ЁÇХЁЛ

> В громах с рек нструкцией мира
> идет реконструкция чувств.
>
> А. Безыменский

Хĕвел йанрат çапçутă хурçăпа
Ĕç куҫ ҫĕри тапат ĕçҫенĕн,
Лаштах çурат кахаллă шăн шăпа—
Уй-хирĕмре пайан ҫи паттăр—
Ана хайар ҫер вăй çуратнă—
Уй-хирĕмре—колхосăн ĕçхресҫенĕ!

Кив улăм айĕпе пăхан хăртăннă кив йалта,
Пулсаҫҫĕ вăл
Ĕмĕр «пăнтăх лĕпкеллĕ»,
Ак халҫ
Ӳссе хăпарҫĕ пур халпа—
Колхосӊĕк
сывлăхлă,
клеткеллĕ.

Хиврен ĕç ир ҫĕри йанрат ав
Хĕрӳллĕхре ӳсеççĕ паттăрсем.
Çак хушăра, йепле тăрас антранăн—
Вĕрет хавааслă хал хĕрсе.

Акă
Тискер ҫул сартсем урлă,
Пĕр çамрăк вăй пыратçкс çĕнтерсе,
Кам пултарат
Кашни ăна хăватпала сатурлăр,
Анҫах,
Уйрăмланса ан тăвăр çĕн йерсем.

Ĕç çар тĕнҫин пĕр çул,
Пĕр çулпала утат васкавлăн
Айтаса,
Совет çĕр-шывĕ çеç

Малта та паллă,
Пе́р унăн çеç
Ђĕрийĕ тап-таса.

Ђĕре тапат
Хытран та хытăрах,
Çак ĕçлĕ сарăм—
Савăнăç манра.
Мĕн тер, çĕр-шыв
Ӳсет-ха тăваттăра,
Мĕлйун хăват çĕнелнĕн хыт йантрат.

Ан тап, ђĕре, пайан ђирпе!
Йепле,
Класа улталаса тапас-и?
Ес тап кăнтăр, каçпа, ирпе,
Тултăр ăша ĕççар хавасĕ!

— Пĕтерђĕç!
Иртрĕ çимĕк?!
Пурђђĕ сынсем—
Йурлађђĕ кинемсе пера!..
...Çавах пайан çунтарђĕ
Ĕçĕн хĕмĕ
«Поетпа миççионера».

Ĕç шавĕпе вăранђĕ ман поемă,
Емсе
Хĕрӳ ĕçри хĕрӳллĕ сывлăха;
Йанратăр вăл
Илемлĕхпе пуйанăн,
Çĕклетĕр вăл ĕçри хастарлăха.

Хастарланса
Хавалăма çĕклетĕп,
Ашра
Вутла çунат—Пайан.
....Мĕскĕн ђереллийĕ кивве ђӳклетĕр,—
А еп
Компарттипе пĕрле кайап!..

1

Револђутсин çамрăк пусне
Çăхан тавраш сăхса вагасшăнђђĕ,
Çапса хуçсан тăшман хĕçне
Аллийĕсем—
ђасах шанђĕç.
Епир акă вунпилĕк сул

Хастар ишетпĕр тинĕс урлă,
Вут хĕмленмен пĕр ҫ ре ҫук—
Ҫунат ĕҫ ҫарĕн вăй—сатурлăх.
Пролеттарин аллийĕ ҫирĕп,
Тиктаттура—
Вăй-халлă кĕрешў,
Вăл йунсăр та,
Йунпа та ҫапса сирĕ—
Комун ҫулпе
Кам ҫакĕ пĕрер шит.

Умра пирĕн—комунă.
Ҫул йăвăр, пылҫăклăха самана
Урапана хăш ҫух тем ҫулăн
Таптаннă пылҫăк йавăнат.

Мĕлйунăн епĕр хастарланса
Кăкăрсемпе ҫĕр ҫăмăрне хиретпĕр,
Хăш ҫух йулташ вараланса
Ўксе йулат хисепсĕр.

Пайан кунта,—
Йун тинĕссем ишсе каҫса—васкав,
Пур кирпĕҫе петтонласа хĕссе,
Пролеттари
Вăраннă хаваспа
Ҫĕршывăмра ҫĕклет кикант КРЕС- сем*)!

* * *

Урампа иртсе пыратăп,
Ирхи шухăш пуҫăмра вĕрет,
Ҫур хĕвелĕ шăратат пит хатăр—
Вĕҫсĕр ирĕк ҫăмăллат ире.

Вăйланат пуҫланă ĕҫĕн шавĕ.
Ĕҫ лавсем иртеҫҫĕ вĕҫтерсе...
...Иленмен-ха ҫўреҫе ҫаршавĕ
Опываттĕл-«миҫтĕрсен».

Минутшерĕн ҫĕнĕ темп илетпĕр,
Хăвăрт темппăн йурттараҫ кунсем.
Ҫакăнтах ак хĕртĕнсе, сехетлĕн
Ҫавăраҫҫĕ опываттĕлсем.

Кунĕн
Йĕм ҫĕтсе ларат те,
Пыршисем йарăнаҫҫĕ хырăмра,
Ак вара:
— Хисеплĕ претҫетаттĕл,
Пăт хăт,
Колхосран тул ҫăнăх пар.

Колхос пыллă,
Çуллă, сĕтлĕ, пурлă
Пÿрократ та пулăшас тет колхоса,—
Районран вара
Утарланса хир урлă
Трантасĕ вĕçтерет тусан.

Акă претçетаттĕл,
Калаçаççĕ:
— Ну, мĕнле?
Мĕнле-ха сан ĕçсем?'
— Ниђђево,
Ĕçлет утарлă массă,
Хастарлатпăр—
Ушкăн ĕнĕçсе.

Тем сасартăк пÿрократăн касрĕ
Темскер пулнăн хĕсрĕ пырĕнђе;
Претçетаттĕле тем пек йуратрĕ,
Пулђĕ вăл халђ хаклă пуринђен.

Тăрантасĕ кайалла вĕçтерђĕ...
...Пыл панкки те,
Çăнăх виçĕ пăт,
Савнă ђунĕ
Йурăсем. ĕнерђĕ:
«Ĕпĕ халĕ лармăп выçăпа»
Хырăм тутă,
пÿрђĕ ăшă,
вырăнĕ мамăк.
Мĕн ир тăтăн—
апла хушăн
кун та тамăк.
Каçĕ пулђĕ—
Пур театтăр,
пур кино та...
Сăра кÿп те—
есĕ паттăр.
Кăçкăра тăр:
— Çĕнĕ мотă!

«Ку тĕнђе илемсĕр мар,
Тус, тултар-ха йанкăс лирĕк»
Сăрапа пĕрле тултар
Шухăш пултăр—
Шухă ирĕк».

Кунĕ шавлă—
тăрăшавлă,
Ывăнтăн тăк—

Канма лар.
Ĕçĕн çарĕ
тен каçарĕ....
Айăкран та çийелтен
Кăштăн-кăштан шайăрттар.
Сурансем те çĕвĕленĕç,
— Пах, ак Тнеппăр пĕвеленĕ!
...Росă ўсĕ çакăнтах.

Хăшшĕн çакă тенђере,
Шухăшĕ ытла çĕтĕк,
Пурнăç пиђĕ—тўнтерне
Йĕм витĕр курмаççĕ те.

Пўрократăн ĕçĕ—кашнă кун:
— Ыран кил,
Пайан питĕ
Санђăт-ха ĕçпе.—
Çавăнпа та çак кунра Вăранкĕл
Пўрокрађĕ— хăйĕн тивĕçпе.

Сăрхăнат-ха
Хаљ çавах пĕђиккĕн
Çĕн ĕçе
Çĕлен-калта тавраш!
Волокитђĕк,
Стройккăра—Тениккĕн,
Йавăнат-ха Сов-сĕтел тавра.

Ак растратђĕк,
Кăмăлпа йўтенĕ,
Пинсемпе, вăл.
Хăш ђухне кўпшет,
Çавăнпа, вăл
Стройккăра—Йўтениђ,
Йун ĕçесшĕн хырăмпа кўпсе.

Туйăнатђĕ
Тăшмансемшĕн пит те,
Ĕç çĕршывĕ ÇЕП-па тўннĕ пек,
Анђах вăл ўсе пуçларĕ питтĕн,—
Çавăнпа вута çĕлен-вретиттĕл
Сўнтересшĕнђђĕ хăй сивĕ йунĕпе.

Мешђенсем те
Мусăка тăкаççĕ:
— Пĕтнĕлтĕк те пĕтĕпĕлтĕк,
Совет влаçĕ тўт-тўлли!..
Пуçĕсем те «кенилле» пит каçăр,
Куçĕсем те ерехпе тулли.

Мул тĕнђинђен
 Йулнаскерсем
 ђĕлĕнсе,
Хуртсем!
 Çĕленсем!
Хурçана
 аваймăр-ха тинех!
Ĕç-çар татах та çиленсе
Ĕç кратăсне çитере пин-пине!..
Кам каларĕ сире
 Пролеттари
 Кино йуратмаст тесе?
Кам каларĕ сире—
Пролеттари
 йака прўкки
 йуратмаст тесе?
Театтăра кайат вăл хĕпĕртесе!
Мамăк тўшек çинђе
 Çыврат хĕпĕртесех!..
Анђах, хуртсем!—
 Хĕстерĕр кутсене!
Есир йĕмпе
 Улăштаратăр
 Револђутсине!

*

Проститутси,
 вăр-хурахлăх,
Пылђăк-тĕттĕмлĕх тĕнђи—
Йăвăр пусмăрпа çуралнă,—
Пурте пусмăр тĕпенђен.
Пăђ—тĕрме,
 Прушин—накайккă,
Електритсăллă пукан—
Ирĕке хĕсекен кайккă,
Сĕт ĕмме пулăшакан.

* * *

Пайанхи кун
 Муллă Амерĕксем,
Выртаççĕ туллашса, çĕрсе
Тарăнланан
 Пĕр тĕпсĕр криçĕспа.
Епĕр иккĕмĕш пиллĕке кĕрсе
Тĕнђе сăмси çинђе
 Картланна пысăк пал(лă)!

Мĕлйуншăн!
«Хамшăн» мар!—
Кӳретпĕр хаҍ ĕçе
вăй-хăвата!
Ĕç хал йунпе
Никам пултармĕ шăршăнма
Кам апла шухăшлă?—
Ватар!

---

2

**А выйдет мост,**
**видать, удачный.**
**Д. Бедный.**

Кăçкăравлă ир
Пĕлĕтсĕр—уç кулă.
Утрăмăр епĕр
Çамрăксем хăйуллăн.
Кăкăрăмсем пирĕн
Тулнă çулăмпа.
Ан утăр-ха нӳррĕн,
Тапăр сулăмпа!
— Пĕрре, иккĕ!
— Пĕрре, иккĕ!..
— Айтăр йанратăр йурра!
– Кам ҍĕри хавшак пĕҍиккĕ?
— Камăн тĕлĕк пек хура?

* * *

Хĕвел
Вĕлтĕрен пек ҍĕпĕтет çурăма,
Мăн кăмăллăн выртать
Атăл шывĕ.
Комсомол прикатин йурăпа,
Ӳсĕнет пристăнри кĕрешĕвĕ.
— Аҍасем!
— Васкар!
— Ну, çĕклĕр!
— Ну, хастар!
— Çĕкленен хаваспа
Прорыва кастар!
Йанрать ĕçĕн вăйĕ,
Йанрать çамрăк сас,—

Васкавлă конвейăр
Тăмаст ђарăнса!
Прикатăн, прикатăн
Йăтса çурăмпа,
Тултатпăр, тултатпăр
Машшин—çырана!
Епĕр тăрăшатпăр:
Ей, харăссăн хир!
Кăçал пултăр шаткăн—
Йăрансăр уй-хир!

Йăрансăр уй-хирĕн
Ґумтир шупкалат,
Анђах ак халђ пирĕн
Ђылай тултмалла.
Колхос:
— Молотилккă
Халех кирлĕ тет.
Штоп пĕрђĕллĕ ылттăн—
Ђасрах кĕлете.
Епĕр тăрăшатпăр,—
Вăхăт-и канма?
Уйа çиттĕр шаткă
Ĕçре савăнма!

3

Всей старой дурости аминь
Д. Бедный.

Çамрăк прикатăн—
Електро-вăйхал,
Пайтах паттăрсене пăхса ўстерђе;
Йунсăр типсе
Хăртанђĕ кивĕ йал,
Хыçа йулат,
Ун, çăпаталлă терђĕ.
Пирĕн вăхăт хĕрўллĕх пĕрĕхет,
Уй хирĕмре хавäслă çемĕ;
Ђĕре çинђи
Хуртланна кĕрĕке
Хывса ывтат колхос хресђенĕ.

Уй хирĕмре
Кавасланса—васкав

Çĕн шаткăсем йурра ĕнерĕ,
Ыраш йурлатçке хаваспа,—
Йе çакă та
Шанђăксăра пăвса вĕлермĕ?
Кулат хĕвел.
Тутă, уй-хир шавлат.
Вĕри тарпа
Кĕпи лађкам ун,
Тытнă вăл
Пар лаша алла,
Вăл прикатир,
Ђĕрепеле ççе пуçланă.

Ун йађĕ сар туталлă мар
Ўсет вăл ак, амĕш ђĕрийсн айĕпе-и?
Калат:
— Тин пурнăç тытрăм аллăма,
Пуçран тĕп тасалат киввин арпийĕ.
Ўсеççĕ ылттăн çĕмелсем,
Ўсет пĕрле
Хресђен ђĕри те,
Вăл, кăнттамран тухатçке
Çĕнелсе,
Тухат касса
Тĕттĕм çĕр витĕр.
Пўрт—айккине
Пуçтаранса ларса,
Ђĕлĕмсене пăклаттарса—
Кĕрнеклĕн,
Виçĕм çулсем:
Йалти кулакпала пĕр сас—
Пускил колхос çинђен
Йухнă слеклех.

Пурнăç таппи
Çĕнелђĕ петĕмпех,
Пролеттари вăйа çĕклерĕ.
Kаларĕ вал:
— Хресђен, тек çитĕ тĕттĕмпе!
Ђĕлĕмўпе
Пайтах ес тĕтĕмлерĕн!..
Епĕр вĕт илнĕ
Перекоп—йуппа,
Кăкăрсемпе вăй тĕрсклеиĕ.
Хĕрў ĕçпе
Сывлат аслă Топпас,
Волховстройа çĕклерĕ
Ленин!

Хăват пухар
Уçăмлăрах тапма,
Китсем çине çук пирĕн шанђăк.
Ĕç мăлатукĕ çакăрсăр çапмаст.
Хрсстен, итле!
ăнла халĕ çакна:
— Лашу самайлансан—
Интустрийе парне тупăш
єс ăсатăн пушатăнђĕ.

*

Ĕнийĕ пур, ађисем ваљљи—тӳттӳ,
А вăл татах
Пуйма тĕлленнĕ,—
Йунашаррин—
Çиме çитмест çиђти,
Унăн вăйне
Тепри ĕмет çĕленен.

Çапла ђылăй çулсем кайсан,
Вăйа,
Кулак усси çине çавăрса илĕ!
Таптар ăна!
Комун çулĕпе кайар,
Комуна пултăр классăр йăхăн килĕ!
Кулат хĕвел.
Тутă уйхир шавлат.
Хĕрсе ĕçлет ертел—саттурăн.
Тума пулат пурнăç алпа,
Кунта
Пĕр пĕрђĕ çук туниӳĕ туррăн.

Кунта курнат етем вăйне хуни,
Тыр пуђаххи
Турпас пек йарапаллă,
Ирхи çĕртме
Трактарпала туни—
Сар пуђахра та
Уйрăмраххăн паллă.

Турра кĕтсе,
хырăм хĕртсе
выртнă пулсан
Шатайђĕ пĕр
куккĕш кулса.

4

Керой çулне пиокрафилесе;
Каламастпăр:
— Çухрар пĕр!

...Çав çеç коллективра çӳлĕ ӳсет—
Камра
Аран сывлат
    кив йун микропĕ.

Урхасем*) мар,
Ђĕкеçсем**) мар—хивре.
Ак хам çумрах
Антрйушшă—комсомолĕс,
Вăл
Вăй-халне шăршлантармаст хĕвре
Вăл пĕтĕмпех—**комунă çулĕç.**

Вăл маçтăр—хаљ—
**Шивотновот,**
Вăл икçĕр ĕнене—**тиректăр.**
Акă илер—Иванова,
Унăн
    аллийĕнђе тĕк—трактăр.
Çамрăк çарăн йуррисене
Итлес килет.
Кунтан ытла ăçта илемлĕх?
Айта, йулташăм! йурласа илер,
Ĕçри темпа çӳле илмеллĕх.

Вăхăт—
Çамрăк кĕвĕре
Вăй-халлантăр **йунлăн.**
Анлă хурçă ĕмĕре
Шав çĕклет мĕлйунлăх.
Нуккă, Петкă,
Трактăрна,
Ахăрттар хайаррăн,
Ес, кăтарт
    ху, паттăрна..
Акă, епĕ, карăм!
Пирĕн вăхăт
Керойсăр мар,
— Кам вăйĕпе тапат çак вăхăт,
                        калăр?
Епĕр ĕнер
Пĕлнĕ пулин
Ура сырма,
Пайан—
Керойлăхсемпе палла.

*) Урха—Шулуççынни поетăн «Йеркен» поемă керойĕ.
**) Ђĕкеç—çаваннах.

Керой çулне
Пиокрафилесе,
Каламăпăр
— Çухрар пĕр!..
Çав çеç колективра çӳлĕ ӳсет,
Камра
Аран сывлаť кив йун микропĕ.

5.

Тăватăм çулсем
Ĕçсем пулнă—пăростă...
Нумай ĕçсем
Хресђенĕн капланман пырта...
Хĕлле
Выљăхсене утă тухса парас та—
Кăмака çинђе шăршлантарса выртас.
Халђхи кунсем—
Çĕкленнĕ çавра çил...
Комунăна
Петтон кĕпер тума
Çăвĕн-хĕлĕн
Полђшевикла темп ил,
Пурнăç кашти хума—турттар
çирĕп йуман.
Çанталăка
Ĕрĕхесрен алла илмешкĕн,
Пурнăç савăнăçне, веçех, хамăр илме
Пуш вăхăта таптасђĕ—
вĕренмешкĕн,
Штоп пĕр çапсан—
план пĕр-пĕр Елмен.

Халђхи кунсем—çĕкленнĕ тăвăл...
Пĕр минута темпа, ăçта илеймесен—
Пĕтĕм фронтра та
Сывламашкăн йăвăр,
Çан-çурăмра—çĕршĕнекен кĕсен.

Кулак алли
Хура ĕçсем тăваť,
Вăл ĕлĕкрен вĕт,
Урнă тискер кайăк,
Епир хăпарнă ђух тăва
Вăл ђашкăраť:
— Йепле çакна ђăтатăн!
Ун аллипе
Миçе çелђкор путмарĕ,
Миçе сынна

Пусмарĕ вăл—тискер!..
Ăна çавах пĕр вăхăтра Пуххарĕн
Каларĕçке:
— Комунăна мирле кĕмеллескер!

Миçе пин пăт çĕртмерĕ вăл—
тăрукăн,
Ылтăн пек—тĕшĕ тырăсем,
Çавах оппортунисла Рыккăв,
Компарттине
Туртасшăн пулђĕ «тĕрĕсе».

Вĕсен «тӳр» çулĕпе кайсан,
вăйа,
Кулак
Усси çине çавăрса илĕ.
Таптар ăна!
Комун çулĕпе кайар,
Комунă пултăр классăр
йăхăн килĕ!

* * *

Антрйуш ларат ак.
Кĕнеке умра,
Çирĕпленет ун
Шухăш хумĕ:
— Ĕç хакĕ халђ—
Мĕн ђул пăру ĕнсийĕ хулăмран,
Йе сĕт мĕн ђул нумайрах сунă.
...Вăл, кĕнеке ăшне шав путнă май,
Манат ывăннине. Ыран тата ирех тăр...
... Вăл,—маçтăр,— халђ—
Шивотновот,
Вăл—икçĕр ĕнене—тиректăр.
Ĕçре
Сотс-меслетсем çӳле!—
Шăрш мул микропĕ пĕтмелле, тин.
«Ĕçлекен çын
Коллективран çавăн ђул илет
Мĕн ђул ăна вăл пана...»
**(Ленин)**

Кĕске çулта—
Ашпа, сĕтпе, çупа
Ĕçлекен халăх тутă пултăр...
Ђейе кулак сăтăрлама ђупаť—
Анђах мăйĕ çине лараťçке пуртă!..

Партти хушан ĕçре Антрушшăсем
Вĕт тинĕс хумĕсем пек харсăр.

...Соомининмум хаљ вĕсен,—
Вĕсем
Хĕллесенђи вăрăм çĕрсем
Аслăлăха
Туптаççĕ вăтанмасăр.

Пирĕн пĕр лосăнк,—
Çамрăк çар, итле!
Улахсенђе хĕре тытасшăн
ларињђен,
Хална компарттине ес пар та—
Йевитле:
— Еп те умри ђула касмашкăн çивĕђех!

Хамăр вăйпа илнĕ Переккопа!
Хамăр вăйпах
Илер пур креппăçа та!..
Çак кирлĕ мар:
Пĕри—ђупаť,
Тепри—
аран-аран тăхнаť кăççатă.

**6.**

Прахут çинђе.
Киле кайатăп.
Иккĕн выртаççĕ калаçса çумрах:
— Мĕскер мана есĕ калатăн,
Еп хам вĕт пулнă колхосра,—
Мĕскер калас,
Хресђенĕн пурнăç иртрĕ,
Каламастăп сĕре
Пĕлмесĕрех—
Хĕрĕх кектар тулла та çĕртрĕç.
Капансенђе ырашĕ те çĕрет.
Сиксе тăтăм, еп
Тўсеймерĕм
Вăл парттине
Айăплама пăхсан:
— Паллах, есĕ кулакăн йĕрĕ,
Паллах, есĕ
Антранă тутăхса.
Тăшман!
Кам айăппе тулă çĕрет!..
Сынсем уйра хĕрсе авăн çапаççĕ,
А есĕ ак тĕнђе касса çўрен!..

Шухăшу пĕр:
«ăш вырăнсем тупасҫĕ».
Тăшман!
Кам айĕппе тулă çĕрет?..
Партти хушмарĕ вĕт çĕртме!..
Кун хакĕ хаљ—
ĕçрен!
Есĕр
потеншҫинă хĕртме!
Есĕр револҫутсине çĕртме!

* * *

Пирĕн вăхăт—хĕрўллĕх пĕрĕхет,
Уйхирĕмре хавaслă çемĕ,
Ҫĕре çинҫи
хуртланнă кĕрĕке
Хывса ывтаť колхос хресҫенĕ.
Мĕлйун ҫĕре кăварланса тапаť.
Мĕлйун пăт тулă
Таврăнаť йалтан.
Епĕр
Çак паттăр еттапа
Никĕслесе хытарнă айалтан.

Хула тути
Йала ĕмнĕ пулсан,
Вăл, хаљ, йала
Трактăрпала туртаť...
Хĕвел, айта, пăхах куяса!
Тин хуçăлмĕ çак пурнăçри турта.

Мĕлйун Антрйушшăсем—
Ас креппăçне илеççĕ,
Мĕлйун Ивановсем—
Трактăр çинҫе маттур,
Мĕлйун Филиппăвсем—çлессăр,—
Вĕсем
Çĕр ҫăмăрне çавăракан моттор!

Мĕлйун пăру—
Комун тума ўсет,
Мĕлйун сурăх—
Ĕçри йуна çĕклет,
Епĕр çĕр питĕнҫен кив маскине сўсе
Петтовласа, Тнепростройсем хўсе,
Чухатпăр çĕтĕкрен.

**7.**

Пĕлетĕп
Калакансем пулĕç:
— Ай-йай, Ĕçхĕл
Ытла та çуйăхат!..
Анђах
Вак пуршуйсенĕн ђулĕ
Перс-антарраймĕ ман йăха!

Йăшăкланан
Пĕр-пĕр колхоçнĕк хăватне
Çирĕп алпа
Ђĕрийĕ айĕнђен илсе—
Хытăрах çĕклес килет
Пайанăн кăватне,—
Хăватланса пытăр!
Ан сӳнтĕр сӳрĕлсе!

Урам тăрăх васкавлă Микихвер,
Пĕр аллинђе шап-шурă мих,
Теприйĕнђе кукăђ сăмсийĕ...
Ăçта кайат капла ку питех ир...
Кĕрхи çанталăкĕ сĕм-сивĕ.

---

— 200 трутотђа! так
— 200—арăмпе Микихверĕн!?
— Епей—
— Мĕнле капла хĕл каçăн?
Парăр хăт тепĕр так.
— Шалиш! Микихвер,
Хырăмна хĕртрĕн çăвĕпе!..
— Ђавса кукрийĕ çывăхра та
Çыртаймăн çавăрса!
— Микихвер,
Ыйхуна силле-ха тавăрса!
— Çампа кĕмен еп колхоса?!
— Ĕçлемесĕр çийесшĕн ак осал!..

---

Йăл-йăл кулат кĕрхи хĕвел
Тутисене ђалăштарса,
— Кĕресшĕн мар текех хĕве,
Куласшăн мар пите сарса...

**8.**

Персе пăрахса
кив пурнăç йăлине,
Епĕр ĕççар хăвађĕпе, хайаррăн!

Йăтса
комунăн йалавне,
Комунăна
ђулсем урлă кайар-и?
Айта, мěлйун!
Пур массăпа тăрса,
Мул хырăмне
Çапса çуратпăр,
Етемлěхе
йěпе алшăли пек пăрса
Ирсěрлěхрен,
пěр,
тасататпăр!
Ђěнет çам пек
Çěкленнě тапхăр!..

---

Тěттěмлěхěн шăлне
çапса хуçатпăр,
Кулђтурă, ўс
ђăвашăн пўртěнђех!
Мěлйун йаçлě
—çěр шывăмра уçатпăр.
Ђăмлак ěмтерме
çупатпăр питěнђен.
Çамки çинђе
Аңуттăн тар.
Тутийěсем кулса ђěтреççě,
Ўмра выртат çамрăк пуквар,
Вăл унпала хаљ иртерет çěр.

Пуквар
Полђшевикле ђěлхеллě,
Вăл,
«Йуратап», темест Аңуттăна...
— Верен, Аңуттă, ес,
Пурнăç çилхийěнђен йарса илмеллěх,
Ыйтат ав, М.Т.С—
Плук-касси пек сивђě тăна.

Вăрăм çěрсем
Хивре Аңуттă,
Пукварпа хěртěнсех пуплет:
— Ве-ре-ни-йě—çу-тă....
— Йу-ра - хир-те - хўт-ле-
— Ты-рă - пу-лаť - ту-тă.
...Аңук хěрěм,

Тыт-ха кăнђалуна ес,
Пирĕнсĕр те Шупашкарта тулли.
— Анне, итле
Кăнђала пек-и халђ, нумай, ĕç
Ĕлĕк те пулнă çын кулли,
Пирĕн пеккисем
    халђ тин çулпала карĕç!

---

Анђуттă ўсрĕ
Пуквар уншăн
    пĕђĕк ађа пек,
Вăл кĕрнекрех кĕнекене тытаť,
Пухусенђе
Çĕкленђĕ ђапĕ,
Йĕплет паклаксене хытах.

Тăраť те çирĕп
Паттăрăн,
Калаť коллективри вăйпа:
— Телекаткăсем ак, вунсаккăрăн,
Сиртен йаçлĕ уçма ыйтаç.
Хĕрарăмсем пурте пĕр харăс:
— Уçас!
    — Уçас!
        — Уçас!—
— Вара «мушиксемпе» ĕç карĕ!
...Хай «мушиксем» ђараç кăна куçа.

* * *

Ĕлĕкренех
Лĕпсĕртетсе пыраť йăла:
— Хĕрарăм
Апăр-тапăра катертĕр...
...Анђуттă тытрĕ кăçалах,
Кив йăланне вăл
    Хўрине хĕстерђĕ.
Хăшне, ак, йађĕç
    трактăр курăсне,
Хăшне—
Выђăх-ђĕрлĕх йĕркипеле,
Хăшне—
    прикатăсен пуçне,—
Кашни ĕçре
    вăхăт та çук—ирхи кĕлле.
Мĕншĕн тесессĕн—херť ĕç!—
Полђшевикла темпсем çĕкле!

Паттăррисем
    Мухтавлă кĕрешеç
Ес те, тăхлађ, ан ĕсĕкле...
Паклаккисем те халђ ђылай,
Вĕсем
Тĕттĕмлĕхе таптас ђухне,
Хайсем тĕттĕмлĕхпе таптаннă;
Пĕрĕнђĕк питлĕ кив йăла
Хăш ђух тăхăнат,
    туй арĕм пек, тухйе;
Куçне шăлат—
    тĕрленĕ çаннă.
Кулак шăрши те
Ăшшăнах ехĕлтетсе,
Тĕттĕм кĕтеслĕ ђĕрене
    вырнаçма хатĕр,
Пухса «ăш сăмахне»
    суйа «тет»сем,
Кулак, колхос халне татма пăхатĕ.

Епĕр,
    Çĕршывăмри мĕлйун Аңуттăсем
Тĕттĕмлĕхĕн шăлне çапса хуçатпăр!
Кураттăр-и? Çĕнĕ йăлан хăват ўсет!
Епир—
    Историн листине
    Уçатпăр!..

9.

Елĕкренпе ăшкул сумккийĕнђе
«Сăмах ăшкулĕ» лăпланса пырат;
Çак çунакан пин вођттăллă тĕнђе
    Мĕлйун маçтăр,—
        вутне пуçлăхлама,
            шырат.
Епир—пођшевиксем,
Епир—пионерсем,
Ђупман—пĕр май сиксе
Тĕш вăхăт çĕтерсе.
Епир
    ват ăшкула
        сухаллинђен тытса,
Ђĕрипеле
    тăр ђĕтрететпĕр,
Штоп, ес, ан лар
    парттă çумне хытса
Ăсупала—
    ĕçех, ес, тĕпнерех, кĕр!

Штоп, ес,
    халђхи кунра, куллен,
Тупта
    Стройккă валђђийĕ
        маçтăр.
Ан шу
    Колумп киммийĕ пек хуллен,
Комунăна
    тапсах тăр!..

10.

## ЕППИЛАК.

Тĕнђе!
    шăран ђасрах!
Хушаççĕ—полђшевиксем.
Вĕсенĕн сăмахне
    Ес тыт асра!
Парăнмастăн?..
    кайран пуçа ђиксех:
— Тĕрĕс, тейĕн,
    вăтансарах.
Интелекент!
    тек сăмсуна ан ђакала!
Кўр хăватна
    кĕпер тунă çĕре!
Йе сан татах та
    ђакмалла?..
Ĕçре ĕç класĕпе пĕрле вĕре!
Епĕр, хамăр
    мосоллĕ алсемпе,
Йулашки хут пĕрре
    йунпа та
Çĕр питĕнђен
    çăватпăр пĕтĕмпех,
Кам çын йунĕпеле
    хăй паттăр,
Татах ĕмме?
Пăхат
Пăђăхтарасшăн тĕттĕмпе!

Епĕр, Раççей кахаллăхне,
Сотс-ăмăрту тискийĕпе хĕесе, пĕр,
Керойласа пĕтĕм ĕç çар йăхне
Комун пилеђĕсемпе тĕрĕслетпĕр.
Епĕр—
    колхос аллийĕпе çапса

Кулак йăхне тĕпрен вататпăр,
Колхос ђĕри халлăн тапсан,
Çавах пулаймĕ-ха асапсăр!
Анђах пире
    мĕнле креппăç тӳсейĕ?
Вĕт епĕр—вăй!
Вĕт епĕр—тимĕр!
Вĕт епĕр—йун!
Епĕр ђи ĕçлĕхлĕ ту сийĕ,
Епĕр—
    комун кĕперрине
        кранитлакан мĕлйун!
Епĕр—
    тĕттĕмлĕхе персе пăрахатпăр!
Çанталăка—
    кĕпер тума!—
        ĕçе!
Куллен ĕçре
    Çамрăк вăйпа тапатпăр,
Кам ухсахлат—
    ăна ђас тимрĕçе!
Çĕр ђăмăрĕ,
    вĕре сиксе!
Тĕнђе!
    шăран ђасрах!
Хушаççĕ вĕт,
    полђшевиксем,—
Вĕсен сăмахне тыт асра,
Кайран пуçа ђиксех:
— Тĕрĕс тейĕн
    вăтансарах!

Епĕр,
    çĕнтеретпĕр епĕр çак ир,
Хурçăран, тимĕртен халђ ӳссе!—
Йурлат ав,
    йăрансăр уйхир,
Шавлаççĕ
    вăраннă КРЕС-сем!..

---

# ТӐВАЛЛА

РОМАН

ИККĔМĔШ ПАЙ

## В. И. КРАСНОВ (Асли)

### 8. ВУЛАМАЛЛИ ÇУРТРА.

Вуламалли çуртра, Софйе Павлӑвнӑпа Çеркуни тӑрӑшнипе, утарлӑ ликпункт уçӑлнӑ. Вӑл виççĕмĕш уйӑх çеç ĕçлет пулсан та, вĕренес текенсем хутшӑнсах пыраççĕ. Çеркунипе Софйе Павлӑвнӑ иккĕшин хушшинђе сотсиалисӑмла ӑмӑрту токӑвӑрне тума тепле тавçӑрса илеймен, анђах вĕсем, пĕрмайах пĕр-пĕринђен пытарса, ӑмӑртӑва тухнӑ. Акӑ пайан. Софйе Павлӑвнӑ хӑй вĕрентнĕ «ађасене» тишкерсе пӑхат. Çпритун Мирунђӑ арӑмĕ Праски пуринђен те аван тухса каланӑшӑн çав тери хĕпĕртенĕ.

Праски, хĕрĕх тӑхӑр çула çитнĕскер, çак кĕске вӑхӑтра вулакан пулнӑ. Пайан вӑл Софйе Павлӑвнана пилĕкçуллӑх плана мĕншĕн тунине çинђен те аванах ответленĕ.

Тӑрӑхла сĕтелсем умне ларса тулнӑ хĕрсем умĕнђи хутсем çине тӑрӑннӑ. Хытса кайнӑ аллисемпе, мĕкĕрленсе тенĕ пек, Софйе Павлӑвнӑ туска çине çырса кӑтартнӑ сӑмахсене çыраççĕ.

Софйе Павлӑвнӑ вĕренекенсем çырса пĕтерни çинђен ыйтса пĕлсен, татах çĕнĕ сӑмахсем çырма хатĕрленђĕ. Ђи малтан, васкамасӑр, ак çапла тӑстарса каларĕ:

— Малтан есĕр епĕ каланӑ сӑмахсене ӑнланса итлĕр. Епĕр çыртӑмӑр:

«Кӑпиталисӑмла йĕркесене пирĕн хулара çеç мар, йалтан та хĕссе кӑлармалла», тесе. Кун çинђен пĕтĕм Сойусри Комуниссен парттийĕн 15-мĕш конферентсийĕ каласа хӑварнӑ, терĕмĕр. Халĕ тата пилĕкçуллӑх план çинђен çырӑпӑр...

Софйе Павлӑвнӑ мĕн çырмаллине тӑстарса вуласа парĕ. Праски умĕнђи хуђĕ çине çырма пуçланнине курсан, Софйе Павлӑвнӑ:

— Ан васкӑр, малтан епĕ туска çине мĕнле çырнине тишкĕрсе пӑхса тӑрӑр. Епĕ çырса пĕтерсен вара пурсӑмӑр та çырма пуçлӑпӑр...

Аллисене кӑранташ тытса çырма пуçланӑ хĕрарӑмсем, кӑранташĕсене шакӑрах сĕтел çине хурса, Софйе Павлӑвна çырнине пахса ларђĕçĕ. Софйе Павлӑвнӑ васкамасӑр, калӑн, вӑл хӑй çыракан саспаллисене ытараймаст, пӑхсан йуратса каймалла илемлĕ, васкамасӑр çырат. Çырса пĕтерђĕ те:

— Вӑт хаљ ĕнтĕ çакна вуласа тухас пулат, терĕ те Тарйене туска умне ђĕнсе кӑларђĕ.

Тарйе ђёлхисене хуçкаласа ак çак сăмахсене вăрахђен вуларĕ:

«Пилĕкçуллăх план, вăл—рапођђи класăн кăпиталисла сийĕвене çĕнтерес тĕлĕшпе пымалли планĕ, массăна сотсиалисăмла вĕрентсе урăхлатмалли план, сотсиалисăмла опђăствăна лартма никĕс хывмалли план».

Тарйе хăй вырăнне кĕрсе ларсан пурте ђаштăртатса, мăшлатса çырма пуçларĕç. Софйе Павлăвнă çырса пĕтерсен тепĕр хутђен тарласа кайса пилĕкçуллăх план çинђен тĕплĕн ăнлантарђĕ.

Пĕтерђеçĕ. Ватăраххисем, килте ађа макрат пулĕ, тесе, килĕсене васкаса саланђĕç. Хĕрипраçсем, хĕрарăм уйавне вăйлăн ҳатĕрленес пирки, йурă вĕренме йулђĕçĕ.

Софйе Павлăвнă йурă ĕçне пуринђен те ытла пахалат. Хăшпĕр ђух вара, уђитлĕсемпе тĕл пулсан: Ђăваш халăхĕ йурăллă халăх, ђăвашсем сăвăлама йуратаççĕ, тет. Йурăран аванни, илемли, тэта мĕн пур? Йурă вăл çыннăн ђи çӳхе хĕлĕхĕсене шыраса тупат. Çынна киђемлентерме те, хĕпĕртеттерме те пултарат, тет...

Йулашкинђен, интернатсионал йуррине йурлаттарса пĕтерсен, хĕрађисем килĕсене саланма пуçларĕçĕ.

Софйе Павлăвнă кунĕпе ĕçлесе йăвăрланнă пулсан тэ, çтена çумĕнђе çакăнса тăракан хута вуласа пăхсан:

— Хамăн та вĕренес пулат,—терĕ те, каллех Çеркуни аллипе çырса çапнă хута тепĕр стрăм вуласа тухрĕ.

Унта çырнă:

«Пайан каçпа, çиђĕ сехетре, халăх пуххи пуçтарăнађђен, политтĕклă крушок ĕçлет. Пĕр комсомолĕс та вĕренӳрен йулмалла мар. Комсомолĕс маррисем те, вĕренес текенсем, çӳреме пултараççĕ. Крупока йертсе пыракан—Çеркуни».

Килĕсене кайман хĕрсем çтена хаçат умĕнђе купаланнă, пĕр-пĕрин урлă кармашса, тĕрткелешсе хаçат вулаççĕ.

Софйе Павлăвнă килне тухса кайма тăђĕ. Анђах алăк çывăхĕнђе килсе кĕнĕ Кĕçтукпа Кулинене тĕл пулсан аллисене сарса пăрахрĕ.

— Вăн мĕнле вĕсем?.. Ђанах пĕрлешмерĕре есĕр?—терĕ Софйе Павлăвнă.

Кĕçтук нимĕн сăлтавсăрах, кăшт хĕрелсе кайрĕ:

— Пĕрлешес терĕмĕр ĕнтĕ,—терĕ Кĕçтук, Кулине çине вăрттăн пăхса илсе.

Тарйе выђанса Кĕçтука Кулине çумĕнђен айаккалла тĕртсе йатђĕ.

— Е-е, есĕр иксĕр нумай каласрăр пулĕ-ха. Пире тата унпа калаçма ирĕк пар,—терĕ.

Ытти хĕрсем шӳтлесе кулђĕçĕ. Кĕçтук тăрăхла сак çине кайса вырнаçсан пур хĕрађасем те Кулинене сăрса илђĕçĕ.

Софйе Павлăвнă та килне кайасси çинђен манса кайса Кĕçтукпа Кулине çумне ларса калаçрĕ.

Совет союсĕнђи ĕçхалăхĕ, сотсиалисăмăн тĕрлĕ фронђĕсенђе хастарлăн кĕрешнĕ вăхăтра тăватă уйăх револђутсиђенхи тăватă

çултан та малта. Кулине пулҗнитсăна кайаҗҗен хĕрарăмсен крушокĕ те çукҗĕ. Вуламалли çуртра та кун пек илем кӳмен.

Халҗ вăл хăй тавра сăрса илнĕ хĕрарăмсенҗен Марйепе Тарйе çине ытла та сăнаса пăхрĕ. Тарйепе Марйе ытла та уççăн, вылҗанса калаçрнăран: «мĕншĕн кĕсем капла, мĕншĕн, мантан кулмаççĕ-ши вĕсем?»—тесе пухăшласа пурин çине те тĕпҗесе пăхса тăҗĕ. Хĕрсем унпалан җĕререн калаçнине җухласа илҗĕ.

— Айуй, йепле есĕ наҗарланса кайнă?..

— Ытла та шурнă-çке?..

Пурте калаçрĕç, пурте тĕпҗерĕç.

Кулине нумай улшăннă. Тантăшсем җĕререн калаçнине курсан Кулине хĕпĕртенипе кĕленҗе сассăн йанратса кулҗĕ. Пурне те Кулинен сăн-пиҗĕ ытла та илемленнĕн туйăнҗĕ. Çавăнпа та ун çине Марйе шăтарас пек сăнаса пăхат. Җăнахах та Кулине ӳснĕ. Пăртакçă сархайа та пуçланă пек. Анҗах унăн хура çӳхе куç харшисем ĕлĕкхи пекех тӳрĕрех сăмси тĕпĕпе пĕрлешнĕ. Кулинен җĕрĕ, хуллăн авăнакан çан çурăмĕ ĕлĕкхи пекех Марйепе кĕвĕçтерҗĕ. Кулине Кĕçтука каҗҗа кайни ăна самайах лăплантарҗĕ. «Ман Кирука туртса илес çук-ха вăл», терĕ унăн вырăнсăр кĕвĕçӳпе хăпарса тулнă ăшҗикки.

Софйе Павлăвнă, Кулинене сăрса илнĕ хĕрарăмсем хушшине хутăшрĕ.

— Ну, Кулине, халҗ ĕнтĕ җĕрĕлтĕн, мĕн җухлĕ саншăн хуйхăртăмăр.

Софйе Павлăвнă Кулине çине савăнăçлă пăхакан сăн-питне Кĕçтук çине куçарсан, ытти хĕрсем те ун çине вăрттăн кулнăн пăхса тăҗеçĕ.

— Ну, пĕрлешрĕр?—терĕ Софйе Павлăвнă. Пĕрре Кулине çипе, тепре Кĕçтук çине пăхса. Кулине уççăн, хĕпĕртенипе аҗалла пăхакан куçĕсене антарҗĕ. Кĕçтук пĕр вырăнта утам пек туса, каллех кăшт кулам пек туре те, пуçне сулҗĕ.

Софйе Павлăвнă ăшшăн:

— Аван... Пĕрлĕ лайăх пурнăр, терĕ.

— Çавăншăн пĕрлешрĕмĕр те, хушрĕ Кĕçтук вăтанса.

Тарйе тутине тăсса пуç тутăр вĕçне җăмларĕ. Марйе куç хурисемпе Кĕçтукпа Кулинен сăн-пиҗĕсем çинҗе вылҗакан хĕпĕртевлĕхе сăнарĕ.

Йерипен уçăлнă алăк умĕнҗе политтĕк крушокне килнĕ Улҗки ӳсе тăрсан, Кулине, хĕпĕртенипе, ун патнелле сулăнҗĕ.

— Улҗки?!.

— А-а! Кулинепе Кĕçтук...

— Мĕншĕн пымарăн?—терĕ Кулине.

— Вăхăт пулмарĕ. Ĕнер хĕрарăмсен пухху иртермелле пулҗĕ. Халҗ тата хĕрсем мĕнле вĕренеççĕ, тесе кĕрсе пăхас терĕм.

— Еп кĕтрĕм...

— Есĕр пайан кунта килессе пĕлнĕ епĕ.

— Йепле?..

— А-а, пайан политтĕк крушокĕ вĕт...

Кулинепе Улҗки çапла калаçса тăнă хушăра ыттисем туй курма

килнĕ хĕрсем пек, нимĕн шарламасăр итлесе тăраççĕ. Софийе Павлăвнă кулкаласа сăмах тĕртсе хуҫе:

— Хĕрлĕ туй тăвас пулат ĕнтĕ,—терĕ. Улҫки Кĕçтукпа Кулине пĕр-пĕрне йуратнине тахçанах пĕлнĕ, анҫах ун çинҫен никама та калаçман. Çапах та халĕ вăл пĕлмене хунă пек:

— Аван, аван!.. Тăвас, терĕ сассине çĕклентерсе.

Çак хушăрах, урамри крилтса умĕнҫе Çеркунипе Карук хыттăн кăшкăрашса калаçнă сасă илтĕнсен, пурте ҫарăнса итлесе тăҫĕç.

— Мĕнле çав Карук кăшкăрса калаçма вĕреннĕ?..

— Пыр çыххисем хулăм пулас ун?—терĕ Тарйе.

Çапла калаçса хак панă çĕре Çеркунипе Карук килсе кĕҫĕçĕ. Карук кăсйинҫен «Канаш» хаçатне кăларса тăрăхла тенкел çине вырнаçрĕ. Хаçат Шупашкартан лăп ултă кунтан çитрĕ тесен, Кĕçтук хăш ҫысларине ыйтса ҫĕпҫерĕ.

— Йанварĕн 26-мĕшĕ, 1930-мĕш çул!—терĕ Карук.

— Мĕн çыраççĕ?тесе тĕпҫерĕ Марйе.

— Итлĕр, акă сире пĕр интереслă йапала вуласа парам.

— Вулаха, тавай вула? терĕç пурте.

Карук ҫи малтан аллинҫи хаçата ик йенелле сарса умри статйан йатне вуларĕ:

— «Кулаксене класĕпех пĕтерес политтĕк ыйтăвĕ пирки!..»

— Кам çырат?—терĕ ун çумне пырса ларса Кĕçтук.

— И. Сталин!..

— Кăна кĕçĕрех пĕрлешсе вуласа тухас пулат, терĕ Улҫки. Килĕштерҫĕç.

— Çавăншăн илсе килтĕм те,—терĕ Карук.

«Ҫиркӳрен Саккопа Вантсетси йаҫĕпе клуп уçрĕç»—тесе çырнă сăмахсемпе тĕл пулҫĕ.

— Итлĕрха, тавай çак саметкăна вуласа тухам.

— Вула!..

Карук васкамасăр вулама пуçларĕ:

«Хура кĕркуннепех Тĕмшер йалĕнҫи актив йалти ҫиркĕве раштавҫҫен хупмалла, тесе каларĕ. Ку тĕлĕшпе вара пĕрмайах ĕçлесе пынă.

Тĕмшер йалĕнҫи ҫиркӳ прихутне тăватă йал: Тĕмшер, Варасăр, Пилешкасси, Пакăш кĕреççĕ. Çак тăватă йалта та хресҫенсен пуххинҫе пĕр сасăпа:

— Ҫиркĕве хупас, халăха çутта кăларакан уҫрештени тăвас,—терĕç. Хресҫенсем йышăннине райĕçтăвком çирĕплетсенех йалти актив ҫиркӳри кирлĕ мар йапаласене тасатрĕç. Раштав 3—4 кун тенĕ ҫух ҫиркӳри икконсене пĕтĕмпех тасатрĕç, урайне çурĕç, çтенисене шăлҫĕç, т. ыт. те.

«Раштав» кун ҫиркӳ пулнă çурта пĕтĕмпех ҫăрăш тураттисемпе, ҫеҫексемпе, лосăнксемпе илемлетрĕç. Халĕ ĕнтĕ кунта кĕрсен никам та ку ҫиркӳ пулнă, тесе калас çук, мĕншĕн тесен, клуп ҫиркӳрен илемлĕрех.

Каçхине темиçе çул халăха улталаса пурăннă ҫиркӳ çур-

тенҫе, клуп уҫăлҫĕ. Халăх лăнк пулҫĕ. 400 ҫын ытла пурĕ пухăнҫĕҫ. Халăх пухăнсан йал канашĕ ҫаплă лару туса иртерҫĕ. Ҫиркӳрен клуп тунăшăн тĕрлĕ орканисатсисенҫен саламлă сăмахсем тухса каларĕҫ.

Саламлă сăмахсем тухса каласа пĕтерсен кино карттин, пухăннă халăха укҫасăрах кăтартрĕҫ.

Амерĕк кăпиталĕ Саккопа Вантсеттийе електритсăпа вĕлерниие аса илсе, пухăннă халăх клупа «Саккопа Вантсетти» тесе йат парас терĕ. Мĕншĕн тесен ҫиркӳ те ĕлĕк хура халăха пусмăрлакан ҫурт пулнă», терĕ.

С. М.

— Вăт мĕнле?.. Курнат, комсомолĕссем хытă ĕҫлеҫҫĕ пулас, терĕ Улҫки.

Карук пуҫĕнҫи ҫĕлĕкне ҫамки ҫинерех тĕртсе антарса хăрах аллине ҫĕркуҫҫи ҫине ҫапрĕ те ура ҫине тăҫĕ:

— Ҫук, пиртен пулмаст вĕсен пек ĕҫлеме!.. Анҫах Карук хăйĕн сăмахне пĕтермерĕ. Пӳрнипе ҫамкине шаккаса пурин ҫине те куҫĕсене выҫантармасăр пăхса тăҫĕ. Пуҫĕнҫи шухăшсене уҫмарĕ. Тарйепе Майре йурри кансĕрлерĕ ăна. Карук темĕн пек уҫҫăнах:—мĕн пур ĕҫе кулак аҫи Ҫемйун пĕтерсе пырат, тесе каласшăн пулҫĕ вăл, ҫамрăксем хушшинҫе. Ыттисем Карук темĕскер каласшăн пулсан та каламаннине ҫухларĕҫĕ пулас. Улҫки тутине тăсса Кулинене хирĕҫ ҫавăрăнса пăхса тăҫĕ. Софйе Павлăвнă хăй вĕрентсе кăларнă Карукне иртнĕ ҫула каникула таврăннă Малттинпе, кулак Ухăҫван аҫи—Кенăпа танлаштарса виҫрĕ. Уйрăмлăх пур ҫав, хăйне май ҫын, тесе шухăшларĕ. Хăй куҫ умне Карук мĕнле ҫын, мĕнле ĕҫре ĕҫлеме пултарĕши?—тесе ҫарăнса тăҫĕ. Карука хулăм уралă, пысăк, йăвăр ҫăк сĕтрекен лашапа танлаштарса виҫрĕ. Ҫавăнтах унăн тепĕр шухăшĕ Карукра вĕрилĕх те пурри ҫинҫен астутарҫĕ. Софйе Павлăвнă ултă ҫул хушши хăй умĕнҫе вĕренсе ӳснĕ Карука аван ҫухланăн туйăнсан хĕпĕртесе кайрĕ.

Тарйе ҫӳреҫерен урам урлă Миккуҫ каҫнине курсан:

— Миккуҫ килет!—тесе кăшкăрса йаҫĕ. Ытти хĕрсем пурте ҫӳреҫе умне кăпăртатса пуҫтарăнҫĕҫ. Миккуҫ хуткупăсне хулпуҫҫи урлă ҫакса вуламалли ҫурта кĕҫĕ.

— Кайа йултăн,—кайа?! терĕ Ҫеркуни.

Миккуҫ, хул ҫине ҫакнă хуткупăсне аллине илсе, хырăм ҫине лартса ик аллипе ик йеннелле тăсса хуҫе те, пурин ҫине те хуткупăс урлă аҫалла кулса пăхса тăҫĕ.

— Вăт камит!—Каҫса кайса кулҫĕҫ.

— Выҫа ĕнтĕ, мĕн тата виртлесе тăратăн?..

— Саккас!?—мĕн выҫас?..

— Интернатсионал!—терĕ Карук.

— Ҫăпата, ҫăпата!!—терĕҫ хĕрсем.

Миккуҫ ҫавах пĕр сиккелемесĕр пăхса, кашни саккас ыраакан йенне пуҫне пăрса хăлхине тăратса итлерĕ.

— Парах ĕнтĕ, камит пайне вăраха тăсатăн, терĕ Карук.

— Интернатсионал! терĕ те Миккуђ хуткупăсне калама пуçларĕ.

Çамрăксем веçех пуçтарăнса çитнĕ çĕре Миккуђ ик-виç кĕвĕ каласа пађĕ.

Çамрăксем пурте пуçтарăнса çитрĕçĕ. Саңук та, колхосра ĕç нумайне курах, политтĕк крушокĕнђен йулмарĕ.

## 9. ПОЛИТТĔКЛĂ КРУШОКРА.

Çеркуни виç каç хушши хатĕрленнĕ, çав хушăрах ытти ĕçсене те тунă. Револютсиллĕ теори сотсиалисăмшăн кĕрешнĕ çĕрте темрен те хаклă тăнине вăл тĕплĕнех ăнланса илнĕ. Ун çинђен вăл малтанах ыйтусем лартнăђђĕ. Çав вăхăтра вăл хăйĕн нумай вĕренмелли çинђен та шутланă.

Райкомра партти ђленĕн кăнтитатне илнĕ ђух ун умне тĕрлĕ ытла хыттăнах ђухласа илнĕ.

Малтанах вăл йăнăш çул çинђе тăнă: вăл шкулта хăйранса тухнисех килĕштересшĕн пулнă.

Райкома ђĕнсе иккĕмĕш каттекорипе партти ђленĕн кăнтитатне илсенех ăна çак пысăк ĕçе хушнă. Кипек-кассинђе политкрушок уçсан Çеркуни умĕнђе теори тĕлĕшпе çивĕђленесси пуринђен те ытла пысăк ыйту пулса тăнă.

Çеркуни хăй çине пысăк ответлăх илсе: Парттин вĕренес ĕçне, револютсиллĕ теорипе комсомолĕссене хĕçпăшаллантарса, çак ĕçе çителĕклĕ хак паманлăхпа кĕрешет. Вĕренес ĕç парттипе комсомолăн пысăк политтĕклă сатађђи иккенне хăй пĕлнипе çеç килĕштермест. Вăл çак ĕçе пур массăна та пĕрлештересшĕн. Çавăнпа та вăл иккĕмĕш хут ĕнтĕ кун пирки крушок ђленĕсене умсăмах туса каласа ăнлантарат.

Çĕрĕпе хатĕрленсе ларнă Çеркуни ларнă çĕртен ура çине тăрса çапла пуçларĕ:

— Йулташсем! Вĕренесси партти ђленĕсемпе комсомолĕссен умĕнђе çеç тăракан сатађђă мар.

— Тата камсене вĕрентес тетĕн?—пўлђĕ Карук.

— Ђим-ха, каласа пĕтерем, терĕ те хăй сăмахне малалла тăсрĕ.

— Епĕр рапођђисемпе патраксене, ђухăнсене, колхос ђленĕсене хушпăнтармалла. Çапла вара, çакăн пек политтĕклă крушоксем урлă, парттипе комсомола кĕртме çынсем хатĕрлемелле. Сотсиалисăм тăвас ĕçре, револютсийе хирĕç пыракансемпе кĕрешме, пур ђухăнпа вăтамсене те партти çул-йĕрĕпе пăлаштарса хĕçпăшаллатмалла.

Йулташсем, комсомолĕссем умĕнђе калама та çук пысăк ыйтусем тăраççĕ. Епĕр çамрăк хастарсем парттийе пулăшса малти ретре тăмалла. Епĕр хамăр çине пысăк ĕç илтĕмĕр. Вăл историллĕ кĕске вăхăтрах сотсиалисăм тăвас ыйту. Ђухăнсемпе вăтамсене пĕрлештерсе çĕнĕ сотсиалисăмлă хуçалăха тунă хушăрах кулаксене класĕпех пĕтеретпĕр.

Мĕншĕн-ха теори тĕлĕшпе лайăх пĕлни кирлĕ?—терĕ те Çеркуни ыйтăса сывлăш çавăрђĕ.

Çавăнтах шухăшласа тăђĕ. Вăл каçхине кăна вуланă Опком çек-

реттарĕн хаçат çинче çапăннă сăмахсене астуса илесшĕн пулчĕ.

Çемйун, комсомол çекретарĕ, тепкел çине тайанса лăкăртатрĕ:

— Ку такама та паллă. Есĕ ытла шала кĕретĕн...

Çĕркуни, калăн, Çемйун сăмаххисене весех илтмерĕ, ăна хирĕç тавăрмарĕ.

— Йулташсем, мĕн чухлĕ епĕр теори тĕлĕшпе асаплапатпăр, çавăн чухлĕ пирĕн куç-пуçсем анлăн уçăлма пултараççĕ. Есĕр хăвăр та илтнĕ пирĕн тăшмансем темиçе тĕслĕ теорисем шутласа кăларнине. Теорипе хамăр çивĕчленмесен ирсĕр шухăшсемпе епĕр кĕрешме пултарас çук.

— Правĕлнă!—хушрĕ Карук.

— Пĕтĕм Совет Союсĕнчи çĕршывăн сăн-пичĕ улшăнат. Партти, çĕршыва интустрилессипе йалхуçалăхне улăштарас майпа револютсиллĕ лосанкпе пурнăçа кĕртет. Кунта татах çĕнĕрен-çĕнĕ ыйтусем тухса тăраççĕ. Вĕсем: коллектививсатсии хăвăртлăхне татах васкатасси. Кулаксене класĕпех пĕтересси.

Пирĕн хушăмăрта, ĕçре те, теори тĕлĕшĕнчеп те, тĕрлĕ сулăнчăксем сиксе тухма пултараççĕ. Çакăнтан ĕнтĕ, партти вĕренĕвĕ пур ĕçре те пысăкран та пысăк ĕç пулса тăрат.

Çеркуни хăйĕн сăмахне вăйлăрах, пур йулташсем те çирĕп шапчăк тесе, чĕререн малтанах хатĕрлесе хунă Сталин йулташ сăмахĕсемпе çирĕплетрĕ.

— Теори, пĕлнĕлĕх мĕншĕн кирли çинчен партти çулпуçĕ Сталин йулташ акă мĕн калат,—терĕ те вулама пуçларĕ:

**«Паллах, теори—вăл чăнчăнах теори пулсассăн—ĕçтăвакансене ĕç йĕрне суйласа илме вăй парат, малашнехине паллăн кăтартат, ĕçĕ шанăçлă тума пулăшат, хамăр тăвакан ĕç çийеле тухассине ĕнентерет...»**

Кĕçтук тепĕр хут вуласа пама ыйтрĕ.

Çеркуни тата çĕнĕрен васкамасăр вуласа панă хыççăн, вырăсларан чăвашла куçарчĕ.

Çак вăхăтра Çпеккĕрпе Палюк килсе кĕчĕçĕ. Çеркуни вăтанмарĕ. Çпеккĕрпе Палюк вырнаçса ларсан, Çеркуни тĕп ыйту çине куçрĕ.

— План тăрăх пайан пирĕн парттипе комсомол ретĕпчи сылтăм сулăнчăк çинчен тишкĕрсе тухмалла...

Çеркуни капла каласан Карук Кирукпа йунашар ларнă Çемйун çине, унтан Палюк сăн-пичĕ çине сиввĕн пăхса сăнаса илчĕ те, хăй ăшĕнче: «Курăнăр, мĕнле-ха есĕр тухса калаçнине?—çук вĕсем калаçаççĕ-и? Нимпе те вĕсен чĕлхисене сӳтес çук. Кирукĕ ĕçертсен çеç» тесе шухăшласа илчĕ...

— Епĕр малтанах каларăмăр, халь тата çакна каламалла, çак пур сулăнчăксем те пурнăçри кĕрешӳсенчи практĕккăпа çыхăнса тăраççĕ. Кун пирки аслă польшевик, Ленин йулташ, çапла каласа хăварнă. Çеркуни Ленинăн XI-мĕш томĕн 2-мĕш пайне уçса сулăнчăксен никĕсĕ ăçтан тухнине кăтартрĕ:

— Акă Ленин йулташ мĕнле çырат:

**«Вăл сулăнчăксен никĕсĕ тата тарăнрах, халчи опчĕствăн**

**екконоке́к условисенҫе, тата пите́ ҫивӗҫ пыракан клас кӗрешӗ-вӗнҫен тухса пыракан тӗп сӑлтавӗсенҫе».**

— Хут те мӗнле сулӑнҫӑк та, сулахай, сылтӑм-и, йе вӗсемпе килӗштерекенни-и?—пурте вӗсем партти тӗрӗс ҫул-йӗрӗнҫен пӑтраш-тарса, кӑпиталисӑм ҫулӗ ҫине калла ҫавӑрса кӑларма пулӑшаҫҫӗ. Ӑҫтан курнат вӑл?—**Вӑл револютсиллӗ ӗҫре ҫармантарнинҫен, кулак-сене хӗрхеннинҫен, ҫирӗппӗн тӑрса кӗрешменнинҫен.** Кун пеккисем пирӗн хушӑмӑрта та пулма пултараҫҫӗ. Вӗсемпе пирӗн хыттӑн кӗ-решес пулат. Акӑ ҫӑмахран, Кирукаx илсе пӑхар. Кирук пайан кунта колхоса хӑй ҫемйисене кӗртеймест, хӑй те ҫемйесем йатла-ҫаҫҫӗ, тесе туртӑнса тӑрат. Ку мӗн пулат-ха?—ҫакӑ ӗнтӗ кулаксен йурри не итлесе вӗсен хыҫҫӑн кайни пулат. Пулӑшат-и Кирук колхоса кӗменни колхос ӗҫӗнҫе?...

— Пулӑшат?! Кашнийех пӳрнисемпе тӑсса кӑтартпи пур, терӗ Кӗҫтук.

Кирук йаланхи пекех ҫӗлӗкне сӑмси ҫине антарса, сӑмси айӗнҫе мӑкӑртатрӗ.

— Вӗрентес пулат, йатлаҫнипе мар, тесе хушрӗ Ҫемйун.

— Ку вӗренни мар-и тата?—терӗ Карук.

— Тӗкех лар, епӗ сапа мар калаҫатӑп.

— Хут те камна пулсан та, оппортунисланса ан лар!—тесе тавӑрҫӗ ӑна хирӗҫ Карук ҫиленсе кайса.

— Ӑслӑлӑх тӗлӗшпе кала есӗ!—терӗ пӗри.

— Тӗрӗс, терӗ Кирук та.

Пӗр-пӗрипе перӗшнӗ вӑхӑтра, калӑп, сывлӑш ҫавӑрса илме ӗлкӗрнӗрен, Ҫеркуни сассипе ҫӗклентерҫӗ.

— Йулташсем! Кунта теорипе практӗкка расна лартса виҫме тӑрӑшни палӑрат. Ку тӗрӗс мар. Ӑна есӗр нийепле те уйӑрас ҫук. Сӑмахран, тротскисӑмпа Пуххарӗн вӗрентӗвӗсене илсе пӑхар-ха, мен курма пултаратпӑр епӗр унта?

Ҫпеккӗр пуҫне хыҫса илсе: «Вӑн мӗнле, пултарат ку?—тесе шухӑшларӗ те лӑпланса ларҫӗ.

Карук, ҫумӗнҫе ларакан Улҫкипе Кӗҫтука куҫ хӗсрӗ. «Мӗнле ҫаптарат вӑл», терӗҫ ун куҫӗсем.

Кӗҫтук ҫак хушӑрах Кулине умӗнҫе хӑй вуланипе малашне пӗрле вӗренесси ҫинҫен сӑмах хушрӗ те ҫынсене систермесӗр, Кулинен аллине тытса ҫӑмӑртарӗ.

Кулине те, Ҫеркуни сӑмахне итленӗ хушӑрах, Кӗҫтукӑн аллине хирӗҫ ҫӑмартаса аҫашласа илҫӗ.

Ҫеркуни, сулахайпа сылтӑм сулапҫӑк ҫинҫеп вӑрахҫен тан-лантарса парсан, хӑй сӑмахне ҫапла пӗтерҫӗ:

— Тротскисӑм вӗрентӗвӗ хресҫен ыйтӑвне йурӑхсӑр куҫпа пах-нинҫе. Тротскисӑмла вӗрентӳ—хресҫенсене сийлесе пӑхма пелменнинҫе. Ҫухӑнпа вӑтам хресҫенсем, пролеттари пулӑшса йертсе пынипе, таҫӑ ҫыхӑну туса сотсиалисӑмлӑ ҫул-йере тухма пултарнине курманнинҫе... Кунта нумай калама пулат, вӑл Совет сойусӗнҫе сотсиалисӑм тӑвасса та шанман т. ыт. те...

Тротскисамӑн вак пуршуаллӑ сулӑнҫӑкӗ пуринҫен ытла сотси-

алисăм строиттĕлствине сарса пыма майсем (условисем) хатĕрленĕ вăхăтра палăрҫĕ... Тротскисăм нихçан та тĕрĕс револҫутсиллĕ çул çинҫе тăрса, ĕçхалăхне пулăшман...

Пуххарĕн теорийĕ те çав контрреволҫутси лаҫакинех илсе пырат.

Пуххарĕн вĕрентнĕ тăрăх сотсиалисăма суту-илӳ копператси урлă каймалла.

Çакăн пек вĕрентӳ, сылтăм сулăнҫăкăн тĕп «аслăлăхĕ», вăл рапоҫҫи класĕ пуршуаллă клас тăшманĕсем çине пĕтĕм фронтпа çĕмĕрсе пырса сотсиалисăм строиттĕлствине сарса пынă вăхăтра палăрҫĕ.

Пуххарĕн çапла вĕрентни питĕ пысăк йăнăш. Пуххарĕнăн вĕрентĕвне Ленин вĕрентĕвĕ хирĕçлет. Ленин суту-илӳ копператсийĕ сотсиалисăм тума пулăшнине манмасăр акă мĕнле вĕрентĕе хăварат, терĕ те Çеркуни, Ленин каланă сăмахсене вулама пуçларĕ:

— Вăл каланă:

«Вак хуçа копператтивсеп сотсиалисăм патне куçас пулсан вак происвотствăран шултра происвотства çине куçмалла»— тенĕ Ленин.

— Кунта нимĕн уйрăмлăх та çук, терĕ Кирук.

— Итле, лайăхрах тăнлас пулат...

— Хаҫ те ĕнтĕ, пуçри çĕлĕке хыврăм.

— Çуна ӳреҫи çумне тухса пуçпа çемçет—терĕ Карук.

Карук капла каланинҫен пурте ахăлтатса кулса йаҫĕçĕ.

Çпеккĕр, Çеркунине йуратса итлесе ларнăскер, çумĕнҫи кивелсе тутăхса кайнă сехетне кăларса пăхса:

— Тăваттă çитрĕ, тата икĕ сехетрен пуху пуçтарăнмалла. Çак ыйтăва пĕтерсеп пурсăмăрăн та çынсене пухма тăрăшас пулат,— терĕ.

Саҥук ăна хирĕç çынсем тĕттĕм пулмасăр пуçтарăнаймасси çинҫен каласан, Çеркуни нумай йулмаини çинҫеп астутарса каласма пуçларĕ.

— Кунта, Кирук, Пуххарĕнпа Ленин вĕрентĕвĕнҫе нимĕн уйрăмлăх та çук, тесе персе йаҫĕ. Çук, йулташсем, ку лайăх итлесе ларайманнинҫен килет. Мĕнле ăнланас пулат-ха кăна?—Сылтăм сулăнҫăк теорине туртса кăларакансен шуҫĕпе çапла пулат: вĕсем калаççĕ: халҫ пирĕн пеп вăхăҫĕ, çавăнпа та ирĕклĕ суту-илӳ пырат. Çавăнпа та вĕсен шуҫĕпе суту-илӳ ĕçне çавăрса илмелле. Ăна илан тăрăх йĕркелесе, йалпа хула хушшинҫи çыханăва пасар урла çирĕплетсе пыратпăр. Çавăнпа та, вĕсеп шуҫĕне тавар çавăрăнăçне ытларах вăйлатмалла пулса тăрат...

— Халĕ пирĕн çыхăну пасар урлă мар-и?—терĕ Çпеккĕр.

— Пасар урлă, анҫах...

— Пăтрататăн есĕ!—терĕ Çемйун.

— Ан капçĕрлĕр, ытла калаçас килеттĕк, Çемйуна ырап сылтăм сулăнҫаксемпе килĕштерекенсем çинҫеп токлат тума парас, терĕ Карук. Çемйун çилĕллĕ куçĕсемпе пăхса алине сулҫĕ:

— Сапа сулахаи сулăнҫăк çинҫеп парас!...

— Ну, штош? Епӗ хирӗҫ мар!...

— Ҭаранар-ха ҫапӑҫма!

Лӑпланҭӗҫӗ.

— Епӗ пасар урлӑ ҫыхӑну ҫук теместӗп. Анҭах ҭӑн пысӑк сӑлтавне шыраса тупас пулат.

— Ну,ну?...

— Кунта ҭи пысӑк сӑлтав происвотстӑвӑллӑ ҫыхӑнура...Хулари промышлӗннӑҫпа йалти колхоссен хушшинҭи ҫыхӑнӑвӗнҭе ӗҫ. Пуххарӗн мӗнле ҫыхӑну ҫинҭен калат?—акӑ мӗн вӑл ҫырса ҫаптарҭӗ, «Ленинӑн политтӗкла кӑтартса хӑварнинҭе» тенӗ пӗҭӗкҫӗ кӗнекинҭе, терӗ те астуса илесшӗн ҭаранса шутласа тӑҭӗ.

— А-а, астурӑм. Ӑна епӗр вӗренсе тухас кунсенҭе илсе вуланаҭҭӗ. Вӑл калат:

> «Копператси сотсиалисӑм патнелле илсе кайтӑр тесен, унӑн малалла каймалла, Аҫири пек мар—Йевроппӑри пек суттума вӗренмелле», тет.

– Сап шутпа суту-илӳ ӗҫне ҭакармалла-и?—Тротскисӑм ку!—тесе кӑшкӑрҭӗ Ҫемйун.

Ҫемйун сассине хирӗҫ пурте кӑшкӑрса Ҫеркунирен сӑмах ыйтрӗҫ. Пӗр саманртах ҫавра ҫил тухса кашласа иртнӗ пек, никам ҭарайми кӑшкӑрашма тытӑнсан, Миккуҍ ҫумне лартнӑ хуткупӑсне тӑстарса каласа йаҭӗ.

Пурте ҭаранса ун ҫине ҭӗлӗнсе пӑхнӑ пек пулҭӗҫ.

— Мӗн хӑтланатӑн есӗ?—терӗ пӗри.

— А-а есӗ мӗн хӑтланатӑн?—таварҭӗ Миккуҍ.

— Тистсиплинӑ ҫук!..

— Ҭаранӑр?—терӗ Миккуҍ. Ну вӑт хаҍ епӗ каламастӑп, епӗ те ҭарантӑм...

Хӗрелсе кайнӑ Ҫемйун пуҫне ҭикрӗ. Ыттисем Миккуҍ ҫине пӑхса ахӑлтатса кулса илҭӗҫӗ...

Ҫеркуни сӑмахне тӑсрӗ:

— Капла пӳлсен, тротскисӑм мар, темӗн те тума пулат.

— Правӗлнӑ!..

— Тӗрӗс!..

— Епӗ суту-илӳ ӗҫне хирӗҫ мар. Ӗҫ кун ҫинҭе мар. Анҭах Пуххарӗн шутлани партти ҫулйӗрӗнҭен пӑрса йарат. Кунта епӗр сотсиалисӑм тӑвас ыйтупа ҫыхӑнтарса калаҫатпӑр.

Сӑмахран, Пуххарӗн вӗрентнӗ тӑрӑх шутласа кайар-ха. Калӑпӑр пӗтӗм сойусри хресҭенсене те суту-илӳ копператсине кӗнӗ тийӗпӗр. Пулат-и-ха кунпа сотсиалисӑм?—ҫук! Ку ыйтава суту-илӳ копператсийӗ татса пама пултараймаст.

— Мӗншӗн?—Ҫавна кала-ха есӗ!?—тӗпҭерӗ Ҫемйун. Ҫемйун сиксе хӗпӗртевлӗ калаҫнине курсан, Кӗҫтук хӑййӗн пӗлменлӗхӗпе Ҫеркунийе пулӑшмайманшӑн кӳренме пуҫларӗ. Карук та, ак халех Ҫемйуна хайаррӑн хирӗҫ тавӑрса парасшӑн пулса пуҫне ҫӗмӗрме пуҫларӗ. Пурин пуҫӗнҭе те «мӗншӗн?»—тенӗ ыйту шаранса ларса йулҭӗ.

Ҫеркуни ывӑнса ҫитрӗ. Тарланӑ ҫамкипе шӑлса илсе:

— Мĕншĕн?.. Акă мĕншĕн. Мĕншĕн тесен, пур суту-илӳ копперативĕнҫе тăракансем те вĕсем уйрăм хуҫалăхпа пурăнаҫҫĕ. Уйрăм вак хуҫалăх ҫинҫен Ленин каланă сăмахсене пĕр самантлăха та манас пулмаст. Ленин каланă:

**«...вак происвотствă кашни кун, кашни сехетре, хăй тĕллĕнех, тата нумайăн кăпиталисăмпа пуршуаҫийе ҫуратат»**—тенĕ.

Ҫапла ĕнтĕ суту-илӳ копператси урлă мар ҫи кирли, происвотствăллă копператси урлă ҫеҫ (ҫав хушăрах суту-илӳ копператсийĕ те пулăшат) йалхуҫалăхне сотсиалисăм релси ҫине лартма пултаратпăр. Кун пирки нимĕн тавлашмалли те ҫук. Ку ыйтăва Сталин йулташ акрарнĕк-маркҫиссен конферентсинҫе татăклă каласа панă.

Карук хĕпĕртенипе ҫăтаймасăр алă ҫупса йаҫĕ.

— Ах, Ҫеркупи, тĕрĕс! Аван!..

Кĕҫтук, Саҫук, Уҫки, Кулине,—пурте хĕпĕртенипе алă ҫупнă хыҫҫăн, ыттисем те алă ҫупса илҫĕҫĕ.

Лăплансан, хĕпĕртенĕ Ҫеркупи малтанах хатĕрлесе хунă Сталин йулташ сăмаххисене вуласа паҫĕ.

— Йулташсем, епĕ хамăн сăмаха Сталин вĕрентнипе вуласа пĕтеретĕп терĕ те, вулама пуҫларĕ:

**«Вак хресҫенлĕ йал сотсиалисăмлă хула хыҫҫăн кайтăр тесен—тĕрлĕ ытти ĕҫсемсĕр пуҫне—йалсенҫе шултра сотсиалисăмла хуҫалăхсем: ушкăнлă хуҫалăхсемпе Совет хуҫалăхсем тумалла, вăл хуҫалăхсен сотсиалисăмлă хуласемпе пĕрле хресҫенсен тĕп массине йертсе пымалла, сотсиалисăмлă никĕс пулмалла»**, тет коммуниссен парттин ҫулпуҫĕ.

Ҫеркупи вуласа пĕтернĕ-пĕтерменех Карук алă ҫупса йарсан, пурте алă ҫупрĕҫ.

Миккулҫ ҫав хушăрах хăйĕн хуткупăсĕпе интернатсионал йуррине тăстарса йулташĕсен ҫĕрисене ҫĕклентерҫĕ.

Кĕҫтук пурин умĕнҫе те хăй пĕҫҫен «полит економи» вуланă ҫух ăнлапманнисене каласа парасшăн пулҫĕ. Анҫах вăтаннă пек пулсан, лăпланҫĕ те, пĕҫҫен ҫух Ҫеркунипе калаҫăп, тесе сăмах татрĕ.

Ҫеркупи токлатне итленĕ хыҫҫăн уҫăлма тухрĕҫ. Кĕҫтук тепĕр хут Кулини ҫумне хĕсĕнсе:

— Вĕренетпĕр вĕт, терĕ.

— Вĕренетпĕр, терĕ Кулине.

Кулинепе Кĕҫтук хире-хирĕҫ аҫашланса пăхса калаҫнине Ҫеркупи курҫĕ. Вăл вĕсем пĕр-пĕрне йуратнăшăн хĕпĕртенипе:

— Вот ҫапла!.. Пĕр-пĕрне комсомолĕсле ҫĕререн йуратăр, терĕ. Комсомолĕссем килĕсене саланҫĕҫ.

Кĕҫтук Кулинепе алла-аллăн тытанса алăкран тухнă ҫух Ҫеркупийе тытса ҫарҫĕ.

— Ҫеркупи!

— Мĕн?

— Манăн санпа хăвăнпа кăна калаҫмалли пур.

— Тавай!..

Виҫĕ йулташ хуллен васкамасăр урамваррипе, ҫемҫе йур ҫинҫен

утрĕçĕ. Кĕçтук, хăй пĕђђен вĕреннĕ ђух, Çеркуни вулама хушнă кĕнекене вуланă хыççăн мĕн-мĕн ăнланманнисене каласа пађе.

Çеркуни каларĕ:

— Сотсиалисăм револютсисĕр, пролеттари тиктаттурĕсĕр, нийепле те пулма пултараймаст. Оппортунисăмпа револютсиллĕ маркçисăмăн хушшинђи кĕрешӳн тĕп ыйтăвĕ те çакăнта. Иккĕмĕш интернатсионал çулпуçĕсем ĕç халăхне пролеттари тиктаттурĕсĕр, пĕр револютсисĕрех сотсиалисăм тума май пур, тесе вĕрентеççĕ. Ăçтан тухат ку йапала?—тесе ыйту лартрĕ те, ури айĕнђе ытла та çемçен туйăнсан, кĕл купи выртнине курђĕ.

— Тфу, вăт мĕнле епĕр вĕренсе çитеймен-ха. Çак усăллă йапалана пустуй йавантарса çӳрететпĕр...

Кĕçтукăн пуçĕ Çеркуни шухăшĕнђен пăрăнмарĕ:

— Вара?..

— Паллах ĕнтĕ, ку тĕлĕшрен Йевроп рапођђисем темĕн ђухлĕ хăйсен тирĕсемпе тишкĕрсе пахрĕçĕ. Парламентарисăмпа, вак пуршуаллă темократтисăмпа сотсиалисăм тума май çукки аван курăнђе. Ан лире рапођђи правиттĕлствă пулђĕ вĕт?—мĕн пулђĕ. Нимĕн те пулмарĕ. Ăçтан тухат çак йапала?

Çеркуни Ленинăн патшалăх теори çине кĕрсе кайса йулашкинђен, вăрăммăн сывласа:

— Çук! пĕртен-пĕр ыйту, вăл пуршуаçи тиктаттурине ватса çĕмĕрессинђе. Кăпиталисăмлă патшалăхсенђе хутте мĕн тĕслĕ правиттĕлствă пулсан та, монархиллĕ-и, парламентарисăм-и—пурте вĕсем пуршуаçи, кăпиталисăм çиçтемине сыхлакан аппарат пулса тăраççĕ.

Çеркуни Кĕçтук лартнă ыйтуран пăрăнса кĕрсе кайрĕ пулсан та, Кĕçтукшăн ку сăмахсем темрен те усăллă пулса тăђĕçĕ. Кĕçтук малтан лартнă ыйтуне астутарђĕ.

— А-а есĕ ĕнтĕ кăпиталисăм çиçтеминђе мĕнле майпа сотсиалисăмшăн кĕрешекенсемпе, сотсиалисăмшăн усăллă йапаласем хатĕрлени çинђен калатăн?..

— Çапла...

— Ђи малтанах çакна калас пулат. Кăпиталисăм хăй тĕллĕнех сотсиалисăм туса пама пултараймаст. Анђах та сотсиалисăмра ђи кирли, усăллă йапаласене вăл хатĕрлет...

Кĕçтукпа Кулине хытă итлеççĕ.

— Самахран, пролеттари ӳсни, ĕçхатĕрсем вăйланни... Хапрăксем, ђукун çулсем, пысăк савăтсем, çаксем пурте сотсиалисăмра кирлĕ пулаççĕ вĕт.

— Çапла!..

— Урăхла каласан техпĕккă! Унпалан епĕр усă курмалла. Кăпиталисăм пулман пулсан пролеттари те пулас çук. Тĕрĕс вĕт?..

— Терĕс, терĕ Кĕçтук.

Çакăнтан ĕнтĕ кăпиталисăм хăйĕн ӳсĕмĕнђе хăйне вĕлерсе пыракан вăйă хатĕрлени пулса тăни курнат те. Анђах кăпиталисăм нихăçан та сотсиалисăма хăй çуратмаст, вăл условисем çеç хатĕрлет. Ку ĕçре пролеттарин пĕрлешĕвĕ, вĕсене тĕрĕс çул çине кăларакан рево-

ђутсиллĕ маркçисăм пулăшаť. Урăхла каласан пĕр коммуниссен парттийĕсем çеç.

Кĕçтук пуçĕнђе ыйтусем çуталма пуçларĕç. Вăл лайăх ăнланса пыђĕ. Çапах та йулашкинђен:

— А-а, йалти кулак?—терĕ.

— Кулак кăпиталис мар. Унăн тымарĕ кăпиталисăмпа çыхăннă пулсан та кунта расналăх пысăк. Кулак та експлоаттаттăрах. Вăл ђухăнсене, патраксене хĕстерет, анђах вĕсем ђухаппа вăтама хăйсен ĕçхатĕрĕсемпе ĕçлеттереççĕ. Пуринђен ытла расналăх: кăпиталисăн пысăк хапрăк-савăт. Кулакăн вăл çук, анђах çав кулакрапах кăпиталис та пулма пултарат, çавăншăн кĕрешет те вăл. Тӳрех калас пулат, кулак сотсиалисăмшăн ӳснĕ хушра, йалти ђухăнсене çаратса сӳсе йулса хулана хăваласа йанинђен пуçне нимех те тумап. Кун çинђен сăмах та пулмалла мар. Кулак кăпиталисăм тымарĕсенђен пĕри, ђи хăрушă, ђи тискер йалти експлоататтăр вăл. Епĕр ăна кăкламалла тымарĕпех, малашне унăн ирсĕр шарни те ан пултăр...

Кĕçтук йулашки ыйту çинђе ђаранса тăђĕ.

— Ăнлантăм. Аван пĕлетĕн есĕ...

— Кĕçтук, ĕçлер-ха çапла пĕрик çул. Вара иксĕмĕр те вĕренме кайăпăр. Есĕ технĕккума, епĕ аслă шкула, Малттин вĕрепекен çĕре. Халĕ пирĕн влаç, ĕлĕк нуша курса ӳснĕ çемйесен ађи-пăђисемшĕн, мăшкăлта пурăннă вак халăхсемшĕн аслă çул сарăлса выртаť.

Кĕçтук йулашки ыйтăвне çапах та лартрĕ:

— Çеркуни, кала-ха есĕ мана. Сотсиалисăм вăхăтĕнђе патшалăх аппаратĕ вăйланмалла-и, йе кунрап-кун ђакса пымалла-и?..

Çеркуни шухăшларĕ те ăна хирĕç тавăрђĕ.

— Хамăр çĕршывах илер-ха. Епĕр ĕнтĕ ђăн-ђăн сотсиалисăмăн никĕсне хыватпăр. Парттин 14—15 сйесĕсем иптустриалисатсие коллективисатси ыйтăвне лартса çул катартнă хыççăн çак çывăх çулсенђех пысăк улшăнусем пуласси таçтанах палăрса тăраççĕ.

Пĕр çĕршывра сотсиалисăм тума май пурри çинђен те сăмах татăлнă. Кунта ăнланманлăх çук. Кун пирки Сталин йулташ, тротскисăма çапса салатнă вăхăтра, парттин 15-мĕш сйесĕнђе татăклă, прокрамăллă вĕрентӳ кăтартса панă. Çапла ĕнтĕ, Совет çĕршывĕнђе сотсиалисăм тусан, ытти патшалăхсенђе кăпиталисăм çиçтеми пур вăхăтра, çирĕп çар, патшалăх тытăмĕ пире темĕнрен те кирлĕ пулат. Епĕр çав тери, темĕнрен те, пур йенђен те вăйлă сотсиалисăмлă патшалăх пулса тăратпăр. Сотсиалисăмран тата çӳлти картлашкине улăхас тесен, вăл коммунисăм пулат,—пирĕн Совет аппаратне вăйлăн çирĕплетес пулат, терĕ те Çеркуни йалти Совет ĕçне астутарђĕ.

Кĕçтук ытла та аван ăнланса илђе. Пуринђен ытла Паљук ĕçĕ çинђен шутлама пуçласан унăн уменђе пысăк ыйтусем çуралма пуçларĕçĕ.

— Ђапах та, çирĕп, тĕрĕс ĕçлĕни темĕнрен те кирлĕ, терĕ Кĕçтук.

Çапла калаçса вăрахђен тăђĕç вĕсем ђалăшса кайма пуçлапă

Упаҫҫа пӳрт умĕнҫе. Виҫĕ ҫамрăк урам тăрăх утса, вĕрлĕхсенҫен вырăсла хапха тунă пӳрт умне килсе ҫарăнни синҫен те шухăшлама-рĕҫ. Хĕвел те тури сăрт хыҫне анҫĕ. Ҫеркуни алă парса хваттерне хĕпĕртесе утрĕ.

— Аҫа вĕренет, унтан ҫын пулат, терĕ вăл хăйпе-хăй калаҫса. Кĕҫтукпа Кулине пухăва кайасси ҫинҫен асăрхаса пӳрте кĕҫĕҫ.

---

## 10. ШĔВĔРЛЕНСЕ ҪИТСЕН

Ирхи апат иртсен ҫухăнсен пуххи пуҫтарăнҫĕ...

Сахиме ҫеҫ кайман. Икĕ ҫулти тыхине виҫĕ сурăх умне ыраш улăм кĕлти салатса паҫĕ. Ултă ҫаххи пĕр автан сарăлса выртакан ыраш кĕлтисем ҫинҫе тырă пĕрҫисем шырама пуҫларĕҫ. Лашипе сурăхсем те, пиҫен, мăйан курăксем суйларĕҫ.

Ҫанталăк лăпкă. Хутран ситрен ăшă тăман калăн ӳркенсе хуллен йарăнса анат. Пайан ĕнерхи пек шатлама сивĕ мар.

Сахиме карҫăк мăкăртатат:

— Ак ҫапла, ҫийĕр-ҫийĕр, ҫанталăк ăшша кайсан пӳрте кĕртсе ҫăрманас ҫук, ах, сире... Мĕнле-ха хĕл каҫарас, ҫула хут урайĕнҫи апатпа та тарантарса пурăнма пулат.

Сахиме имшерке тыхипе ĕнерхи шатлама сивĕпе пӳрте кĕртсе ҫĕр каҫарнă. Пайанхи куп ĕнерхинҫен ăшăрах пулсан та, Сахимен ике ҫулхи тыхи кăлтăртатса ҫĕтĕрет. Йепле-ха вăл ан ҫĕтретĕр, кĕркуние вунтăватă пăт сĕлĕ ҫапса тунă хыҫҫăн, виҫĕ пăт кăшăл хӳрине ҫитерпĕренпе утăна сĕлĕ хыпса курман вĕт. Ыраш кĕлтипе ҫеҫ таранса пурăнат. Ҫуртри улăмĕ пĕтни те пер ерне ытла ĕнтĕ. Пусынка тупасҫĕ тет вăл, пăтраткаласа парсан хут хĕл каҫайри, тесе шухăшласа ҫил картине хупса урама тухрĕ те, урам йенҫи ҫӳреҫерен кăшкăрҫĕ:

— Хĕрĕм, ҫав тыха ваҫҫи пĕр витре ҫĕрулми пĕҫерха, турă пӳрнипе пулăшакансем пулсан ăна тупкалăпăри тен...

Ҫапла калаҫнă хыҫҫăн Сахиме ҫухăнсен пуххине тапса утрĕ. Сахимерен виҫĕ килĕ урлă пурăнакан Ухăҫван арăмĕ Марук хапха умне тухса тăнă.

— Сахиме кин, ăҫталла тата?

— Наҫарсен пуххи пухăнмалла теҫҫĕҫ те, усси нимрен те ҫук та-ха, кайам терĕм ĕнтĕ...

— Тыхăра пӳрте кĕртнĕ темест-и. Ĕнер каҫ ҫавăн пек илтрĕм, Наҫту кин аҫисем урамран кĕрсен ҫапла сӳпĕлтетрĕҫĕ,—терĕ те, хапха умĕнҫи йура хыран пек турĕ.

— Ара, мĕн тăвас тетĕн-ха, выҫăх апаҫĕ ҫук ҫав. Ҫавах пĕтерет, сутăн илме вăй ҫук, йӳпеҫтерейместпĕр. Ҫапла ĕнтĕ ар-ҫынсăр ҫемйе, мĕн тума пултаратпăр-ха енĕр...

— Хам пата килмелле пулнă. Пĕрик купа утă панă пулăттăм.

Пурпĕрех илсе кайма пултараççĕ. Пур ђух ĕлĕк, халĕ те ђаранса тăман. Пусытка тума сĕллине те пăртакçă пама пултаратăп...

— Ай-уй... Ăçта ун ђухлĕ парăма кĕрес тетĕн-ха. Çав уттине парсан çеç, уншăн та тавта пуç.

— Хирĕç парасси çинђен калаçмалли те çук. Пулсан парăр, çук пулсан йут çынна пани мар. Хăшпĕр ђух ун пек иртен çӳрене те пулăшатăп. Тавай, хĕрађуна халех ђуптар, сĕллине тултарса йарам. Хуŷ уттине те пайапах илсе кайăр. Выђăх-ђĕрлĕхĕн ђĕлхи çук, вĕсем урисене тăсас умĕн те çăвар уçса калас çук. Çапла вăл йанавар, терĕ хистесе Ухăђван арăмĕ.

Ватăлнă Сахиме вит ђаха пек кăтиклесе илђĕ:

— Ах, çак çӳлти турра, пăрахмастăн-çке есĕ пире. Темĕн тĕрлĕ тавтапуç ĕнтĕ сире, леш тенђере турă çăмăллăх патăр,— тесе Сахиме ђиркӳ йенне çаврăнса сăхсăхрĕ те, ађисене пĕлтерме хутланса ларнă çурђĕ йенне утрĕ.

Ухăђван арăмĕ Марук хăйпе хăй çапла мăкăртатрĕ:—Е-е, леш тĕнђере, кам ăна кайса курнă. Епĕ унта пулман, ку тенђере çăмăлрах пурăнма пулăш-ха пире есĕ,—тесе Сахиме васкаса кайнине пăхса тăђĕ. Çавăнтах: аван-ха, май килсен кун патне хăшпĕр йапаласене тартсан йурĕђђе те... çапла шухăшласа Марук васкаса килкартине кĕђĕ...

* * *

Сахиме карђăк пухха йăраланса çитнĕ çĕре Çпеккĕр токлатне каласа пĕтернĕ. Итлесе тăракансем Сахиме пырса кĕнĕ çĕре Çпеккĕр сăмахĕсем çинђен пăшăлтатса калаçрĕç.

— Питĕ тутлă калаçат, ара вĕсем вĕренеççĕ,—терĕ пĕри. Ăна хирĕç тепри:

— Кăмунис пуђ-ха вăл.

Çапла калаçса тăнă хушăра траххумпа çĕрме пуçланă Сахиме килсе кĕђĕ...

— Ара, ес кайа йулнăçке, терĕ пĕри.

Тепри хушрĕ:

— Ун вађђи тĕпĕ йулђĕ.

Сахиме тавраш**ĕ**нђи нумай çуллă çынсем лупас пек сухал айĕнђен лăхлатса кулђĕç.

— Пире йурат тĕпĕ те, тĕпĕ тата та тутлăрах пулакан ђђĕ-ха, терĕ те Сахиме, хĕсĕнкелесе Çпеккĕра курасшăн малалла тухрĕ.

Ăшăпа тарланă Кĕркуç ыйту паракансем пурри çинђен тиçкĕрђĕ. Ађасем вĕренекен парттăсем хушшине ларса тулнă çынсем пĕри пĕр сăмах ђĕнмереç. Кун хыççăн вĕри ђĕреллĕ Уђки Кулинепе калаçса илсен сăмах хушрĕ:

— Йулташсем, епĕр çак пухура хамăр сăмаха татăклах каласа хăваратпăр пуђ. Çĕнĕ пурнăç ђухăнсемшĕн усăлли çинђен районран килнĕ йулташ аван каласа тăнлаптарђĕ. Мĕн ăнланманнине тата ыйтса пĕлме пултаратăр, анђах капла шăлсене çыртса ларнипе нимех те тăвас çук,—терĕ те каллех Кулине çумне ларђĕ.

Уђки çумĕнђе ларакан Кулинен пуçĕнђе шухăшсем выљанма пуçларĕç. Вот мĕнле вĕсем, есĕ пур вĕсемшĕн ђунна парса ĕçлетĕн. Вĕсем сана мар хăйсене те йуратмаççĕ,—терĕ хĕрелсе кайнă Кулине. Куи çинђен вал Уђкине те каларĕ. Уђки васкама хушмарĕ:

— Ан васка. ак курăн вĕсем хăйсемех пĕр пуçласан пурин çинђен те калаçма пуçлаççĕ...

Кулине ăнланнă пек пулђĕ, çав самантрах сĕтел умĕнђе çырса ларакан Кĕçтук çине пăхса илсе, пурнишĕн те пĕр сăмахпа: пире колхос кирлĕ, тесе каласшăн пулђĕ вал.

Алăк патĕнђе таракансенђен пĕри, вăрахђен шарламасăр ларнă хыççăн. сăмах илмесĕрех мăкăртатма пуçларĕ.

— Сăмах илсе калаçас пулат,—терĕ пĕри.

— Мала тух!—тесе кăшкăрђĕç.

— А-а, кунта та йурат. Ак кунтан...

Тĕрли тĕрлĕн сăмахласа калаçма пуçланă çынна мала тухма çул пама хатĕрленђĕç.

Лешĕ пártакçă малалла утрĕ, пуçĕнђи çĕлĕкне хыврĕ, лўђĕркеннĕ сухалсене шăлкаласа:

— Ару епĕр мĕн пĕлетпĕр-ха, епĕ хамранах шутлатăп,—тесе калаçма пуçларĕ вăл, пурин çине те таврап пăхса илђĕ,—колхосра пурте пĕр пек пулаççĕ терĕç ĕнтĕ. Апăри пўрнесем те пĕр тан мар вĕт. Ăçтан-ха епĕр унта пурте пĕр тан пулма пултаратпăр. Ман хамăнах унта кĕрес пулсан ни лаша, ни ĕнем çук. Çав вăт карђăкăмпа унта кĕрсен епĕр сăмахсăр çăкăр та çийес çук. Хам ђăлах, арăм суккăр, йепле-ха епĕр унта ĕçлĕпĕр. Песнай-й, пирĕн пеккисене унта çыхланма йурамаст—терĕ те, пуçне хыçса илсе Çпеккĕр çине пăхрĕ.

Çук ĕнтĕ, пурте пĕр тан пулас çук тенĕ сăмаха Митта ђăмлама тытăнђĕ:

— Епĕ те хам ухмах пуçăмпа çапла шутлатăп: ку сăмах пур хресђенсене те ђикĕштерсе вĕлермелли сăмах пуљ, тетĕп. Ăспуçĕ те пĕр тан мар вĕт. Ђухăн, сахал пурлăхлă çынсем пумайтарах. Епĕр ђухăн пулнăшăн, ăçтан пурлăхлă çынсем тўçме пултараççĕ-ха. Çакантан ĕнтĕ çапăçса кайасси малтанах курăнса тарат. Тĕрĕс, хоссутарствă пире кăна мар, ађасене те пулăшат. Пулăшман темелле мар. уншăн епĕр пурте тав тăватпăр, анђах та, пуйанна ђухăна уйарса йал çыннисене тавлаштарни ман шутпа хоссутарствăшăн усалла ĕç мар пек.

— Тĕрĕс ĕнтĕ вăл, тĕрĕс, тесе сас пађĕ малтан тухса калани.

Ђуређе умне ларнă Карук ку сасса илтсен хăйне хăй хирĕçсе кайрĕ: вăт мĕн вăл, поткулађнек, ĕçтернĕ пулас куна тесе шутласан, кăшкăрђĕ:

— Поткулађнĕк!—луђђă лар, итле, вĕрен!...

Çемйун ун çине çавранса йунаса пăхрĕ. Карук ăна курђĕ, çавăнна та вăл пушшех те хĕрсе кайрĕ. Ђи кайа кайса ларнисем те сарласа илђĕç:

— Пустуй калаçат вăл!..

— Кулак йурри ку!..

— Пуйанпа ђухăн вĕсем тахçанах уйрăм...

Çав хушăра сăрласа тăракан сасăсем хушшинђен каллех Карукăн хулăм сасси ăраснах пурне те илтĕнђĕ. Митта çинђен каларĕ вăл:

— Ара пуйан тавраш ĕ, вĕсен йурринех йурлат ĕпте вăл...

Кĕркуç ђухансен пуххин претçетаттĕллĕ, ђасах сăрлама пуçланă пухха ђарђе.

Çпеккĕр Митта çине вăрахђен асăрхаса пăхса тăђĕ. Митта та ăна ђухларĕ.

Пухур і çынсен хушшинђе пĕр ç варлĭ пулса кĭлнисем çывăрмаççĕ. Пĕр-пĕрин хушшинђе калаçса илеççĕ, унтан иккĕн-виççĕн пĕр харăс пĕр кĕтесре кăшкăрса йараççĕ. Пухури нимĕнле ăнланмалла мар сăрласа тăнă сасă Çпеккĕре веçех тĕлĕнтерђĕ. Çпеккĕр ним ђĕнмесĕр тăрсан, пурин çине те пăхнă хушăра, Карукпа Çĕмйун пĕр-пĕрипе хирĕçсе пăхса тăнипе курђĕ. Нумайђђен вăл вĕсем шăмарса пăхса тăнипе сăнаса тăрасшăн пулђĕ. Анђах Карук, çамки çине пайăркан усăнса аннă çÿçĕ айĕнђен тарлана çамкипе шăлкаласа Çпеккĕр çине пăхсан, Çпеккĕр хĕпĕртенĕ пек пулђĕ. Çавăнтах вăл иртнĕ каç кун çинђен ытла нумай каларăм пуђ, тесе шутларĕ. Карук та, те Çпеккĕр шухăшне сисрĕ, хĕпĕртенĕ пек пулђĕ. Халĕ вăл тата та хăйусăрлансах тăрса калаçма хатĕр, анђах çав вăхăтра Митта тепĕр хут сăмах ыйтрĕ. Алăк патĕнђисем пĕр-пĕрин хушшинђе пăшăлтатса Митта сăмах ыйтат, терĕç. Митта кăшкăрса çапла калаçрĕ:

— Епĕр куратпăр, Çпеккĕр йулташ тухса калаçакансен йађĕсене çырипе. Пур-и куп пек хăратмалли саккун, çавна халăха каласа пар-ха, тесен Карук кăшкăрса сăмах ыйтрĕ.

Кĕркуç ăна самах пађĕ.

— Халăх çук кунта! Ку ђухăнсен пуххи,—тесе тĕртсе хуђĕ те, Митта кулаксен йуррипе йурлани çинђен кăтартса пађĕ.

Уп хыççăн Тиђук Йакурĕ ыйту лартрĕ:

— Çапла пултăр еппин. Çапах та пире каласа парăр-ха, вăл пĕр машшăн çеç мар,—терĕ те, халăх мĕн калат тесе пулас пурин çине те çаврăнса пăхрĕ.

— Хăратса кулхус тăвасшăн!.. Пурĕпĕр кĕместпĕр! тесе кăшкăрса йађĕ Митта.

Уп сăмахĕсем çумне йунашар тăракан Сађук арăмĕ, Верук та, кăшкăрђĕ:

— Саккунне кала-ха! Саккунне кала! Йурат-и колхоса ирĕксĕр кĕртме?

Пуху каллех шавласа сăрласа кайрĕ. Пуринђен ытла çикул пăлтарĕнђи халăхсем, кам кăшкăртнипе пĕлтермесĕр, тĕрлĕ сасăпа калаçрĕç.

Кĕркуç хĕрсе кайса ура çине тăђĕ. Хайаррăн кăшкăрса сăрлакан халăхсене ђарђĕ те, пĕрерĕн-пĕрерĕн сăмах илсе калаçма хушрĕ. Çак хушăрах Çпеккĕр патне аларан-алла пĕр хуралнă хут татки пырса пађĕç. Çпеккĕр хут таткипе ламиă çути патне илсе пырса икĕ хутђен вуласа тухрĕ. Хутне ак çапла çырнă пулнă:

«Доварищ прдум
Стес паржуйув мнукă. Коворил стесь Кулакский сват та кум.
Просим Кулаков выкпат ешели они стесь петнек боятся».

Çпеккĕр вырăсла çырнă хута кам ал пуснине ăнланмасăр, претçетаттĕл вырăнне ларнă Кĕркуçа вулаттарђĕ. Кĕркуç хамăр çын, комсомолĕс çырнă, терĕ.

Çпеккĕр ђухăнсен пуххи халăх пуххи май пулса кайнине ђухласа илђĕ, çавăнпа та вăл мĕнле майпа ђухăн мар çынсене пухуран кăларасси çинђен шутлама пуçларĕ. Ун çинђен çумĕнђе ларакан Кĕркуçпа та, Сађукпа та сÿтсе йаврĕ. Кун хыççăн Кĕркуç ђи малтан кĕтессе хĕсĕнсе ларнă Тиђук Йакурĕпе Михетер çине пăхса:

— Ку пуху ђухăнсен пуххи,—терĕ.

Капла каласан Михетер ура çине тăђĕ те, преçитнума сăмси айĕнђе илтмелле мар мăкăртатрĕ:

— Çапла вĕсем, активиссем... Халăха икке уйăрса хиреçтерессшĕн аппаланаççĕ—терĕ те, пăлтăра тухрĕ. Ун хыççăн Тиђук Йакурĕ те тухрĕ.

Кĕркуç капла каланине илтнĕ Çпритун Мирунђђă та, кăмака çумĕнђе ларнă çĕртен ура çине тăрса, çынсем хушшинђен хĕсĕнкелесе тухма тапратрĕ. Апђах, Сађук, Çпритун Мирунђђă тухма тытăннине курсан Кĕркуçа систерђĕ:

— Çук, Çпритун Мирунђђăна кăлармасан та йурат, вăл актив шутĕнђе тăрат вĕт,—терĕ.

Кĕркуç, Çпеккĕрпа калаçса татăлсан, Çпритун Мирунђђăна хăй вырăнне ларма сĕнђĕ. Кун хыççăн Сађук сăмах илђĕ. Вăл ыран пур краштăнсен те пуххи пуласси çинђен тепĕр хут каласа тăнлантарђĕ. Йулашкинђен пимĕн ÿккеленмелли те çук, ђухăнсем вăтамсене хăваласа кăлармаççĕ, ун çинђен хăвăр та ăнланма пултаратăр ĕнтĕ тесе, вăтам хресђенсен активĕсем пухха йулни çинђен ăнлантарђĕ.

Пађук, Йалканаш претçетаттĕлĕ, Çпеккĕр хушнипе пухура камакама хăвармаллин спискине вуласа парсан, ђухăнсемпе хăш-пĕр вăтам активĕсем пурĕ 120 çын йулђĕçĕ. Ыттисем урама тухсан, шкул криђтси умĕнђе тапак туртса варахђен калаçса тăђĕç те, килĕсене пĕрерĕн икшерĕн саланђĕç. Сађук арăмĕ Йеђук та, улăшки хăтăрсан, ђăхăмăçласа килне тухса утрĕ.

Кăшкăрашнă çынсем тухса кайсассăн пуху лăпланђĕ.

Акă сăмах илсе калаçма пуçларĕ Çпритун Мирунђђă. Вăл йаланхи пекех хуллен васкамасăр сăмаххисене тăстарса калаçрĕ:

— Йулташсем, саккун пиртен тухнă йала мар, ăна пĕтĕм Раççей халăхĕ, рапођђисемпе хресђенсем кăларнă... Çпритун Мирунђђă ђарăнса тăђĕ. Калăн вăл тарăн шухăшсем каласшăн пулђĕ. Пуçĕнђи шухăшсене тĕрлĕ май виçсе пăхрĕ те татах хăйĕн сăмахне малалла тăсрĕ.—Çук, уйрăм хуçалăхпа мĕн тĕрлĕ тăрăшсан та, ăна епĕ хамранах ђухлатăп, çителĕклĕ пурнăç тума çук. Пурĕпĕрех пайан кĕмесен те çавăнталлах кайас пулат. Кунта хăшпĕрисем пÿрнесемпе те тăнлантарса лăхрĕç, пĕрле ĕçлейменрен хăрарĕç. Ман шутпа

унтан пирĕн хăрамалла мар. Нименех илсе пăхарха, мĕн вăл ниме, çавă,—пĕрле ĕçлени!.. Кунта нимĕн те хăрамалли çук, хоссударствă ыпре пăсăк тăвасшăн мар, терĕ те Çпритун Мирунҫҫă, калаçма ҫарăнса хăй вырăнне ларҫĕ. Вал татах нумай каласшăн пулҫĕ, анҫах шарламарĕ.

Çпритун Мирунҫҫă сăмахĕ хыççăн пĕри сăмах ыйтмасăрах çапла сăмах кĕртсе хуҫĕ:

— Кулхуссем малтан ĕçлесе кăтартҫĕр-ха, курар, вара мĕн пулĕ?.. Çав ĕçлесе пăхманни те хăратат-ха.

Кун хыççăн Çемйун сăмах илҫĕ. Çемйун мĕн каламаллине пĕлет, Унăн ҫĕлхи-çăварĕ ашшĕннинҫен пĕртте кайа мар, çепĕç ҫĕлхепе калаçма пуçларĕ:

— Йулташсем, кунта районпа Шупашкартан килни те пур терĕ те, Çпеккĕрпе шурналис çине пăхса илҫĕ.—Ман шутпа ҫухăнсем иккĕленсе тăмалла мар. Парттипе комсомол йертсе пынипе пĕр ҫухăн та сотсиалисăм çинҫен пăрăнса йулмалла мар. Ман шутпа, колхос сахал, пĕр ĕçе пуçланă ҫух тўрех камунă тăвас пулат. Камунă, мĕн вăл камунă?—Çемйун такăнна пек ҫаранса шутласа таҫĕ те, татах сăмахне тăсрĕ. Камунăра ĕçе йĕркелеме çăмăл. Камăн мĕн ҫухлĕ пурлăх пур, пурне те колхоса шутласа хунă пек мар, нимĕн тавлашса тăмалли те çук. Теп, вăл татах сăмахне тăснă пулĕҫҫĕ, анҫах ăна вĕриленсе кайнă Карук пўлсе лартрĕ.

Çпеккĕр та Çемйун шухăшĕпе килĕшмерĕ. Çийĕнҫех сăмах пăрахрĕ:

— Вăл кайран, терĕ.

Çемйун хĕрелсе кайса Çпеккĕр капла каласса кĕтменскер, труках калла ҫакса сăмахне улăштарҫĕ.

Кун хыççăн, калăн пурин шухăшне те пĕрлештерсе каласшăн пулса, Кĕркуç хăйĕн сăмахсене çапла пуçларĕ:

— Пирĕн ҫăвашăн çавă ĕнтĕ, йĕркене вĕренсе çитеймен-ха. Ретлĕ пулăр-ха епиин,—пуху тăпланса итлерĕ,—кунта йут çын çук, тўррине тўрех калас пулат, хăраса туса тăмалли çук. Пайан пирĕн паллă пуху, çак пухура хамăр çĕнĕ пурнăç çул çине куçасси çинҫен тĕплĕн сўтсе йавас пулат. Епĕ тўрех калатăп, колхос çинҫен епĕ хам та нумай шутланă. Нумай курса та çўренĕ. Иккĕленмен мар, иккĕленнĕ те. Анҫах тўррипех калатăп, ку çултан, Çпритун Мирунҫҫă каларĕш, вăл тĕрĕс калат, епĕр пăрăнас çук. Епĕ хамах калатăп, кунта ман пурнăç çинҫен пурте пĕлеççĕ. Пĕр лашам пур, каҫака пек ĕнем пур, тата мĕскер?—терĕ те ҫарăнса тăҫĕ.

Çав хушăрах Çпритун Мирунҫҫă кулкаласа сăмах тĕртсе хуҫĕ:

— Тата мĕн пур, арăму пур!

Пухури çынсем ахăлтатса кулҫĕç. Кĕркуç та вĕсемпе пĕрлех кулҫĕ. Кĕркуç йулашкинҫен:

— Çапла çав, уйрăм пурăнса çак пурлăхран пуçне, выçăллă тутăллă пурăннинҫен пуçне, урах нимех те пуласси вăл таçтанах паллă,—терĕ. Кĕркуç халĕ иккĕленмест. Кĕркуç халĕ веçех улшăннă. Хăйĕн сăмахне пĕтерсен унăн пуçне ĕлĕк иккĕленнисем те килсе

тĕренђĕç. Вакпуршуаллă ĕмĕтленнĕ шухăшсем: çуртйĕр çаврасси, лайăх лаша тупанасси... çаксем пурте тĕлĕкри пек йасăрланса сирĕлсе иртрĕç. Кĕркуç иккĕленмест, ахалĕн мар вăл татăклăн иккĕленме пăрахсан комуниссен партти ретне çыраннă. Халĕ вăл партти кăнтитађĕ. Халĕ вăл Атава çуран, партти йађђейкин пуххине кайса килнине нихçан манми астăват. Акă вăл халĕ хăй умне халиђђен пуçĕнђе пулман шухăшсене илсе килсе тăратрĕ. Вăл партти йађейккипе райком инструктăрĕ йађейккă çекретарне тырă хатĕрлес ĕçре оппортунисăмлă çулпа йертсе пынисемшĕн йатланине, ку сахал, çавăншăнах çекреттаре вырăнтан кăларса пăрахнине астуса илђĕ. Мĕншĕн?—ыйтрĕ вăл хăйĕнђен хăй. Шутларĕ. Акă каллех ун умĕнђе темиçе тĕрлĕ сăрсем, класлă кĕрешĕвĕн хăрушлăхсем, краштăн вăрçинђе çапăçнисем,—çаксем пурте ун умне çăмхаланса кусса килђĕçĕ. Кĕркуç, калăн, вăл çаксем çинђен анђах çеç шутлама пуçлана. Çапла шухăша кайса ларнă вăхăтрах ăна иккĕмĕш хут тĕртсе систерђĕ Саңук.

Кĕркуç васкаса Саңука сăмах парсан, Саңук та иккĕленсе тăмарĕ. Малтан вăл «Калина» колхос мĕнле тапранса кайни çинђен пуçларĕ.

— Пайан кунта нумайĕшĕ калаçрĕç. Хăшпĕрисем иккĕленђĕç, анђах, ман шутпа, епĕр ђухăнсен пуххинђех тӳрех каламалла: пирĕн иккĕленсе тăмалли çук! Ђасах манатпăр çав епĕр. Вунвиçĕ çул кайалла патша вăхăтĕнђе мĕнле хĕпхур курса пурăннине епĕр манмалла мар. Ђухăнсене çын вырăнне шутламан. Улпутсем, кулаксем пирĕн йуна ĕçнĕ. Пиртен, епĕр ђухăн пурăннăран, пайансем тесе кулнă, анђах çапах та епĕр хирĕç калама пултарайман. Халĕ Совет влаçĕпе комуниссен парттийĕ пĕтĕм ĕçхалăхне сотсиалисăм çулĕпе йертсе пыраççĕ. Пур вырăнта та хапрăк-савăтсем ӳсеççĕ. Кунран кун ђăваш çĕршыв сан-шиђĕ тĕппипех улшăнат. Нихçан хапрăк-савăт пулманнине, пайан кун вĕсем ђăваш çĕршывĕнђе ӳссе лараççĕ. Шкул, пуђнитса... мĕн ђухлĕ ĕçхалăхне усăллă йапаласем епĕр куратпăр. Çаксем пурте комуниссен партти йертсе пынине çĕнĕ пурнăç çул çине хăвăртран хăвăрттăн малалла шуни пулат. Çпеккĕр йулташ кунта пире лайăх анланмалла каласа пађĕ. Вăл каларĕ: парттин иртнĕ сийесĕ Совет сойусĕнђе интустриалисатси ӳстерме йышăннă, тесе. Çакă ĕнтĕ вăл хулари промышлĕннăçа хăпартса йапă маї, машшинсем тăвас ĕçе сарса йалхуçалăх никĕсне машшинлатасси пулса тăрат,—терĕ. Йулташ Çпеккĕр каларĕ: машшинлă хуçалăха уйрăмăн-уйрăмăн тума май çук терĕ. Çавăнпа та çĕр ĕçне машшинăпа ĕçлес тесессĕн, вăйа сахал салатса нумаї услам курас тесессĕн, хамăр пурнăçа çĕнĕ йĕркепе йусассишĕн кĕрешес пулат, кушнăн темиçе çĕр çул хушши ђи аслă çынсем хăйсене-хăйсем шеллемесĕр пуçĕсене хунă. Ђăнах та кулаксемшĕн ку аван мар, вĕсем çавăншăнах темĕн те пĕр халлансем сарма тăрашаççĕ.

Саңук; кулаксем мĕншĕн тăрăшни çинђен калаçса кĕрсе кайса, киве йĕрке мĕншĕн йывăрри çинђен каласрĕ. Çавăнтах Сталин йулташ

çырпă çырава политкрушокра вуланисене те асне илсе, ăна пурнăçа кĕртес майпа, ăнлантарса паҭĕ.

Миҭҭука нимле ўкĕт илес çук. Вăл итлессе те итлемест. Унăн пуçĕнҭе пĕртен-пĕр шухăш: çынсем ăслă, вырпаçуллă сăмахсем каласан, мĕнле те пулсан култарса иртерсе йарассинҭе, йе урапа хушшине патак ҭикнĕ пек, калаçакана пўлсе лартас шухăшсем çеç выҭанаççĕ. Акă хаҭ вăл Саҥука пўлсе лартмалла май тупрĕ.

— Арăмна ҭараймастăн вĕт!.. Арăмна вĕрент!..

— Ха-ха-ха!..

— Вăт çапрĕ-ĕ!..

— Тĕрĕс калат вăл...

Çав самантрах тĕрли тĕрлĕ вĕçсе илҭĕçĕ. Саҥук кун çинҭен нихçан та шутламанҭҭĕ. Саҥук çиллине шăнараймасăр:

— Йулташсем, ман арăм мĕнле йахран тухнине пĕр пайан кун çеç пĕлместĕр. Тўрех калатăп, вăл кулак несĕлĕнҭен тухнă. Унпа ман сăмах кĕске.

— Ее-е! Комуниссене хĕнеме пе плакатсă!..

— Кам сана, хĕнетĕп тесе каларĕ?..

Лешĕ хĕрелсе кайса, калла ҭакса тăҭĕ.

— Патаксăрах ўкĕте кĕртме пулат...

— Кĕмесен?..

— Вара куç курĕ... Ытла пуççапса та тăрас çук... Çĕлесе хумал вĕт...

— Ун пек сăмаха тавăрса каламалли те çук,—терĕç.

Саҥук сăмахне малалла тăсрĕ.

— Йулташсем, епĕ çак пуçăннă ĕçе хытă шапатăп... Ĕçлемелли пысăк майсем пур. Çак кунсенҭе Ухăҭвана раскулатҭат тăватпăрах ăна. Ку ĕç йалканаш ĕçĕ пулнă та, анҭах вĕсем тепле вăранмарĕç-ха. Вĕсем вăранасса кĕтсе тăмастпăрах... Çĕр пирки татăлтăмăр ĕнте.

Йакавар пуçпе касса илес пулат. Саккуп çавна хушат. Ҭи лайăх çĕр колхоса пулмалла. Çĕр касакансем ыран килме пулҭĕçĕ. Халĕ те епĕр ытла кайа йултăмăр. Сплошной тумасан та 40—50 проҭҭана пирĕн çитересех пулат. Çапла патранса пурăнипе, пустуй вахата ирттерсе йаратпăр. Сăмахран: Атава, Рункă, Алшихсенех илсе пăхар... Унта та спрĕн пек ҭухăнсемех вĕт. Анҭах колхосра, выҭăхсене пĕрлештерсе хупма пысăк вите тума тытăннă. Патĕрйел йенҭе кун пек кăна мар, тет. Унта пĕтĕм районĕпе пĕр колхос тума пуçланнă. 60—70 йалпа кикантă тума паçланнă... Вăт ĕçлеççĕ!..

— Ну-у, ку пустуй пуҭ ĕнтĕ?..

— Капла пурĕ пĕрех ĕç тухас çук!

— А-аа!

— Вăхăҭĕ çавă ĕнтĕ!..

— Хут те ăçта та икĕ алла пĕр ĕç...

— Ман шутпа пирĕн те турткаланса тамалли çук.

— Ман шутпа тунă, тупă, комунах тăвас пулат,—терĕ Митта. Пĕр стрăм хур кĕтў пек какалатса илсе ҭарăнҭĕç.

Саҥук хăйĕн сăмаххи çак таранах вĕсен ҭĕрисене витерессе

нихҫан та шутламанскер хӗпӗртерӗ. Пӑртакҫӑ иккӗленнӗ пек пулнӑ шухӑшсене веҫех пуҫӗнђен кӑларса пӑрахасшӑн пулђӗ. Хаљ вӑл урӑх нимӗн ҫинђен те шутлашшӑн мар. Уп ҫине парттиг йеђейкки пысӑк ӗҫ хунӑ. Вӑл ӑна тумалла. Ҫавӑнтах ун пуҫне тата ытти ҫӗнӗ шухӑшсем йатӑнса кӗме пуҫларӗҫ. Вӑхӑт кӗскелнӗҫемӗн кӗскелет... Ҫӗрне касса йӗркелемелле... Варлӑх пуҫтармалла, алламалла, ӗҫ хатӗрӗсене майлаштармалла... Йулашкинђен лашасем ҫинђен ђарӑнса тӑђӗ те, Ухӑљванӑн кайӑк вӗҫсе тухайми килкарти асне кӗрсен, хӑйпе-хӑй кулса илђӗ. Кӗркуҫ пуҫне ђиксе, хай тӗллӗн кулакан Саңук ҫине пӑхсан хӑраса кайрӗ. Ытттисем шӑпӑртланса мӑйсене малалла тӑсса тӑђӗҫ. Карук ђӳређе йапаххи ҫине ҫакӑнса кармашрӗ. Саңӳк уҫҫӑн кулса ытла та тӑпланнӑ ҫынсем ҫине пӑхсан, ун хӑлхине:

— Сӳтӗлмен-и ку?—тенӗ сасӑ пӑшӑлтатса килсе кӗђе. Саңук пуҫне силлентерсе:

— Илтрӗм епӗ... Капиталиссем пирӗн парттийе рапођђисем Октапӗр револђутси хыҫҫӑн влаҫа хӑйсен аллпне илсессӗн ҫапла калаҫрӗҫӗ: «Е-е, полђшевиксем ухмаха йернӗ, ҫавӑнтах: пурпӗр вӗсем икӗ ерпереп ытла пурӑнас та ҫук» терӗҫӗ.

Кирукпа Кӗркуҫ куҫӗсем ђасрах пӗр пӗрпе шыраса тупрӗҫ. Вӗсемпе пӗрле Улђки те, ҫавӑнтах Ҫеркунипе Ҫпеккӗр, вӗсем пурте: «епӗ темскер пулђӗ пулӗ тесе шутларӑм» тесе вӑрттӑн ђӗтрекен ӑшӑнђи шухӑшсене пӗр пӗрин куҫ вӑйӗпе пӗлтерђӗҫӗ.

— Калатӑп вӗт, пысӑк условисем пур... Ку пуринђен ытла ђухӑнсемшӗн аван... Ман шутпа Ухӑљван ҫемйише унтан хӑваласа кӑларасси ҫинђен пайанах ӗҫе татас пулат. Кун пирки ђухӑнсен пуххи хайӗн сӑмахӗпе татмаллах... Урӑхла пулма та пултараймаст.

— Кӑларас пулат ӑна!..

— Кӑларас!..

— Ун кил-хушшинђе колхос вити тума аван!—терӗ Миккуљ Сахимепе ҫумман таракanскер. Сахиме ӑна ђавсипе тӗртсе: «Намӑса, ҫылӑха пӗлес пулат, йепле есӗ пӗђђенех ҫынӑнне хапсӑнатӑн»?..

— Есӗ ҫавӑнтах хӑварас тетне вӗсене?—тӗпђерӗ Миккуљ.

— Ку ӗҫ мар ӗнтӗ... Ҫынна йӗртсе тунӑ йапалапа ӑпас ҫук. Мӗнле апла...

— Кам унта шавлат?—ыйтрӗ Кӗркуҫ хӗсӗнсе тулнӑ халӑх ҫине пӑхса,—Кам?..

— Сахиме кулака тивесшӗн мар!—терӗ Миккуљ. Пурте илтрӗҫ. Сахиме ђавсипе тӗккелешсе илђӗ те, танатана лекнӗ ҫысна ами пек, хайаррӑн пуҫне ҫӗклемесӗр, хӑрлатса илђӗ.

— Маларах кӑларӑр...

— Сӑмах парас ана!.. терӗ йулашкинђен Митта.

— Парас!..

Ђухӑнсен пуххинђе пӗрлӗх пулмалла...

— Итлер мӗн калат...

Пӗрисем Сахимене малалла сӗтӗрђӗҫ. Сахиме калла, ҫаврӑнса ҫумӗнђи ҫынсенђен ҫатӑртаттарса тытнӑ.

— Мӗн есӗ урнӑ ҫын пек айкашатӑн!?—терӗ Спритуп Мирунђӑ.

— Сахиме пиммĕнле ÿкĕте кĕмесĕр:

— Кирлĕ мар!.. Кирлĕ мар, выçă вилĕпин вилетĕп, унта епĕ кĕрес çук!

— А-а!..

— У-у!..

— Пурте килте мар унăн,—тесе кăшкăрпă Карукăн сасси пурне те лăплантарђĕ.

Спритун Мирунђђă Сахиме умне тухса ÿкĕте кĕртесшĕн пулђĕ.

— Хамăр пуçпа пурăнас пулат... Намăс пире турткаланса тăма... çăвара хуппне ђамласа çăтма ÿркенетпĕр. Хуна шеллесе вĕт сана, вĕлерме кĕртмеççĕ, вĕт. Хамăран та ĕçлес пулат, пĕрмайах, шăнкăрђă ђĕпписем пек налукран хăтăлса, вăрлăхне те хоссутарствăран илсе пурăнипе çеç йурати? Хамăр патшалăха малашне тата вăйлăрах çирĕплетессишĕн ĕçлес пулат. Епĕ хамранах шутласа пăхатăп... Мана хут вăтам хуçалăхлă çын теççĕ те, епĕ мĕнле вăтам пулни вĕт пурпи куç умĕнђе. Çак тарана вăрласа, йе тарçăна пурăннипе çитермен вĕт. Лаша çукђĕ, патшалăхран кивçен илтĕм. Икĕ çул хушшинђе çав лашапах хакне кăларса патшалăха тÿлесе татрăм. Епе кирлĕ пулђĕ, ĕпене те çав лашах илме пулăшрĕ. Револђутси пулнăранпа тахăр çул хушши налук тÿлемен, халĕ паратăп, мĕн нумай-и вăл?—штрахховой мĕнĕпе сакăр тенкĕ çеç вĕт. Кам турĕ мана ватам хресђен?—совет влаçĕ. Совет влаçĕ çĕнĕ çулпа утма вĕрентет, епĕ пĕлетĕп вал мана пăсăк тăвасшăн мар. Тĕрĕс, ĕçлесе курман кунта пулмасан та вăл урăх çĕрте сăнаннах ĕнтĕ вăл. Унта пирĕн пуççăр çынсем лармаççĕ, вĕсем хамăртан тухнă çынсемех, пирĕншĕн тарăшмасан тата камшăн вĕсем ĕçлеђђĕр? Вăт пирĕн хамарăн та илтес пулат, саккун хушнă пек туса пырас пулат, вăт вара ĕç тухат.

Çпритун Мирунђђă пур ăна итлесе тăракансем çине пăхса илђĕ те, Çпеккĕрĕн хĕпĕртевлĕ сăн питне курсан, хăй те мĕншĕн хĕпĕртенине пĕлмесĕр, уçалса кайрĕ. Сахимепе пĕђĕк ађапа калаçна пек йапатса.

— Сахиме кип, ес шутла, халђ сан виççĕмĕш çула пуспă тыху пур, çак тарапа çитсе налук тавраш тÿлемен.

— Уп выранне вăл хăй патшалахран илнĕ, терĕ Карук, ђăтаймасăр:

— Тыхине те йалхуçалăх панкинђен илнĕ укçапа,—тесе хушрĕ Паçук.

— Илтетне мĕн калаççĕ?—совет влаçĕ ура çине тăратасшăн пире пулăшат. А сапа епĕр калла, кутăн ђакатпăр... Калатăп вĕт, сапа пирĕнни пек шăтăксем вĕсем тупăнма пултараççĕ. Малашне пирĕн, çав çĕн çул çине ÿкес пулат. Пĕрлешсе ĕçлесен епĕр хурлăх курас çук. Патшалăх пулăшăвне те сапаланђакăн вырнаçтарас çук...

Пухури çынсем ытла та лăпланса итлерĕçĕ. Сахиме те хĕрелсе кайса итленĕ хыççăн, сăмах ыйтмасăрах, Çпритун Мирунђђăпа ђерре керсе сăмахларĕ.

— Епĕ хам ĕнтĕ, вунвиçĕ çул йулташсăр пурăнса çак тарана çитрĕм. Мана хама ăçта та пĕрех. Анђах...

— Мĕн кансĕрлет?..

— Хĕраҫҫасем йахăна та йамаççĕ. Йеплеха унта пурăнмалла... Нурми 25 кĕренке пулмалла, тет. Типĕтсен ҫакат, алласан çўппи-çаппи тăкăнат. Унтан выçах вилетпĕр... Тата унта кĕрсе нушаланиҫҫен, çаплах пурăнса пртерес... Виçĕмкун кас комсомол пыҫĕ те, ути-утми иккĕ путеккĕме: ку санан мар, колхосăн,—тет.

— Хушаматне кала, кам ана калат?—терĕ Кирук.

Сахиме ҫарăнса тăҫĕ те:

— Кирук,—терĕ.

— Суйат вăл! Пĕрлешĕнсен те ахаҫ пĕрлешеймест вĕт...

— Епĕ укçалла та пĕрлештересшĕн мар çав. Урпне те, аллине те çавăнтанах питĕресшĕн нушаланатпăр вĕт. Пиртен пулмастех ĕнтĕ унта. Унта кĕрестĕк витĕмлĕх кирлĕ. Вĕсем тутине те çупаççĕ, урине те ташлăçĕ, вĕсем йурĕç, епĕр йурас çук.

— Е-ее! Кайран хăйех—тав тăвĕ-ха.

Пурте калаçрĕç. Урăх калаçас текенсем те пулмарĕç. Çпеккĕр Кĕркуçа васкатрĕ.

— Ну мĕнле?..

— Списăк уçас...

— Апла ĕç тухас çук, терĕ Çпеккĕр.

— Хирĕç тăваттăн çеç калаçрĕç вĕт, ĕç тухас пек те...

— Ҫухăнсем хушшинҫе наҫар ĕçленĕ есĕр,—терĕ çиленсе Çпеккĕр. Кĕркуç Çпеккĕр тĕрĕс каланине тĕппипех ҫухлат.

— Тĕрĕс, терĕ те, пухури çынсенҫен:—ну, çырăнас текенсемпĕн списăк таватпăр пулĕ?—Ман шутпа ăнланас пеккипе ăнлантăр ĕнтĕ. Вăхăта пустуй пртерсе тăрас мар. Пĕр ҫухăн та çырăнмасăр йулмалла мар. Пĕтĕм самах та çакăнта çеç.

— Ман шутпа, çырăнма кайран та пултараççĕ. Ҫи малтан сасăлас. Рас, ҫухăнсен пуххи йышăнат, кайран вăл çакăн тарах хăйех курăнса тăрат, терĕ Карук.

Карук сăмахне ытти комсомолĕссем çирĕплетрĕç. Çпритун Мирунҫҫа та кунпа килĕштерҫĕ.

— Тĕрĕс...

— Сасăлас—терĕç активиссем.

Пĕр сиккеленмесĕр итлесе ларакансем йăшăлтатаса урăхла вырнаçрĕç. Такăскан ларса тулнă парттăсем ҫăтăртатса илҫĕçĕ. Хашперисем вăрăмăн сывласа сывлăш çавăрҫĕç. Емĕрне тапак туртман вата Наку та нимĕн самах ҫенмесĕр ҫĕлĕм тивертрĕ.

Вăрахҫҫен шухăшласа ларнă шухăшне Упанҫан каламалла пулҫĕ.

— Ҫимĕрха! ыйтăва пĕтериҫҫен епĕ хамăн ухмах пуçăмпа пĕр шухăш каласа парас тетĕп.

— Парас!..

— Упанҫа тете кала!..

Калан нумайĕшĕ çакăн пек сăлтава кĕтсе ларнă. Упанҫа сăмах илсен çăмăлланса вырнаçрĕç. Кĕçтукпа Кулине пĕр-пĕрин çине тĕлĕнне пек пахса илҫĕçĕ. Мĕн каласшăн вал?—мĕн?—терĕç вĕсем... Упанҫа хăйĕн шухăшсене калама пуçларĕ.

## 11. ÇАВ ХУШĂРАХ

Йал çывăрмасть. Хăш пĕрисем каçхи апат та туман пулас. Шăнса мăнтăрланнă шурă ђўређе витĕр çын мĕлки аванат.

Вирук Саңук килессе кĕтмесĕрех кĕнђеле йатса йĕке тултарма кўрше каçрĕ.

Хăш-пĕрисем лашасем шăвараççĕ: кăтăр-кăтăр!—кăт-кăт! пустарасисем ђăрлтатаççĕ. Çпритун Мирунђђă арăмĕ кăвак çутăпах вăрмана каймаллине манмасть. Апат виттĕр çи, тесе мăкăртатса лаши умне тепĕр ăстрăм утă хурса пўрте кĕрет. Ват-хĕтсем кăмака тăрринђе вĕт-шакпала кĕрлесе лараççĕ.

— Ай, асанне, калах тата тепĕй халлапна. Ыран каçпа татах салтăп урăна, тесе ђĕпĕлтетеççĕ пĕђĕкçисем, аркă çинђе йăванса.

— Ђим-ха, ђим, ан шарла. Каккуй халап хуйхи-ха, кулкус тăваççĕ тем вăн ав...

Кăмака çинђен, сĕтел хушшинђен, кутникрен, урайĕнђе сак çинђе пурте колхос таври халлапа сўтеççĕ.

Уйри сăртран шуса килекен кĕрпе пек вĕтĕ тăман таçта та кĕрсе вырнаçма тăрăшать. Ђăштăртатса йăванса вĕрекен тăман пĕр хускалсан тăвалла тулашакан тинĕс пек хумханма пуçлать. Вара Тăври-кас йур ăшне пытаннă мулкађă пек, пĕр сиккелемесĕр йăпшăнса, ăйхă витĕр çил ађин хастарлă йуррине итлесе тĕлĕрет.

Тăврипе Анаткас хушшинђи тарăн çырмара лăпкă. Хиртен кусса килнĕ алмас пек йакалнă йур пĕрђисем, çыран тĕпне сиксе çуркуннехи хĕвел прĕлтеринђен канма кĕрсе выртаççĕ. Шурă тум тăхăннă ватă çўçесен айĕнђе ларакан хăрăмпа хуралнă мунђасенђен пĕçернĕ хурăн милĕк шăрши сарăлать..

Акă кунтан айлăмра Кипек йалĕн пуйан кас йăмра айĕнђе ларать.

Шкул пекех вăрăмăн тăсăлнă çурт-йĕрĕсем кас-кас хура пĕлĕтсене сирсе тухакан уйăх çутипе мĕлке туса картлаççĕ. Хăма, тимĕр витнĕ çурт-йĕрсем ансăр урам тăрăшпе йанраса лараççĕ. Кипеккасси аслă йал, хула тейĕн ицçетрен. Анат касăн урамне крепăç тийĕн ăшĕнђен. Картапа-картиш тăкăскăн хўмеленсе ларнă. Лăпкă пуйан кассинђе вили-вилми Сахимен пĕђĕкçĕ хура пўрт çеç хĕсĕнсе йулнă. Çĕрсе аннă хура пўрт ђапла урамăн илемне пăсать, тесе, пуйансем сахал мар пăшăрханса калаçкаланă.

Ухăљванпа тĕлме-тĕл пурăнакан Мĕкĕтен пăру пек пысăк хулăм саслă «Çыппур» йатлă йытти пур, мăнă саспа хар вĕрет. Çынсем пумай иртиипе шăнарайми çиллипе хапхан хăмипе шав кышлать.

Мĕкĕтепе йунашар пурăнакан Михетер ђўређинђен çутă пăрахăннă, анђах ђўређине хаçатсемпе карнă.

Михетер çывăрмасть. Вăл вулама май пур хаçата пĕрне те вуламасăр ирттермест. «Кăђухне хаçат вуламасăр пĕр кун та пурăнма йурамасть», тет. Михетер умĕнђи хаçатпе пĕрре вуласа тухипе тăранман пек, тепĕр хут уп куç умĕнђе прĕлсе шарса кайакан саспаллисем çине сăнса пек тăрăнса пăхса тăђĕ.

## «СЫЛТĂМ СУЛĂНЂАК КУЛАКСЕН ШУХĂШĔ»

— Икке уйрăлђĕç... Тахçанах çапла пулмалла вăл,—тесе, хăйне хăй лăплантарасшăн пулђĕ. «Анђах çанаççĕ!?—мĕншĕн?—Михетер кунă нимĕнпе те тавăрса калама пултараймарĕ. Сĕтел çинђе выртакан хаçат умĕнђен тарса калла-малла уткаласа çÿрерĕ. Çавăнтах пухуран кăларса йанине астуса илђĕ. Çилпине шăнараймасăр Çпеккĕр çинђен шухăшлама пуçларĕ: «Ăçта курнă епĕ ку сынна? таçта курнă пек?—Михетер кунă та татса параймарĕ». Ытла ђас ватăлатăн, манакан пулнă... Михетер нимĕн тума пĕлмесĕр каллех сĕтел çинђе выртакан хаçат çине тарăнђĕ.

Пĕрре вуласа тухнă статйана тепĕр хут вулама пуçларĕ.

## «СЫЛТĂМ СУЛĂНЂАК—КУЛАКСЕН ШУХĂШĔ»

Сылтăм сулăнђăк ăçтан тухса кайнине пелес тесен, пирĕн çĕршывра мĕнле-мĕнле классем пуррипе, вĕсем пĕр-пĕрипе мĕнле çыхăнса тăнине лайăх тавçăрса илес пулат...

— Канаљйе, мĕнле вăл ăс парат?.. Хура халăха пайласшăн ĕнтĕ ку тесе мăкăртатрĕ те, малалла вуларĕ.

«Револђутси пулатђен патшалăха йертсе пыракан классен çĕмĕрĕлнĕ ванђăкĕсем ахалех нимĕн тумасăр, нимĕн шутламасăр йăванса выртаççĕ. Вĕсем, Октапĕр револђутсинђе çĕмĕрĕлсе ванă пулсан та, ĕçхалăх пуçне, сĕлĕх пек, сăрхăнтарма халĕ те ĕмĕтленеççĕ.

— Ирĕк илер, е-ех, сирее!..

Михетер ђыпкине сĕтел çине çапрĕ—Курăнăр, мĕнле сеĕр колхос тăвăр?—Михетер çуланса, сухалесене йакатрĕ. Лăплана пек пулса, каллех вуларĕ:

«...Çаксене епĕр пĕр кĕске вăхăтлăха та манмалла мар. Пур ĕçре те: куљттура ĕçĕнђе-и, советпа копператси ĕçĕнђе и, литтераттурăра та, пур ĕçе тунă ђух та сотсиалисăм ĕçен тăшманĕсем пурри çинђен манмасăр, вĕсем тĕрлĕ майпа пирĕн ĕçе кансĕрлеме тăрăшни çинђен асăрхаса ĕçлес пулат.

«Ђăвансем хушшинђе кулак тавраш çук, мĕн вал, кулак-и вăл, текелесе ирттерекенсемпе ђас-ђасах тĕл пулкалатпăр. Хаш-пĕр ђух весем ытти çĕрти кулаксен хуçалăхне илсе ăна ђăваш кулакĕсен хуçалăхĕпе танлаштарса пăхаççĕ те, вара «ђавашсен кулак çук», тесе сăмах татса хураççĕ.

Çакăн пек тĕплĕ шухăшламасăр калана сăмахсемпе епĕр килĕшме пултараймастпăр, мĕншĕн тесен вăл тĕрĕс шухăш мар.

Йал пурнăçне лайăхрах типкĕрсе пăхсан епĕр йалхуçалăхĕ ÿсиĕ хушăра кулак та ÿсме тăрăшнине куратпăр. Кулак тата вайларах, политтĕклă правасем илсе ÿсесшĕн. Кулак совета лексе хăйĕн шухăшĕсене совет урлă пурнаçа кÿртме тарăшат. Кулаксем сотсиаллисăмла ĕçе, коллектив, копператси ĕçне тĕрле майпа пĕтерсе лартма тăрăшаççĕ.

Кунран кун ÿсекен сотсиалисăмлă хуçалăх, пролеттари тиктаттурĕ кулака вăйлăланса кайма ирĕк памаст. Комуниссен партти политтĕкĕ ĕçхалăх

хуçалăхне вайлăлатас шутпа, ђăн малтан интустри ĕçне вăйлалатма тăрăшат. Интустриллĕ хуçалăх ўсин йалхуçалăхне йўнĕ хакпа машшинасем парат. Коллективсем татах та вăйларах хунаса ўсес кайассп те çакăнтанах килет.

Кивĕ йăваç суха купташкине ĕçлессипе ђăваш хресђенĕсен тĕттĕмлĕхне тĕп сĕрĕмне пĕтерессп те çакăнтанах килет.

Çак тип кăтартнă йапаласене пурнăçра пулса пынине кулак сисет, çавăнпа та, вăл ăна хирĕç тăма пур майпа та тăрăшат.

Ђĕлхесĕр выђах йăванса кайађђенех туртат, тесе кулак ђухăнпа вăтам хресђенсем çине пĕтĕмпех углапса ларма тăрăшат. Совет влаçĕн шухăшĕпе ĕçĕ кулаксене килĕшмест. **Совет влаçĕ ђухăнпа вăтам хресђенсене çăмăллăх парасшăн, çутта кăларасшăн, машшинăпа ĕçлеме вĕрентесшĕн. Вăл вĕсене пĕрлешўллĕ ĕçлеме вĕрентсе .çул кăтартат, кивĕ йалсенђен хăтарат.**

Çапла ĕнтĕ, кулак шухăшĕпе Совет влаçен шухăшĕсем распах уйрăлса тăраççĕ.

Кулак совет ирĕкне мĕншĕн хирĕç тăпи, халăха тĕрлĕ майсемпе йĕркелетсе пăтратма тăрăшни,—çаксем пурте пролеттари тиктаттурĕ йертсе пыракан сотсиалисăмлă хуçалах çирĕплениĕçемĕн çирĕплепсе пырса кулак хуçалăхне ђуханпа вăтам хресђен хуçалах сеткеине ĕмме ирĕк паманнинђен килеççĕ.

Кулак ватам хресђене тĕрле майпа харатма тăрăшат. Çак еçре вал çĕр çывăрмасăр еçлет. Ђуханпа ватам хресђен çыханăвне, ватам хресђенсемпе рапођђи клас хуппиинђи çыханава татса сотсиалисам тавас ĕçе пĕтĕмпех пĕтерсе лартасшăн вал. Ун выранне ĕçхалах йунне сĕлехсем пек сархантаракан капиталиссене ирĕк парасшан. Кашт тавçарса илме пултаракан ĕççыпни, ĕçхалăх ирекĕ 13 çул хушши çенĕ пурнаç тунине куракан çын çакăн пек киве. пантăлнă шухăшсем çиђен илтсен, мăшкалласа питрен çупнăшан кў-реннĕ пек кўренмелле. Пер таса ђĕреллĕ, тĕреслĕхшĕн кĕрешекен çын та çапла калаçакана курсан таварса каламасăр, ку мап еç мар тесе парăнсă кăймалла мар.

Сылтăм сулăнђак вал мĕнле классен шухăшне кăтартат-ха? Капиталисăмла опђĕстваран сотсиалисăмлă опђĕствана хавăртрах куçас тесе, комунисссн парттийĕ хуçалăх пикĕсне хăвăртрах машшинлатас тесе тăрăшат.— Сылтам сулапђăк интустри ĕçĕ пурнăçа çенетме пулăшнине курасшан мар, вал интустрии ўсемпе хăварт малалла йарасшăн мар.

Кам шухăшĕ ку? Йала коллективлатса машшинăлатас ĕçе камсем хирĕç пыраççе? Кулаксем! Кулаксем, ку ĕçе мĕншĕн хирĕç пыпи çинђен çўлте тепле калараăмăр. **Çапла ĕнтĕ, сылтăм сулăнђăк шухăшсем кулак шухăшпе пĕрлешеççĕ.**

Сылтăм сулăнђăк шуђĕпе, çăмăл (пусма-тавар, т. ыт. те) промышленнаçа лайăхрах асăрхамалла. Ку йапала малашпехи пурнăçа тавçарса илмесĕр калани пулса тăрат.

Çапла калаçса вĕсем тата та шала кĕрсе кайаççĕ. Вĕсем: интустрие вăйлалатпи, тырă сутлăх тăвакана (урăхла каласан кулака) çапат, теççĕ. **Интустри ĕçĕ çĕр хуçалăхĕн таварлăхне пĕтерсе лартат, колхоссемпе совхоссем çителĕклĕ тырă-пулă параймаççĕ, тесе калаçкаласа коллективпа колхоссен хуçалăхĕ çирĕпленессе шанмаççĕ вĕсем.** Çавăнпа та вĕсем колхоссемпе совхоссене ĕрђетес еçре укçа-тенкĕ пумай салатмалла мар теççĕ. Вĕсем кулак мĕн шутланине, вал мĕншĕн ĕмĕтленнине туймаççĕ. Вĕсем кашпи куллепех çав кулаксенђен капиталисăмлă елементсем ўсние курмаççĕ те, ун харушлăхне те туймаççĕ.

Çавăнпа та партти хушшинђи сылтăм сулăнђăк пирĕншĕн хăрушă йапала. Пурте сылтăм сулăнђакпа, вĕсемпе килĕштерекенсемпе çине тăрса, пĕр ђарăнмасăр хытă кĕрешмелле.

«Сулахайисемпе», контрреволђутсиллĕ тротскисăм çинђен тепĕр статйара çырăпăр.

(Малалла пулат).

В. И. КРАСНОВ.»

Михетерĕн пăтраннă кăмăлĕ тулса килме пуçларĕ. Ун пуçĕнђе тĕрлĕ кӳренђĕклĕ шухăшсем ђупкаларĕç. Кăкăрĕнђе темĕн питĕрĕннĕ пек туйăнђĕ. Ыраттарса туртакан ђĕрпне лăплантарасшăн пулђĕ вăл. Михетер нимĕн калама аптăраса:

— Нехекрен пулђĕ ку. Пурĕпĕр пĕтеççĕ теха, терĕ те хăй çуттине пусарса арăмĕпе калаçрĕ.

— Тињук килеп, тенĕђђĕ, тытса хупмарĕç-и тата...

— Самана урђе. Тата мĕн курăпăр ĕнтĕ?

— Самана хамăрăн тăвас пулат... Çук, ĕлĕкхисем иртрĕçĕ ĕнтĕ. Калла çаврăнас çу-ук.

— Ан кала та...

— Вĕт ĕлĕк, вулăсра ĕçленĕ ђух, пуç тайман çын çукђĕ вĕт. Çула кайас пулсан сала улпуђĕнђен кайа çӳремен. Шăнкăравпа йалсем тăрăх пăр тустарса иртеттĕм. Епĕ хам пĕђĕк ђух ун пек пуласса шутлама та пултарайман вĕт. Тивлет... мĕн пурри çакăнта. Саларп улпутсем кустарса иртсе кайнă ђух тĕлĕнсе йулаттăм. Хам çыпсемпе пĕрле çĕлĕке илсе пуç тайса йулаттăм. Ун ђух вара улпут ахаљ çын мар пуљ тесе сахал мар шутланă. Кайран... Михетер нимĕн калама аптăраса арăмĕ çине сивĕлесе пăхрĕ.

Урамра калинке сасси илтĕннĕ пек пулсан, Михетер арăмĕнђен пăшăлтатса тепђере:

— Илтрĕне есĕ...

— Мĕн... Килђĕç-им?.. хăраса ӳкрĕ Михетер арăмĕ.

— Хăлхана тăктăмалах сасăсем илтĕнекен пулђĕçĕ.

Михетер тавран сăнаса шăнма пуçланă ђуређен айалти кантăкĕ çине пăхрĕ.

— Йытă ăçта?—ахаљ ђух пустуйах вĕрст...

— Нимĕнле сас та илтĕнмерĕ-çке...

— Илтĕнмерĕ, есĕ те çав...

Иккĕш те, хăрана кайăксем пек сывлама ђаранса итлесе тăђĕçĕ.

* * *

Урамра çил-тăвăл хайаррăн кашлат. Пĕлĕтсем кĕмĕл тĕслĕн курăнакан уйăха хайаррăн кашласа, йăванса йухса, хупăрлама пуçланă. Унинђе вĕрлĕхĕсем шăхăраççĕ. Тури-касран йыт кађка уласа вĕрни илтĕнет. Çĕрхи каç, тăмапа аврашнă урам, сĕм варман пек кашлат...

Çавăн пек хăрушă каç йал çывăрмаст.

Шкулта ђухансен пуххи пуçтараннă.

— Вуламалли çуртра хĕрарăмсен пуххи.

Пур çĕрте те çĕнĕ меслет ыйтупе çенĕлле сӳтсе-йаваççĕ.

Тиђук Йакурĕ, пухурап тухсан киле кĕрсе апатланат. Михетер патне кайма тухсан, вуламалли çурт умĕнђе çамрăксем купаланса выђанса тăнине курат. Йапшăнса пырса алăкран итлесе тăрат. Кунта та вал «колхос»—ыйтавĕ çинђен Уђки калаçнине итлет...

— Кунта та çавах,—тесе мăкăртатса ђашкарса утрĕ Михетер патне.

Çанталăк Тиђук Йакурне çӳçентерет. Çавăнтах Тури касран, йытăсем вĕрнĕ хушаран çамрăксем йурлана сасса итлесе тĕлĕнсе кайса, ђаранса итлесе тăрат.

— Ађисем те пăсăлнă,—тесе мăкăртатрĕ каллех вăл.—Епĕ те ађа пулса ӳснĕ, анђах куп пек çанталăкра пӳртрен каларман...

Çапла хăйне-хăй йатлаçса, Тиђук Йакурĕ Михетер ханхи умне килсе ђаранђĕ.

Калинккене шаккарĕ.

Михетер хирĕç тухса сас парса уçса кĕртрĕ.

Тиђук Йакурен тилĕ тирĕнђен çĕленĕ çĕлĕкĕ йурпа тулса ларнă. Силлекелесе кутник çине вырнаçрĕ.

— Ну, мĕнле хыпар тупран?—тĕпђерĕ Михетер васкаса.

Тиђук Йакурĕ шанђăксăр аллине сулса:

— Нађар... Нађар ĕçлетпĕр епĕр...

— Кĕски мĕнле?

— Е-е, ун пек шĕвĕрпе варланмалли те çук.

— Мĕн пулђĕ тата?..

— Кăларса сирпĕтрĕç, ват веç саккун...

Михетер хăвăрттăн калла-малла уткаласа çӳрерĕ.

— Нађар ĕçлетпĕр. Ну, кунпа çеç прттермĕпĕр. Вакка ђикее пулат вĕсене... Пер шарпăк йулми таран кĕл туса вĕçтерес пулат...

— Хăçан ђикен-ха вĕсене?.. Малтан хамăра ђиксе пĕтерес. Вĕсем вĕт нуммайăн.

— Та-ал! Йе вилĕм йе пуç, анђах парăнас çук...

Тиђук Йакурĕ вăрăммăн сывларĕ.

— Вăт, пыр та калаç вĕсемпе. Талккашпех тапăнаççĕ вĕт. Халăх веçех урса кайнă. Антихрис аллине кĕрсе ӳкрĕç. Кĕçĕр йалта темиçе тĕлте те пуху шавлат. Пăхха есĕ мĕн хăтланаççĕ. Уйрăммăн хĕрарăмсен пуххи тăваççĕ вĕт. Лешĕ, йĕпе хӳре, Кулини, Уђки ĕнтĕ, вăл хĕрарăмсен патшийех пулнă, пĕтĕм хĕрарăмсене пăсса пĕтереççĕ. Марфи те унтах.

— Претçетаттел пумушникне кĕртнĕ тенĕ пек илтнĕђђĕ,—терĕ Михетер арăмĕ, Марфа çинђеп асăнсан.

— Çавă. Çапла, теççĕ...

Михетер варахђен шутласа тăрсан:

— Çыварас пулмаст. Хамăр арăмсене хĕрарăмсен пуххисене çӳретес пулат,—терĕ те Михетер, ђарăнса шутласа тăђĕ.

— Ăнлантан-и? Шалтан, ăшне кĕрсе пшес пулат. Айакра тарса

йе пăрăнса çӳресен çав колхос пулатех. Вара! Вара, сапла пире майран пăвасси çеç пулса йулат. Ăнлантăна есĕ çакна?

Тиђук Йакурĕ ђирлĕ сып пек аллисене сулђĕ.

Çавăнтах шăлĕсене çисе ђашкăрђĕ:

— Пĕтĕпин пĕтетĕп, ахалех парăнас çук!..

## 12. ПУРТЕ ПĔР CĂМАХПА

Кĕçтук нихçан та Упађђа тетĕшне кун пек çиленмен. Çавăнпа та вăл Упађђа сăмахне каласа пĕтерпĕ-пĕтерменех уп патне пырса ларђĕ. Кĕçтук кӳреннине пытарасшăн пулса, Упађђа хăлхи патенђе ытти çынсене илттермелле мар калаçрĕ.

— Пăсрăн... Сана капла калаңăшăн айăплама та пултараççĕ. Мĕн пур ĕçе пăсрăн. Упађђа, нимĕн ăнланмасăр, Кĕçтука хирĕç куççене мăђлаттарса пăхса тăђĕ.

— Мĕн турăм-ха епĕ? Мĕншĕн мана айаплама пултараççĕ.

— Айăпламасан та, хамăр ĕçе пăсрăн... Ак, курăп, кулак çуриссм унпа усă курма пултарĕç тесен Упађђа, хăй ăшенђе шутларĕ, ытла вĕреннĕрен ĕнтĕ ку, кĕнеке тăрăх çав есĕ пурăнса кур-ха ман ђухлĕ, найан йатне илт, курăп мĕн каланине...

Упађђа шухăшсене виçсе пăхрĕ. Мĕн пăсак765 каларăм-ха? Хамăр вăйа кăтартасси, ђухăнсен найан маррине палăртасси?—çак пăсаки,—терĕ те,—ей, вĕсеп хыççăн кайсан пуçна çухатăн,—тесе хăйнехăй лăплантарђĕ.

Çак хушăра тĕрли тĕрлĕ йенђен сăмах ыйтрĕç.

— Справккă!—терĕ Çеркуни.

— Çеркунийе сăмах пар!—терĕ Карук, йунаса пăхса Кĕркуçа.

Çпеккĕр, Миђђук сăмах ыйтнине курсан, комсомолĕссем ку шухăшпа килĕштерменнине ђухласа илсе, Миђђука сăмах пама хушрĕ.

— Çавна пар...

— Хамăрăннисене кăларас пулат,—терĕ Кĕркуç.

— Пĕлер-ха, тата вăл мĕн калат...

Миђђука сăмах пађĕç.

— Упађђа муђи тĕрĕс калат. Ђăнах та çапла тăвас пулат...

Упађђа кăна хăй те илтрĕ. Хыпаланса ӳксе, мĕн каламаллине пĕлмесĕрех, пĕрре Кĕçтук çине, тепре Миђђук çине пăхса, ђĕтрекен тутисене шăлкаласа илђĕ. Çиленсе кайса:

— Есĕ вĕреннĕ пуш парапан çапма. Мен ес ман çийе йăвантаратăн...

— Упађђа муђи, çапла ăна,—тере пĕри кулкаласа.

— Çапла çав... Мĕншĕн каланине ăнланас пулат. Ха есĕ ђухан пурнăçне пурăнса курман. Есĕ ђухăн çын тетĕп хăпа ху, тĕплĕн пăхсан, епĕ тӳрех калатăп, есĕ пăстуйашђи кулак. Кам ытла çухăрат. Есĕ. Сана кунтан хаваласа кăлармалла... Хӳрене пăтратма пуратататăн... Ђухан çын пулнă, икĕ çул хушши уйрăлса тухнă та, мĕскĕнĕн курăнасшăн аппаланса çӳретсн. Аçу патне çӳретĕн?—çӳ-

ретĕп! Кам панђе ӳĕçетĕп?—Асу патĕнђе. Сĕт-турăхне те уптанах тултатăр, мĕн калама-а...

— Вăт калпак... Миђђана...

— Суйат вал,—терĕ Митта.

— Суйат, тетĕн?—Претçетаттĕл пăртаккӳл çипе çырма ыйтатăп упăп елеклĕ сăмаххисене. Епĕ çак çула çитсе те упăн ашшĕ пек сут-илӳ туман, суйман та...

— Вăт сторăвă!..

— Ха-ха-ха!..

Кулакансем кулђĕç. Кĕçтук, пĕрре кăвакарса кайнă Миђђа çине, тепре хĕрелсе кайса ђышкипе йунаса калаçакан Упађђа çипе пăхса хĕпĕртесе тăђĕ. Хăй ăшĕнђе, вăт çапла, тата хытăрах хĕрт есĕ ăна, тесе хавхаланса тăђĕ. Кĕркуç Упађђана пăвашшăн сăмахне кĕскетме хушсан, Упађђа пĕтертĕм епĕ—тесе ларђĕ те, Кĕçтукпа сăмахлама пуçларĕ.

— Ђапахах, куп пек çынсем умĕнђе çивĕђрех пулас пулат.

— Тĕрĕс калатăп ес, ђухăнсем ĕлĕк те хытă ĕçленĕ, малашне те ĕçлеççĕ. Çавăншăнах колхоса та кĕретпĕр. Анђах пирĕн мĕн ђухлĕп нумайййăн, çавăн ђухле колхос вăйлăрах пулма пултарат. Кĕçтук, йулашкипђен, Упађђа хăлхи патнерех çывхартса:—Шутласа пăх-ха есĕ, çаплипех вăйлă хуçалăх тума пултаратпăр-и? Ман шутпа, çук. Устерес пулат. Миçе лаша, миçе плук пур. Сахал вĕт. Вăтам хуçалăхрап хамăр колхоса кĕртме тăрăшас пулат. Уисăр пире йăвăртарах пулма пултарат, парттипе правиттĕлствă та апла тума хушмаст. Вăтамсемпе пĕрлешсе ĕçлеме хушат.

Çак самантрах Упађђап пуçĕнђе çĕнĕ шухăшсем тăвăлланса çуралма пуçларĕç. Çавăнтах вĕренни кирлĕ çав, уисăр мĕн... Хĕрсе кайни çапла—турĕ ĕнтĕ, терĕ.

Упађђа пайап тахçанхи кулаксен: «Ђухăнсем ĕçлеме пултараймаççĕ, кахал»,—тенĕ сăмахсене тавăрђĕ. Çавăншăнах та вăл, хăй пĕлнĕ тарап, ђухăнсем ĕçлеме пултарипне, вĕсен хастарлăхне, уйрăм ĕçлесе кăтартас шухăш тытнă. Упăн йăнашĕсем те çак сăлтавран тухса тăраççĕ.

Пуху çĕнĕрен кĕрлесе кайрĕ.

— Миђђа çавах, малтан аншĕне çыхăну тытмапни çинђен калаçса керсе кайса, Упађђа лартпă ыпту çипех килсе тĕренђĕ.

— Епĕ пĕрлешсе ĕçленипе хирĕç мар. Ăна никам та хирĕç те пулма пултараймаст. Вăл пиртеп тухнă пала та мар. Авал та. ĕлĕк, миме туса ĕçленĕ. Ман шутпа, тупраvулђпи, кам кампа ĕçлеме шалат тăват, вĕсем хайсене уйрам колхос туђђĕр. Çапла тусан аван пулас пек...

Çпеккĕр Миђђана калаçма ђарђĕ.

— Апла, сан шутупа, ђухăнсем хайсене, вăтамсемпе те уйрăм, кулаксем тата хайсене, капии уйрăмпар колхос тумалла?

Миђђа пĕр самантлăха пӳлĕнсе тăђĕ.

— Çапла тумалла... Анђах епе кулаксене хутелес тесе мар, пирĕп ђухансем ĕçлеме пултарипне катартас пулат...

— Ес ĕçлеместĕн-е?

— Епĕ мĕн, епĕ ĕçлетĕп, вăт ыттисем мĕнле.

— Есĕ ху аван ĕçле... Тепле вара есĕ ыттисене пăхма вĕреннĕ...

— Ђей, ашшĕ тарçăпа пуряннă вĕт...

Йулашкинђен Миђђук, ку ман шухăш мар, ăна Упаңђа муђи каларĕ, анђах епĕ ку шухăша пахалатăп... Ман сăмах та çакăнпа пĕтет,—терĕ.

— Çук, хут те кам калатар, ку тĕрĕс мар. Ку шухăш йăнăш çулпа илсе кĕрет,—терĕ Карук.

— Правĕлнă,—тесе хушрĕ Çпритун Мирунђђă.

— Пирĕн ђухăнсемпе вăтамсене пĕтĕçтерме тăрăшас пулат. Капла калани вĕсене уйăрма тăрăшни пулат,—тесе тĕртсе хуђĕ, Упаңђа çумĕнђе ларакан Кĕçтук та.

Упаңђа вăрахђен тарăн шухăшласа тавçăрса илсен хăй йăнăшне тĕшшипех асăрхаса илђĕ.

— Тĕрĕс, ку ман сăмах выронсăр пулђĕ,—терĕ Упаңђа,—ушшăн мана ан айăплăр, епĕ çав кармаçăварсем ђухăнсемпе патраксем кахалсем тесе çухрашнăран каларăм ĕнтĕ.

— Правĕлнă.

— Епĕр кахал маррине колхосра кăтартăпăр,—тесе тепĕр хут кăшкăрђĕ Упаңђа.

— Вăт. Правĕлна...

Карук аллине малалла кăларса çупса йађĕ. Ун хыççăн ыттисем те.

Ђухăнсен пуххи шавласа, кĕрлесе ыйтăва хĕпĕртевлĕ татрĕ:

— Ĕçлетпĕр...

— Лаша пулсан, плук пулсан...

— Машшина пулсан...

— Патшалăх пулăшат...

— Пĕрлĕх пулсан...

— Ђанлах пулсан...

— Пурте вĕсем хамăрта...

— Ĕçлетпĕр...

Тĕрли тĕрлĕн каласса хĕпĕртенĕ хушăра Саңук Çпеккĕр хăлхинђен пăшăлтатрĕ:

— Куратна?

Тата вăл тепĕр сăмах хушасшăн пулђĕ те: «вăт, куртăна, мĕнле пирĕн ђухăнсем, есĕ ђухăнсем хушшинђе нађар ĕçленĕ тотĕн», терĕ хăй ăшĕнђе.

Çпеккĕр хĕпĕртенипе нимĕн сăмах каламасăрах аллине сулђĕ. Пĕр сăмахпа:

— Аван,—терĕ те, çумĕнђе претçетаттĕле суйланнă Кĕркуçа çурăмĕнђен çапса илђĕ.

Кĕркуçăн та çитĕнӳсемпе пуçĕ çаврăнса кайнă.

Кĕçтук,—кунта аван, хĕрарăмсен пуххинђе мĕнле-ши?—тесе,

Кулинепе Улђки унта пуху иртерме тухса кайни çинђеп шухăшласа илђĕ, халех унта тухса ђупасшăн пулђĕ. Çавăнтах Саңук патне хут татки çине çыру çырса йађĕ те, Саңук вуланă хыççăн куç хĕссенех пухуран урама тухса вăркăнђĕ.

* * *

Кĕçтукăн ăшăпа тарланă итпе сивĕ тăман çапат, анђах ăна Кĕçтук ђухлаймаст. Ăна хирĕç пĕр ушкăн çамрăк хуткупăс йăтса иртсе кайрĕç. Кĕçтук кĕпер урлă каççан вĕсем йурланă сасă уллаха кĕрсе çухалђĕ.

Кĕçтук та ун хыççăн кăшкăрса йурласшăн пулђĕ. Шăхăрса йађĕ, унтан хăй çырнă сăввине асне илсе шилетсе шăхăракан çил ађисене хăй патне хĕпĕртеме ђĕннĕн сăвăласа калаçрĕ.

Хăйĕнне çеç мар вăл йурларĕ. Йуратат вăл хĕпĕртенĕ ђух сăвă калама.

Акă астуса илђĕ Хутар сăввине:

«Тăвăл, йе тăман авраша килсен,
Улат тĕнђе темиçе кĕтесрен:
Вутлă-йунлă хум ђупат те ђупат,
Пĕтĕм çĕре хăй çумне ыталат;
Çавăнпа кашлат унăн варри,
Таçталлах кайат хăватлă сасси...

Кăна пĕтерсен урăххине астурĕ:

— Ей...
«Вунçитђĕре те çирĕм çулта çеç епĕр.
Кунçулăмăр пирĕн колхослă уй-хир.
Кунçулăмăр шухă, хастар.
Çунатсăр вĕçет ĕçре.
Утарнĕклĕ тухтăр тивлетлĕ ĕçе.
Ат-тва! Ат-тва!
Атăр харăссăн
Колхос çулĕпе.
Йурламăпăр йурă,
Йулхавлăх çинђен,
Ўркенмĕпĕр урăх
Ертеллĕ çынсем...
Хĕпĕртев килĕ,
Колхос уйĕнђен,—
Кĕрешĕпĕр хастарран
Пĕтĕм ђĕререн...
Ат-тва!
Атăр колхоса!..

Кĕçтук çапла, хăйне-хăй команта парса вуламалли çурт умне çитнĕ çĕре, крылђса умне хĕрарăмсем йăтăнса тухрĕç.

Темиçе тĕслĕ сасă пĕр çĕре пуçтарăнса, хăрушă тамана хупланăн

туйӑнҫӗ Кӗҫтука. Сасӑсем хушшинҫе Софйе Павлӑвнӑн сасси илтӗнҫӗ. Ҫавӑнтах Уҫкипе Кулине кулса ҫанкӑртатрӗҫӗ.

— Кӗҫтук...

— Ав...

— Мӗн есӗ ухмаха йерне ҫын пек хуна ху калаҫса ҫӳретӗн?

— Йурлама йурамаст-и!

— Йурат, анҫах есӗ ӳсӗр мар вӗт.

— Ӳсӗр мар.—Епӗ нихҫан та ӗҫес ҫук та, вара нихҫан та йурламалла мар-и?

— Йурат, ахаҫ ҫеҫ каларӑм,—терӗ Уҫки.

— Ну, мӗнле?

— Аван...

— Мӗн йышӑнтӑр?

— Талккишӗпе колхос тавас терӗҫ.

— Миҫе телекаткӑ пуҫтарӑнҫӗ?

— 46 ҫын.

— Аван... Перлех тумаллаҫҫе те, йурӗ ӗнтӗ.

— Мӗн унта, пер пӳлӗмре хӗсӗнсе ниҫехсе лараҫҫен...

— Тӗрӗс, ӗҫӗ пултӑр...

Хӗрсем, телекаткӑсем килсене салинҫӗҫ.

Кеҫтук, Кулине, Софйе Павлавна, Уҫки шкула калла таврӑнҫӗҫ.

* * *

Вӗсем палтара кӗрсен тӗттӗм кетесре пери мӑкӑртатрӗ:

— Ҫейе вал, ывӑнтарса илесшӗн...

Теперри:

— Ҫӗнӗ пурӑӑҫ таватпар ӗнтӗ.

— Ну вара пирӗн пек пайансемшӗн рай так рай.

Кулине Кӗҫтука хытгап тытса ҫарҫе те пашӑлтатрӗ:

— Итле, ава мӗн калаҫаҫҫе....

— Кам-ши вал?..

Уҫки Кӗҫтукпа Кулине мен ҫинҫен калаҫнине илтсе:

— Минҫа сасси пек,—терӗ.

Кӗҫтук Кулине аллинҫен еҫерӗнсе пашалтатакан кӗтесре хесенҫӗ.

— А-а...

— Мен есӗ пахса ҫӳретӗн,—терӗҫ Шешлене Хырам.

— Сахал паҫӗҫ пуҫ-ха спре. Сахал...

— Мӗн есӗ ҫаркашатан?

— Нимӗн те ҫаркӑшмастан. Ҫелхӗре хытӑрах тытар. Ытла варам пулсан, киле таврӑнсан пайанах кусарпа касса пӑрахар,—терӗ Кеҫтук.

Ыттисем ахалтатса кулса йаҫӗҫ. Шешлене Хырам нимӗн ҫӗнмесӗр пер выранта хытса таҫӗҫ.

* * *

Ҫеркуни палхуҫалах ертелеп уставне вуласа парсан, пулашки хут Спеккер аллантарса паҫӗ.

— Кунта пурте пĕр тан пулассине теплӗн ăнланас тесен, ҫăн малтан ĕҫхатĕрне вырăх-ҫĕрлĕх ҫине теплен тинкĕрсе пăхас пулат. Тӳррĕшех каласан, вырăх-ҫĕрлĕх пĕрлешĕнет. Пурте колхосăн пулат. Пур колхоса кĕнĕ ҫынсем те хапрăк-савăтра ĕҫлекен рапоҫҫисем пек пулаҫҫĕ: Кам мĕнле ĕҫ тума пултарат, вăл ăна тăват. Ҫапла вара пур ҫынсем те плап тăрăх хăйсене тивĕҫлĕ ĕҫне ĕҫлесе, хăйсене-хăйсем тăрантараҫҫĕ. Ҫĕнĕ пурнăҫа тапратса яраҫҫĕ... Ҫиеккĕр, сывлăш ҫаварнă май, ҫамки ҫине йухса аннă тарне шăлса типĕтрĕ.

Пăҫă, йавар сывлăш куҫ хупанкине пусса антарат. Пурте тарланă, тӳмесене ĕҫертнĕ, йарханах. Анҫах Ҫиеккĕр калла ҫакмаст. Уп пуҫĕнҫе пĕртен-пĕр паллă ыйту: Колхос тумаллах, колхоссăр райопа тавранмалла та мар.

Каллех Ҫиеккĕр ӳкĕте кĕртме пуҫларĕ:

— Хăш-перисем кунта, «пĕри колхоса лашана енесемне кĕрет, тепри пимĕнсĕрех, ҫакантанах вара хирĕҫӳ тухса кайма пултарат»,— тереҫĕ. Ҫук, лайăх апланса илсен, нимĕнле хирĕҫӳ те тухса каймаст. Мĕншĕн тесен колхоса выҫăх-ҫĕрлĕхне кĕрекенĕн пурлăхĕ, сăмахран: лаша, ĕҫхатĕрсем: плук, урапа, сӳре, т. ыт. те, машинисем... ҫаксем пурте укҫа шуҫене шутланса пайлă вепос пулса тăраҫҫĕ. Колхосран тухас-тавас пулсан малтан хакланă сумăпа вал калла илме пултарат. Тепер ҫын лашасăрах, машинисемсĕрех колхоса кене пулсан, упăн пайлă вепосе те сахал пулма пултарат.

Ҫапла ĕнте, хут те кам та колхосран тухас-тавас пулсан, уйралман капитала пайлана сумăна ҫлепсен вепосне колхосра хаварса хут те хăҫан та тухма пултарат...

Ҫиеккĕр самахне шĕвĕрлесе вĕҫлеме пуҫларĕ. Ҫавăнна та пулас сассине те ҫĕклентерҫĕ вал.

Пуху итлет. Ҫав хушарах пăшăлтатса калаҫса илеҫҫĕ.

— Вĕсене те ҫав йăвар тивет...

— Ҫăмăл тетпим, пер пирĕн йалта кăна мар вĕт ҫапла калаҫма вĕсене тӳрĕ килет.

— Еҫ мар ĕнте. Ҫĕр ҫывармасар ҫӳреҫҫĕ, вĕт.

— Ха-а. епер перре килсе ларатпăр та, птту апаслаеа ларатпăр...

— Вĕрентес пулат пире, ухмахсене...

— Ҫавăншăн ҫӳреҫҫе те ĕнте.

— Йултапсем, тата сирен ҫакна манмалла мар. Совет патшалăхĕ ҫак вăхăтҫен, малашне те, пур ĕҫре те патрак ҫухансем ҫине тĕренсе йалти еҫсене туса ыҫĕ. Ҫав хушарах, ҫухăнсемне вăтам хресҫенсене пететерсе кулаксемне хыта керешет. Мĕншĕн ҫак перлешӳлĕ хуҫалăх ĕҫĕ пайан кун ывсакран ывсăк выран йышăнса тăрат?—Вал ҫухăнсемне ватамсен вай-халне кулаксемне кĕрешсе, ҫĕне пурнăҫ тавас ыитава хăвăрттан тавас ыйтуна ҫыхăнса тарат.

Ҫеркуни умĕнҫи панкăран кавак хупăллă Ленин сырса хăварнă кĕнекере налла тунă вырăна Ҫиеккĕре паҫĕ.

Ҫиеккĕр малтан апланмасăр тинкерсе пăхса тăҫĕ:

— Мĕн...

— Вула, ак кунта Ленин мĕн калать... Кĕске вăл...

Çпеккĕр нимĕн шутласа тăмасăрах аллине илсе вулама пуçларĕ:

**«Çĕр ĕçĕнђи вак хуçайствă, ăна кирек мĕнле хăпартсан та, кирек мĕнле йусасан та, хресђенсене йăвăр ĕçпе нађарлăхран хăтараймĕ.**

Таварлă хуçалăха кăпиталисăм тытăнса тăнă ђух вак хуçалăх етем йăхне нађарлăхран хăтарманнине епĕр, ни хресђенсенђен, ни йалти нађар çынсемпе пролеттарисенђен те пытарма пултараймастпăр». (XIV т. 1 п. 89 стр.).

Çпеккĕр ку сăмахсене хăй те анђах çеç тĕл пулђĕ. Çавăнпа та вал тата тепĕр хут вуласа тухрĕ те, каласа тăнлантарма пуçларĕ.

— Кун пирки Çпритун Мирунђђă питĕ аван каларĕ. Хамăрăн та ĕçлес пулать,—терĕ вăл. Анђах çĕнĕлле ĕçлес пулать. Пурнаçра Ленин йулташ вĕрентнĕ пек тăвас пулать...

Çак хушăра Çеркуни Ленинăн XVI-мĕш кĕпекинђен паллă туса хунă вырăна, 375-мĕш странитсине уçса пађĕ.

— Акă тата кун çинђен вула.

Пухури çынсем пĕрре Çпеккĕр çине, тепре Çеркуни çине пăхса илђĕçĕ. Çавăнтах пĕр-пĕринпе сăмах хушса калаçса та илме ĕлкĕрђĕçĕ:

— Вăт пуç...

— Вăт хаљ пулнă пулсан вăл...

— Ленин вилнĕ, анђах унăн ĕçĕ, унăн парттипе комсомолĕ йулнă,—терĕ Карук.

Çпеккĕр вулама хатĕрленнине курсан, пурте ÿсĕркелесе илсе лăпланса ларђĕçĕ.

— Йулташсем, пайан ывăнтăр та пулĕ, çапах та çакна вулар-ха...

— Вула!

— Усăллă...

Çпеккĕр татах вулама пуçларĕ.

**«Уйрăм вак хуçалăх ђух, пурне те выљăх, машшин, тата хуçалăхра кирлĕ ытти йапаласем парса çитерме çук.**

Уйрăм хуçалăх ђух, кашни хресђене кирлĕ вăрлăхсем, выљăхсем, тата ĕç хатĕрсем парса çитермешкĕн калама çук нумай пуйанлăх, пурлăх кирлĕ. Ку та сахал, пирĕн промышлĕннăç йалхуçалăхне кирлĕ машшин-хатĕрсене тăвас тĕлĕшпе нитте вăйлă малалла ÿссе пырсан та, пур хресђенсен вак хуçалăхне те кирлĕ таран йапаласем парса çитерме май çук иккенне епĕр куратпăр».

«**Çак айлăмран тухасси—пĕрлешсе, ертеллешсе йулташлă ĕçленинђе анђах.** Пĕрлешсе ертеллешсе, йулташлă ĕçленипе çеç епĕр çак тĕнђе вăрçи хуса кĕртнĕ шăтăкран тухма пултарăпăр...»

«...Пĕтĕм опђĕствă аллинђе тăракан шултра хуçалăх çине куçасси çинђен шухăшлас пулать, мĕнле майпа лайăхрах. Куçасси çинђен халăха вĕрентсе, тата халăхран вĕренсе пырас пулать».

— Вăт мĕнле, Ленин йулташ кун çинђен 1918-мĕш çултах калана. Унтанпа сахал мар вăхăт иртрĕ,—терĕ те Çпеккĕр, йал ик-ĕ сулпа кайасси çинђен асăрхаттарђĕ.

Пĕр çулĕ—кулакпа хулари непмăн хыççăн кайасси. Вăл çулпа кайсан вара каллех улпутпа пуршуаçи хĕскĕҫне лекесси палăрат. Тепĕр çулĕ—рапоҫҫи класпа пĕрле пырасси, рапоҫҫи клас йертсе пынипе, происвотствăллă копператси урлă сотсиалисăм пурнăçне çитесси. Йалти ҫухăнпа вăтам хресҫенĕн урăх çул çук...

Ăнланманнисем те, анланнисем те уççăн сывласа сывлăш çавăрҫĕç пулсан, хăшпĕрисем ÿсĕрҫĕç.

Тата теприсем пĕр-пĕрине сăмах хушрĕç.

Сахиме, Çпеккĕр ун çине сăнаса пăхнине туйса пулас, йавлăкне тÿрлеткелерĕ. Çпеккĕр каланине хытă тăнласа ларнăн курăнасшăн пулҫĕ.

— Çапла ĕнтĕ, йулташсем, çав ҫухăнпа вăтамсен нушалăхран тухайми йĕркине тĕнĕ-йĕрĕнех пĕтерес пулат. Малашне ҫан-ҫап çынла пурăнасси çак колхос ыйтăвĕнҫе çеç. Совет влаçĕ колхоссене ытларах пулăшасси те таçтанах палăрса тарат. Пуйансен пурлăхне колхоса парат... Кулаксене вĕсен май пулса ĕçлекенсене çăвархлас пулат. Кам та кам колхоса хирĕç пырат, кам çĕнĕ пурнăçăн çулне картлама тăрăшат, вĕсемпе кĕрешме Совет влаçĕн вăй-хал пур, тенĕ хыççăн, Çпеккĕр хĕрсе кĕрсе кайрĕ. Хăйĕн сăмахне вăл çапла пĕтерҫĕ:

— Вĕрентсе те колхоса кĕмен çынсене, колхос ĕçне пăсакансене сăмахпа ÿкĕте кĕмесен урай çума мунҫала тăвăпăр...

— Ха-ха-ха...

— Капла хăратсан колхоса мар, таçта кĕрĕн,—терĕ пĕри, хуллен.

— Апла та кăпмасан, йулашки пыршине сăрăхтарса трактăр уранне сĕрме çу тăвăпăр...

Çпеккĕр сăмахне пĕтерҫĕ. Пурин те пăрса туртнă хĕлĕхĕсем трукак пушаннă пек, пăшăлтатса калаçрĕç. Ҫĕлĕм тивертрĕç. Саҫук, Çеркупи хăлхи патĕнҫе, Çпеккĕре илттермелле мар калаçрĕ:

— Йулашки сăмахне йуратмарăм,—терĕ вăл.

— Кулаксемшĕн çимĕç парĕ ку,—тесе шутларĕ Кĕçтук та. Çемйунĕ—правĕлнă,—тесе кăшкăрса алă çупрĕ. Ун хыççăн сайра пĕрҫĕн ыттисем те йат туса илҫĕç.

— Капла хăратнипе ĕç тухас çук,—терĕ Карук та хăй ăшĕнҫе. Çавăнтах вăл иртнĕ каç актив пуххинҫе хирĕçсе кайни çинҫен, унтан хăйĕн шухăшсемпе Çпеккĕр шухăшсене танлаштарса виçрĕ.—«Çапах та аван, вĕри каларĕ»,—тесе, хăйне-хăй лăплантарҫĕ.

Сĕтел умне, хутланса ларнă Кĕркуç ура çине анаслакаласа тăҫĕ. Вăхăт вăрах тасăлни çинҫен каласшăн пулҫĕ вăл. Камака умĕнҫе пĕри, ларнă çĕртех пуçне усса антарса, сăмсине шăхăртса çывăрнине курҫĕ.

— Вăратăр-ха çавна.

— Ан тив, çывăртăр. Унăн ыран ирех вăрмана ĕçлеме каймалла,—терĕ пĕри, хăй çавах çумĕнҫе лараканне ҫавсипе тĕртсе варатрĕ. Лешĕ вăранмарĕ.

— Пошар!..

Çывракан çын ларнă çĕртен, трукак пуçне калла ывăтса, ура çине сиксе тăҫĕ. Куççене ҫарса, хăйне хирĕç пăхса кулса таракан-

сене курсан икĕ аллипе пуçĕнҗи кĕçеленсе кайнă çӳçĕсене хыçкаласа илҗĕ.

— Тĕлĕк курмарăна?—терĕ пĕри.

— Тĕлĕк куртăм, кулхусра пек,—терĕ те вăл тата темĕскер калама тытăнсан, ăна Кĕркуç пӳлсе лартрĕ.

— Тĕлĕксене кайран та каласа пама пултаратăр...

— Айай, тата есĕ пайанах пурне те прохвиссăр тăвасшăн.

— Ну, йулташсем, мĕнле? Ман шутпа, кунта вăрăм ресоҗутси травраш çырса тăмалли те çук. Мĕн каламалли пе калҗна. Ыйтусене тавăрса хирĕç ăнлантарнă. Тен, çырса хатĕрленĕ ресоҗутси те пур...

— Пур...

— Тавай, вулҗ!

Çемйун çырса хатĕрленĕ ресоҗутсине вуласа паҗс. Ресоҗутсире вăл çĕнĕ, Кипеккас йалĕнҗи распалăхсене кĕртмен. Ун çинҗен вăл шутламан та.

Çемйун хытă кăшкăрса вуларĕ:

**— Аслă Кипек-кассинҗи җухăнсемпе патраксен «Калинă» колхос җленĕсем...**

Кулине сасси илтĕнҗĕ:

— Кулине, тешне хуратас пулат. Епĕ колхос йатне улăштарма ыйтатăп...

— Ку ыйтăва кайран лартма йурат,—терĕ Çпеккĕр.

Çемйун малалла вуларĕ:

— «...Аслă Кипек-кассинҗи җухăнсемпе патраксен «Калинă» колхос җленĕсемпе, тата вăтам хресҗенсен активĕсем, Райĕçтăвкомпа район уполномоҗҗăннăйăн, йулташ Çпеккĕрĕн, җапла токлатне итленĕ хыççăн сӳтсе-йавса, сылтăмпа-сулахай, тата вĕсемпе килĕштерекенсемпе кĕрешсе, контрреволюсиллĕ троцкисăмпа кĕрешсе, самокриттĕк урлă, йалти пур җухăнсемпе ватамсене те «Калинă» колхоспе сарас тĕлĕшне, җи малтан пурсăмăр та колхоса çырăнатпăр. Сывă пултăр çĕнĕ пурнăç!»

— Ну, мĕнле? Хушмаллисем пур-и?.

— Хушас пулат,—терĕ Çеркуни.—Ман шутпа, йалхуçалăх артелĕн уставне тĕплĕн тишкĕрсе тухса, ăна йыпăнасси çинҗен кăтартас пулат. Сăмах çаврăнăçсем наҗартарах та, вĕсене кайран та йакатма пулат.

— Сасăлас!

— Йурат!..

— Тӳрлетме кайран та пулат,—терĕ Карук та.

— Кам йалĕçе колхос тавас текенсем алă таратаççĕ...

Çав хушăрах лăпланнă çынсен хыçĕнҗе кăшкăрна сасă илтĕнҗĕ.

— Йепле-ха епĕр пĕтĕм йалшăн саслама пултартăмăр. Халах ĕçĕ вăл...

Пĕрисем тăратнă аллисене хуллен-хуллен антарса пĕрре иреçтиум йенелле, тепре алăк йенелле çавранса пăхрĕç! Пĕр-пĕрине самах хушрĕç. Сарлама пуçларĕ пуху.

Çпеккĕрпе Кĕркуç ларнă çĕртен ура çине сиксе тăҗĕç. Çпеккĕрĕ,

сĕтел хушшинҫен тухса, хĕсĕнсе тăнă ҫынсем хушшипе пăлтăра тухакан алăк патне, такама курса ăна тытма тухнă пек сирпĕнсе ыҫĕ. Ҫынсем хĕсĕнкелесе ҫул паҫĕҫ. Лекрĕ ĕнтĕ ку,—терĕҫ хăшпĕрисем, калла ҫаврăнса пăхса.

Ҫпеккĕр алăк урати ҫине тăрса тĕттĕм пăлтăрти ҫынсем ҫине вут пек выҫанакан куҫĕсемпе кăшкăракан ҫынна шырарĕ, анҫах пăлтăртан, пĕри те пĕр сăмах ҫĕнмесĕр тăракан ҫынсенҫен пĕри ăна:

— Хуликансем вĕсем. Тухса тарҫĕҫ,—терĕ.

— Кĕски, пйанҫук!—тесе сас паҫĕ пĕри.

— Претҫетаттĕл! илтрĕне?.. Кун пирки ыранах атмоттела ҫыр... Пăҫук хăй сăн-питне кăтартмасăр, ҫĕрĕп пек ҫăмăртанса ларнăскер, ура ҫине тăрса хыпаланса ўкем пулҫĕ.

— Мĕн хушатăн?..

— Мĕн есĕ ҫĕтретĕн?.. Ҫĕтреҫҫен, поретăк тума пĕлес пулаť. Ăнлантăна епĕ мĕн каланине?..

— Ăнлантăм...

— Ҫапла пирĕн, рăспушшăнни—терĕ Ҫпритун Мирунҫҫă. Кĕркуҫ лăпланма ҫĕнҫĕ. Ҫпеккĕр алăк урати ҫинҫен сĕтел умне пымарĕ, тайăнса тăрса пĕрин ҫĕлĕмне илсе тапак ҫĕртрĕ. Кĕркуҫ сасăларĕ:

— Кам колхоса хирĕҫ ҫавсем алă тăратаҫҫĕ...

— Ҫук, йетинокласнă—терĕ Ҫемйун.

Ҫпеккĕр ыран халăх пуххинҫе пур ҫухăнсем те пулмалли ҫинҫен, унта ҫак пухура пулнисем пурте кар тăрса сасласси ҫинҫен ăнлантарсан, пуху хупăнҫĕ...

## XII. САЛХУЛЛĂН УЙРĂЛҪĔҪ

Шкулти ҫынсем саланса пĕтсен, Кĕркуҫ, Саҥук, Ҫпеккĕр, Карук, Ҫеркуни пўлĕмне кĕҫĕҫ. Уҫки, Кулине, Кĕҫтук урама тухрĕҫĕ.

Уҫки ҫул тăрăх телекаткăсен пуххи ăнăҫлă иртни ҫинҫен Кĕҫтука каласа пама тытăнҫĕ. Кĕҫтуг итленĕ пек пулса, пуҫĕнҫи—шухăшĕсемпе пăтранса утса пыҫĕ, анҫах ун пуҫĕнҫе темĕскерле аҫалла шухăшсем выҫҫанипе Уҫкипе Кулине ҫухласа илеймен..

Кĕҫтук хăй те хăй пуҫĕнҫи шухăшсен вĕҫне ҫити тавҫăрса илеймест:

— Ҫĕр тĕслĕ сăрсем, кăнкăваккăн курăнса тăракан пĕлĕтри ҫутă, вĕлтĕртетсе выҫанса йăмăхакан ҫăлтăрсем ҫине кайса ўкеҫҫĕ.

Ак ҫак ҫулпах вăл ик-виҫ сехет кайалла кутсăр-пуҫсăр тăман, хăрушшăн ахăрса улакан ҫил витĕр вуламалли ҫурта кайнине те халĕ веҫех маннă.

Тăман лăпланнă, ҫулсем шăлăнса тикĕсленнĕ. Калăн, ҫĕр ҫинҫи тăман иртнĕрен пĕлĕтри уйăхпа ҫăлтăрсем те хĕпĕртеҫҫĕ, вĕлтĕртетсе выҫанаҫҫĕ.

Кĕҫтук, уҫă таса сивĕ сывлăша ўпке тулли ҫăтса йăвăр сывлăшпа пăҫăхнă кăкăрне ҫăмăлатрĕ. Кĕҫтук тăктăмаллах ҫăмăлланса Уҫки Саҥук ҫинҫен калаҫма хатĕрленнĕ шухăшне пўлсе лартрĕ.

— Пахăр-ха есĕр пĕлĕт ҫине. Пĕтĕм тавралăха...

Кĕҫтук сăвăҫ пек аллисене хăлаҫласа сулҫĕ.

— Ак, мӗн есӗ, ухмаха йертӗнем?—терӗ Уҫки. Ҫавӑнтах, хӑй ӑссӗн шухӑшланӑ шухӑшне калайманшӑн кӱреннӗ пек пулҫӗ. Кулине Кӗҫтук хулӗнҫен ҫакӑнса аҫалла кулнине курсан, Кулинепе Кӗҫтук телейӗшӗн вӑл хӗпӗртесе пӑхса кулса тӑҫӗ. Ҫавӑнтах:—тен, епӗ вӗсене кансӗрлетӗп,—тесе иккӗленҫӗ. Халех, иккӗшне уллахӑн хӑварса, киле кайса ҫывӑрас, терӗ.

Кулине аҫашшӑн выҫанса Уҫкийе ыталанса илҫӗ. Унтан пӗр аллипе Уҫкийе, тепӗр аллипе Кӗҫтука ҫавӑтса тытса, уртӑнса, ҫуранлӑ ҫил хытарса лартнӑ кӗрт тӑрӑх ҫавӑтса утрӗ.

Кӗҫтук каллех тавран пӑхса хӑлаҫланҫӗ:

— Епӗ колхос сӑвӑҫӗ... .

— Ну, кала-ха еппин пӗрне, астунине,—терӗ Уҫки.

Виҫҫӗш те кӗрт тӱпи ҫине ҫаранса хире-хирӗҫ пӑхса тӑҫӗҫ. Кӗҫтук аллисене сулса, ҫӱлтен айалалла, ҫавӑнтах, тавран каҫӑрӑнса пӑхса, калама пуҫларӗ:

— „Епӗ утатӑп васкаса...
Вӑрӑм ҫул йӗрлесшӗн,
Сотсиалисӑм тумашкӑн
Хамӑр пурнӑҫа йусама...
Вӑрӑм ҫулӗ такӑр мар,
Такӑрлар-ха хӑвӑрттӑн.
Ёлӗк пире вӗрентмен
Вӗренер-ха хастаррӑн...

Кукӑр-макӑр ҫулсене
Пӗтӗмпех хаҫ тӱрлетӗр,
Хута пӗлмен ҫынсене
Хаҫ пурне те вӗрентер...
Ех, вӗренӗр, йулташсем.
Ирӗк панӑ пире хаҫ.
Ех, утар-ха, тантӑшсем,
Колхос алӑк усӑ ҫух...

Уҫкин кӑмӑлӗ усӑлса кайрӗ,—шӑнма пуҫланӑ аллисемпе хирехирӗҫ ҫупса илҫӗ. Кулине те, аҫашланса, Кӗҫтукӑн мӑйӗнҫен уртӑнҫӗ. Вӑрахҫен вӗсем ҫапла, калӑн, пур йӑвӑрлӑхсем ҫинҫен те веҫех манса кайса, аҫалла выҫанса, Упаҫҫан ватӑ карҫӑк пек тайӑнса ларнӑ пӱрҫӗ умне ҫитсе тӑҫӗҫ.

Уҫки пӗртен пӗр ура йӗрне курсан:—Упаҫҫа муҫи киле таврӑнса ҫывӑрма та выртнӑ пулас ӗнтӗ,—терӗ.

— Ывӑнҫӗ те пуҫ... Пайан аван ҫунтарҫӗ-ха вӑл Миҫҫука...

Уҫки Кулинепе Кӗҫтук телейлӗ илемлӗ пурӑннӑшӑн хӗпӗртет, уншӑн пӗр пӗртен те кӗвӗҫмест. Акӑ каллех унӑн ҫӗринҫе ыраттаракан шухӑш амаланма пуҫларӗ. Ӑна вӑл никама та халиҫҫен усса каласа паман, йепле-ха, каласа парас тетӗн. Уҫки ҫак самантра ӑшӗнҫи пӗр кӗтесне те телейлӗ тантӑшсем умӗнҫе пытарасшӑн мар, анҫах вӑтанат... Есӗр пӗлместӗр, есӗр телейлӗ, есӗр хӑвӑр телейпе ҫеҫ ыр курасшӑн, тесе те калама тытӑнҫӗ: А-а, епӗ, ман ашра мӗн ҫунат, епӗ те сирӗн пекех ҫын вӗт, ҫавна есӗр пӗлместӗр...

Уҫки шухӑша кайса тӑпине Кулине ҫухласа илҫӗ.

— Мӗн есӗ салхуллӑ, Уҫки, мӗншӗн.

— Ҫук, ахаҫ вӑл...

— Пур пуҫ-ха ҫӗре варринҫе мӗн те пулсан,—терӗ кӑшт кулса Кӗҫтук.

— Пур! Елле есӗ кӑна пурнӑҫа ҫапла ыр курмалла-и?

— Тӗрӗс... Хирӗҫ мар. Ех Уҫки, туп-ха есӗ те хӑна валҫи пӗр лайӑх йулташ.

— Тупса пар-ха есӗ. Шыратӑп, анҫах тупӑнмаст...

— Шырасан темӗн те тупма пулат. Кам мӗн шырат, вӑл ӑна тупма пултаратех...

— Ҫук, Кӗҫтук, ҫийелтен пӑхсан ҫеҫ ҫавӑн пек вӑл. Ку ӗҫе шаларах кӗрсе пӑхас пулат. Пурнӑҫра каҫҫа кайассипе авланассинҫен йӑвӑрри ман шутпа урӑх ҫук та пек. Ку пӗр маншӗн ҫеҫ те мар, опҫа ӗҫӗнҫе те мӗнле йӑварлӑх пама пултарат. Пирвайах, ав комсомолккӑсем мӗнле!—тесе пӳрнисемпе тӑсса кӑтартма пуҫлӗҫ. Унсӑр та кулаксем мӗнле кӑна сӑмах сармаҫҫӗ. Ман ҫинҫен те Саҫук арӑмӗ темӗн те пӗр сӑмах сарса ҫӳренӗ. Мӗн те пулин пулнӑ пулсан хут, хама хам йатлӑттӑм. Ҫарусӑр пултӑм, тийӗттӗм... Ҫук, пиртен тупса пулас ҫук ӗнтӗ вӑл. Ҫаплах ватта йулӑпӑр,—терӗ кулкаласа. Анҫах Уҫкин кулли тухмарӗ.

— Нивушли тупма ҫук?..

— Пулӗ вӑл, йалта мӗн ҫук... Ҫавӑ пӗтерет вӗт-ха. Сан кӑмӑлна кайаканни вӑл сан ҫинҫен шутламаст, ман ҫинҫен шутлаканнине епӗ курмастӑп. Вӑт ҫапла.

— А, вҫетки есӗ шутлаканни пур...

Уҫки хӗрелсе кайрӗ. Унӑн пуҫне вӗри йун ҫапрӗ. Ури айӗнҫи таптаса путарнӑ йурне пускаласа:

— Кай, тата ытла шала кӗрсе кайа пуҫларӑмӑр...

— Ҫапла вӑл манӑн, ытла тӗпҫеме йуратат,—терӗ Кулине.

— Ну-у кунта кам йут ҫын пур-ха. Пурте комсомолӗссем, пӗр ҫӑмӑр, пӗр ҫемйе.

— Епӗ йуратаканни пур, анҫах вӑл мана йуратмаст. Йуратсан та, пирӗн хушӑмӑрта ӗҫ тухас ҫук...

— Мӗншӗн?..

— Пӗҫҫен мар вӑл...

— Пӗҫҫен мар?—Кӗҫтук, пуҫӗнҫи ҫӗлӗкне ҫамки ҫине антарса шутлама пуҫларӗ.—«Пӗҫҫен мар, вӑл йуратсан та ӗҫ тухас ҫук». Кам вӑл е?.. Кала-ха...

— Ҫук, нийепле те калас ҫук. Пустуй сӑмах ҫеҫ вӑл,ун ҫинҫен пуҫна та ан ҫӗмӗр...

— Ах, кам вӑл?.. Кала, хам йевҫӗ пулатӑп...

— Ха-ха-ха. Йевӗҫ... Ара, пӗрре йевҫӗ пулса курни хут...

— Ҫанах...

— Ҫук, Кӗҫтук, каламастӑп...

Кӗҫтук хӑй пуҫӗнҫе арлан пек ҫакалтанма пуҫларӗ. Пур паллӑ ҫывӑх йулташсене сӑнаса тухрӗ те.

— Тупрӑм!—терӗ.

— Ну?..

— Малттин...

— Ҫӑнах та Малттин йуратмалла аҫа. Ӑна епӗ мар, такам та йуратӗ. Ӑслӑ—патрак аҫи. Пӗтӗм ҫунне парса револҫутсишӗн кӗрешет, хамӑр ҫын... Анҫах вӑл мар.

— Апла есӗ Малттине йуратсах каймастӑн?

— Ҫук унтан мар... Епӗ ӑна йурататӑп, апҫах урӑхла йуратупа... Вӑл вӗреннӗ ҫын пулат. Вӑл хӑйне вӗреннӗ ҫынах тупмалла. Вӗреннӗ ҫынпа вӗренмен ҫынсем мӑшӑрлӑ пурӑнма нихҫан та пултарайманни таҫтанах курӑнса тӑрат. Сахал-ши ҫӑвашранах пирӗн вӗреннӗ ҫынсем, кайран, вӗренсе мала тухнӑ пулсан та, кайран, вӗренмен арӑмӗсене пӑрахса ҫӗнӗрен авланаҫҫӗ.

— Та! пур, терӗ Кӗҫтук. Кӗҫтук ку шухӑша сарлакан хирӗҫ тавӑрса калаймасӑр ҫарӑнса тӑҫӗ. Атавра вулас-ҫентӑрӗ пулнӑ вӑхӑтра сутйе пулса пурӑннӑ Иванова астуса илҫӗ. Авланасса та Атавра ӗҫленӗ ҫух авланнӑ. Вӑл та ҫапла кайран вӗренме кайнӑ. Вӑрман хуҫалӑх инҫтитутне вӗренсе тухсан сывлӑх инҫтитутне пӗтернӗ хӗрпе мӑшӑрланса йалне таврӑннине астуса илҫӗ. «Хаҫ ӗнтӗ икӗ аҫине алимент тӳлесе пурӑнат, тет», тенине те илтнӗ. Ун ҫинҫен пӗр вӑхӑтра нумай сас-хура ҫӳренӗ. Партти йаҫейккинҫе те сӳтсейавнӑ пулнӑ. Еҫ ҫав алимент тӳлессипех пӗтнӗ. Алиментне те Иванов сутсӑр-мӗнсӗрех ӗҫлесе тунӑ укҫинҫен ҫуррине йахӑн парса тӑма пулнӑ.

Кӗҫтук нимӗн калама аптӑраса тӑрсан:

— Вӗренес пулат,—терӗ,—Малттин ӑслӑ ҫын, вӑл хӑй те патракран ҫакӑн пек ҫул ҫине тухнӑ ҫын, сана вӗрентмешкӗн пулӑшма пултарат, тесе хуҫӗ.

— Ҫук, Кӗҫтук, есӗ маншӑн пуҫна ан та ҫӗмӗр. Ҫирӗм ҫулта ҫеҫ-ха. Ытла хӑраса ӳкмелли ҫук. Сывлӑх пулсан тата пӗрер ҫул ӗҫлес те, вӗренме кайас пулат. Малтан колхоса ҫирӗплетер-ха, вара пӗрерӗн-пӗрерӗн хулана кайса вӗренсе таврӑнӑпӑр. Анҫах Малттин ҫинҫен вӑл-ку тавраш ан та шарла.

— Комсомолӗс тетӗн апла?..

— Кам?..

— Ҫав есӗ суйлан...

— Ватта йулнӑ комсомолӗс?..

— Парттийтсӑ?..

— Ан та тӗпҫе. Пурӗ пӗрех каламастӑп...

Кӗҫтук уҫҫӑн шухӑшлама пуҫларӗ. Улҫкипелен Кулине кулса пӑхса тӑҫӗҫ.

— Ватта йулнӑ комсомолӗс... «Йуратсан та пӗрлешме пултараймастпӑр»... Саҫук мари?..

Улҫкин тӑнлавӗсем хӑвӑрттӑн тапма пуҫларӗҫ. Ҫӑнах та Саҫука шел, Йелҫукпа пурӑнас ҫук вӑл. Йелҫук ӑна тӑмаст. Кулак хӗрӗ... Ҫавӑнтах Улҫки умне хӗрарӑмсен хушшинҫе ӗҫлемелли ӗҫ темӗн те йавӑрри пуҫне ыраттарҫӗ. Акӑ татах Йелҫук, Саҫук арӑмӗ, пӗтӗм урама илтӗнтермелле:—«Плетке!» «ама йытӑ!» «Кӑптӑр варринҫех йут арҫынсемпе ҫупатӑн!»—тесе кӑшкӑрнисем асне килҫӗҫ.

Урамри ҫынсем ахӑлтатса кулҫӗҫӗ. «Вӑт камит»,—тесе кӑшкӑраш-рӗҫӗ. Калинккерен, ҫӳреҫерен, пус кутӗнҫен,—калӑн пӳрте вӗсем Улҫкирен кулма йатне урама тухнӑ. Кӗҫтук, Саҫук ҫинҫен асӑнса, Улҫкин, ҫакӑн пек ҫӗрене ыраттаракан йапаласем сиксе тухнӑран

пулас, пĕçертме пуçланă сăн-пиђĕ çине вĕри куççÿлсем йăрăлтатса йухса тухрĕç. «Ĕçĕ çапла вĕт... Мĕн ђухлĕ вĕсемшĕн тăрăшатăн?— терĕ те виçĕ çул хушши хĕрарăмсен хушшинђе ĕçленисене астуса илђĕ. Виçĕ çул хушши кашни икĕ ернере пĕрре пуху туса, прокраммă тăрăх сÿтсе-йавса пынă.

Мĕн ђухлĕ ађасем ваљљи йаçлĕсем, плошђаткăсем уçассишĕн вĕрентнĕ. Мĕн ђухлĕ вăл ун пирки йалканашĕнђе ыйту лартса сÿтсе-йавтарнă. Çапах та çак вăхăта çитсе те ку ĕç унăн пурнăçа кĕрей-мен-ха. Йалканаш çексисене хĕрарăмсене йертни, хĕрсем ваљљи алĕç крушокĕ уçни, çырăва пĕлмен хĕрарăмсен ваљљи, Софйĕ Павăлвнапа пĕрле, расна шкул уçни. Йалканашĕн ĕçлекенсемпе хресђенсен инçпексине виçĕ телекаткă кĕртни, хĕрарăмсемпе уйрăм, расна, йал çине панă сатанирен хăпартса, хĕрлĕ опос туса патшалăха тырă сутни... Йулашкинђен Марфăна претçетаттĕл самеçтиттĕл туни... Çаксем пурте ун куçĕ умне килсе капланђĕç....

Хĕрарăм орканисаттăрне вăл хăй ирĕккĕн кĕмен. Ăна çак ĕçе партйађейкки хушсанах Уљки нимĕнле те ĕçлеме пĕлмесĕр аптăранă. Ку ĕçре ăпа малтанхи çулсенђе Саңук-вĕрентнĕ. Мускавран таврăнсан Малттин те сахал мар калаçнă. Йулашки çулта, пуринђен те ытла Çеркунипе Софйĕ Павлăвнă нумай пулăшнă. Çеркуни политтĕк йĕнĕпе, Софйĕ Павлăвнă вырăсла çырма... Çур йал хĕрарăм... Мĕн ђухлĕ вĕрентмелле-ха вĕсене. Йепле вĕсем ытла та кайа йулнă,—тесе шухăшласа илђĕ Уљки.

— Ну! Мĕн есĕ ђĕнместĕн?..

— Кĕçтук, ађам, кам вырăнне хуратан есĕ мана?..

— Ађа-аам...

— Ну, шăллăм, пул еппин...

— Капла аван...

Уљки кăкăрĕ хĕсĕнсе килђĕ. Нимĕнне пĕлмесĕрех ђăркăшса кайрĕ.

— Çук, куп çинђен калаçма пăрахар. Ыран пирĕн умра темĕнрен те пысăк ыйтусем тăраççĕ. Луђђă çавсем çинђен шухăшлас пулат.

Кулине, Уљки кăмăлне ђухласа илсе, Кĕçтука тытса ђарђĕ.

Виçĕш те пĕр вăхăтлăха нимĕн сăмах хушмасăр ђаранса тăђĕçĕ. Пĕри те вĕсенђен—«Атăр, салапар, акă ђасах çутăлат ĕнтĕ»,— темерĕç. Каласшăн та мар...

Анаткас вĕрăнма пуçларĕ. Хăш-пĕр мăрйесенђен тĕтĕм авкаланса тухма тапранђĕ. Кÿршĕри пус тараси ђĕриклетсе илтĕнсе кайсан, хĕпĕртевлĕн шăнкăртатса, Упаңђа пÿрт умне килсе тăнă виçĕ çамрăк халсем салхуллăн уйăралђĕç.

Уљки васкамасăр хăй пуçĕнђи шухăшсемпе пăтранса ÿсĕр çын пек тайкаланса килне утрĕ. Кунĕпе ĕçлесе ывăнни те унан хÿл-пуççисене пусат. Çапах та вăл ăпа туймаст. Çавăнтах:—Ытла салхуллăн курăнтăм пулас,—тен, Кулинепе Кĕçтука кÿрентертĕм,—тесе шутласа илђĕ. Ђанах, Саңук аван ађа. Пĕр самантрах унăн пуçĕнђе Саңук арăмĕпе усал пурăнни çинђен каласа панисем йăшăлтатрĕç. Саңук ăшшăн кулса калаçнисем ун куçĕ умĕнђе мăлкăлтасе [illegible]

Кипек-Касси вăранма пуçларĕ. Кӳршĕри ватă Çимун та тахçанах тăнă,—арăмĕ хапха уçса фосфорит турттарма ăсатса упăшки хыççăн кăшкăрнине Улҗки илтрĕ.

— Аҗасене валҗҗи кĕпелĕх тупаймăна...—җей-сахăрĕ хут тарам...

Кӳршĕри хапха җирлĕ çын пек йăнăщса çăрăлтатса хупăшни Улҗкин кăмăлне çӳçĕнтерҗĕ. Пурте пурăнасшăн, хархам хăйшĕн тапаланат,—терĕ те Улҗки килне кĕрсе кайрĕ...

Кĕçтукпа Кулине те йур ăшне путнă вĕрлĕх хапха урлă каçса кĕрсе, пăлтăр алăкне шаккарĕç. Çав хушăрах Упаҗҗан: «Çиҗҗас»—тесе җĕннĕ сасси илтĕнҗĕ.

— Улҗкийе темĕскер пулнă,—терĕ Кĕçтук.

— Мĕн пултăр, пулат вăл хăш җух çавăн пек,—тесе тавăрҗĕ ăна хирĕç Кулине. Упаҗҗа улăмсемпе хӳпĕрлекеленĕ пăлтăр алăкне уçрĕ...

# Ы Т А Р М А  Ç У К

ЙУРĂ

## ШАЛАНКĂ

Çамрăксен йурри „Поет“ йатлă поемăран. Ку сăвă тăрăх К. Хирпĕкăв, халăх кĕввипе усă курса йура çырнă.

1. Ытарма çук улăхĕсем
Çурхи савăк кунсенђе,
Ытарма çук сывлăшĕ те
Çурхи савăк кунсенђе.

Ытарма çук йурă кĕвĕ
Аслă улăх сартĕнђе,
Каçсеренех йан-йан кайат
Çамрăксенĕн вăйĕинђе.

**Харăссăн**: Çамрăксем,
Тантăшсем,
Вăййа тухăр,
Шухăшсем,
Ĕмĕтсем
Çакă пултăр.
Ушкăнпа тытăнса
Вăй выљар-и,
Ушкăнпа улăха
Йанратар-и!

2. Хĕл сиввинђе, сив кунсенђе
Еçлерĕмĕр вăрманта.
Еçлерĕмĕр алмăрсенђе
Çивђĕ пуртă выљатса.

Халĕ акă ăш хĕвеллĕ
Çу кунĕ те умăрта:
Выљанаççĕ аллăмăрсем
[illegible]

Е́ç ађи, йал ађи,
Вӑйӑа тухӑр!
Шухӑшсем, ӗмӗгсем
Çакӑ пултӑр.

Çавасем, çурласем
Йӑлӑхтарђӗç.
Трактӑрсем-шнейккӑсем
Кӳлейсе ларђӗç.

3. Хӗвел анђӗ те пытанђӗ,
Уйӑх ухрӗ тӳпене.
Уйӑх ухрӗ, çӑлтӑрланђӗ—
Тухрӗç, тейӗн, нӳмеҥе.

Карталанђӗç, илем кӗђӗ
Пирӗн вӑйӑ тӗммине.
Туртса йађӗ купӑсçи те
Ытарма çук кӗввине.

Аппасем,
Йӑмӑксем,
Вӑй выљатпӑр
Ахаљ-им
Савӑнса
Хаљ сывлатпӑр:
Ушкӑнпа тыгӑнса
Ӗç ӗçлетпӗр,
Ушкӑнпа нушана
Çӗнтеретпӗр!

4. Ытарма çук улӑхӗсем
Çурхи савӑк кунсенђе.
Савӑкрах та пулӗç вӗсем
Утта тухнӑ кунсенђе.

Ытарма çук йурӑ-кӗвӗ
Аслӑ улӑх сӑртӗнђе.
Каçсеренех йан-йан кӑйат
Çамрӑксенӗн вӑйӑинђе.

# У Р А С А

## АЛАКĔР ВАÇÇЛЕЙĔ

5 ПАЙЛА, 11 КАРТТИНЛĂ ТРАМĂ

### ВЫЛЂАКАНСЕМ:

1. ТИМУК—колхос правленийĕн пуçлăхĕ.
2. МАВРА—унăн амăшĕ.
3. УЛЂАН—унăн йăмăкĕ. Çитĕннĕ хĕр.
4. ЛИСУК—Тимукăн йуратнă хĕрĕ.
5. ПРАКУХ—Лисук пиђђĕшĕ. Тимук йулташĕ. Колхос правлени ђленĕ.
6. МАКÇĂМ—комсомолĕс.
7. КИРУК—комсомолĕс. Макçăм йулташĕ.
8. УРТЕМ МУЂИ—колхоçнĕк.
9. ИЛЛЕ МУЂИ—колхоçнĕк. Ватă утарнĕк. Хуралçă.
10. ТУХТАР.
11. СĂПАНИ—йумăç карђăк.
12. КЕОРКИ—çамрăк пуп.
13. ЙЕВСТАФИ—ватă пуп.
14. КĂПАРЙАН—кулак.
15. ТАРЙЕ —ĕнепекен карђăк.

Колхоçнĕксемпе колхоçпĕтсăсем, ĕçхерçђенĕсем, пионерсем, т. ыт.

## 1-МĔШ ПАЙĔ

### 1-мĕш карттин

Ишĕлсе анма пуçланă ђухăн хресђенĕн ђалăшсa кайнă ђӳређеллĕ пӳрђĕ. Хура пӳрт кăмаки. Алăкран сылтăм йенђи урлă сак çинђе вырăн. Кĕтесре турамӗш сăнĕ. Мавра пĕђђенех.

МАВРА (*ђĕркуççи çинђе кĕл тăват*). Ей, ырă кăмăллă туpă, туррăн пĕртен-пĕр таса амăшĕ, ђĕререн, куççуђ тăкса йăлăнатăп сана, хăвăн ырă кăмăлупа пилле мана! Йăлăнатăп сана, турăçăм... Хĕрхен, ес ман ывăлăма.—(*Ӳксе пуççапат*).

2

ТАРЙЕ (*кĕрет. Сăхсăхат*). Ман килес, турă пулăштар!

МАВРА (*ура çине тăрат*). Килех, кил... Ак çакăнталла, тĕпелеллех иртсе ларха, есĕ.

ТАРЙЕ. Кунта та тăркалăпçке, ури-алли те тирпейлех мар та...

МАВРА. Пирĕн урайĕ çусан та тăмаст те... Çăваймарăм-ха. Иртсем ĕнтĕ, мĕн алăк патĕнђе тăратăн?

ТАРЙЕ (*иртсе*). Тек-тек килсе ђăрмантаркаласа çӳретпĕр те веç... Тимукран çыру илнĕ, терĕç те.

МАВРА. Ађи манмаст-ха, çыркаласах тăрат.

ТАРЙЕ. Вăрçă мĕн пуласси çинђен сас-хура çук пулĕ те?

МАВРА. Ăна-куна шарламан-ха.

ТАРЙЕ. Кăштах пурăнкалаканнисем тăвар та хатĕрлесе хуђĕç-ха ĕнтĕ... Пирĕн укçи-тенкисем те çукрах та, хатĕрлеймерĕмçке.

МАВРА. Тăварне епĕ хам та, пĕр ђĕптĕм те хатĕрлемен.

ТАРЙЕ. Хатĕрлеймен пулмасăр ара, çаплах çав, çаплах ийа. Вăрçи тухсан тăварсăрах тăрса йулатпăр пулĕ те-ха... Ах-ха-ха-ха-ха-а-ай... Ку пур-çук пурнăçпа таçта кайса пуçа ђикмелле ĕнтĕ.

МАВРА (*шăппăнрах*). Есĕ, çынна мĕн шарлас çук та-ха, Тарйе.

ТАРЙЕ. Каламалла мар йапалана çынна шарлама йурăт-и вара... Ак, турă пур.

МАВРА. Тимук пирки калаçса пăхасшăн епĕ санпа.

ТАРЙЕ (*тĕлĕнсе*). Нимех те пулмарĕ пуђçке?

МАВРА (*салхуллăн*). Салтака кайиђђен Тимук мĕнле ађа пулнине есĕ ху та аванах пĕлетĕн...

ТАРЙЕ. Пĕлмесĕр ара, пĕлетĕп. Калама çук лăпкă, турă шутлă ађађђĕ.

МАВРА. Калама та аван мар та ĕçтĕ...

ТАРЙЕ. Мĕн аван марри пултăр ара унта?

МАВРА. Ара, çав ђип-ђипер ађа, пăсăлса карĕçке-ха манан.

ТАРЙЕ (*тĕлĕнсе*). Тимук-и?

МАВРА. Тимук çав... Ак, хађ, пайанхи хуђĕ çинђе те (*йăварран сывлат*) турра темĕн те пĕр каласа кӳрентернĕ.

ТАРЙЕ (*сăхсăхса*). Кай, ан сӳпĕлтет, Мавра. Невушлĕ çап-

МАВРА. Çаплах çав, Тарйе...

ТАРЙЕ. Пăсассине, хăт мĕн каласан та, çав антихриссемех пăсрĕç ĕнтĕ ăна.

МАВРА. Пĕртен-пĕр йуратнă ывăлăма хам çийес çăкăра çитерсе ӳстертĕм... Унтан та пулин усси пулмарĕ.

ТАРЙЕ. Ан та кала, хађхи çамрăксем çинђен нимĕн калама та аптрамалла. Аплах пулсан, унпа çыхланма та хăрамалла. Кирек мĕнле пулсан та, ан çыхланах, ун пирки ху та темскер курса ларăн... (а с а  и л с е) Анђах есĕ, Арлан карђăкки патне кайса пăхха. Вăл унпеккисене ђухлаканђђĕ.

МАВРА. Укçи-тенкисем пулсан, тем-пекех кайса пăхтарăттăм та. Ниçта ĕçлесе тупаймастпăр та веç...

ТАРЙЕ. Укçи çинђен ан та кала ĕнтĕ, Кăпăрйансем нашто пурнакан çынсем, итту укçасăр аптăратпăр, теççĕ. Пирĕн пеккисем çинђен шарламалли те çук. Арлан карђăккине ăна, пĕр ђăх кайса парсан та çырлахтарма пулĕ-ха...

МАВРА. Ђăххисем те пурăнма пĕлмерĕçке-ха. Виçĕ ђăхран мĕн пурри те пĕрех тăрса йулђĕ. Иккĕшне ђип-ђипер çӳрене ђухнех тытса кайрĕ, есремет хурђки.

ТАРЙЕ. Тимукĕ ђипер йусансан, ђăххине туйанма пулĕ-ха ăна. Тимукне йусасђĕ.

МАВРА. Апла пулсан ђăнахах та, кайса пăхтарам-ха.

ТАРЙЕ. Пăхтармасăр ара, пăхтарас пулат çав.

МАВРА. Есĕ, çынна-мĕне халех ан шарла-ха, усал утпа çӳрет теççĕ.

ТАРЙЕ (ĕ н е н т е р ӳ л л ĕ н). Тур çырлахтăрах, çакăнтах çĕр çăттăр мана. Çынна шарлама йурат-и вара, çын çăварне карта тытман теççĕ. Йал çине йат сарăлсан, тем курса ларăн (а с а  и л с е). Ах, астуманта, епĕ сан патна çĕпре илме килнĕђђĕ те, те пур?

МАВРА. Çĕпри пур-ха вăл. Микулнă ђухнехийех кăшт йулнăђђĕ... Йарса парам еппин (к ă м а к а  у м ĕ н ђ е  л а р а к а н  ђ ӳ л м е к р е н  Т а р й е  а л л и н ђ и  к ă к ш ă м  ç и н е  й а р с а  п а р а т).

ТАРЙЕ. Ну, сăпаççипах ĕнтĕ сана. Епĕ кайам-ха еппин. Йерçу пур ђухне пирĕн пата та çакпашкал халлан йаркалама пырса лар ара.

МАВРА. Лармаллађђĕ.

ТАРЙЕ. Епĕр тек-текех килсе ђăрмантаркалатпăр та, хусамăр пырса ларăр.

МАВРА. Епĕр çитĕпĕр, есĕ ху çакăн пек килкелесе лар.

ТАРЙЕ (а л ă к  х ă л ă п н е  т ы т с а). Есĕ кĕçĕрех кай, кайа йулсан кайу шăтат, теççĕ.

МАВРА. Епĕ хам та çавна калани. Каçђен кайса килес тетĕп-ха.

ТАРЙЕ. Епĕ карăм-ха еппин (т у х с а  к а й а т)..

МАВРА. Ђипер кай, лармаллађђĕ те. (Т а в р а л л а  п ă х с а  ç а в ă р н а т,  в ы р ă н  ç и н ђ е н  п ĕ р  ç ĕ т ĕ к  х у т а ç  т у п с а  с а р к а л а с а  п ă х а т  т е,  т у х с а  к а й а т.  к ă ш т  т ă х т а р а х п а  Л и с у к- [illegible])

3.

УЂАН (тарвралла пăхса). Каларăм вĕт сана никам та çук тесе.

ЛИСУК. Çук, епĕ уншăн мар. Ахаљ те сирĕн патăртан татăлма пĕлместĕп те... Аван мар, Уђан.

УЂАН. Мĕн аван марри пултăр унта?

ЛИСУК. Вал çапли çаплах та-ха. Анђах...

УЂАН. Анне Пракух пиђђупа килĕштерменшĕн калатăп-и есĕ? Уншăн пулсан...

ЛИСУК. Сирĕн пата килсе кĕрсен темскершĕн кăмăл пăтранаť ман. Мĕншĕнне епĕ хам та ăнланмастăп. Тимук хĕрлĕ çара кайас умĕн ак çак сак çинђе ларнине астăватăн пулĕ? Çавăн ђухне ухмахланнăшăн хама хам темĕн туса пăрахăттăм (питне саппун аркине хупласа). Ах, намăсçке, ах, ытла та намăс!..

УЂАН. Мĕн, йĕнĕшĕн мĕн намăсси пултăр унта. Пăрах-ха çав, есĕ, кирлĕ мара калаçма, Лисук!

ЛИСУК (вăтанса). Манма пултараймастăп еп ăна... Çав тери курас килекен пулђĕ...

УЂАН. Курасах килет пулсан... (турăш хыçĕнђен Тимук патретне илсе Лисука параť). Акă, кур еппин!

ЛИСУК (патретне пăхса). Тимук! Пăхха, пăх Уђан! Каснă лартнă Тимуках çав.

УЂАН (кулкаласа). Кăмăлларăн?

ЛИСУК. Çук, епĕ ахаљ...

УЂАН. Ай, пĕлмест тетĕн? Пĕлетĕп, ан тун ĕнтĕ.

ЛИСУК (вăтанса). Виçĕмçул, мăнкун умĕн урасана пĕрле çӳреттĕмĕр епĕр. Ирхине пĕрле кайса каçхине те пĕрлех таврăнаттăмăр. Ђиркӳре те пĕр-пĕринђен уйăрălман, йаланах йунашар тăрса кĕлтăваттăмăр. Çылăх каçарттарнă ђухне те, пађăшка патне умлăхыçлăнах пыра-пыра тăтăмăр. Пĕр-пĕрне йуратни çинђен пĕр тунмасăрах каласа патăмăр. Çав кунсенђен пуçласа пĕр-пĕрне хытăранта хытăрах йуратма пуçларăмăр епĕр. Кĕре тухсан... (салхулланса) вăл карĕ... Унтанпа курман еп ăна. (Çтапук васкаса кĕрет).

ЛИСУК (Çтапук кĕнине курса, патретне пытараť). Ах!

ÇТАПУК. Апђху! (кулаť). А-а, хĕрсем! Есĕр мана систермесĕрех улах ларасттăри-ха? Манран вăрттăн йумахлаттăр! (Лисука) Ну, мĕн пытартăн-ха, мĕн? А-а, ђĕнместĕн-и? Ахаљ ђухне (витлесе) Çтапук кунта кил-ха, Çтапук тури кас кађђисем патне çыру леçсе пар-ха! А халĕ, Çтапук кирлĕ мар... Есĕр апла пулсан, епĕ те сирĕнне урăхларах калаçма пултаратăп!

УЂАН. Есĕ ђăнласах-и?

ÇТАПУК. А-а, хăрарăн-и?

ЛИСУК. Çтапук çиленме пĕлекен çын мар вăл. Ађи аван вĕт вăл.

ÇТАПУК (хăйне хăй ђынлăп тытса). К ђорту Çтапук! К ђорту! Тури кас кађђисене саппун арки çине лартма та хатĕр есĕр, а мана, саппун арки вĕçне пӳрнепе те тĕкĕнтересшĕн мар! Хаљ тесен, хаљ хам, умра ташлаттарса таратма пултаратăп, сирĕ...

...х ...ири вара?

УЉАН. Аплах мар та ёнтĕ.
ÇТАПУК. Ташлаттарас-и?
ЛИСУК. Ташлаттар!
ÇТАПУК. Ташлаттараймастăп штолĕ, ташлаттаратăп!
УЉАН. Ташламан çынна таçтан ташлаттаран?
ÇТАПУК (кĕсйинђен çыру кăларса). Ташлăр, ташламасан памастăп и вçо!
УЉАН. Камран?
ÇТАПУК. Камран? Каманикрен!
УЉАН (йăпăлтатса). Неушлĕ каламастăн? (йăвашшăн) кала ёнтĕ (Çтапук çумне сăртăнаť).
ÇТАПУК (саванса). Ы-ы-ыхк!..
УЉАН. Кала.
ЛИСУК. Кала ёнтĕ...
ÇТАПУК. Калам штолĕ. (Уљан çумне сăртăнса) Тимукран...
ЛИСУК (хавасланса). Тимукран?!
УЉАН (Çтапук çумĕнђен сасартăк хăйпăнса). Илтрĕн-и, Лисук?
ÇТАПУК. А-а, есĕр апла-и? Мана ађашланçи тунипех хăтăлса йулатпăр терĕр пулĕ те... Çук, епĕ ташламасăр пурĕ пĕрех памастăп.
УЉАН. Ђипер, Çтапук, мĕн кирлĕ мара калаçатăн çак. Улах ларма пуçласан сана ваљљи йатарласах тĕш улах туса парăпăр-хă. Сала Аннине ђĕнтерсе пыртарăпăр...
ÇТАПУК. Апла пулсан (кулкаласа) парам штолĕ. (Çыруне параť).
УЉАН. Калап, Çтапук çиленме пĕлекен çын мар тесе.
ÇТАПУК (савăнăçлăн). Тоттă... Ман пек кађђă тупасси тупайрас çук таха есĕр, унђђен туљăк, пурнаттăр каппайса. (Ђан пилĕк сехт çапни илтĕнет). Ах, ђорт воçми, ман пиллĕкре аннепе пĕрле кĕпе ухма каймалађђĕ те, мансах кайнă (ђупса тухса кайаť. Лисукпа Уљан кулса йулаççĕ).
УЉАН (çыруне уçса). Мĕн çырнă-ши?
ЛИСУК. Ах, хăвăртрах вула-ха, Уљан!
УЉАН. Итле. (Вулаť) «Йуратнă анне, тата йуратнă йăмăк, Уљан! Пайан-ыранах епĕ киле тавăрнасса кĕтĕр. Хăвăр Тимук çĕнĕ çын пулса тавăрнассине есĕр тĕлĕкре те тĕлленмен пуљ. Епĕ партти кăнтитађĕ. Хам тавăрăннă тĕле, Уљанпа Лисук колхосра хастарлăн ĕçлекен комсомолккăсем пуласса шанса йулатăп. Епĕ хаљ сывах. Манран Пракуха, Кирука саламсем. Лисука уйрăмăнах пысăк салам. Сирĕн тăван ывăлу Тимук».
ЛИСУК. Пĕтрĕ те-и?
УЉАН (Лисук улшăнниие асăрхаса). Мĕн пулђĕ вара сана, Лисук? Ма çав терийех салхуллă есĕ?
ЛИСУК (салхуллăн). Тимук комунис. А епĕ... Епĕ ăна савакании... Темскершĕн ăш пăтранаť ман, Уљан... Тавăрăнсан темшĕн, тектекех унпа пулассăн туйăнмаст... Мĕншĕнне епĕ хам та ăнланмастăп.

УЂАН. Таврăнсан куç курĕ-ха...

ЛИСУК. Вăл çапли çаплах та-ха. Анђах... Ман пек мар вăл, улшăннă.

УЂАН. Анђах епĕ... Тимук пиђђе кирек мĕнле пулсан та, ун кăмăлне нийепле те ытараймастăп. Çав тери аван вăл маншăн.

ЛИСУК. Таврăнсан тек-текех ман çине пăхас çук вăл. Епĕ йалти, нимĕн те пĕлмен хĕр. Вăл... апла мар.

УЂАН (Лисука лăплантарса). Кирлĕ мара ан калаç-ха есĕ, Лисук! Тимук пиђђе ун пек, улталакан етем мар вăл. Темле пулсан та пăрахас çук вăл сана. Пăрахас пулсан, салам та çырса йарас çук вăл.

ЛИСУК. Темскершĕн, шанас килмест ман, Уђан...

(Тимук йерипен алăка уçса кĕрсе тăрат. Вăл хĕрлĕ салтакла тумланнă. Çурăмĕ çинђе кутамкка. Савăнăçлă. Лисукпа Уђан ăна асăр хамаççĕ).

4.

ТИМУК (хавасланса). Шанас килмест тетĕн?

ЛИСУК (сасартăк). Ах!

ТИМУК (кулса). Хăрарăн?..

УЂАН (хавасланса). Тимук! (Лисук питне саппун аркипе хупласа ларат).

ТИМУК. Сывă-и, Уђан?

УЂАН. Сывах, пиђђе!

ТИМУК (Лисук патне пырат. Лисук пуçне пушшех айалалла ђикет). Лисук!.. Есĕ мана ал та парасшăн мар-и? Ну... (аллине тăсат).

УЂАН (Лисук аллисене хăйпăтса). Ан ухмахлап ĕнтĕ, Лисук!

ТИМУК. Ай-ай-й, Лисук, пĕђĕк ађа пекех-çке, есĕ?

ЛИСУК (айаккалла пăхса Тимука ал парат). Айук, пăхмастăп!

УЂАН (васкавлăн). Есĕр ларăр-ха, Тимук пиђђе, епĕ нађђасрах, анне патне кайса килем (тухса кайат).

ТИМУК (Лисук аллине вĕçерме сĕр). Пăхмастăп тетĕн?.. Çав терийех хăрушла çын-и епĕ?

ЛИСУК. Çук, хăрушла мар... Вăтанатăп епĕ.

ТИМУК. Йутшăнатăн?

ЛИСУК (сасартăк Тимук çумне пăђăртанса). Ах, Тимук!

ТИМУК (ађашласа). Епĕ сана, мана маннă пулĕ тесе шухăшланăђђĕ... Есĕ манман иккен.

ЛИСУК. Манман, Тимук! Ђиркӳве каймасренех иксĕмĕр йунашар тăнă вырăнсене аса илетĕп. Хăш ђухне вара, есĕ манпа йунашарах тăнăн туйăнатăн. Кайран, хам пĕђђенех иккенне тавçăрса илетĕп те, ђун хурланат...

ТИМУК (салхулланса). Çапла çав, Лисук, çапла... Астăватăп... Вăл кунсем хура та тĕттĕм... Вăл кунсем хăрушлă та ултавлă пулнă...

ЛИСУК. Çук, апла мар, Тимук, ун ђухнехи пек нихăçан та телейлĕ пулман епĕ... Халђ йалти кађђăсем манран манашкă тесе мăшкăлаççĕ. Епĕ ђиркӳве çӳренинђен кулаççĕ.

ТИМУК. Кĕскен каланипех ăнланас çук есĕ мана. Ун çинђен кайран, тепĕр ђухне калаçăпăр. Халђ йалти пурнăç çинђен мĕн те пулин каласа пар. Çĕнĕ хыпарсем пулĕ сирĕн?

ЛИСУК. Кутăруçăн ваййа та тухман епĕ. Тухсассăн та иртнĕ çулсенђи пек мар, киђем. Хампа пĕр тантăшсем çукпа пĕрех. Вĕренекеннисем вĕренеççĕ. Ĕçлекеннисем Çĕмĕрлере. Колхосрисемпе хутшăнасах килмест. Мăшкăлаççĕ вĕсем манран.

ТИМУК (паусă). Пăхатăп пăхатăп та епĕ сана...

ЛИСУК. Вара?

ТИМУК. Тăлăх турат пек, есĕ... Телейсĕр! Çук, апла мар, Лисук, хамăр телейе хамăр шыраса тупаймасан, пире ăна никам та парас çук...

ЛИСУК. Анђах... Турă памасан?

ТИМУК (ђăтаймасăр хыттăн кулса йарать. Сасартăк аса илсе кулма ђарăнать). Касăр, санран мар епĕ... Турă памасан тетĕн?.. Калăттăм та епĕ сана... Тӳрех ăнланас çук есĕ мана.

ЛИСУК. Тархасшĕн, çавăн пек сăмахсене ан кала есĕ мана, хăратăп.

ТИМУК. Хĕрлĕ çара кайиђђен епĕ хам та санашкалах шухăшлаттăм. Халђ ак апла мар. Пурнăç мĕнле никĕссем çинђе тытăнса тăнине аванах тавçăрса илтĕм епĕ (кутамккинђен кĕнекесем кăларса сĕтел çине купалать). Ак вĕсем, ђăн-ђăн пурнăç çулĕ çине илсе тухакан çулпӳçĕсем! (Ленин патретне кăларса çтена çумне çыпăçтарать). Ак ку, Илйиђ! (вăрăма ђăсăлакан паусă. Лисук питне саппун аркипе хупласа шăппăн ĕсĕклесе йĕрет. Тимук ун патне пырса ађашшăн) Мĕн?.. Мĕн пулђĕ сана?.. Мĕншĕн йĕретĕн? (Лисук ђĕнмест. Пушшех хыттăн йĕрсе йарса тухса кайать. Тимук алăк патне ђупса пырса) Лисук!.. Лисук!.. (ђылайђђен пĕр вырăнта тăрать. Тенкел çине пырса ларать. Пуçне ђиксе) Итлемерĕ... Карĕ... (ђылайран Мавра кĕрет).

ТИМУК (Маврана курса сиксе тăрать). Анне!.. (паусă) Анне! (Мавра ђĕнмест) Паламарăн-им, анне?!

МАВРА (сасартăк). Ах, Тимук!.. (йĕрсе йарать).

Ђаршав.

## 2-мĕш карттин.

Пĕрремĕш карттинри стсенă. Ленинна Сталин патређĕсем. Сĕтел хушшинђе Пракух, Максăм, Кирук, тата Тимук ларассĕ. Мавра камака умĕнђе ĕçлет.

ТИМУК. Çитӗ, йулташсем! Урӑх ыйтусем çук пулсассӑн, саççетанине хупӑннӑ тесе шутлама та йурат пулӗ?

ПРАКУХ. Епӗ кӗскен кӑна эк çакна асӑрхаттарса хӑварасшӑн. Колхосран тухас текеннисен сайаэлениййӗсем çак йулашки виçӗ кун хушшинҫе саккӑра çитрӗç. Ку ӗнтӗ, паллах, сӑлтавсӑр пулакан йапала мар. Арлан карҫӑккисем çывӑрмаççӗ... Йумӑç пӑхас сӑлтавпа пирӗн çинҫен елеклӗ сӑмахсем сараççӗ. Пирӗн колхоçнӗтсӑсене упӑшкисемпе хирӗçтерсе йама тӑрӑшаççӗ вӗсем. Çавсен кирепсӗр ӗçӗсене кашни утӑмрах палӑртса пырассишӗн кӗрешес пулат пирӗн.

ТИМУК. Сӑлтавӗ пӗр. Вӑл çип вӗçӗсем пурте пӗр çӑмхаран сӳтӗлсе пыраççӗ. Ерешменсӗр карта пулма пултарайманни пуриншӗн те паллӑ пулӗ тетӗп. Малтан ӗрешменне, çав çипсене караканнине тупас пулат. Унсӑрӑн, епӗр тӑрмашни усӑсӑр, йулташсем.

МАКÇӐМ. Тӗрӗс!

КИРУК. Тӗрӗсси тӗрӗс... анҫах...

МАКÇӐМ. Вара?

КИРУК. Ман шухӑшпа колхос тулашӗнҫи тӑшман ытла хӑрушах мар. Вӗсем тӑшман иккенне пилӗк пӳрнене пӗлнӗ пекех пӗлсе тӑратпӑр епӗр...

ПРАКУХ (т ӗ л ӗ н с е). Мӗ-ӗн?..

ТИМУК (П р а к у х а). Тӑхта, ан ҫӑрмантар!

КИРУК. Анҫах хамӑр хушӑри, колхосри тӑшмана сӑмса умӗнҫе ташласа тӑрсан та кураймастпӑр! Мӗншӗн? Мӗншӗн тесен вӑл çийелтен пӑхсан колхоçнӗк. Вӑл кирӗк хӑçан та пирӗнпе пӗрле. Вӑл прикатпр, хӑшпӗр ҫухне çийелтен пӑхсан, утарнӗк пек те туйӑнат вӑл пире. Сӑмахӗпе вӑл кирек хӑçан та пирӗн тус. Пӗр сӑмахпа каласан çӗр проҫҫӑнлӑ комунис. Ун çумне нихӑш йенҫен те пырса çыхланаймӑн. Унӑн пур йенӗ те йап-йака. Çавӑн пек тӑшмансене курас çӗрте ҫасҫасах суккӑр ӗнтӗ епӗр, йулташсем!

ПРАКУХ (с и к с е т ӑ р с а). Парӑр-ха, мана!

ТИМУК. Тӑхта!

КИРУК. Ман шухӑшпа, çавпашкал тӑшман колхос тулашӗнҫи тӑшманран ҫылай хӑрушрах. Вӑл пирӗн хуçалӑха йерипен, шӑппӑн, сисӗнмелле мар кӑшлат. Майӑр тӗшшине кӑшласа тӗпретекен хурт йевӗрех кӑшлат вӑл пирӗн хуçалӑха. Çапла вара, йулташсем, ман шухӑшпа тӑшмана айакра мар, хамӑр хушӑрах шырас пулат.

ПРАКУХ. Парӑр-ха мана!

ТИМУК. Ну, кала еппин.

ПРАКУХ. Кирук тӗрӗс мар калаçат, йулташсем!..

МАКÇӐМ. Мӗ-ӗн?

ПРАКУХ. Ес мана ан пул!.. Кирук шухӑшӗпе пирӗн колхоçнӗксем пурте тӑшмансем. Епӗр колхоса кулаксене илменнине манса хӑварат вӑл. Колхосра ҫухӑнпа вӑтам, йе кулак тепӗ йапала пулма пултараймаст. Колхосра пурте пӗр тан, пурте колхоçнӗк! А вал унта тӑшмансем шырама хушат. Çук, тӗрӗс мар апла, йулташсем! Вӑл колхоçнӗксене колхос тулашӗнҫи ҫан-ҫан кулаксемпе кӗрешес ӗçрен пӑрса йани пулат, Кирук йулташ!

КИРУК (с и к с е т ă р с а). Парар-ха мана!

ПРАКУХ. Тăхта, каласа пĕтерем...

КИРУК (х ĕ р с е). Парăр, тенĕ сире! Ăм-м...

ПРАКУХ. Ҫапла вара, йулташсем...

ТИМУК. Ҫитĕ! Ăнлантăмăр. Кала, Кирук!..

КИРУК. Илтрĕр-и, мĕн калаҫат вал!.. Колхосра кулак ҫук, тет! Тĕрĕс мар, йулташсем! Пур! Капиталисăм тымарĕ пур! Колхоҫнĕтсăсем ђиркӳве ҫӳрени, хăйсен ађисене пуп патне илсе кайса йат хуртарни мĕне пĕлтерет теттĕр есĕр? Вĕсем халиђђен те Арлан карђакки патне ҫӳреме пăрахманни мĕн? Тĕне ĕнении тейĕр есĕр! Ҫук, вăл кăна мар, вăл клас тăшманĕсем майлă кайни пулат! Иртнĕ ҫул икĕ кектар хĕвелҫавăрăнăшне мĕншĕн уйра ҫĕртсе йатăмăр? Ђиркӳ праҫникне уйавланă пирки. Ҫак пирĕн хуҫалăха сийен туни пулмаст-и? Сийен! Кашни ҫитменлĕх, хуҫалăхри мĕн пур пек ђирђĕр ҫавăнтан килет! Пирĕн ђир-ђĕрсем клас тăшманне вăй илме кăна пулăшаҫҫĕ. Сакăр -сайавлени тет, Пракух! Сăлтавĕ ăҫта? Хамăрта! Хамăр сисĕмлĕхе мăкатнинђе.

МАКҪĂМ. Тĕрĕс!

КИРУК. Хамăр йалта икĕ пуп пурăнни мĕне пĕлтерет? Хамăр тĕттĕмлĕхе пĕлтерет вăл, йулташсем! Пупсене хĕссе кăларас тесен, малтан тĕттĕмлĕхе хĕссе кăларас пулат.

ТИМУК. Тĕрĕс!

ПРАКУХ. Вăл конешнă ҫапла...

КИРУК. Тоттă!..

ТИМУК. Ман ку ыйту пирки ҫакна калас килет. Колхосран тухма сайавлени пăракан колхоҫнĕксем мĕн сăлтавна сайавлени паншe лайăхрах тепђесе пĕлес. Ку ĕҫе тунă ђухне пупсем ҫине ҫаврăнса пăхма кирлине те манма кирлĕ мар. Мĕн-мĕн туни ҫинђен ҫитес саҫҫетанпре сӳтсе-йавăпăр. Ĕҫне тунăшăн Кирука ответ тытмалла тăвăпăр.

МАКҪĂМ. Тĕрĕс!

ТИМУК. Ҫавăнпа, ман шухăшпа, саҫҫетанпе кунпа пĕтерсен те йурат.

КИРУК (М а к ҫ ă м а). Пĕтрĕ пулсан, кайăпăр еппин... Есĕ, Пракух, ан ҫилен, ĕҫре пулат вăл.

ПРАКУХ. Ей, ара, уншăн мĕн ҫиленмелли пур, ай хађ тин пĕлетĕн ес мана...

ТИМУК. Ҫапла вара, йулташсем. Салапăпăр.

МАКҪĂМ. Пирĕн тата тепĕр нӳро пулмалла-ха...

КИРУК. Карăмăр, Макҫăм!

МАКҪĂМ. Ну, ыранђђен вара (т у х с а к а й а ҫ ҫ ĕ).

ТИМУК (П р а к у х а). Енĕр иксĕмĕр правленнне кайса килĕпĕр.

ПРАКУХ. Ен пађђаєра, киле ђунса кайса килем-ха. Ен килиђђен тăхта еппин, есĕ...

ТИМУК. Йара пар! (П р а к у х к а й а т). Смотри, кĕтетĕп!

ПРАКУХ (к а й н а м а й). Йурĕ.

ТИМУК («Молодая гвардия» кĕввинешăхăркаланăмай, напкă çине хутсем илсе хурат. Хутсене суйлакаланă хыççăн кăмака умĕнђе ĕçлекен Маврана асăрхат). Анне, ман кăштах çырткаласђĕ те, кайасђĕ.

МАВРА. Нимĕн те пĕçерейменрĕмçке-ха, улăм... Нимĕн çитерме те аптратăп ĕнтĕ. Çăнăх пĕтнĕ тĕле пулђĕ те. Уђан таврăнаймарĕ. Арманĕнђе те çын нумай теççĕ те, авăртаймарĕ нуђ.

ТИМУК. Çук пулсан, кирлĕ мар. Кĕçĕрлĕхе пурăнкалăп. Апат çиессинђен кирлĕрех ĕçсем нумай. Каймалла! (кайма тăрат).

МАВРА (йăлăнса). Ђунтан тархаслатăп сана, Тимук!.. Тархасшăн парах, есĕ, çав кирлĕ мар ĕçе... Пĕтĕм йал-йыша хирĕç тăратăн вĕт, есĕ... Ваттисенђен имен... Намăс! Сан пирки мана та интрен сура-сурах йатлаçма пуçларĕç ĕнтĕ. Хађ çын куçумне тухса çӳреме те намăс! Хавах шухăшласа пăх-ха, Тимук, кам ывăлĕ тесен, çавăн ывăлĕ теççĕ вĕт. Колхус ĕçне кирлех пулсан, сансăр пуçнех тăвакансем пулĕç. Тархасшăн ан хутшăн. Таваканнисем çылăха пĕлмеççĕ пулсан, туђђарах, сан мĕн ĕç пур вĕсемпе?.. Сан ĕç мар вăл, Тимук! Кăштах пурнакан çын ывăлĕ пулнă пулсан татах хăт, вĕсене кирек мĕнле хăтлансан та килĕшет. Пирĕн неккисене килĕшмест вăл, ађам...

ТИМУК. Пурнакан çынсем тетĕн?.. Хайсем ĕçлемесĕр, çын тарĕпе пуйнă çынсем пирĕн йышписене етем вырăнне хунă тетĕн-и мĕн, есĕ? Вĕсен йыттисем те пирĕнтен лайăхрах, тасарах апатсем çисе пурăннă. Епĕр кунĕн-çĕрĕн, халран кайиђђен ĕçленĕ... Вĕсем асса пурăннă. Пирĕн куççуђ йухнă вăхăтра вĕсем ташланă та, йурланă, анне! Çави-ха турăн ырлахĕ? Тура çав тери йăваш, ырă кăмăллă пулсан, мĕншĕн пире çав тери ђăтма сук асаплăхра усранă? Мĕншĕн пуйансемшĕн çеç кăмăллă пулнă вăл? Пирĕн пек, ђир-ђĕрлĕ, нишлĕ пурнăçпа пурнаканнисем çине мĕншĕн çаврăнса та пăхман? Ай йĕрĕннĕ?.. А есĕ, çылăха пĕлмеççĕ пулсан, тетĕн!.. Калăттăм та епĕ сана... (Пракух васкавлăн кĕрет).

## 2-мĕш курăнни.

ПРАКУХ. Ну, карăмăр! (Тимук шухăша кайса тăнине асăрхаса). Шухăшлатăн?

ТИМУК (пуçне çӳлелле утса). А-а, есĕ?.. (сасартăк) Карăмăр! (самантлăха ђаранса тăрат. Амăшĕ çине тилмĕрсе пăхат. Сасартăк татăклăн). Айа! (Тухса кайаççĕ. Мавра ђылайђђен алăк çине тилмĕрсе пăхса тăрат. Çав вăхăтра Сăпани кĕрет).

## 3-мĕш курăнни.

САПАНИ (турра пуççапса). Ман килес, турă пулăштăр.

МАВРА. Килех.

САПАНИ. Пађашка патне карăм та-ха, çула май халлап йама тесех кĕрсе тухас терĕм.

МАВРА. Çапла пулмасăр, ара, кĕрес пат, кĕмесĕр ара... Иртсем-и ĕнтĕ. (Сак çине кăтартса) Ак çакăнтарах иртсе лар.

САПАНИ (иртсе ларса). Ађусем килте çук-и мĕн-ха?

МАВРА. Улђанне армана йатăм. Тимукĕ çинђен нимĕн калама та аптратăп ĕнтĕ. Темскер пулђĕ вăл ађана?

САПАНИ. Епĕ каланисене пĕтĕмĕшпех турăн-и?

МАВРА. Куккăр çăка кутне те, йĕрх çырмине те кайса пăхрăм ĕнтĕ. Пулăшмарĕ...

САПАНИ. Пулăшмарĕ?

МАВРА. Хаљ темĕн тумалла ĕнтĕ?..

САПАНИ. Турра çав тери хытă тарăхтарнă ĕнтĕ вăл. Ара, хăвах шухăшла-ха, Мавра, мана йумăç пăхса халăха усă туса пурăннăшăн ыр сăмах калас вырăнне лишшоннăй турĕç те-ха... Ăçтан турă ђăтса тăма пултартăр?

МАВРА. Темĕн ђул та каланă ĕнтĕ. Нимĕн каласа та ӳкĕте кĕмест. Ах, мĕн тăвасах вăл ађана, мĕн тăвасах!..

САПАНИ. Ху çылăхлă пуљ? Типĕ тиркесе ураса тытас пулаť.

МАВРА. Çылăхĕ темĕн ђухлех пуљ те-ха вăл... Йершсе кайаймарăмçке-ха.

САПАНИ. Кайас пулаť, йулашки кунсенђе калама çук хăрушла хыпарсем пур.

МАВРА (кăкри çине хĕрес хурса). Калап мĕн те пулин пулатех тесе.

САПАНИ. Есĕ çынна мĕне шарлас çук та-ха.

МАВРА. Каккуй шарлама та.

САПАНИ. Пĕтĕм тĕнђери йут патшасем пĕр çĕре пуçтарăннă, тет те, лараççĕ тет ђей ĕçсе. Çав вăхăтра сасартăк аслати кĕмсĕртетсе авăтма пуçларĕ, тет. Икĕ пĕлĕт хушшинђен йур пек шурă тумтирлĕ апкĕл вĕçсе тухса патшасем ларакан сĕтел çине хăпарса тăђĕ, тет те, пуçларĕ, ťет, калама (Мавра сăхсахаť). «Намăс сире, турă ђурисем, кумунисçене атте турăран мăшкăлаттарса пурăнаттăр! Кумунисем пурнакан çĕршыва йунлă кӳлле путарса лартма хушатăп. Виçĕ уйăх та виçĕ кун хушши йунлă çăмăр çăвĕ—тесе каларĕ, тет те, пăђах куçран çухалђĕ, тет. Пайан-и, ыран-и пулатех вăл. Унђен çылăх каçарттарса йулмасан... (Уљан кĕрет).

**4-мĕш курăнни.**

УЉАН. Нађђас тух-ха, анне! Çăнăхне пушатар.

МАВРА (Сăпаннийе). Епĕ нађђасрах, есĕ, кăшт лар еппин.

САПАНИ (йăвашшăн). Маншăн пулсан, ан ђăрман. Хаљ ним ĕçех те тăвас çук та-ха, васкамастап епĕ. Пушатса кĕрĕрех...

МАВРА (Уљана). Ата еппин, пушатса кĕрер (тухса кайаççĕ).

САПАНИ (ура çине хăвăрт сиксе тăрса тавралла пăхса çавранаť. Хӳмĕнђен пушă кĕленђе кăларса, лампăт ĕлне тытса витĕр пăхаť. Унтан пуçĕнђи тутăрне хăвăрт салтса илет те, тутăр кĕтессинђи тĕвве шăлпа çыртса салтаť. Тутăр кĕтессине çыхса хунă хутпа ђĕркенĕ пăрашука салтса илнĕ хыççăн кĕленђе ăшне тултараť. Аллисем ђĕтреççĕ. Унтан витре патне

пырса çăварне шыв сыпаҫ те-кĕленҫе çине тултараҫ. Кĕленҫине каллех хўмне ҫикет. Хайаррăн пăшăлтатса). Нимĕнле ҫир-ҫĕр тивиппе вилместĕн пулсассан... Ак çак турамĕш куççулне ĕçсе вил!.. Ăм-мм... Манран ăслăрах пулма! (Мавра кĕрет).

## 5-мĕш курăнни.

МАВРА. Кĕттересси кĕттертĕм те ĕнтĕ...

СĂПАНИ (павашшăн). Уншăн пулсан, мĕн пуплемелли пур ара. Килте ҫухне ĕçĕ вăл кирек камăн та тупăнаҫ мари...

МАВРА. Еçне вилсен те виç куна йулаҫ теççĕ те. Пĕтесси пĕтетпĕрех пуҫ те-ха? Пĕтсен те çав ывăл пиркиех пĕтетĕп ĕнтĕ.

СĂПАНИ. Как нипуҫ сылăха кĕме йурамаст. Çылăхсăррисене турă кураҫ. Колхосран айаккарах паранас пулаҫ. Ҫиркўве те ҫас-ҫасах манатпăр епĕр. Çўрес пулаҫ.

МАВРА (салхуллăн). Ех, ку аҫа-пăҫа пирки, тем курса ларас пат ĕнтĕ?

СĂПАНИ. Хайар усал тĕлне пулнă пулмалла вăл?.. Ун пеккисене йусама çăмăлах мар. Хакла лараҫ.

МАВРА (йăлăнса). Ах, тархасшăн пулăш. Сăпани, сывă пулсан ĕçлесе те пулин таткалăпăр.

СĂПАНИ. Саншан пулсан, укçа та илместеп епĕ. Хамăр çын вĕт есĕр. (Хўмĕнҫен кĕленҫе кăларса). Нимӗнле майпа та йусанмасан ак çак кĕленҫе çинҫи турамĕш куççулне ĕçтерсе пăх-ха, есĕ (кĕленҫине Мавранатыттараҫ те, тавраллаçаврăнса пахса, шăппăнраххан). Çылăхлă сына ахаҫ ĕçтерме йурамаст, йашка çине йарса парас пулаҫ. Çакна ĕçтерне хыççăн йусанассине йусанас марри паллă пулаҫ вара. Йусанма пултараймасан, турă ăна вĕлерме те, çăлма та пултараҫ. Вăл етем ĕçĕ мар.

МАВРА (келенҫене хўмне ҫиксе). Ах, темĕнҫухлах сăпасçынă сана куншăн. Пулăшсан тем пекехҫе ĕнтĕ...

СĂПАНИ. Пулаштăрах тетеп пулсассăн, кун çинҫен никама та ан шарла, как нипуҫ варттан тума тăрăшас пулаҫ. Кама та пулин пĕлтерсен вара, усси çук. (Уҫан кĕнине асăрхаса). Епĕ кайамха, ҫипер йулăр ешин.

## 6-мĕш курăнни.

УҪАН (Сăпанийа). Ма лармасăрах?..

МАВРА. Лармаллаҫҫĕ...

СĂПАНИ. Епĕ лартам-ха, хавăр пырса ларăр (тухса кайаҫ).

МАВРА. Лармаллаҫҫе те... (пауса) Есĕ ыртан пуҫ, хĕрĕм, выртса кан.

УҪАН. Тимук хаҫ те тавранман-и?

МАВРА. Уншан пулсан—епĕр иксĕмĕр кирлех мар, аҫам, ăна кулхусах тарантараҫ. Пирĕн çине çаврăнса пахаҫ-и вăл... Каламан пулсан татах хăҫ. Темиçе хут та калана ĕнтĕ. Каланине хăлхана та ҫикмест те... Етем пулаҫ-и вăл?

УЂАН. Ах, анне, ăçта' пынă унта Тимук çинђен... Вăхăтлăха та пулин лăпланас тесе армана карам. Анђах унта та...

МАВРА. Унта та калаçаççĕ тетĕн?

УЂАН. Çук, анне, тек-текех ђатса пурнаймастап епĕ! Кашни сăмах вăрхаттарат ман ашђикĕме...

МАВРА (л а п л а н т а р с а). Тура паннне темĕнле пулсассăн та ђăтса иртересех пулат, хĕрĕм. Кам пĕлет, тен тура пулăшсан йусанĕха. (К а п а р й а н к ĕ р е т).

## 7-мĕш курăнни.

КĂПАРЙАН (с а х с ă х с а). Вай патар!

МАВРА. Сăпаççнпă. Нимех те ĕçлеме:тпер-ха. Килех.

УЂАН (К ă п а р й а н а в ы р ă н п а р с а). Иртсе ларсам-и ĕнтĕ, Кăпăрйан муђи.

КĂПАРЙАН. Иртсе тарас мăр-ха, Тимук патне ĕçпе килсеђђĕ те епе... Килте пулмарĕ пулас?

МАВРА. Кирлех пулсан ђĕнтерсе килес (У ђ а н а), пађђас йăпăрт ђунса кайса кил-ха, Уђан.

КĂПАРЙАН (х ы п а л а н а р а х). Çук пулсан, кирлĕ мар. Епĕ тепер ђухне те кĕрсе тухма пултаратап. Ан ђăрманăр.

УЂАН (М а в р а н а). Килте ним ĕçех те çук пулсан, Лисуксем патне кайса килем-ха епĕ.

МАВРА. Кайасах килет пулсан, кайса кил ара, кам ђарна сана.

УЂАН. Епĕ нумай тамастап, анне! (т у х с а к а й а т).

МАВРА. Йурĕçке...

КĂПАРЙАН (т а в р а л л а п ă х с а ç а в р ă н а т). Ну, мепле?

МАВРА. Ах, тархасшăн ан асаплантар мана, Капăрйан!..

КĂПАРЙАН (т ĕ п ђ е с е). Каламастăн-и?

МАВРА (й ă л ă н с а). Ах, тархасшăн!...

КĂПАРЙАН (т а р а х с а). Каламастăн?

МАВРА. Мĕн тавăсшăн есĕ унпа?..

КĂПАРЙАН (ç и л л и н е ш ă п а ç т а р а й м а с а р). Мен тавассипе сан еç çук унта, хамăн мĕн тавас килет, çавна тума пултаратап.

МАВРА (п е р е с п е к). Çирем таваттăмĕш çул асаплантаратăн есе, мана... Унђухне Çтанпан ђирлĕ пулман пулсассăн, пурнас ситеслĕкле пулнă пулсассăн... Сан патра тарçăра та пурнас сукђе епĕ. Есĕ мана йăпатса, тутла ĕрехсем ĕçтерсе, апрап капас вĕçпе çитиђђенех ўсертрĕн унђух. Пелмен епĕ... Ку ыра çын, ыракăмалпа, мана хисеплесе ĕçтерет пуле тенĕ. А есĕ... Есĕ манран мăшкаларăн. Çиђе уйах хушши намăсран хăраса çын куçумне курăнмасăр, çынпа пĕр халăп хушмасăр вăрманта, утарăта пурăнтăм. Епĕ çаван ђухне мĕн ђухлĕ асапланнине нихăçан та ăнланас çук есĕ!.. Тимук çуралђе... Есĕ ана вĕлермĕ, хура вăра кайса пытарма хушрăн. Вăл çуралнă хыççăн, тепĕр виçĕ кунтан... Ман йуратнă упăшка, Çтапан вилсе каре... Выçăпа асапланса выртакан ђирлĕ Çтапана валђи пĕр татăк çăкăр ĕçлесе тупасшăн пытăм сан патна. А есĕ манран (й ĕ р е т) мăшкăларăн... Çавăнтан пуçласа пурнăç хакне çухатрăм епĕ. Пурнăçра

мӗн пурри те Тимук кăна тăрса йулҕӗ маншăн. Халҕ ак, ăна та туртса илесшӗн есӗ манран (с а с а р т ă к у л ш ă н с а х ы т т ă н). Ҫук, ҫакăнтах пăвса пăрахсассăн та, Тимука сан аллуна тытса памастăп!.. Тимук сан мар, сан мар Тимук! Епӗ ăна хам кăкăрпа ӗмӗртсе ӳстернӗ! Тухса кай кунтан, тухса кай! (х ы т т ă н ӗ с ӗ к л е с е й ӗ р с е й а р а т̆).

КĂПĂРЙАН (м ă ш к ă л а с а). Ха-ха-ха-ха-ха!.. Памастăп, тетӗн?.. Антихриса сутăннă ывăлна хапсăнатăн?.. (с а с а р т ă к т а р ă х с а). Ҫук, кӗлмӗҫсене хамран мăшкăлама ирӗк памастăп!.. Манран, Кăпăрйанран мăшкăлама... Ман пурлăхпа, ман ҫуртйӗрсемпе хуҫа пулса, мана таптаса лапҕăтса лартасшăн тăрмашатăр (М а в р а К ă п ă р й ă н ҫ и н е п ă х а т̆). Хам йунран йăваласа тунă кӳлепе хам ҫине ухса ларса майран пăвма кармашат̆ пулсан (х а й а р р ă н п ă ш ă л т а т с а) лăплантарăпăр! (М а в р а х ă р а с а к а й а л л а ҕ а к а т̆. С а с а р т ă к а х ă л т а т с а к у л с а й а р а т̆). Хăрарăн?..

МАВРА (й ă л ă н с а). Ах, тархасшăн, Кăпăрйан...

КĂПĂРЙАН (м ă ш к ă л а с а). Тархасшăн?.. (т ӗ п ҕ е с е) Пайанхи саҫҫетанире мӗн-мӗн ҫинҕен каласрӗҫ?

МАВРА. Килте пулман епӗ...

КĂПĂРЙАН. Килте пулман?!

МАВРА. Ҫук.

КĂПĂРЙАН. Сутăнтăн?.. Вӗсен йуррине йурлатăн?.. Ăм-мм... Кӗлмӗҫ ратти!.. Хăвна кам тăрантарса усранине мантăн?

МАВРА (й ӗ р е с п е к). Ах, Кăпăрйан...

КĂПĂРЙАН (т а р ă х с а). Ех, турăҫăм-м!.. (п у ҫ н е ҕ ă м ă р т а с а) Мӗн пулатши капла, мӗн пулат̆!..

МАВРА (й ă л ă н с а). Ах, тархасшăн хăтар мана, Кăпăрйан... Ан ыйт манран! Тимук турă умӗнҕе айăплине есӗ каламасăрах аван пӗлетӗп епӗ... Анҕах, мӗн тăвас-ха? Мӗн тăвас!..

КĂПĂРЙАН. Ха-ха-ха-ха!.. Хӗрхенме шухăшламастăни тата, есӗ, ăна? (т а р ă х с а). Вăл хăйӗн тăван ашшӗне майран пăвма шухăшлат̆ пулин те ăна пуҫран аҕашламаллан-ха?.. (х а й а р р ă н п ă ш ă л т а т с а). Епӗ ăна ҫуралнă хыҫҫăнах ак ҫак пӳрнесемпе хӗстерсе ларт̆са, пырши-пакартине тăпăлтарса кăларма хăйа́ марăм пулсассăн... Ăм-мм!..

МАВРА (с а с а р т ă к х ы т т ă н). Ах, Кăпăрйан!..

КĂПĂРЙАН. Ҫӗр ҫинҕе шуҫса ҫӳрекен ăмана таптаса лапҕăтнă йевӗр, хам урапа пусса, лапҕăтса асаплантарăп!..

МАВРА (й ă л ă н с а). Мӗншӗн ҫав терийех мăшкăлатăн есӗ манран?.. Мӗн, мӗн турăм епӗ сана?

КĂПĂРЙАН (т ӗ п ҕ е с е). Каламастăн?

МАВРА (с а л х у л л ă н). Вăл... Есӗ унăн ашшӗ иккенне пӗлнӗ пулсан...

КĂПĂРЙАН (м ă ш к ă л а с а). Пуҫран аҕашлатҕӗ тейесшӗн мар-и, есӗ?

МАВРА. Апла хăтланас ҫукҕӗ...

КĂПĂРЙАН. Каламастăн?

МАВРА (т а т ă к л ă н). Ҫук.

КĂПĂРЙАН. Ăна çалса хаварасах тетĕн пулсассăн...

МАВРА. Айаплă мар вăл.

КĂПĂРЙАН (т а р ă х с а). Айаплă мар? Пĕтĕм йал халăхне ђиркӳве хирĕç илсе пыраканни кам?

МАВРА (т ă в ă н с а т у х а к а н с а с с и п е). Ах, тархасшăн!.. Мана валђи шăтăк ђавас тетĕн пулсан... ђав. Анђах Тимука пӳрне вĕçĕпе тĕкĕнсен... Пурнаймастăп епĕ унсăр, пурнаймастăп!.. (ĕ с ĕ к л е с е й ĕ р с е й а р а т).

КĂПĂРЙАН (м ă ш к ă л а с а). Пурнаймастăп тетĕн?.. Хăвна çылăха кӳртсе, хăв килçуртна ăраскалсăрлатса пурнакан антихрис йыттисĕр пурнаймастăн, апла пулсан?.. Турра мантăн?

МАВРА. Çăлатăп еп ăна. Вăл хăй кумунсем илĕртнĕ хыççăн кайса турра манђĕ пулсан, епĕ келтăватăп уншăн...

КĂПĂРЙАН. Каламастăн пулсассăн, епĕ хам, йал çине йат сарсассăн мĕнле пек туйăнат сана?.. Мавра тăхлађа хăйĕн йуратна ывăлне Ђăлах Çтаппаппа мар, урăххине çуратнă иккенне каласа парсан. Вăл сăмах Тимук хăлхине пырса çаклансан...

МАВРА (т ă в ă н с а т у х а к а н с а с с и п е). Ы-ых, ђунилли!..

КĂПĂРЙАН (т и п п ĕ н). Вăл халлапа илтнĕ хыççăн ваттисем сана питрен сура пуçласан... Вăл халлап Тимукăн ђаплăхне çĕр айне ђавса пытарсан?..

МАВРА (п у ш ш е х т ă в ă н с а). Ах, турăçăм-м!.. (ĕ с ĕ к л е с е й ĕ р е т).

КĂПĂРЙАН (м ă ш к ă л а с а). Мĕншĕн çӳç-пуçна тăлпаласа йĕместĕн?.. Унсăрăн турă сана асăрхаймасăрах тăратса хаварма пултарĕ тата. Ай манран имепетĕн?.. Маншăн пулсан...

МАВРА (х ы т т ă н). А-ах!.. Тухса кай!..

КĂПĂРЙАН (п ă л х а н м а с ă р). Кайма хушатăн пулсан, епĕ кайатăп (а л ă к п а т н е л л е у т а т. А л ă к х ă л ă п н е т ы т с а). Анђах кайран... Хăвна ху ан ӳпкеле! (а л ă к а т у р т с а у ç а т т е п ĕ р с а м а н т л ă х а М а в р а ç и н е п ă х с а т ă р а т).

МАВРА. Тăхта...

КĂПĂРЙАН. Сывă пул (т у х м а т ă р а т).

МАВРА (х ы т т ă н р а х). Кăпăрйан!..

КĂПĂРЙАН (а л ă к р а ђ а р а н с а). Ну...

МАВРА. Тăхта...

КĂПĂРЙАН. Епĕ итлетĕп.

МАВРА (п ă л х а н с а). Вĕсем... вĕсем пађăшкă çинђен...

КĂПĂРЙАН (х ы п ă н с а). Кеорки атте çинђен?..

МАВРА. Вĕсем ăна... (ç а в в а х ă т р а Т и м у к х ы п а н с а к ĕ р е т. М а в р а Т и м у к а а с ă р х а с а ђ у н а т и в е к е н с а с ă п а к ă ш к ă р с а й а р а т). Ах!.. (К ă п ă р й а н а л ă к п а т н е л л е ђ а к с а н и м ĕ н л е м а р п у л с а т ă р а т).

## 8-мĕш курăнни.

(М а в р а п а К ă п ă р й а н т а т а Т и м у к).

ТИМУК (в ă р ă м а ђ ă с ă л а к а н п а у с ă х ы ç ç ă н К ă п ă р й а н ç и н е ш ă т а р а с л а п ă х с а). Мĕн кирлĕ сана?..

КĂПĂРЙАН (ђылайран, йăпăлтатанçи пулса). Епĕ... Епĕ...

ТИМУК (аллине алăк çине кăтартса Кăпăрйана хыттăн). Тухса кай!.. (ђĕтрет, хăйне хăй çирĕплетет).

КĂПĂРЙАН (сас-ђĕв кăлармасăр алăк патнелле утăмласа виçнĕ пек утса, йерипен тухса кайат).

ТИМУК (паусă. Хăйне хăй çирĕплетме тăрăшат. Маврана). Мĕн тума... килнĕ вăл кунта?..

МАВРА (тăвăнса тухакан сасăпа). Ах! (хыттăн ĕсĕклесе йĕрсе йарат. Тимук ун çине пăхса тĕлĕнсе тăрат).

Ђаршав

## II-МĔШ ПАЙĔ.

### 1-мĕш карттин.

Стсенă. Куракансенђен сулахай йенђе пĕђĕкçеç пÿрт. Пÿртĕн куракансем йенђи çтени уçă (пÿрт ăшђиккинђе мĕн-мĕн тупи веçех курăнат). Сылтăмалла пÿрт тулашне кăтартакан стсенă. Пÿрт, урапаллă çăл çырма тĕпнерехре лараççĕ. Пÿрт патне, пе çăл патне шыв ăсма пыраканнисем сăртран айалалла, куракансенђен сылтăмран анаççĕ. Каçалапа. Сылтăм йенђи стсенă çутă.

1.

Лисук çăл патне анса шыв ăсма тытăнат. Пĕр витрине ăсат те шывĕ çине пăхса, ђылайђђен пуçĕнђи тутăрне йусакалат. Çав хушăра сăртран Тимук йерипен утса анни курăнат. Çăл патне çитерехпе ђарăнса тăрат. Йерипен çывхарат. Лисук йусанкаланине савăнăçлăн пăхса тăрат.

2.

ТИМУК (ђылайран). Ехxем!..
ЛИСУК (сасартăк çавăрăнса пăхнă май). Ах!
ТИМУК (йăвашшăн кулса). Хăрарăн?
ЛИСУК (питне саппан аркине хуплаcа). Кай...
ТИМУК (пауса). Апла...
ЛИСУК. Кай, тенĕ сана!
ТИМУК (ђылайран). Лисук!..
ЛИСУК. Вара?
ТИМУК. Пеушлĕ халиђђен те анланаймастан есĕ мана?
ЛИСУК. Айук, кирлĕ мар!.. Кай!
ТИМУК. Тантăшусем çине пах есĕ, Лисук.
ЛИСУК (саппан аркине илсе). Тархасшан, ан тив мана...
ТИМУК (салхуллăн). Йуратмастăн?..
ЛИСУК (йăлăнса). Çук, апла мар...
ТИМУК. Кала, ан тун, теп, епĕ сана пулăшма пултарăп.
ЛИСУК (пăлханат. Темскер каласшăн. Сасартăк). Çук!..

ТИМУК. Мĕн?

ЛИСУК. Айук, кирлĕ мар!.. Кай, тархасшăн кай!

ТИМУК (п а у с ă). Апла еппин. Мана çав терийех курас килмест пулсан... Манран йĕрĕнетĕн пулсан... (Л и с у к п ă л х а н а т) епĕ кайатăп (и к ĕ ш ĕ т е п ĕ р-п ĕ р и н к у ç ĕ н ђ е н ђ ы л а й ђ ђ е н с а с-ђ ĕ в к ă л а р м а с ă р п ă х с а т ă р а ç ç ĕ). Анђах асту, Лисук, епĕ сана нихăçан та усал сунман, сана кирек хăçан та ђи çывăх йулташ вырăнне хисепленĕ... Кирлĕ пулсан епĕ... кирек хăçан тэ санна... Ђипер йул, Лисук (п ă л х а н а т. Л и с у к к у ç ĕ н ђ е н ђ ы л а й ђ е н п ă х с а т ă н ă х ы ç ç ă н). Сывă пул!.. (й е р и п е н ç а в ă р ă н с а с ă р т а л л а у т а т. Ç у л ç и н ђ е ђ а р а н с а п ĕ р с а м а н т л ă х а ç а в р ă н с а п ă х а т т е к а л л е х у т а т).

ЛИСУК (Т и м у к а к у ç р а н ç у х а л и ђ ђ е н е х ă с а т н ă с а-м а н т р а х ы т ă п ă л х а н а т. У н т а н х ы т т ă н т ă в ă н с а т у х а-к а н с а с ă п а). Тимук!.. Ах, Тимук!.. (м у с ă к к ĕ в в и и л т ĕ н е т). Карĕ... (Т и м у к к а й н ă ç ĕ р е л л е п ă х с а т ă р а т). Мĕншĕн çав терийех йуратататăн-ши?.. Ах, турăçăм, каçар мана! Епĕ мар, епĕ айăплă мар!.. Сана кирлех пулсан, кăкла, тăпăлтар ман ђĕремçĕме. Пурнаймастăп епĕ унсăр!.. Пурнаймастăп! (ĕ с ĕ к л е с е й ĕ р с е й а-р а т. Ç у т ă с ÿ н е т. П ÿ р т ă ш ђ и к к и н е к ă т а р т а к а н с т с е н ă ç у т ă л а т. К е о р к и п е Й е в с т а ф и и к к ĕ ш е х л а р а ç ç ĕ).

## 2-мĕш карттин.

ЙЕВСТАФИ. Çылăх, Кеорки Ванифаťийевиђ... Турă çырăвĕнђе каланă сăмахсене манатăн есĕ!

КЕОРКИ (х ĕ р ÿ л л ĕ н п ă ш ă л т а т с а). Çылăх тетĕн? Ухмах есĕ, Йевстафи Соломонăвĕђ! Хе-хе!

ЙЕВСТАФИ (ç и л л е н с е). Кам, епĕ ухмах?

КЕОРКИ. Пурнăç пуранмалли меслетсемпе усă курма пĕлместĕн. Унпăн епĕр колхос правленийĕнђе ĕçлекен тăмсайсене, пĕтĕмĕшпех тĕрмене илсе кайса хуптарма пултаратпăр! Хе-хе!

ЙЕВСТАФИ. Çу-ук, Кеорки Ванифатйевиђ, кунта ура тупанĕне мар, пуçна шухăшласа пăхас пулат. Теплерен сиссен...

КЕОРКИ (т а в р а л л а п ă х с а ç а в р ă н а т). Ех, Евстафи Соломонавĕђ, çак лапсăркка аркăлла тумтирруи хÿтлĕхне туймастăн есĕ. Ку тумтирсемпе пире, темĕн ђухлĕ укçа вăрласан та, темĕн ђухлĕ çын вĕлерсен те тытакан пулас çук. Ку тумтире тахăнса çÿрекен çынăн ђĕри варринче ђи харушла çелен йăва çаварса пурансан та, асăрхаймăн. Вăл çĕлен ансăртран сана сăхсан та, есĕ хавна кам сахнине тавçăрса илеймĕн. Меншен? (Т а в р а л л а п а х с а ç а в-р ă н а т). Мĕншĕн тесен, ку тумтире тура çыннисем, таса та çылăхсăр турă ђурисем кăна тахăнса çÿреççĕ. Есĕ, çылăх тетĕн... Çылăха пирĕншен мар, тĕнђери ухмах та суккăр çынсемшĕн кăна шухăшласа кăларнă. Çылăх... Тура... Миçе тĕрлĕ çылăх, миçе тĕрлĕ тура çук-ши ку тĕнђере?.. Ухмахсем ĕненеççĕ... Хе-хе!.. (Т а в р а л л а п ă х а т).

ЙЕВСТАФИ. Апла пулсан, есĕ турра та, шуйттана та ĕненместĕн?

КЕОРКИ. Çук, ĕненместĕп. Неушлĕ есĕ мана çав терийех ухмах çын выранне хуратан! Пурнăçшан кирлех пулсан, епĕ нимĕнле киревсĕр ĕç умĕнђе те ђаранса тăмастăп. Çынна вĕлерессипе çын пурлăхне çаратасси маншăн пулсан квалификатси çеç. Мĕн вăл ђиркӳ? Ђиркӳ вăл—театтăр, епĕр унăн стсени çинђе выђакан талантлă арттисĕсем кăна. Хе-хе!..

ЙЕВСТАФИ. Пултаратăн иккен! Маттур!..

КЕОРКИ. Хамăр хушăра çветтуйланнине питех те килĕштерместĕп епĕ.

ЙЕВСТАФИ. Çамрăкрах пулин те, хамăр прохвеççин тĕп саккунĕсене, унăн ĕмĕртен ĕмĕре куçса пыракан йалиĕсене аван ђухлатăн иккен.

КЕОРКИ. Килĕшетĕн? Хе-хе!..

ЙЕВСТАФИ. Çăра уççине тупса йураттармалла тунă пулсан...

КЕОРКИ. Вараланас килмест?

ЙЕВСТАФИ. Канлĕ çĕртенех ват шăм-шакка хуçкалас килмест çав, Кеорки Ванифатйĕвиђ. Сана мĕ-ĕн, есĕ çамрăк, сан çулсенђе епĕ.

КЕОРКИ (*шăртланса*). Канлĕ çĕртен тетĕн? Хăвна вађђи тупăк туса хатĕрленине туймастăн?!.

ЙЕВСТАФИ. Ђăлах Çтапан ӳплине çитиђђен? Çу-ук, епĕ...

КЕОРКИ. Мĕн есĕ?

ЙЕВСТАФИ. Пултараймастăп...

КЕОРКИ (*пушшех тăвăнса*). Кала, мĕн тавас тетĕн-ха есĕ?

ЙЕВСТАФИ. Кĕçĕрех май килессĕн туйăнмаст. Хатĕрленес пулат.

КЕОРКИ. Мĕн-мĕн кирли хатĕр. Çурçĕр иртсен 2 сехет тĕлне кашнин харпăр хăй вырăнђе пулмалла. Сана çĕклеттермĕпĕр. Есĕ ăнсăртран çын мĕн пырса кĕресрен хурал тăратăн. Ăнланатăн-и?

ЙЕВСТАФИ. Пасăрах çапла каламаллађђĕ...

КЕОРКИ. Хађ Кăпăрйан патне вĕçтеретĕн, ун патенђе (*алăка хăвăрт шаккаççĕ*). Кам унта?

САСĂ. Епĕ, Кеорки атте.

КЕОРКИ. Сăпани?

САСĂ. Епĕ (*Кеорки уçса кӳртет*).

## 2-мĕш курăнни.

КЕОРКИ (*алăкран кĕрекен Сăпанийа*). Ну, мĕнле?

СĂПАНИ. Майлаштартăм.

КЕОРКИ (*савăнăçлăн*). Неушлĕ майлаштартăн?

СĂПАНИ. Ей, ара, ун çинђен ан та йумахла... Пĕлотнĕр. Хамăр ĕç мари ара. Амăшне тыттарса хăвартăм.

КЕОРКИ. Амăшне тыттарса хăвартам тетĕн? Так-так... А лешне... илсе килтĕн-и?

СĂПАНИ (*хӳмĕнђен пысăк çăра уççи кăларса тыттарат*). Акă...

КЕОРКИ (*çăра уççине çавăркаласа пăхат, кĕсйине ђикет*). Так-так... Ку аван йапала-ха... Кĕç-вĕçех тĕнђе пĕтес пирки мĕнле?

САПАНИ. Ун пирки пире вĕрентекенех пулас çук ĕнтĕ... Ăна мĕнле тумалллине...

КЕОРКИ. Çитĕ. Ăнланатăп сана (п а у с ă). Хаљ Пушмак-кассине вĕçтеретĕн... Кала, хатĕрленђђĕр вĕсем!

САПАНИ. Илтетĕп, Кеорки атте (т у х с а к а й м а т ă р а т).

КЕОРКИ. Тăхта! Касђен лаша кÿлсе Таран вара кайса килтĕр вал. Унта мĕн-мĕн тума кирлине хăйех пĕлет...

САПАНИ. Йурĕ (к а й а т).

КЕОРКИ (Й е в с т а ф и й е). Куртан-и?

ЙЕВСТАФИ. Пултаратăн иккен, шељма пуçĕ!..

КЕОРКИ. Ку таринђђен маххă панинех астумастăп та-ха... Малашне мĕн пулĕ-ха. Куç курат унта.

ЙЕВСТАФИ (п у ç н е п ă р к а л а с а). Неспа-ай... Суккăр карђăксене пиллесе пурăннипех хырăма тăрантараймастпăр пуљ...

КЕОРКИ (ш у х ă ш а к а й а т. Ђ ы л а й р а н). Вăл çапла ĕнтĕ... (х а ш т х у й х ă р с а и л е т). Лăпсăркка аркăллă тумтирсем те хÿтĕлеймн пула пуçларĕç...

ЙЕВСТАФИ. Ăнта-а, ăшши сахаллана пуçларĕ çав. Каплах пырсан...

КЕОРКИ (п а у с ă). Вăл çаплах ĕнтĕ... (п у ç н е у с с а л а р а т. С а с а р т ă к а с а и л с е) Ах, ђорт воçми!.. Итле!..

ЙЕВСТАФИ. Ну!..

КЕОРКИ. Сан çав Тарйе кинеми патне кайса килмеллех пулат пуљ. Вăл лешне систтерме ĕлкереймерĕ пулсан пета вĕт.

ЙЕВСТАФИ. Йурĕ. Никама шанса йама çук та, утас. Кайса килес пуљ...

КЕОРКИ. Кала, систермен пулсан, хăвăртрах кайса систертĕр!

ЙЕВСТАФИ. Ĕлĕк хамăра кĕлтăватђĕç, хаљ ак хамăрăн кĕлтума тивет. Кайрăм (к а й а т).

КЕОРКИ. Так-так... (п а у с ă. С а с а р т ă к). Ăм-мм!.. Хĕрле хурт-кăпшанкăсем!.. Ăçта пынă унта йăшăлтатаççĕ! Çук! Ђĕррĕн парăнмастăп! Мана ваљљи тупăк хатĕрлеттĕр пулсан, хăвăра ваљљи масар çине кайса шăтăк ђавса хатĕрлĕр! Ăм-мм!.. (Ç ÿ ç-п у ç н е т ă л п а л а т. А л ă к а ш а к к а ç ç ĕ. С а с а р т ă к х у т л а н с а л а р а т). Кам унта?!. (ш а к к а ç ç ĕ) Кам?!. (ш а к к ç ç ĕ. К е о р к и ç и л л и н е ш ă н ă ç т а р а й м а с ă р) Ăм-мм! Йавăлсем! (ç у т ă с ÿ н е т).

### 3-мĕш карттин.

Пÿрт тулашне кăтартакан стсенă. Çăл патĕнђе ипĕк-улт хĕрарăм кĕпĕртетсе тăраççĕ.

5.

ТАРЙЕ. Сасартăк аслати кĕмсĕртетсе авăтма пуçларĕ тет те вара...

1-МĔШ ХĔРАРĂМ (к ă к р и ç и н е х ĕ р е с х у р с а). Калап старике, мĕн те пулин пулатех, тесе.

ТАРЙЕ. Йур пек шурă тумтирлĕ анкĕл вĕççе анђĕ, тет.

2-МӖШ ХӖРАРӐМ (с ӑ х с ӑ х с а). Колхосу каҫку, тем курса ларас пулӗ. Ара...

1-МӖШ ХӖРАРӐМ. Мӗн ҫул каларӑм вӑл йӑкӑната!.. йахӑнне те хӑлхана ҫикесшӗн мар та...

3-МӖШ ХӖРАРӐМ. Ара, хӗнекен ҫук, хамӑрах патак кирлӗ те. Ҫав стариксене ҫараймастпӑр та...

ТАРЙЕ. Вӗҫсе анҫӗ, тет те, тӳрех ҫей ӗҫсе ларнӑ ҫӗре пырса таҫе, тет, аҫам. Виҫӗ уйӑх та виҫӗ кун хушши вутлӑ ҫӑмӑр ҫутаратӑп. Комунисене йуплӑ кӳлле путарса лартмалла пулӗ (пурте и т л е ҫ ҫ ӗ), колхосра маррисене ҫалӑнӑҫ пулӗ, вӗсем ҫӳлти патшалӑха кӗрӗҫ, тесе каларӗ, тет те, паҫах кусран ҫухалҫе, тет, аҫам. Хӑй хыҫӗнҫе ҫап-ҫутӑ хӗм сирпӗнсе пырат, тет.

4-МӖШ ХӖРАРӐМ. Суйа. (К а й м а т ӑ р а т).

1-МӖШ ХӖРАРӐМ (ҫ и л л е н с е). Суйа? Есӗр стариккуна иксӗр те пӗрешкелех. Сан старикку хыҫҫӑн кайса пулҫӗ вӑл. Сана, сана-и!

2-МӖШ ХӖРАРӐМ (4-м ӗ ш х ӗ р а р ӑ м а). Ес астарса кӳртрӗн, есӗ мар пулсан пайан кунҫҫен те ҫип-ҫиперех пуранаттӑмӑр-ха.

4-МӖШ ХӖРАРӐМ. Епӗ астарса кӳртме сире, ай хӑвӑрӑн пуҫӑрсем ҫук, пуҫсене кутамкка вырӑнне ҫакса ҫӳреместӗр пуҫ те.

ТАРЙЕ. Ҫӗр ҫинҫе алӑ ҫиҫӗ ҫул пурӑнатӑп. Кунҫул пулса суйса курман. Акӑ, ӗненместӗр пулсан, турӑ пур (с ӑ х с ӑ х а т).

4-МӖШ ХӖРАРӐМ. Сан сӑмаххуна итлеме халех йӳтемен те-ха епӗ.

1-МӖШ ХӖРАРӐМ. Мӗн пӑхса таратӑр!

3-МӖШ ХӖРАРӐМ. Ара, ҫав антихриса итлетӗр-и! И-ний, йыттурташшӗ!

2-МӖШ ХӖРАРӐМ. Намӑссар, ы-ый, кӗҫҫе нит!

ТАРЙЕ (4-м ӗ ш х ӗ р а р ӑ м а). Йӳтемен пулсан, йӳтемелле пултар. Мӗн пур нек йал ҫине килен инкек сан ҫине килтӗр. Сирӗн йаху ӗмӗр-ӗмӗр ватлӑхра асап курса вилсе пӗттӗр!

4-МӖШ ХӖРАРӐМ (Т а р й е н е). Сан ылхаву пирӗн ҫумма ҫыпҫӑнас пулсан кӗтемӗн... у-у-уу... Тахҫанах вилсе пӗтмелле.

1-МӖШ ХӖРАРӐМ (ҫ у п а т л а н с а). И-и-и, сана-и, сана култарас пур та, старик ҫӑкрине те ҫӗртес мар! (4-м ӗ ш х ӗ р а р а м п а т н е л л е ҫ ы в х а р с а). Мӗн пӑхса таратар, тытар!

3-МӖШ ХӖРАРӐМ. Ара, ҫав аҫаҫапманскере хӗрхенеттӗри?!.

4-МӖШ ХӖРАРӐМ. Текӗнсе пӑх-ха.

2-МӖШ ХӖРАРӐМ. Есӗ хӑратман-и? Ак сана! (4-м ӗ ш х ӗ р а р ӑ м а п и т ӗ н ҫ е н л а ҫ л а т т а р с а с у р а т).

3-МӖШ ХӖРАРӐМ. Ара, ҫав антихриса мӑшкӑлатаратар-и!.. И-ний, йыттурташшӗ!.. Тытӑр! (4-м ӗ ш х ӗ р а р ӑ м п у ҫ ӗ н ҫ и т у т а р а с ӳ с е и л с е ҫ ӗ р е п а р а х с а т а п т а т) Ак сана, ак, ак...

1-МӖШ ХӖРАРӐМ. Ах, суҫка, кӗрт йытти! Есӗ пире хӑратма-и?! (4-м ӗ ш х ӗ р а р ӑ м а ҫ и в ӗ т р е н й а р с а и л е т). Сана, сана-и, и-ний!.. (п у р т е 4-м ӗ ш х ӗ р а р ӑ м ҫ у м н е с ы р а н с а х ӗ н е м е п у ҫ л а ҫ ҫ ӗ. Т а р й е ҫ а в х у ш ӑ р а т у л л и в и т р е с е н е ҫ ӗ к л е с е к и л е л л е ш ӑ в ӑ н а т).

2-МĔШ ХĔРАРĂМ (х ĕ н е н ĕ х у ш ă р а). Атăр, çăла пуçхĕрлĕ ђăмтаратпăр. Пурте умлă хыçлан шавласа (х ĕ н е н ĕ м а й). Ак сана, ак, ак! Ак сана колхос, ак сана суйа, ак сана! Ак, ак! Пăр лайăхрах, çав суђкана хĕрхенеттĕр-и! Тавай, куçне ђавса каларас! Атăр, çăла тытса йарас! (4-м ĕ ш х ĕ р а р а м а ç ă л а н и п а т н е с ĕ т ĕ р с е п ы р а ç ç ĕ).

САРТРИ САСĂ. Тимук пиђђе-е!.. Çăл кутĕнђи хĕрарăмсем вăрçă пуçласа йанă. Уртем муђи арамне ђĕп-ђĕр йун туса, вĕлерес патне çитерне-ĕ!.. Ки-ил кунта, хăвăртра-ах!..

ТИМУК САССИ. Хал-ех, пыратпăр!

(С а с ă с е н е и л т с е н п у р т е х ĕ н е м е ђ а р ă н с а п ĕ р-п ĕ р и н к у ç ĕ н ђ е н п ă х с а т ă р а ç ç ĕ. Ш а в л а н а с а с ă с е м ç ы в х а р с а х к и л е ç ç ĕ. Х ĕ р а р ă м с е м п у ш в и т р и с е н е ç ĕ к л е-ç ĕ к л е к и л е с е н е ш а в а н а п у ç л а ç ç ĕ. Ç у т ă с ӳ н е т. П ӳ р т ă ш ђ и к к и н е к ă т а р т а к а н с т с е н ă ç и н ђ е ç у т ă).

## 4-мĕш карттин.

## 6. КЕОРКИПЕ МАВРА.

МАВРА (й ă л ă н с а). Тархасшăн, турă пул, Кеорки атте, пулăш мана!..

КЕОРКИ (М а в р а н а л ă п л а н т а р с а). Ан хуйхăр, аппа... Турă хайĕн тивĕçлĕ ђурисене манмĕ...

МАВРА. Епĕ айăплă мар, Кеорки атте.

КЕОРКИ. Турă каçартăр сана (п и л л е т).

МАВРА. Вăл ман пурнăçри йулашки ĕмĕте пăђлантарасшăн... Пурнаймастап епĕ Тимуксăр!

КЕОРКИ. Хаван ывална çăлса хăварасах тетĕн пулсан, таса та аслă атте тура умĕнђе çылăхусенђен ӳкĕнес пулат.

МАВРА (й ă л а н с а). Айăпла мар епĕ, Кеорки атте.

КЕОРКИ. Хав какруна ĕмĕртсе ӳстернĕ ывăлун çылăхĕсемшĕн куççулпе йĕрекен таса турă амашне кĕлту.

МАВРА. Çĕр-çĕр хутах кĕлтăватăп, атте.

КЕОРКИ. Епенес пулат.

МАВРА. Пĕтĕм ђунтан, ђĕререн ĕненетĕп, таса атте.

КЕОРКИ. Йулашки кунсенђе ђиркӳве сахалтарах çӳретĕн.

МАВРА. Çылăхла, таса атте.

КЕОРКИ. Турă каçартăр сана. Турра кирӗвсĕр ĕççем туса хурлантаракан ывăлушăн сахал кĕлтăватан пулмалла?

МАВРА. Ах, таса атте, унан çылахĕсемшĕн асапланатăп, пулăш, тархаслатăп сана.

КЕОРКИ. Турра тархасла, вăл хăйĕн ырă кăмалĕпе лăплантарĕ сана.

МАВРА. Ах, таса атте...

КЕОРКИ. Илтетĕп, аппа.

МАВРА. Тимук ширки, ăна Капăрйан аллинђен хăтарасшăн суйа суйса çылăха кĕтĕм епĕ.

КЕОРКИ. Малалла, аппа, епĕ итлетĕп.

МАВРА. Таса атте турă умĕнҫе йăлăнатăп... Вĕсем сана сыхлаççĕ... Çынсем колхосран тухнăшăн сана айăплаççĕ вĕсем... Паҫăшкă ĕçĕ вăл, теççĕ. Кăпăрйана йалтан кăларса йарас теççĕ вĕсем...

КЕОРКИ. Камсем çинҫен калатăн çак есĕ? Ăнланмастăп.

МАВРА. Тимукпа Пракух çинҫен, таса атте.

КЕОРКИ (çӳлелле пăхса). Ей, ырă кăмăллă турă, каçарсам хăвăн çылăхлă ҫурусене.

МАВРА. Хăйсем çылăха кĕнине хăйсем те ăнланмаççĕ вĕсем...

КЕОРКИ. Ан хуйхăр, аппа, турă хăйĕн телейсĕр ҫурисемшĕн асапланса вилсе пĕлĕт çине çĕкленнĕ.

МАВРА. Каçар, таса атте, Тимук айăплă мар, пăснă ăна.

КЕОРКИ. Турра тархасла, аппа.

МАВРА. Кăпăрйан пусмăрĕнҫен хăтар, тархаслатăп сана, таса атте.

КЕОРКИ. Ывăлун çылăхĕсемшĕн Инсус Христос турра кĕлту.

МАВРА (ҫĕркуçленсе кĕтесри турра кĕлтăват). Ей, ырă кăмăллă турă, туран пĕртен пĕр таса ывăлĕ Инсус Христос... (сăхсăхат). Каçарсам пире, çылăхлă çынсене... Ман телейсĕр ывăла усалтан, пур ирсĕр ĕçрен хăтар (ӳксе пуççапат). Тархаслатăп сана, турăçăм (ӳксе сăхсăхат). Ун ăшне кĕрсе вырнаçнă усал сывлăша пĕр есĕ кăна сирме пултаратăн, турăçăм. Ман мĕн пур шанҫăкăм та сан çинҫе... Хĕрхенсем мана, ват супнăна (ӳксе пуççапат те ура çине тăрат).

КЕОРКИ. Турă каçартăр сана, аппа. Хăв маннă çылăхусемшĕн ҫиркӳве çӳресе кĕлту. Турă хăйĕн тивĕçлĕ ҫурисене нихăçан та пăрахмĕ... (Аллисене çӳлелле çĕклесе). Ей, ырă кăмăллă турă, есĕ... (алăка шаккаççĕ. Кеорки сасартăк кĕлтума ҫаранса хутланса ларат. Малтан Мавра çине, унтан йерипен алăк çине çавранса пăхат). Кам унта?

ТУЛТИ САСĂ. Епĕ, уç хăвăртрах.

КЕОРКИ (пауса). Ка-ам?

ТУЛТИ САСĂ. Ара, Кеорки Ванифатйĕвиҫ, неушлĕ палламастăн?

КЕОРКИ (саванса). А-а, Кăпăрйан...

МАВРА (хăраса). Кăпăрйан?..

КЕОРКИ (Маврана). Сан унпа тĕл пулас килмест пулсан... (пĕренеллĕ çтена çумне палăрмалла мар касса тунă алăка уçса, Маврана тĕллесе кăтартат) ак кунтан тухса кайма пултаратăн... (Мавра çăварне карса пăрахса тухма хăраса тăрат) Шикленетĕн?.. (алăка шаккаççĕ) Тăхта! (Маврана) ан хăра, аппа, ку алăка сана турă хăваҫĕ уçса паҫĕ... Вал хăйĕн ҫурисене мĕн-мĕн кирлине пĕлсе тăнине, хăвах аван куратăн ĕнтĕ. Ҫипер сывăр, аппа (алăк патнелле çавăтса пырса кăларса йарат те, алăка хупат. Сасартăк кулса йарат, çавăнтах кулма ҫаранса, Кăпăрйана уçса кӳртет). Кĕр:

2.

КĂПĂРЙАН (в а с к а в л ă н). Кеорки Ванифатйĕвиђ!

КЕОРКИ (с а с а р т а к). Мĕн?

КĂПĂРЙАН. Пĕтрĕмĕр!

КЕОРКИ. Мĕн?!. Мĕн тетĕн, есĕ?..

КĂПĂРЙАН. Сиснĕ вĕт çав шуйттансем!.. Ăм-мм!..

КЕОРКИ. Сиснĕ? Мĕн, мĕн сиснĕ?

КĂПĂРЙАН. Иртнĕ саççетанире...

КЕОРКИ (т а в ă н с а). Ăм-мм!..

КĂПĂРЙАН. Сан çинђен калаçнă, тет... (К е о р к и х ы т т ă н а х ă л т а т с а к у л с а й а р а т. К ă п ă р й а н т ĕ л ĕ н с е т ă р а т).

КЕОРКИ (к у л м а ђ а р ă н с а). Пĕлетĕп.

КĂПĂРЙАН (т ĕ л ĕ н с е). Пĕлетĕн?..

КЕОРКИ (ш у х ă ш а к а й а т. П а у с ă). Епĕ сана, мĕн те пулин урăххине пĕлтерет пуђ, тесеђђĕ... (п а у с ă. С а с а р т ă к х ă й н е-х ă й ç и р ĕ п л е т с е) Çитĕ! Ун çинђен калаçса вăхăта иртермĕпĕр. Йевстафи Соломонăвĕђ сан патра-и?

КĂПĂРЙАН. Çук, курман еп ăна.

КЕОРКИ. Йурĕ. Есĕ хатĕрленнĕ пулĕ тетĕп?

КĂПĂРЙАН. Ырана хăварпă пулсан авантарах пулмалла та...

КЕОРКИ. Ырана тетĕн? (х ы т т ă н к у л а т. Л ă п л а н с а) Апла пулсан, есĕ, вĕсем ыран Шупашкара кайма шухăш тытнине пĕлместĕн пулмалла?

КĂПĂРЙАН. Пушмак кассинђен килсе ĕлкереймесен?..

КЕОРКИ (т а т ă к л ă н). Ĕлкĕрес пулат, Кăпăрйан Матвейђђă! Унсăрăн вĕсем пире... Араслан пек тăлпаласа тăкма пултараççĕ!

КĂПĂРЙАН. Колхоса лекесђĕ-ха... Унта лексен аптăрас çукђђĕ те-ха...

КЕОРКИ. Колхоса? Ун çинђен кайран! Хаљ пĕр самант та... Кама-кама йăхăрмаллине систер! Васкас пулат! Хăвна йалтан кăларса йамалла туна, а есĕ, ырхан кĕсре пек ђăхăмласа тăратăн!.. Ăм-мм!..

КĂПĂРЙАН (к у ç п у ç н е ђ а р с а). Мĕ-ĕн?.. Кăларса йараççĕ тетĕн?!

КЕОРКИ. Çапла. Ун çинђен ман алăра çителĕклĕ сведенисем пур. Ну, çитĕ! Вĕçтер! Хăтăласси кĕçĕрхи каçран килет.

КĂПĂРЙАН (п а у с ă. Х ы т ă п ă л х а н а т. Х ă й н е х ă й ç и р ĕ п л е т е т. Ђ ы л а й р а н ç и л л и н е ш ă н ă ç т а р а й м а с ă р у р с а ç ÿ ç н у ç н е т ă л п а л а м а п у ç л а т). Ăм-мм... Кĕлмĕç ратти-и!..

Ђ а р ш а в.

## 3-МĔШ ПАЙĔ.

### 1-мĕш карттин.

Колхосăн ампарĕ умĕнђе. Каç. Уйăх çутти. Шăп. Ђылайран хуралçă шаккаса çывхарни илтĕнет. Хуралçă стенă урлă виç-тăват хут кайлă-майлă утса тухат. Ампар умне ларса ђĕлĕмне ђĕртет.

Ҫамрӑксем купӑс каласа йурлани илтӗнет. Йурланӑ сасӑсем малтан ҫывхарсах пыраҫҫӗ, унтан йӑвашланнӑ ҫемӗп йӑвашланса ниҫете кайса шӑпланаҫҫӗ.

1.

ХУРАЛҪӐ (ђылайран анасласа илет). Ёлӗкхи мар ҫав... Епӗр Йаппуң вӑрҫине кайнӑ ђухне... Салтак ађисем йурланине илтсен, пӗтӗм ӑшђик пӑтранса килеђђӗ. Хурланђӑклӑ йурлађђӗҫ виђух. Ирӗксӗрех йӗрсе йараттӑн... Ех, самана, самана... (анаслат). Хамӑр та ватӑлтӑмӑр, самани те улшӑнђӗ... Ҫамрӑксем ҫине пахатӑп-пӑхатӑп та, ватӑ пулин те, тепӗр хут ҫамрӑкланас килет (анаслаcа тӗлӗрсе кайат. Ђылайран Тимук кӗрет).

2.

ТИМУК (хуралҫӑ тӗлӗрсе ларнипе асӑрхаса). Ыйхӑларӑн? (хуралҫӑ ђӗнмест) Ай, ҫывӑратӑн ҫак есӗ? (ђӗнмест) Илле муђи! (хуралҫӑна лӑкат) Илле муђи!..

ХУРАЛҪӐ (сасартӑк хӑраса). А?! Кам, кам унта?!

ТИМУК. Ҫывӑратӑн?

ХУРАЛҪӐ (Тимук ҫине тинкерсе пӑхат. Палласа). А-а, Тимахви Ҫтаппанђ!..

ТИМУК. Ҫывӑратӑн?

ХУРАЛҪӐ. Ара, ҫывӑрассине ҫывӑрсах кайман та-ха... Кӑшт ҫеҫ тӗлӗрнӗ пек пулнӑ... Ҫамрӑксем йурланине итлесе ларатгӑм та.

ТИМУК. Асту, Илле муђи, ку таринђен ҫухатман шанђӑкна ан ҫухат.

ХУРАЛҪӐ. Ҫӗр айне кӗриђен шанђӑкран тухас марђђӗ те-ха...

ТИМУК. Тӗплӗ пулин санша́н та колхосшӑн та аван. Сана шанатпӑр. А есӗ...

ХУРАЛҪӐ. Ҫаплах пулмасӑр ара, ҫаплах, Тимахви Ҫтаппанђ... Шанђӑклах пуласђӗ-ха...

ТИМУК. Апла еппин... Ҫывӑрман тетӗн?

ХУРАЛҪӐ. Ҫывӑрассипе ҫывӑрсах кайманђђӗ те-ха...

ТИМУК (шухӑшша кайат). Так, та-ак... (паусӑ). Аван мар, Илле муђи... Ҫывӑрман тетӗн, тунатӑн... Ват ҫынна апла тупи килӗшӳллех мар пулӗ тетӗп епӗ?

ХУРАЛҪӐ. Пулнӑ йапалапа ма тунас, Тимахви Ҫтаппанђ... Епӗ...

ТИМУК. Ҫук, сапа кӳрентерес шухӑшпа мар епӗ, Илле муђи. Есӗ хӑв нурнӑҫӑнта ђылай куркаланӑ ҫын... Хурапа шурра та пайтах тӳскеленӗ. Пӗлетӗн... Анђах пӗлнипе кӑна сахал. Сисӳ кирлӗ. Класлӑ сисӳ кирлӗ. Илле муђи!

ХУРАЛҪӐ. Вӑл ҫапли ҫаплах ӗнтӗ...

ТИМУК. Ташмансем вӗсем, санна калаҫнӑ ђухне пыл та ҫу, сап хыҫӑнта...Шалӗсене шатӑртаттараҫҫӗ. Темӗн те пӗр каласа ылханаҫҫӗ. Епӗр ват ҫавна сисме вӗренсе ҫитеймен... Хӑшпӗр ђухне ҫын ҫине ҫын пек пӑхас йала та пур пирӗн. Шанатпӑр. Ытлашшимех шанатпӑр, Илле муђи. Ҫавӑнпа лӑпкӑн, нимӗн пӑлханмасӑр

тӗлӗрме те пултаратпӑр. Фронтра ҫухне, непоҫ, есӗ те ҫакнашкал тӗлӗрсе ларман?

ХУРАЛҪӐ. Ара, унтипе ӑҫтан танаштаран... Унта кӑшт кӑна ҫӑварна картӑн тӑк вара...

ТИМУК. Вӑт ҫав, танаштарма пӗлменни пӗтерет те ӗнтӗ пире... (п а у с ӑ).

ХУРАЛҪӐ. Ҫип-ҫипер кӑшӑртатса пурӑнна хушӑрах ниме хте пулмӗ-ха. Ку таринҫҫен хамӑр йал хушшинҫе апла-капла пулнӑ тешпе илтмен те-ха...

ТИМУК. Вал ҫапла. Апҫах усал тӑвас текен етем сана ҫапла тӑватпӑр-ха тесе, килсе йевитлемеиннпе хӑвах аван пӗлетӗн есӗ. Сыхланни кирлӗ, Илле муҫи. Сыхланни вал хамӑршӑнах аван.

ХУРАЛҪӐ. Есӗ, Тимахви Ҫтаппанҫ, маншӑн пулсан ан та шухӑшла. Мана есӗ ху пӗлетӗн. Хуралне те енӗ кӑҫал тин тӑман, куркалана. Теплерен тем пулсан, ҫерренех парӑпас ҫук.

ТИМУК. Шанасси мӗнӗ ҫинҫен калаҫма кирлӗ мар, Илле муҫи. Ахалҫрен мар ку таранҫҫен есӗ шанҫӑклӑ ӗҫленӗ, сапа премиленӗ те. Есӗ апла-капла калаҫнӑшӑн ҫиленме ан шухӑшла тата. Епӗ ахалҫ кӑна, йулташла ҫеҫ.

ХУРАЛҪӐ. У-у-у, пур каланӑшӑн та ҫиленес пулсан. ҫилӗ те ҫитес ҫук. Ҫиленес марҫҫӗ-ха.

ТИМУК. Апла пулсан йурат хӑт.

ХУРАЛҪӐ. Ҫилленсе иртерсе йанӑ мари ара...

ТИМУК. Йурӗ еппин, Илле муҫи. Епӗр пайан пуху турӑмӑр та... Ырап хӗрлӗ опосна тыр лемҫе кайас тетпӗр-ха. Иртсе кайнӑ май кӗрсе пӑхас, килсе калас, терӗм тата...

ХУРАЛҪӐ. Мӗн йатламалли пур ара, килсе калани аван-ха вӑл... Ҫитмепне иккӗн аваптарах, вӑхӑт иртни сисӗнмест. Атту пӗҫҫен ларатӑн-ларатӑн, ни калаҫма... Латнӑ вӗренне те, пырат. Ма васкасах тата, лармалаҫҫӗ.

ТИМУК. Ырап кӑвак ҫутӑлах тухса кайас терӗҫ те... Иртерех тийсмелле пулат пуҫ...

ХУРАЛҪӐ. Кайасах тетӗн пулсан, кайса ҫывӑрах еппин.

ТИМУК. Ҫипер йул, Илле муҫи.

ХУРАЛҪӐ. Ҫипер кай апла пулсан. (Т и м у к т у х с а к а й а т. Х у р а л ҫ ӑ ҫ ы л а й ҫ ҫ е н л а р н ӑ х ы ҫ ҫ ӑ н ҫ ӗ л ӗ м н е к ӑ л а р с а т а н а к ҫ ы х а т). Ҫук ҫав, епӗр ҫухнехи мар... (ҫ ӗ л ӗ м н е ҫ ӗ р т е т. Й е р н п е н т ӑ р с а т у х с а к а й а т. С т с е н ӑ х ы ҫ ӗ н ҫ е т у с у р п а т а к к н н е ш а к к а н ӑ с а с и л т е н е т. В а л с а с а й а к к а л л а к а й с а к ӑ ш т ҫ е ҫ и л т ӗ н е к е н п у л н ӑ в ӑ х ӑ т р а с т с е н а ҫ и н е и к ӗ м ӗ л к е й ӑ п ш ӑ н с а к ӗ р е ҫ ҫ ӗ. Т а в р а л л а п ӑ х с а ҫ а в р ӑ н а ҫ ҫ ӗ).

## 3.

КЕОРКИ (т а в р а л л а п ӑ х с а ҫ а в р ӑ н с а а м п а р а л ӑ к ӗ п а т н е ҫ и т с е а м п а р у ҫ ҫ и н е х ы н а ш л а м а п у ҫ л а т. Ҫ а в х у ш ӑ р а х у р а л ҫ ӑ ш а к к а н ӑ с а с ҫ ы в х а р н ӑ ҫ е м ӗ н ҫ ы в х а р м а

пуçлат. Кеорки сасса итлесе тărат. Тарахса): Ăм-мм... путсĕр!

КĂПĂРЙАН (тарăхса). Утарнĕк!.. Ку тенђере пурăнма кирђем пулсан, леш тĕнђене ăсатма та ўркенсех тăмăпăр!..

КЕОРКИ (шакканă сас çывхарсах пынине илтсе). Ăм-мм!.. Кĕлмĕç!.. (ампар умĕнђен сиксе анат. Кăпăрйана). Хатĕрлен!

КĂПĂРЙАН. Ан кулђан... Пирĕн алла лекеен, вĕçерĕнеймĕ (сасă çывхарса çитнине кура, тухаççĕ).

4

ХУРАЛÇĂ (кĕрет. Шаккама ђарăнса унђђенхи вырăна пырса ларса тапак хутаççине кăларат). Ех, самана, самана... Ĕлĕк тырра Кăпăрйансен ампарĕсенĕ тултараттăмăр. Укçи пулмасан та, ме, ил тархасшăн, кĕтмеллех кайса пана. Кашт кăна çўплĕ пулсассăн, тиркеђђе тата шелма.... Хађ ак, хĕрлĕ опос... Хамăршăн тăрăшакан Совета леçсе паратпăр... (анаслат. Çав хушăра стсенă çине Кăпăрйанпа Кеорки умлă-х ыçлăн йăпшăнса тухаççĕ).

5

ХУРАЛÇĂ (Кеоркипе Кăпăрйана асăрхамасăр анаслат. Ура çине тăрса тавралла пăхкаласа çавранат. Кеоркипе Кăпăрйан ампар çумне çынçăнса тăраççĕ. Хуралçă вĕсене асăрхаса кăнт хытса тăрат. Ђылайран хăйне хăй çирĕплетсе). Кам унта? (лешсем ђĕнменнине кура, кайалла çаврăна-çаврăна пăхса тухса кайма тарат. Ђĕтрекен сассипе) Кам унта? Караву-у!.. (Çав хушăра Кеорки хавăрт сиксе тухса, хуралçăна пусса антарса пăвма тытăнат. Тĕрмешеççĕ. Кăпăрйан сиксе тухса, хуралçăна çĕçĕпе çурăменђен лартат. Хуралçă йулашки хут, тăвăнса тухакан сассипе) А-а-айй!.. (шăпланат).

КЕОРКИ (хуралçă вилнĕ иккенне тавçăрса, çĕре лăнк йарса вырттарат). Сволăђ!..

КĂПĂРЙАН (мăшкăласа). Утарнĕк!.. Ха-ха-ха-ха!..

КЕОРКИ. Кунашкал ват супнана вĕлерсе алла варалама та тăмаст те. Ну латнă уш, ђорт с ним!.. Тыт! (иккĕн тытса сĕтĕрсе тухса кайаççĕ. Стсенă çинђе пĕр самантлаха шăп. Кăшт тăрсан каллех кĕреççĕ).

КЕОРКИ (ампар умне сиксе хапарса ампар уççине уçат).

КĂПĂРЙАН (пĕрмайах тавралла пăхкаласа тăрат). Пулђĕ-и?

КЕОРКИ. Пулђĕ. Систер!

КĂПĂРЙАН (хуралçă шакăрђине илсе виçĕ хутђен шакăртаттарат. Кеорки вăл хушăра ампар алăкне

уçат. Кăшт тăрсан стсенă çине Йевстафи, Сăпани, тата 4 арçын кĕреççĕ).

6

КЕОРКИ. Йевстафи Соломонăвĕђ, есĕ тăкăрлăк вĕçперех кайса тăратăн. Асту, çын мĕн килнине асăрхасан, систерме тăраш! Уйхапхи йенелле каймасан та йурат (Йевстафи тухса кайат. Ыттисене). Есĕр хăвăртрах тийеме пуçлăр. Пирвайхи лавне ђăлах Çтапан анкартине, смотри! (пурте, Сăпанисĕр пуçне ампара кĕрсе çухалаççĕ. Çутă сўнет).

**2-мĕш карттин.**

Ўплене кăтартакан стсенă çинђе çутă. Стсенă çинђе шăп. Таçта инçетре йытă вĕрнĕ сас илтĕнет. Ђылайран стсенă çине Капăрйан йăпшăнса кĕрет.

1.

КАПĂРЙАН (Ўпле алăкĕ патне çитсе тăрат. Тавралла пăхса çаврăннă хыççăн ўплене асăрханса кĕрет. Тухат. Çиллине шăнăçтараймасăр). Ăм-мм!.. Сана, сана-и!.. Пĕтĕм йал халăхĕ уменђе намăслантарам!.. (Тухса кайат. Кăшт тăрсан Кăпăрйан, тата 3—4 çын тулли михĕсем çĕклесе кĕреççĕ).

2.

КАПĂРЙАН (михĕсем çĕклесе кĕрекенсене). Лайăхрах, арпа ăшнерех палăрмалла мар пытарăр!

1-МĔШ ВĂРĂ. Ан кулђан, каламасăр пĕлетпĕр!

2-МĔШ ВĂРĂ. Ыран ирхине ухтарма килекеннисем тупаймасан?

КАПĂРЙАН (ўплене кĕрсе кайнă вăрăсене). Ниђђево, туптарăпăр!.. (вăрăсем ўплерен михĕсене пытарса тухаççĕ). Тепĕр лавне пушатăр та; ыттине хăвăра вађђи, ĕçленĕшĕн... (вăрăсем туха-туха кайаççĕ. Çав хушăра тапхăр-тапхăр аслати авăтма пуçлат. Кăпăрйан пăлханмасăр). Аслати?.. Кĕр вăрăм та ăшă пулат пулмалла... (каллех аслат авăтат. Кăпăрйан хыттăн ахăлтатса кулма пăхат, йĕрĕнсе). Ан çунатлан, Тимахви Çтапанђ!.. Хăлат темĕн ле çўле вĕçсе улăхма пултарат пулин те, ăста ухатниксем ђасах персе антараççĕ ăна... Мавра маркăмăш ĕçтерсе вĕлерме хăйаймаст пулсан, сана çăлатăп тесе, таса атте турра кĕлтуса ухмахланнипех иртерсе йарсан... Вĕçерĕнеймĕн!.. (аслати авăтат). Ăм-мм!.. Хĕрлĕ онос!.. Совета çăкăр кирлĕ... Унсăрăн çĕнĕ хапрăк-савăтсем пулаймаççĕ? Унсăрăн колхоса вађђи машшинсем тăваймаççĕ... (аслати авăтат). Çук, çук!.. Памастăп! Хам та, çынсене те пĕр пĕрђĕ партармастăп!.. (сасартăк ђарăнса тăрат. Таçта инçетре трактăр сасси илтĕнет. Куç-пуçне ђаркаласа кайалла ђакма пуç-

ҫат). Трактăр?.. (хыттăн) трактăр!!! (ҫиллине шанăҫтараймасăр) ăм-мм!.. (ҫӳҫ-пуҫне тăлпаласа). Памастăп!.. (хыттăн ахăлтатса кулса йарат. Ҫав хушăра вăрăсем михĕсене ҫĕклесе кĕреҫҫĕ). Хăвартрах, хăвăртрах!..

Ђаршав.

### 4-МĔШ ПАЙĔ.

Стсенă 2 пайа уйăрлат. 1-мĕш стсенă ампар умне кăтартаканни. 2-мĕш Тимуксен пӳртĕнђе.

#### 1-мĕш карттин.

Ампар умне кăтартакан стсенă. Хĕвел хĕрелсе тухнă вăхăт. Ђылайран стсенă хыҫĕнђе урапа сасписем умлă-хыҫлăнах ҫывхарса ыни, ҫынсем шавлени илтĕне пуҫлат.

СТСЕНА ХЫҪĔНЂИ САСĂСЕМ. Тпрр-у!.. Ха-ха! Ăҫталла!.. Нуну!.. Ыы-й, пӳтсĕр!.. Хаљ, хаљ ĕнтĕ!.. Ак пĕре туртса парсан!.. Пăр, пăр лашуна!.. Тпр-р-у!.. Тпр-р-у!.. Тпр-р-у, йуплешке!.. Ха-ха! Шупашкара ҫитиђђен пăшăхтарăн ăшшĕ! Еккей-ха! Ăҫталла! Ил уруна, уруна ил! (ђылайђђен ҫуйăхкаланă хыҫҫăн стсенă ҫине Кирукпа Макҫăм херлĕ йалав ҫĕклесе кĕреҫҫĕ. Вĕсем хыҫĕнђен комсомолĕссем, колхоҫнĕксем ђылайăн кĕреҫҫĕ).

КИРУК. Ну, мĕнле, Уртем муђи, кайатпăр штолĕ?

УРТЕМ. Кайас тесех тухрăмăр та-ха... Илсе кайатăр пулсан ма кайас мар, кайас. Кирле ĕҫе тăвасах пулат ĕнтĕ... е.

МАКҪĂМ. Сана епĕр, Уртем муђи, хамăрпа пĕрле... Ђи малти лавĕ ҫине лартса кайас тетпĕр-ха.

УРТЕМ. Е-е, калаҫан кирлĕ мара! Малти ҫине есĕр хăвăр, ҫамрăксем ларăр... Мана ват ҫынна пырат, епĕ кайаракра та пыркалăпҫке...

1-МĔШ КОМС. Опос пуҫĕ тăвас ăна, опос пуҫĕ!

УРТЕМ. Ђим-ха, ђим есĕ... Тăхта! (стсенă хыҫĕнђе ҫаплах шавлаҫҫĕ).

КИРУК. Сана лартмасан кама лартас! Епĕр кайран та ларкăласа курăпăр! Ҫапла-и, йулташсем?

САСĂСЕМ. Тĕрĕс!.. Тĕрĕс! (ал ҫупаҫҫĕ).

УРТЕМ (тавралла пăхса савăнĕнат). Лармаллах пулсан, ларас пуљ ара... Кирлĕ ĕҫе тăвасах пулат ĕнтĕ... е... (пурте савăнăҫлăн ал ҫупаҫҫĕ. Купăсҫă купăсне туртса йарат. Пурте купăс кĕввипе «туллит туллит ту ҫинђе, хĕрлĕ йалав, хĕрлĕ йалав айĕнђе» йурра йурлаҫҫĕ. Йурă хĕрӳллĕрен те хĕрӳллĕнрех кĕвĕленет. Уртем хавасланне шăнăҫтараймасăр пăхса тăрат. Ђăтаймасăр вăл та йурласа йарат).

2-МĔШ КОМС. Урра, Уртем муђи!.. Урра! (каллех йурлаҫҫĕ).

1-МĔШ КОЛХОҪ. (ђылайђђен йурланине итлесе тăпа хыҫҫăн). Хĕвел йавăҫ тăрнелле кармаша пуҫларĕ, тийес пулат, ропеттă!

2-МĔШ КОЛХОÇ. Пракух килеймерĕ-ха...

ТЕПРИ. Авланни те пĕр ик ерне анҫах çитет те... Тăрса тухаймарĕ пулҫ... Аçта васкас! У-у-у халҫ, хĕвел кăнтăрлана çитиҫҫен Шупашкара мар... Таçта та çитме пулĕ.

ТЕПРИ (с а с а р т ă к). Çылăхсăр çын темерĕн çав, халап çинех килсе çитрĕ (П р а к у х к ĕ р е т).

### 2-мĕш карттин.

ПРАКУХ. У-у, кунта!.. (й у р л а м а ҫ а р ă н а ç ç ĕ). Тавай, тавай, ма ҫарăнатăр, йара парăр! Епĕ спре ытларах кĕттертĕм пулас та, ну, йурĕ ĕнтĕ, мĕн тăвас теп...

УРТЕМ. Е-е, калаçан çав кирлĕ мара, пĕлетпĕрçке!.. (к у л а ç ç ĕ). Сан та ĕнтĕ кирлĕ ĕçе тăвасах пулат (п у р т е к у л а ç ç ĕ).

ПРАКУХ. Тийетпĕр пулҫ апла пулсан?

УРТЕМ. Ху пĕлнĕ пек, ху пĕлсе ту ĕнтĕ, ара...

1-МĔШ КОЛХ. Тавай, аҫсемĕр, тийер, атту хĕвел те йăвăç тăрнелле кармаша пуçларĕ. Çитеймĕпĕр тата.

2-МĔШ КОЛХ. Кам малтан тийес тет, çаврăр лашусене.

САСĂ. Малтан Уртем пиҫҫенне йарас! Уртем пиҫҫенне (ç а в в ă х а т р а П р а к у х а м п а р а л ă к ĕ п а т н е п ы р с а а м п а р у ç ç и н е у ç а т).

УРТЕМ. Тийемелле пулсан тийĕпĕр ара. Ман лаши хатĕрех тăрат, (Уртем лаша патне тухат. Унпа пĕрле ҫылайăн тухаççĕ. Стсенă çине Кирукпа Макçăм, Пракух тата 3—4 комсомолĕс кăпă йулаççĕ. Стсенă хыçĕнҫе каллех, карттин пуçланнă ҫухнехи пекех шавлаççĕ).

ПРАКУХ (а м п а р а л ă к п е у ç с а). Илле муҫине капаçлăх пултăр-ха еппин. Пушатар (а м п а р а к ĕ р с е ç у х а л а т. К о м с о м о л ĕ с с е м к а л л е х й у р л а ç ç ĕ. У р т е м л а ш и н е а м п а р у м н е и л с е п ы р с а т ă р а т а т).

УРТЕМ. Тпр-р-у!.. (л а ш и н е). Тăхта, милай, ан васка, хулана çитсен пĕр шĕлепке сĕлĕ парăпăр ак... (ç а в в а х ă т р а П р а к у х а м п а р т а н й е р и п е н т у х с а т ă р а т т е а м п а р а л ă к ĕ у м н е ҫ а р ă н с а т а р а т. В ă л ç а в т е р и с а л х у л л ă. Х ы т ă п ă л х а н а т. У н с ă н-с ă п а ҫ ĕ ç а в т е р и а с а п л а н н и н е п а л ă р т а т. В ă л х ă й н е х ă й ç и р ĕ п л е т м е т ă р ă ш а т. У р т е м ă п а а с ă р х а м а с ă р). Ну, Пракух, халҫ ĕнтĕ ман урапа çине çирĕм пилĕк пăт тийесен те аптрас çук. У-у-у, ман милай вăл... (с а с а р т ă к а л ă к р а т ă р а к а н П р а к у х а а с ă р х а с а ç а в а р н е к а р с а п ă р а х с а к у ç п у ç н е ҫ а р к а л а с а т ă р а т. К о м с о м о л ĕ с с е м т е с а с а р т ă к й у р л а м а ҫ а р ă н с а П р а к у х к у ç ĕ н ҫ е н п ă х с а т ă р а ç ç ĕ. Х а л ă х п у х ă н а т. В ă р ă м а ҫ ă с ă л а к а н п а у с ă).

ПРАКУХ (ҫ ы л а й р а н х ă й н е х ă й ç и р ĕ п л е т м е т ă р ă ш с а). Çук, Уртем пиҫҫе... Сан лаву çине тырă тийесси пулмарĕ... (х ы т ă п ă л х а н а т).

УРТЕМ. Мĕ-ĕн?

ПРАКУХ (х ы т ă п ă л х а н с а). Пирĕн... ампара...

УРТЕМ (х ы п ă н с а). Мĕн, мĕн тетĕн есĕ?!.

ПРАКУХ. Пирӗн ампара... кӗҫӗр... ҫаратнӑ... (хытӑ пӑлханат).

УРТЕМ. Мӗн-мӗн, ҫаратнӑ тетӗн?!.

ПРАКУХ (салхуллӑн). Ҫапла, Уртем пиҫҫе...

САСӐСЕМ. Ҫаратнӑ?!. Ҫаратнӑ?!. (шавлама пуҫлаҫҫӗ).

ПРАКУХ (тарӑнӑн сывласа). Ҫаратнӑ...

УРТЕМ. Ҫук, ес ҫипер, толккӑллӑ кала! Мӗнле-ха апла, е?..

ПРАКУХ (пуҫне ҫиксе). Пӗлместӗп...

УРТЕМ. Ҫӑраҫҫийӗ ху ҫумӑнтах пулнӑ пулҫке?..

ПРАКУХ. Ҫӑраҫҫийӗ хам ҫумрах пулнӑ та-ха...

УРТЕМ (пуҫне пӑркаласа). Кунта темскер таса мар-р... (шухӑша кайса тӑрат).

ПРАКУХ. Нимӗн те пӗлместӗп...

САСӐСЕМ. А-аа, пӗлместӗп?.. Колхоса астарса кӳртсе, пӗтӗм тырра пӗр ҫӗре ҫиксе вӑрлаттарса йатӑр та, хаҫ пӗлместӗп! Ҫӑраҫҫийӗ кам аллинҫе пулнӑ? Сан алунта! А-а, есӗр пире ҫаратма-и, ах, вӑл старике, миҫе хут каланӑ ҫав колхоспа ан ҫыхлан тесе... Хаҫ ӑҫта, пӗтӗм аҫи-пӑҫипе хутаҫ ҫакса каймалла-и? А? У-у-у!.. У-у-у!.. Сирӗн пирки, сан сӑмахху хыҫҫӑн кайса пӗтрӗмӗр... Ыы-й, шуйтан, шуйтан старикки!.. Мӗнле пӗлмелле мар вӑл! Кама шаннӑ ҫепӗр. кама? Пӗлтӗр те сирӗн пиркийех тырра ҫӗртсе йатӑмӑр! Асаплантарассине турриех асаплантарат пулӗ те-ха. Хамӑр ҫылӑхсемшӗнех те-ха... У-у-у!.. У-у-у! Кирлӗ мар колхос! Ӗмӗр тӗнҫе тӑрӑх ҫапкаланса ҫӳрем те... Колхоса кӗрсе ҫылӑха кӗриҫҫен ӗмӗр ҫӗр кышласа пурнам. Тырра пуҫтарса ҫикеҫҫӗ те, пӗлмеҫҫӗ тата, йуплешке! Шуҫӑксем есӗр. Тытӑр ӑна, тытӑр! Мӗн пӑхса тӑраттӑр! (халӑх Пракух патнелле капланса пырат).

КИРУК (ампар умне сиксе ухса). Йулташсем!.. (халӑх шавлат). Йулташсем!!! (халӑх шавлат).

УРТЕМ (Кирукпа йунашар ухса тӑрса). Итлӗр, хура халӑх!.. Халӑх!!! (халӑх йерипен шӑпланма пуҫлат. Шӑпланса ҫитсен). Ну, мӗн палкаттӑр-ха е?.. Палканипе ҫухатнӑ тырра тупатпӑр теттӗр-и мӗн? Пирӗн Пракух пӗҫҫен мар, малтан Иллене ҫӗнсе килсе ыйтса пӑхас пулат. Хуралҫӑ, как никак, хуралҫах ӗнтӗ вӑл. Ак кунтах Тимук та пулӗ-ха...

САСӐСЕМ. Тавай, Тимук калатӑр еппин. Ей, Тимук! (Тимук ҫук).

УРТЕМ (пӗр комсомолӗса). Есӗ наҫҫас ҫуп-ха, ҫӗнсе кил-ха Илле муҫуна! (комсомолӗс тухса кайат).

САСӐСЕМ. Ӑҫта Тимук? Тимук ӑҫта? Ҫук вал. Килмен. А-аа, килмен?! Колхосӑн тыррине ҫаратса кайнӑ, вӑл ҫук!

САСӐСЕМ. Айтӑр ухтарма!.. Айтӑр!.. Ухтарас!.. Йалӗпех ухтарас! Айтӑр!

КИРУК. Йулташсем! (халӑх шавлат). Йулташсем!.. Илле муҫине ҫӗнсе килиҫҫен тӑхтӑр ӗнтӗ!

САСӐСЕМ. Тӑхтӑр-ха, тахтӑр! Иллерен ыйтса пӗлес! Тӑхтӑр тенӗ сире, йуплешке!.. (комсомолӗс ҫупса кӗрет те ампар

умне хăпарса тăрат. Халăх пĕр самантлăха шăпланат).

УРТЕМ. Ну. мĕнле, килет-и?

КОМСОМОЛЕЦ. Çук. Кĕçĕр киле тавăрăнман тет вăл!

САСĂСЕМ. Айтăр!.. Мен пăхса тăратăр! Айтăр ухтарма! Айтăр! (хыттăн шавласа тухса кайаççĕ).

УРТЕМ (лашине çавăрат). Ухтармасăр ара, ухтарас пулат çав. Кирлĕ ĕçе тăвасах пулат ĕнтĕ. Ей, нуккă, милай!..

Ђаршав.

**2-мĕш карттин.**

Тимуксен пӳрђĕ. Тул çутăлнă вăхăт. Уђан пĕр вырăн çипђе, Тимук тепĕр вырăн çипђе сывăраççĕ. Шăп.

Мавра штне çуса тирпейленет те турра кĕлтума тытăнат. Ђылайђђен, ђĕркуççи çине тăрса, çав тери йăлăнса кĕлтăват вăл. Унăн сăн-сăпатђĕ çав тери асапланнине палăртат. Кĕл тунă хушăрах куççулсем йухма пуçлаççĕ. Шăппăн йĕрсе кĕлтăват.

МАВРА. ...Ђунтан, пĕтĕм ђĕререн йăлăнатăп сана, шелле мана, турăçам... Касарсам. хăвăн сылăхлă ђуруна... Хамшăн мар, турăçăм... Хам ăшђике тамăкри вут пек çунтаракан телейсĕр ывăлăмшăн йăлăнатăп сана!.. Тархасшăн хăтар, турăçăм... Йăлăнатăп сана... (шăппăн йĕрсе ура çине тăрат).

Кăмака умне хуран илсе пырса лартат. Хӳмрен кĕленђе кăларат. Кĕленђе пропкине шалпа сыртса уçат те, кĕленђери шĕвеке хуран çине пушатат. Пушатнă хушăра тавралла пăхкаласа илет. Хурана вуђаха, ăшăтма çакса йарат. Темскер пăшăлтатат. Хуран çине хĕрес хурат. Çав хушăра шаккаççĕ.

МАВРА (алăк патне хыпаланса пырат). Кам унта?

ЛИСУК (тултан). Епĕ те-ха, кинемей...

МАВРА (алăк уçса). Лисукçке, килех.

1.

ЛИСУК (кĕрет). Килес терĕм-ха... (вырăн çипе пăхса). Сывăраççĕ тем? Вăй патăр!

МАВРА. Сăпаççипă! Нимех те тумаспăр та-ха... Киђах, ак кунталла, тĕпелерех иртсем-и ара.

ЛИСУК. Иртсе тăрас мар-ха. Пайан хулана тыр леçме кайас теççĕ те... Урапа сĕрме кăштах çу çук-ши тесе килтĕм те...

МАВРА. Çăвĕ пурђĕ-ха. Пĕркун Тимук хуларан илсе килнĕђĕ те, пĕтĕмпех сĕрсе пĕтмен пулас-ха. Нађђас Тимука тăратам-ха. (Тимук патне пырса) Тимук, Тимук!..

ТИМУК (куç-пуçне сăтăркаласа). А?

МАВРА. Тăрас пулат. Çынсем хулана тырăпа кайма хатĕрленеççĕ. Есĕ мĕн, ай кайас теместĕн тата?

ТИМУК (сиксе тăрса ларат, карăнса куç-пуçне уçат те Лисука курат). Лисук та килнĕçке. Епĕ асăрхаман та (çав хушăра Мавра Уђана вăратат. Уђан тăрат).

ЛИСУК. Иракух пиђђе урапа сĕрмелли çу патне йаđĕ те...

ТИМУК. Нумай çыв рнӑшӑп намӑс та ёнтӗ... Мӗн тӑвас тен. Каç тас выртса çывӑраймап та (к а р ӑ н к а л а т).

МАВРА (У л ь а н а). Паттас пӗр çӗклем шыв курсе кил-ха, аттам.

УЛЬАН. Халех, анне. (в и т р и с е н е и л с е Л и с у к а). Есӗ еп килеттен ларатӑп пуль-ха. Епӗ паттасрах.

ЛИСУК. Кайрап та курӑпӑр-ха.

УЛЬАН. Йурӗçке еппин (т у х с а к а й а т).

ТИМУК. Анне, кӗлетрен леш маç коропкине илсе кӗрха, паттас... Лисуксене маç кирлӗ, тет те. Парса йарас.

МАВРА. Пур пулсан ма парас мар ара. Парса йарас (т у х а т).

ТИМУК. Пракух питту кӗтемӗп ампар патне те тухса каре пуль, епӗ вӑт, айван çывӑрса йула пуçтачӑ.

ЛИСУК. Кайайманттӗ-ха. Апат çисе йултӗ.

ТИМУК. Темскершӗн сайрарах çӳреме пуçларӑн-ха есӗ. Тек-тек килкелесе çӳреми пултӑп. Аван мар апла, Лисук...

ЛИСУК. Хаӆ те кашни кулӗен пекех килетӗпçке. Хӑв килте пулмастӑп та...

ТИМУК (ш у х ӑ ш а к а й с а). Ку тӑруçӑн тӑнахах та килтелармап çав... Пӗркун, çӑл кутӗнте тӗл пулнӑраппа курман вӗт-ха епӗ сана (п а у с ӑ). Тел пулсан... Йутшӑнатӑн есӗ, манран... Аван мар апла, Лисук!

ЛИСУК (с а л х у л л ӑ н). Çук, уншӑн мар епӗ...

ТИМУК. Тӗлӗнтеретӗп есӗ мана. Неушлӗ ӑнланмастӑп?.. Ай ултала тетӗп?..

ЛИСУК. Хӑратӑп... Ваттисентен аван мар апла. Çылӑх...

ТИМУК. Çылӑх тетӗн? (п а у с ӑ). Çав çылӑх пӗтерет те ёнтӗ пире...

ЛИСУК. Хаӆ те нумай шухӑшлатӑп... Хам сансӑр пуçне ӑраскаллӑ пурнӑç курас çуккине те сисетӗп епӗ... Антах темскер тытса тарат мана...

ТИМУК. Итле. Хам мӗн-мӗн шухӑшлапипе, пӗтӗм таса тӗрене сан умна кӑларса хурас килет ман. Санран çӗнӗ етем, хампа алранал тытӑнса ёçлекен çывӑх етем тӑвас килет! Антах, есӗ, мана ӑнланасшӑн мар...

ЛИСУК. Пӗлетӗп. Ес мана ултаӆас çук. Антах темшӗн хӑратап...

ТИМУК. Хӑратӑн?..

ЛИСУК. Ӑштик вӑркат ман.

ТИМУК. Шанмастӑп?

ЛИСУК (с а л х у л л ӑ н). Шанасси шанатӑп... Антах, анне...

ТИМУК. Вӑрçат пуль-ха?

ЛИСУК. Санпа калаçнипе курсанах çанса пӑрахатӑп, тет. Унла çыхланантӑк, ман куç умне ан курӑнӑ пултӑр, тет.

ТИМУК. Ӑнта а... (п а у с ӑ. С а с а р т ӑ к). Е-е, уншӑп пулсан, хӑрамалли çук! Тӑхта, вӑхӑт пултӑр çеç, есӗ манпа урӑхларах калаçма пуçлӑн-ха! Сана çӗнетес мар та, çӗр çинте çӗкӑр çӗртсе те пурӑнмастӑп лутӑк.

ЛИСУК (к у л к а л а с а). Ытла темскерлеçке-ха, есӗ...

ТИМУК. Мĕнле?

ЛИСУК. Темскерле, ыттисем пек мар, расна.

ТИМУК. Аван мар-и мĕн?

ЛИСУК. Çук, есĕ... (Мавра кĕрет). Кăмăла уçатăн... Саппа каласçан...

2.

МАВРА. Нумайах йулмап та, куппа çитĕçке...

ТИМУК. Нумай мар пулсан, йешђĕкĕпех парса йарас...

МАВРА (Лисука). Йешђĕке варалат пуљ-ха, ђим ђĕркесе парса йарам (хура тутăрпа ђĕркесе Лисука парат).

ЛИСУК. Сăпаççипă. Ђипер йулăр-ха еппин. Пирĕн пата пыркаласа лар, кинеми!

МАВРА. Епĕр çитĕпĕр-ха. Хăвăр килкелесе çÿрĕр. Ђипер кай еппин.

ЛИСУК. Пырса лар, кинеми (тухса кайат).

МАВРА. Çиткелĕпĕриха...

ТИМУК. Апта-а... (паусă) Анне, апађĕ ăшăнђĕ пулсан, антарса çийесђĕ те, кайас хăвăртрах. Кĕтеççĕ пуљ.

МАВРА. Кĕтемĕн, ăшĕнђĕ те пуљ ара, паçăрах çакса йанăђђĕ... (кăмака умне пырат. Çав вăхăтра Уљан шыв çĕклесе кĕрет).

УЉАН. Тимук пиђђе, есĕ хаљ те кайман-и?

ТИМУК. Пухăннă-и?

УЉАН. Еп шыв ăсма кайнă ђухнех хуткупăс каласа йурлаççĕ. Сĕре савăк пайан урамра. Апат çисен епĕ те пырса курас тетĕп-ха.

ТИМУК. Апла пулсан, анне, антар-ха хăвăртрах... (Мавра йашка антарса сĕтел çине пырса лартат).

МАВРА (Уљана). Уљан, çăкăрпе кас та, пиђупа пĕрле ларса çийех еппин.

УЉАН (сĕтел хушшине кĕрсе ларса çăкăр касат. Тимук çав вăхăтра çÿлĕк çинђи хутсене илсе папкă ăшне тирпейлесе ђикет). Хăвăртрах, сивĕнсе кайиђђен ларса çи, пиђђе!

ТИМУК. Епĕ нађђасрах, пĕр-ик хут татăкне çеç, манман ђухне ђиксе хурам-ха. Ес мана ан пăх (Уљан апат çиме пуçлат).

УЉАН. Анне, йашки çине каштах тăвар йамаллађђĕ те.

МАВРА. Тăварне йатăм терĕм те (тăвар илсе пырса парат. Уљан тăвар йарса çийет).

ТИМУК. Ну, вот, пулђĕ те (сĕтел хушшине кĕрсе ларат. Çăкăр хуçса илсе йашкана пĕр кашăк тути патне илсе пырат. Çÿп курса). Йашка çине темскер çÿп лекнĕ (çĕçĕ вĕçĕпе илсе пăрахат).

МАВРА. Кăмрăк пуљ, ађам...

ТИМУК. Апла пулсан, епĕр иксĕмĕр ампар умне кайатпăр.

УЉАН (çиме ђарăнса). Пырса курасђĕ-ха.

ТИМУК (кашăкне тути патне илсе пынă самантра, таçта инçетре шавлама пуçланă сасă илтĕнет. Тимук

катӑкие пӑрахса). Ку мӗне пӗлтерет?.. (инҫетре шав. Тимук ђӳређе патне пырса итлесе тӑрат. Шав йерипен ҫывхарат). Мӗн ҫава пулнӑ тата? Есӗр ҫийӗр-ха, епӗ нађђас ђупса кайса килем! (пишшакие уртса тухса кайат. Уљанапа Маврата ђӳређе умне пырса тӑраҫҫӗ).

МАВРА (сӑхсӑхса). Каллех, тем инкек пулнӑ ӗнтӗ?.. Турҫырлахах...

УЉАН (шав йерипен ҫывхарат). Кунталла ҫывхараҫҫӗ курнат.

МАВРА (хӑйӑссӗн). Турҫырлах, Сӑпани калани мар пуљҫке?..

УЉАН. Нађђас ђупса кайса пӗлем-ха, анне! (тумтирне илме тарат).

МАВРА. И-и-й, йыттурташшӗ хӗрӗ, лар кутна хӗссе! Кайам парам ак епӗ сана!

УЉАН. Епӗ нађђас анђах, анне!

МАВРА. Ара, ес, ухмах-и, асла-и?

УЉАН (кӑмӑлсӑрланса). Есӗ ӗмӗрех ҫавнашкал, анне!

МАВРА (тарӑхса). Калаҫӑ сана!

УЉАН (тумтирне ҫакса). Йурӗске еппин!.. (Ђӳређе патне ырат).

МАВРА (шав ҫывхарнипе кура). Ай илтместӗн?.. Тем курса ларӑн сирӗппе... Турҫырлахах!.. (сӑхсӑхат).

УЉАН (ђӳређерен пӑхса). Пӑхха, пӑх, анне! Халӑх!

МАВРА. Ан шарла!..

УЉАН. Кунталла килеҫҫӗ! Ах, анне! (Мавра хӗрес хурат).

МАВРА (таванса). Ах, турӑҫӑмм!.. (шав ҫывхарнӑ ҫемӗн ҫывхарсах ырат. Маврапа Уљан ђылайђђен сас-ђӗв кӑлармасӑр пӑхса тӑраҫҫӗ).

УРАМРИ САСӐСЕМ (ҫывхарса ҫитерехпе татӑкланах илтӗнме пуҫлаҫҫӗ). Акӑ вӑл, акӑ!.. Тытӑр ӑна! А-а-а!!! Пире ултала-ма-и-и?!!

ТИМУК САССИ. Йултащсем! (халӑх хытӑ шавлат). Йултащсем!..

УЉАН. Ах, анне!..

УРАМРИ САСӐСЕМ. Тавай ухтарас! Малтан Тимук патӗнђе ухтарас!.. Айтӑр! Мӗн пӑхса таратӑр! Тытӑр ӑна! А-а-а-аа!!!

УЉАН (асапланса). Вӗсем пирӗн пата килеҫҫӗ, анне!.. Ах, анне!..

ТИМУК САССИ. Йултащсем!.. Итлӗр, йултащсем!..

МАВРА (асапланса). Ах, турӑҫӑм!.. Мӗн, мӗн пулђӗ-ши каплах?!.

УЉАН (ђуна тивекен сасӑпа). Ах, анне!!! (амӗш ҫумне пӑђӑртанат). Вӗсем Тимук пиђђене!.. (Лисук ђупса кӗрет).

3.

ЛИСУК (тӑвӑнса тухакан сасӑпа). Ах, Тимук!.. Пытан хӑвӑртрах!.. Вӗсем сана!.. (Тимук ҫуккипе асархат. Уљана Маврана). Пӗтрӗмӗр, пӗтрӗмӗр вӗт, Уљан!.. Ах!..

УЉАН (Лисука ҫатăрлáса тытаť). Ах, Лису-ук!.. (тайкаланаť. Шав сывхарса ҫитет). Ах, анне!

УРАМРИ САСĂСЕМ. Мĕн пăхса тăратăр, пуҫлăр ухтарма! Хăйне тытăр, хăйне! Хăйне ан тартăр!.. Ей, Йăкăнат, пиђђе!!! Тыт, мĕн пăхса тăратăн? Персе пăхтăр-ха... А-а-а-а!!!

ТИМУК САССИ. Йулташсем!..

САСĂСЕМ. Ан иттлĕр ăна! Сарайне, лупас айне ухтарăр! А-а-а-а!!! (кăшт тăрсан халăх пĕђĕккĕн шăплана пуҫлаť).

УЉАН (ђуна тивекен сасăпа). Ах, анне!.. (тайкаланаť. Асапланаť. Кĕпи тӳммине туртса татаť). Йарăр мана, йарăр!.. Ах, пăђă!

МАВРА. Ах, тор-тор, хĕрĕм, сана мĕн пулђĕ тата?!. (нимĕн тума аптраť).

УЉАН (асапланса). Ах!.. (тайкаланаť).

ЛИСУК (Уљана ђупса пырса тытаť). Уљан!.. Мĕн пулђĕ сана, Уљан?!.

УЉАН. Ах, ăшђик!.. (тайкаланаť). Пăђă мана, пăђă!.. (ђӳређене пăхса). Ах, ăшђик!. Ах, ах, анне!.. Килеҫҫĕ!.. Килеҫҫĕ!.. Тимук пиђђене...

ЛИСУК (хăраса). Уљан!..

УЉАН (ђуна тивекен сасăпа). А-а-ах!.. Йарăр мана!.. Сывлăш!.. Сывлăш!.. Сыв-л-ăш па-а... (ҫĕре тайкаланса ӳксе вилет).

МАВРА (ҫӳҫпуҫне тăлпаласа хыттăн). А-а-ах!.. Хĕрĕм!.. (ӳкет).

ЛИСУК (ђуна тивекен сассипе Уљан кĕлетки патне пырса). Уљан!.. Уљан! Ах, Уљанн!!! (хыттăн ĕсĕклесе йĕрсе йараť. Уљан ҫине выртса йĕрет. Тимук йерипен утса кĕрет).

4.

ТИМУК (нимĕне асăрхамасăр). Ан хăрăр, анне... Епĕ айăплă мар... (сасартăк урайĕнђе выртакан Уљана, Лисук йĕнине, тата амăшне асăрхаť. Пĕр самантлăха ухмаха йерне çын пек сас-ђĕв кăлармасăр пăхса тăраť. Сасартăк пуҫне икĕ аллипе пађăртаса тытса тăвăнакан сассипе). Уљан!..

ЛИСУК (Тимука асăрхаса). Ах, Тимук!..

МАВРА (ҫĕклениме тараť. Уљана курса каллех Уљан ҫине ӳпĕнсе хыттăн ĕсĕклесе йĕрсе йараť).

ТИМУК (хытă пăлханаť, хăйне ҫирĕплетме тăрăшаť. Ђылайран хытă пăлханса). Кам вĕлерђĕ ăна?..

ЛИСУК. Ах, пĕлмеҫтĕнҫке-е-е!.. (йĕрет. Тимук ђылайђђен пуҫне ђиксе сас-ђĕв кăлармасăр тăраť. Асапланаť. Хăйне хăй ҫирĕплетме тăрăшаť. Ђылайран Сăпани, тата ик-виҫĕ çын шавлакаласа кĕреҫ ҫĕ).

5.

1-МĔШ ХРЕСҪЕН (а л ă к р а н к ĕ н ĕ м а й). Айтăр, кĕрĕр, мĕн, кĕме хăраса тăратăри мĕн?!.

2-МĔШ ХРЕСҪЕН. Тĕп сакайне ухтарас! (с а с а р т ă к У ҫ а н в и л л и н е, й ĕ р е к е н М а в р а п а Л и с у к а а с ă р х а с а ш ă п л а н а ç ç ĕ. Ç ĕ л ĕ к с е н е х ы в с а т ĕ л ĕ н с е т ă р а ç ç ĕ).

ТИМУК (п у ç н е у с н ă. С а л х у л л ă н). Мана шанмастăр пулсан... Ухтарăр... (х ы т ă п ă л х а н а т).

ТУЛТИ САСĂСЕМ (п ӳ р т р е ҫ ы л а й ҫ ҫ е н с а с-ҫ ĕ в к ă л а р м а с ă р т ă н ă х ы ç ç ă н). А-а-а! Ак ăçта вăл вăрă!.. Ай тупрăр?!. Ара, хăйсем пулмасан, кам шуйттанĕ пырса вăрлат-и мĕн!.. Ӳплене пытарса тултарнă йавăл! Тытăр ăна, тытăр! Айтăр тытса ҫухас! Айтăр!.. Михне хăй çумне çакса урам тăрăх уттарса çӳресе намăслантарас! А-а-аа!!!

МИЛИТСИ САССИ. Йулташсем! Епĕ сире ăна хĕнеме ирĕк памастăп! Ан çывхарнă пултăр! (х [illegible] л ă х ш а в л а т. М и л и т с и о н е р, т а т а т е м и ç е ç ы н п ӳ р т е к ĕ р е ç ç ĕ).

6.

МИЛИТСИОНЕР (У ҫ а н а к у р с а). Ку мĕн тата?

ТИМУК (с а л х у л л ă н). Йăмăк...

МИЛИТСИОНЕР (ш у х а ш а к а й с а). Ăн-та... Пысăк никек килсе тухрĕ сан тĕллĕн (М а в р а й е р и п е н т ă р а т), Тимахви Çтапанҫ... Пайанҫҫеп пĕрле ĕçлерĕмĕр... Пайан ак ман сана, арĕслеме тиврĕ...

МАВРА (с а с а р т ă к ҫ у п а т и в е к е н с а с ă п а). Памастап! (Т и м у к а ç а т ă р л а с а т ы т а т). Йулашки, пĕртен-пĕр ывăла памастăп!!! (х ы т т ă н ĕ с ĕ к л е с е й ĕ р с е й а р а т).

Ҫ а р ш а в.

## 5-МĔШ ПАЙĔ.

Колхос кăнҫелерĕ.

Кирукпа Макçăм сĕтел хушшинҫе салхуллăн, пуçĕсене ҫиксе лараççĕ. Кирук ура çине тăрса, виç-тăватă хут кайлă-майлă утса урай варне ҫарăнса тăрат. Нимĕн те шухăшласа тупайманнишĕн хăйне-хăй тарăхса асапланат. Пуçне ик аллипе ҫăмăртат. Ҫылайран Уртем муҫи йерипен кăшăртатса кĕрет.

### 1-мĕш курăнни.

УРТЕМ. Алăкран кĕрсенех ҫаранса тăрат. Вăл çав тери салхуллă. Кирукпа Макçăм çине хурланҫăклăн пăхса тăрат. Темскер каласшăн, анҫах тытăнса тăрат. Кирукпа Макçăм ăна асăрхамаççĕ.

МАКÇАМ (й ă в ă р р ă н с ы в л а с а). Виçĕмкун сакăр сайавлениҫҫĕ... Пайан ирĕн колхосран çуррине йахăн тухаççĕ.

КИРУК (п у ç н е ç ĕ к л е м е с ĕ р). Уртем муҫи прикатнийĕ кăна пĕр çын та катăлман (п а у с ă).

УРТЕМ (й е р и п е н с ĕ т е л п а т н е у т с а п ы р с а, к ă с ă н н ҫ е н х у т к ă л а р а т. Х у т н е ҫ ĕ т р е к е н а л л и с е м п е К и р у к п а т н е л л е т ă с а т (п а у с ă). Епĕ, епĕ...

КИРУК (хăй сăмси умне илсе пынă хут татăкне асăрхаса сасартăк сиксе тăрат. Хыттăн). Каллех... Ăм-мм... (асапланат. Хăйне-хăй çирĕп летсе Уртем йенне çаврăнса, тĕлĕнсе тарат. Макçăм Кирук сассипе сиксе тăрат. Анђах Уртеме ķурсан вал та куçпуçне ђарса, хăй курнине хăй ĕненмен сын пек Уртем çине пăхса тăрат. Виççĕшĕ те пĕр-пĕрин çине ђылайђђен пăхса тăраççĕ. Салхуллăн). Неушлĕ есĕ те тухатăн...

УРТЕМ (паусă). Мĕн тăвас тен... Халах тунине тăвасах пулат ĕнтĕ...

КИРУК. Колхоса шанмастан?

УРТЕМ. Ку таринђђен шансах пурансађђе те-ха. Еçĕсем çапла май çаврăнса килђĕç те... Тухас пуђ тетĕп.

МАКÇĂМ (салхуллан). Пирĕнпе пĕрле ĕçлесшĕн мар апла есĕ?

КИРУК. Уйăрлатăн... Тимук айăплă мар пулсан, ђип-ђиперех çăлăнса тухсан?

УРТЕМ. Айăплас марђђе-ха. Çăлăнмалла пултарђђе.

КИРУК. Пурĕ пĕрех...

УРТЕМ. Хам пулсан епĕ хађ те тухас çук, карђăк аптратса çитерпĕшĕн анђах епĕ... Çынсенђен те аванах мар та.

МАКÇĂМ. Тухас тетĕн апла пулсан?

УРТЕМ. Мĕн тавас тетĕн, кирлĕ ĕçе тăвасах пулат ĕнтĕ... Тухмалла пуђ... (хутне парат).

КИРУК. Вайпа тытса ђарма пултараймастпăр. Хавăн кăмăлу.

УРТЕМ. Вал çапли çаплах ĕнтĕ...

КИРУК. Анђах сапавленнисене районран претçетаттĕл килмесĕр пăхса тухаймастпăр. Çитменнине тата çлетаваттĕл килмелле.

УРТЕМ. Тăхтамалла пулсан, тăхтас пулат вара, мĕн тăвас тен. ĕçĕ çапла май çавăрăнса килђе те... (Мавра йерипен çыхă çĕклесе кĕрет).

## 2-мĕш курăнни.

МАВРА (йерипен утса кĕрсе сăх-сăх ат). Вăй патăр.

КИРУК. Спаççипă, кинемей. Килђах, иртсе лар.

МАВРА (салхуллăн). Иртсе тăрасси-мĕнĕ. Хам темскерле, хуйăх пусса килнĕ тĕле пулса, Тимукне ни çăкăр парса йаримарăм. Кайакан пулсан парса йарас тесе килтĕм те... (кăмăлĕ пăтранат. Йĕрсе йарат).

КИРУК (Уртемпе Макçăма). Хуйхи ђанахах та пысăк ĕнтĕ... ăçтан етем кăмăлĕ ђăттăр (кăмăлĕ пăтранат. Анђах вăл хăйпе хăй çирĕп летет). Ан йĕр, кинеми, пĕлетĕп, ђанахах та тўсме йавăр ĕнтĕ сана... Анђах, мĕн тăвăн... Йĕнипе тўрлетме çук. Тимука йалтан ниçтах та илсе кайман-ха, тен, ђиперех пулĕ...

МАВРА (ђăтаймасăр йĕрсе). Ах, турăçăмм! Мĕншĕн ман тĕллĕнех çав тери пумай никек пулђĕ-ши-и? Меншĕн çав терийех хурлăх курма çуратса йанă-ши мана? Ах! (ĕсĕклесе йĕрет).

УРТЕМ (кусӗсене шывлантарса). Ӑн-та, нимӗн тума та сук... (пусне ҫиксе тӑрат. 2 кмсомолӗс кӗрессӗ).

## 3-мӗш курӑнни.

КИРУК (алӑк патне ҫупса пырса). Ну, мӗнле?

1-МӖШ КОМС. (салхуллӑн). Сук, тупаймарӑмӑр...

КИРУК. Сук?

2-МӖШ КОМС. Ситмен вырӑн та йулмарӗ пулмалла. Анҫах сӗр тӗпне путса анса кайнӑпа пӗрех... Сук.

КИРУК. Пионерсем ӑста?

1-МӖШ КОМС. Вӗсене Кӑкшӑм хӗрнелле йатӑмӑр. Кӗтемӗн тавӑрӑнассӗ те пуҫ.

КИРУК (салхуллӑн). Сук апла пулсан... (паусӑ. Сасартӑк). Сук, апла пулма пултараймаст... Пулма кирлӗ. Тупас!.. Тупас пулат, илтрӗр-и?.. (пӑлханат).

1-МӖШ КОМС. (нимӗнле мар пулса). Епӗр... епӗр пур сӗре те шырарӑмӑр.

КИРУК (тарӑхса). Суйатӑр. Шыраман есӗр. Вӑл паҫах сухалма йеп пӗрҫи мар. (Пӑлханат. Хӑйне хӑй лӑплантарса Максӑма). Максӑм, кай-ха савсемпе пӗрле... Тен, тупатӑн...

МАКСӐМ (лешсене). Айтӑр. (Тухса кайассӗ).

КИРУК (хӑйне хӑй лӑплантарса). Ухмаха йертсе парассӗ вӗсем мана... (Мавра шӑппӑн сес йӗрет. Мавра на). Тархасшӑн ан йӗр, лӑплан, кинеми (антранипе пусне ик аллипе ҫӑмӑртса пӳлӗм тӑрӑх утат).

УРТЕМ (пусне сулкаласа). Ех, апарша етемми... Асапланат кам... (хуйхӑрат. Сав вӑхӑтра тухтӑр кӗрет. Пурте сасартӑк уп сине ыйтнине палӑртакан кусӗсемпе тинкерсе пӑхса тӑрассӗ).

## 4-мӗш курӑнни.

КИРУК. Ну, мӗнле, Петр Никколайӗвиҫ, касса пӑхрӑн-и?

ТУХТӐР. Касса пӑхрӑм...

КИРУК. Неушӗлӗ паллӑ мар?

ТУХТӐР. Паллӑ... (паусӑ). Тахӑшӗ маркӑмаш ӗстерсе вӗлернӗ...

КИРУК. Маркӑмӑш?.. Ӑм-мм...

МАВРА (куспусне ҫарса). Маркӑмӑш... (паусӑ. Сасартак ҫуна тивекен сасӑпа кӑшкӑрса йарса сӗре персе анат). Аа-а-ах!..

ТУХТӐР (васкаса). Хӑвӑртрах шыв! (Кирук шыв ӑсса парат).

УРТЕМ (тӗлӗнсе). Маркӑмӑш?!. (тухтӑрпа Кирук Мавра патӗнҫе ҫӗркусленсе тӑрассӗ. Маврана ӑна кӳртессӗ).

ТУХТӐР (Мавра ал тымарне тытса пахса). Ан васка... Халех тан кӗрет ак ӑна. (Шӑп).

МАВРА (ҫылайран кусне усат. Шӑппӑн). Ӑста, ӑста енӗ?

ТУХТӐР. Кунтах-ха, кинеми. Кунта.

МАВРА (куçне уçса выртсан каллех кăшкăрса йарса ăнран кайат).

УРТЕМ. Ех, апăрша. Тўсет çав кам ђунĕ.

КИРУК. Асапланат.

ТУХТĂР (ал тымарне тытса). Тс-сс... (пурте ђылайђђен сас-ђĕв кăлармасăр тилмĕрсе тăраççĕ).

МАВРА (Ђылайран куçне уçат. Ђылайђђен пăхса выртат. Йăваш сассипе). Каçарăр мана... Хам хĕре хамах вĕлертĕм епĕ... Анђах уншăн епĕ айăплă мар. Ĕненнĕ епĕ. Мана Сăпани улталарĕ...

КИРУКПА УРТЕМ. Сăпани?!. (Тухтăр вĕсене шăплапма хушат).

МАВРА. Турамĕш куççулне ĕçтерсен сан ывăлу йусанат терĕ вăл мана. Епĕ... Тимука йашка çине йарса парам терĕм те... Улђанан çиме тиврĕ.

КИРУК (çиллине шăнăçтараймасăр). Ăм-мм... Çĕленсем!..

МАВРА (тăванса тухакан сассипе). Ах, Улђан!.. Мĕн турăм епĕ санпа... Мĕн турăм?.. (ĕсĕклесе йĕрсе йарат).

КИРУК (Уртеме). Илтрĕн-и, Уртем муђи?

УРТЕМ (тарăхса). Ах, сопакă...

КИРУК. Ăм-мм... Йавăл карђăкки.

МАВРА. Ах, Улђан... (каллех йĕрет).

КИРУК. Арлан карђăккине хăвăртрах арĕслес пулат. Епĕ вĕçтертĕм... (тумтирне васкавлăн тăханнă май). Ăм-мм... Йавă-ăлл...

(Çав самантра Илле муђи аран-аран сĕтĕрĕнсе кĕрет. Вăйсăр. Тайкаланат. Пурте пĕр самантлăха тĕлĕнсе тăраççĕ).

### 5-мĕш курăнни.

КИРУК (тайкаланакан Илле муђине пырса тытса). Илле муђи!..

ИЛЛЕ МУЂИ. Ах!.. А-а-ай... (Илле муђине выран çине илсе çавăтса пырса вырттараççĕ).

КИРУК (тухтăра). Тархасшăн, Петр Никколайĕвиђ... Сан çинђе кăна пирĕн шанђăк. (Тухтăр Илле муђи кĕпине хăвăрт касса çурат).

ТУХТĂР. Парăр-ха, ђăматан.

(Ђăматан параççĕ. Тухтăр ђăматанран метикаментсем кăларса Илле суранне çыхма пуçлат. Кирукпа Максăм ăна пулăшаççĕ. Халăх пухăннă çемĕн пухăнат. Пурте шăп тăраççĕ. Тухтăр çыхса пĕтерсен Илле муђи ал тымарне ђылайђђен хыпашлат. Хыпашлама ђарăнса).

ТУХТĂР. Пĕр сантиметр сулахайрах лекнĕ пулсан, куптан çын пулайрас çукђĕ...

КИРУК. Халђ мĕнле.

ТУХТĂР. Шанҫăк сахалрах... Ҫапах та, мӗн пулат-килет... (х алах мăкăртатма пуҫлат). Шш-шш...

ИЛЛЕ МУҪИ (ҫылайран куҫне уҫат).

ТУХТĂР. Шш-шш...

ИЛЛЕ МУҪИ (ҫӗкленме тăрат. Ыратнипе). А-а-ай!.. (ӳкет).

МАКҪĂМ (хаваслапса). Вилмен.

ТУХТĂР. Ш-ш-ш...

ИЛЛЕ МУҪИ (каллех куҫне уҫат). А-ай...

ТУХТĂР. Ан хускал, муҫи. Суранланнă вӗт ӗҫӗ.

ИЛЛЕ МУҪИ. А-ай... Спаҫҫипă сана, ырă ҫын... Ай-й... (ҫылайран). Вӗсем ампара ҫаратасшăн пулҫӗҫ... А-ай... Епӗ парăнмарăм...

КИРУК. Камсем?

ТУХТĂР. Ш-ш...

ИЛЛЕ МУҪИ. Аа-ах, вилетӗп пуҫ... Кеорки аттепе Кăпăрйанах... а-ай вӗлерҫӗҫ мана... (халăх хускалат).

ТУХТĂР. Ш-ш...

ИЛЛЕ МУҪИ (тăма хăтланса хыттăн кăшкăрса йарса вырăн ҫине ӳкет).

ТУХТĂР (хыпăнса ал тымарне тытат. Салхуллăн пуҫне ҫиксе). Ҫăтаймарӗ... Вилҫӗ... (Пурте пуҫӗсене ҫиксе тăраҫҫӗ. Мусăк «Пытару маршӗ» кӗвӗлет).

КИРУК (мусăк шăплансан). Йулташсем, Илле муҫи... карӗ... (паусă. Асапланат хăйне-хăй ҫирӗплетсе). Йулташсем... Айтăр манпа пӗрле... Пирӗнваскас пулат.

САСĂСЕМ. Айтăр! айтăр, йулташсем!..

КИРУК (аса илсе). Тăхтăр... (пурте шăпланса Кирук мӗн каласса кӗтсе тăраҫҫӗ). Анҫах урама тухсан, кам та кам сас-ҫӗв кăларат...

САСĂСЕМ. Пӗлетпӗр... Хамăрах, каламасăрах пӗлетпӗр. О-о-о... Пирӗн алла лексен йапăр-йапăрах вӗҫерӗпеймӗн. Ăм-мм... Айапсăр ҫынна шыва путарма-и?

КИРУК. Айтăр... (Шавласа тухса кайаҫҫӗ. Стсенă ҫинҫе Мавра, Уртем, тухтăр ҫеҫ йулаҫҫӗ).

УРТЕМ (ҫылайсҫенсас-ҫев кăлармасăр тăнăхыҫҫăн). А-а-аа... Тинех ăнлантам... Ҫăл кутӗнҫе ман карҫака хӗнеттерекеннисем ҫавсем пулнă иккен...

ТУХТĂР. Ҫапла ҫав, тӗттӗмлӗх, хамăр куҫ курманни пӗтерет пире, старик (паусă). Епӗр ҫас-ҫасах йумăҫ таврашӗсене, тӗпе ӗненнӗ пирки пысăк инкек куратпăр. Ҫапла ҫав, старик, ҫапла, пупсемпе пуйансем ӗҫлекен халăх тусӗ пулас ҫук...

УРТЕМ. Пирӗн ҫаваш йапалана хăй тытса пăхмасăр, куҫпа курниех ӗненмест теҫҫӗ те... Инкекӗ те ҫавăнпах пулат-и тен...

ТУХТĂР. Анҫах турра... ӗненнӗ. Ăна алăпа та тытса пăхман, куҫпа та курман. Ҫапах та ӗненнӗ, старик.

УРТЕМ (шухăша кайса). Вăл ҫапли ҫаплах ӗнтӗ... Ҫин-ҫипер пурăннă ҫухне апла-капла пуласси ҫинҫен аса та илместпӗр те вӗҫ...

Турри пирки те... кам шухăшласа пăхнă. Вăл пирĕнтен çăкăр ыйтман та.

ТУХТĂР. Çăкăрне ыйтасси ыйтман... Куçăн-кĕретĕнех, кăнтăрлах çаратнă.

УРТЕМ. Пупĕсем пирки каламастăп епĕ, вĕсен уп пек йăла пулкаланă, вĕсем ăна. Ак хаљ, Мавра аппа турă çине шанман пулсан ампарти тырă та çухалас çукђĕ. Уљан та, Илле старик те ђип-ђиперех пурăннă пулĕђђĕç. Колхос пуçлăхĕсене те вăрра тытса хурал пуртне хупас çукђĕ... Çапла çав, çапла, старик, хамăр тĕттĕмлĕх пиркипех инкек куратпăр епĕр...

УРТЕМ. Хаљ ĕнтĕ, тек-текех улталаймăн. Нет, прат, шалиш...

ТУХТĂР. Пурнăçра пулат çав вăл. Кам пĕлет, пĕлместĕп, тен, Илле старик те хăй пурăннă ђухне çапла каланă-и тен, анђах, ак асăрханайман. Улталаннă...

МАВРА (х у р л а н ђ ă к л ă н к а л а ç н и н е и т л е с е т ă н ă х ы ç-ç ă н). Ах, Уљан... Мĕн турăм епĕ санпа, мĕн турăм. (Ĕ с ĕ к л е с е й ĕ р е т).

ТУХТĂР. Шел карђăка...

УРТЕМ. Ан та кала... (п у ç н е п ă р к а л а т).

МАВРА (с а с а р т ă к ă н л а с а и л с е, а н ђ а х а с а п л а н с а). Тытăр, тытăр мана... Вĕлерĕр. Епĕ, епĕ пуриншĕн те айăплă. Епĕ хам хĕре хам вĕлертĕм!.. Хам ывăла хам тыттарса йатăм... Тытăр мана, тытăр... (К ĕ п и т ӳ м м и н е т у р т с а т а т с а х ĕ р е с к а н т р и н е й а р с а и л е т). Епĕ ĕненнĕ... Епĕ турă ђăпахах та пур пуљ тесе шухăшланă... (Х ĕ р е с к а н т р и н е ç а т ă р л а с а т ы т с а). Çук, кирлĕ мар. Кирлĕ мар мана турă! Çитĕ, пайтах куççуљ тăкрăм, пайтах пуççапрăм. Çук, кирлĕ мар, кирлĕ мар мана турă. (х ĕ р е с н е т а т с а и л с е). Ме, илĕр, илĕр кама кирлĕ (х а л ă х п а т н е л л е т ă с а т). Илместĕр, кирлĕ мар... Сире те кирлĕ мар... Ăм-мм... (у т с а й а р с а х ы т т ă н ĕ с ĕ к л е с е й ĕ м е п у ç л а т).

УРТЕМ. Ех, апăрша ђунĕ... (х ĕ р е с е п ĕ ш к ĕ н с е и л е т. Ђ ы-л а й ђ ђ е н ç а в ă р к а л а с а п ă х а т). Çак усал шуç таткишĕн асапланат вĕт, апăрша етемми. (С у р с а ы в ă т с а й а р а т).

ТУХТĂР. Çапла çав, старик, çапла... Темиçе ĕмĕр хушши асапланат... (Л и с у к х у р л а н ђ ă к л ă н у т с а к ĕ р е т).

**6-мĕш курăнни.**

ЛИСУК (п у ç н е ç ĕ к л е с е п ă х а т. П а у с ă). Ах, кинемей... (й ĕ р с е й а р а т. Çав вăхăтра инçетре шавланă сасăсем илтĕне пуçлаççĕ. Сасăсем çывхарнă çемĕн çывхарса пыраççĕ. Лисук кăнт хытса тăрат, хăраса кайалла ђакма пуçлат). Килеççĕ... килеççĕ... (х ы т т ă н). Вĕсем каллех килеççĕ, кинемей... Ак, ак çитеççĕ... çитеççĕ. (Ç ы в х а р с а ç и т с е н). Ах, кинемей... (х ы т т ă н ĕ с ĕ к л е с е й ĕ р с е й а р а т. Т у х т ă р п а У р т е м ă н а л ă п л а н т а р а ç ç ĕ. Т и м у к, П р а к у х, К и р у к, М а к-ç а м, м и л и т с и о н е р с е м, т. ыт. К е о р к и н е Й е в с т а ф и н е, т а т'а К'а п а р й а п п а С ă п а н и й а т ы т с а к ĕ р е ç ç ĕ. Х а л ă х ш а в л а т).

7-мĕш курăнни.

ТИМУК (хыттăн). Йулташсем!.. (халăх йерипен шăплланат).

МАВРА. Ах, Тимук! (ĕсĕклесе йĕрсе йарат).

ТИМУК (Маврана пырса тытат. Йăвашшăн). Лăплан, ан йĕр, анне.

МАВРА. Ах, ђăтаймастăпçке-е... (йĕрет).

ТИМУК. Есĕ мар, анне, ес айăплă мар, лăплан...

МАВРА. Каçар мана, Тимук, епĕ хам хĕре хам маркăмăш парса вĕлертĕм... Хам ывăла хам тыттарса йатăм... Тархасшăн каçар, епĕ мар, еп айăплă мар, Тимук... Мана... Сăпани улталарĕ. Маркăмăшне турамĕш куççулĕ тесе пађĕ вăл мана... Ĕненнĕ еп ăна. Ах, Тимук! (ĕсĕклесе йĕрет).

ТИМУК. Лăплан, ан йĕр, анне. Çитĕ.

МАВРА (сасартăк çӳç-пуçне тăлпаласа). Тытăр, тытăр мана... Вĕлерĕр. Епĕ, епĕ пуриншен те айăплă... Епĕ ĕненнĕ... Епĕ турра шаннă... Хаљ ак пăхăр (кăкрине уçса кăтартат). Кирлĕ мар, кирлĕ мар мана турă... Ĕненместĕр пулсан ак, ак пăхăр... Çук ман хĕрес, çук. Кирлĕ мар вăл мана, кирлĕ мар (хыттăн ĕсĕклесе йĕрсе йарат. Тимук ăна лăплантарат).

ТИМУК. Йулташсем! (çав вăхăтрах урамра хĕрарăмсен ушкăнĕ хыттăн шавласа пыни илтĕнет).

УРАМРИ САСĂСЕМ. И-и-ий, шуйттан, шуйттан старикки... Тырра вăрлаттарса йани çитмен тата... Мĕскер пур-ши, мĕн пур-ши çав колхосра... Ара, сысна пăх çиме вĕреннĕ лађах, çавăнтах тăранат. Ах, вăл Уртеме, те касмăкласа йамалла ĕнтĕ... Каланине хăлхана та ђикмест те, есреллĕ старикки. И-и-ий, йыттурташшĕ. Ара, пайанхыран тĕнђе пĕтет, вал пур çылăха пĕлмесĕр сĕтĕрĕнсе çӳрет те... И-и-й!..

(Тарйе, тата пилĕк-улт хĕрарăм шавласа пырса кĕреççĕ. Анђах Илле муђи виллине асăрхаса сăхсăхма пуçлаççĕ).

ТИМУК. Йулташсем! (Хĕрарăмсем пырса кĕпĕ самантра шавлама пуçланă халăх йерипен шăпланат). Ак сирĕн умăрта пирĕн пурнăçран тĕпппех кăларса пăрахма тивĕçлĕ кӳлепесем тăраççĕ. Пăхăр-ха вĕсем çине. Камсем вĕсем... Палларăр-и...

КУРСА ЛАРАКАНСЕМ ХУШШИНЂЕН. Камсем пулђђĕр ара, пупсемпе кулаксем, тата вĕсен йулташĕсем пулмасан...

ТЕПРИ. Конешнă çавсем.

ТИМУК. Вĕсем мĕн-мĕн тунине куртăр-и.

САСĂ. Куртăмăр. (Лисук асапланат. Кĕпи тӳммине туртса татат. Хĕрес çаккинс татса хĕресне аллине ђăмăртаса тăрат).

ТИМУК (милитсисене). Илсе кайăр.

КĂПАРЙАН (ђĕркуççи çине тăрса). Тимук, неушлĕ хĕрхенместĕн... Неушлĕ хăвăн тăван аçуна та хĕрхенместĕн...

ТИМУК (с а с а р т ă к). Мĕн, мĕн тетĕн есĕ...
КАПАРЙАН. Неушлĕ мана, хăвăн тăван аçупа хĕрхенместĕн.
ТИМУК. Мĕн, мĕн калат̆ вăл? (х а л ă х ш а в л а м а п у ç л а т̆).
МАВРА. Кăпăрйан тĕрĕс калат̆...
ТИМУК (п у ç н е ђ ă м ă р т а с а). Ăм-мм...
МАВРА. Вăл ĕç ак çапла пулнă... (ç у т ă с ў н е т. Ђ ы л а й р а н ç у т ă л а т). Хам турра ĕненнĕ пирки, çылăхран хăраса, 24 çул хушши асап куртăм епĕ. Kaçар мана, Тимук, каçарăр халăх, мĕн пур никексемшĕн айăплă еп сирĕн умăрта (й ĕ р с е й а р а т̆).
ТИМУК. Ăм-мм... (х ă й н е-х ă й ç и р ĕ п л е т с е т а т ă к л ă н). Илсе кайăр! (И л с е т у х с а к а й а ç ç ĕ. Т и м у к л ă п л а н а т̆. Л и с у к а к у р с а). Лисук!
ЛИСУК (Т и м у к ç у м н е п ы р с а п ă ђ ă р т а н а т̆). Ах, Тимук (й ĕ р е т).
ТИМУК. Ан, йĕр, ухмах... (Л и с у к й е р и н е н л ă п л а н а т̆).
ЛИСУК (Т и м у к а х ĕ р е с т ы т т а р с а). Ме, ил, кирлĕ мар вăл мана...
ТИМУК (с а в ă н ă ç л ă н). Лисук. Неушлĕ есĕ те... (Л и с у к п и г н е с а п п у н а р к и п е х у п л а с а т ă р а т̆).
УРТЕМ (К и р у к а). Ман сана сăмах каламалли пур, те килĕштеретĕн ес?
КИРУК. Кала, кала, Уртем муђи.
УРТЕМ (н и м л е м а р п у л с а). Ара, леш паçăр панă хута, кайалла тавăрса памăн-ши тетĕп те... Ыйтма та аванах мар та...
КИРУК. Парас, парас, Уртем муђи, ма парас мар.
УРТЕМ (х ĕ п ĕ р т е с е). Как нихак, кирлĕ ĕçе тăвасах пулат̆ ĕнтĕ, ропеттă.
ПУРТЕ. Тĕрĕс... Тĕрĕс, Уртем муђи. Кирлĕ ĕçе тăвасах пулат̆ ĕнтĕ.

Ђ а р ш а в.

# ЙУПТАРУСЕМ

## Н. ЙЕВТОККИМĂВ

### АКАХВУНПА КĂРМАХВУН

**Акахвун пупăн ђиркўне**
**Çынсем çўреми пулђĕç кăђухне.**
**Праçникĕ тем пек**
**ђаплă пулсан та,**
**Ђанĕ тем пек çапсан та,**
**Ваттисем анђах кĕлĕре.**
**Çамрăк-кĕрĕм нихçан çук.**
**Пуринђен ытла ђиркўре**
**Клирăс çинђе никам çук.**
**Ха!—тет пирĕн пуп—ĕçи ку?**
**Йурлассине те йурла ху,**
**Вулассине те вула,**
**Кађилпе те хăвах ут.**
**Çук! Еç нађар капла.**
**Ђим!—клирăс çине пĕреххут**
**Кăрмахвуна лартас пуљ:**
**Вăл киве, суйăг те—**
**пырат пуљ**
**—Пымасăр! Ата, йурлăпăр,**
**Суйсассăн та пĕрле суйăпăр,**
**Епĕ хатĕр атте Акахвун!—**
**Терĕ пупа кăрмахвун.**

---

### АЂИПЕ АМĂШĔ

**Апу, апу! тет Трахвин амăшне,**
**— Ха, илтмест те мур!**
**Апу тесессĕн,**
**Ма пупсем пĕркун муђи**
**Марйине**
**Пĕр май асăнђĕç**
**кунта килсессĕн,**
**Марйе, Марйе çеç пупсен**
**кĕллинђе;**
**Хăйсем Хветука йат пама**
**килнĕ,**
**Йепле вĕсем ун йатне пĕлнĕ?**
**Марйи кунта та мар, килĕнђе!**
**— Айван!—терĕ амăшĕ**
**çиллипе,**
**Çапла пупсем пирĕн кĕлĕре**
**Ырлаççĕ турамăшне, кĕввипе**
**Мухтаса йурлаççĕ таса хĕре.**
**— Турă амăшĕ хĕр пулни?**
**Ха! мур!**
**— Хĕр çав, авă кĕтесре кур,**
**Турăсăрсем çавна çухагнă...**
**— Апла пулсан,—**
**терĕ Трахвин—**
**Пирĕн Хветук та турă еппин?**
**Лукарйе аппа та**
**хĕрлех çуратнă...**
**— Ђат! терĕ амăшĕ ађана,**
**Нумай калаçмаççĕ ун çинђен!**
**Унтан ђышкипе айвана**
**Тăнк! тăнк! тугарђĕ пуçĕнђен.**

---

# ЂĂПĂРККА

Çулпала тулли лав пырат,
Ђăпăркки лаша патěнђех
йăванат:
Пěрре лаша çурăмě тăрăх
Выртат вăл тăсăлса,
Тепре—хырăм айне кěрет,
Йе турта тавра пěтěрěнет
Йе тата çул хěррине çапăнса,
Кайри кустăрмапа йунашар
Çěлен пек пырат выљаса.
Çул такăр пулсассăн—
Ђăпăрккана канлěрех
пулмалла.
Акă лупашка урлă каçмалла,
Анаталла урапа хăйех анђě,
Хăпарнă ђух лаша тăпах
ђаранђě.
Çитрě кунта мекěрленме!
Ак тата каллах тапранђě.
На—њa-њa-њa-њa!
Ђăпăркки лашана...
Çине-çине,
çурăм çине!
Вирлě-вирлě,
Тата кирлě
Хырăм урлă!..Хырăм урлă,
Çине-çине çурăм-çине.
Ай! калла анат!
Кустăрма айне ђул!..
Йурě, канмалла кăшт.
Ну, ата тата: њa-њa-ђa-њa!
Тата—тата,—тата! нумай мар,
нумай мар.
Нумай мар, нумай мар!..
вă-ăт çапла!
— Ну, спаçипех!
Латнă хам пур,
Кěрсех ларнăђђě вěт шăтăка!
тесе хуђě вара ђăпăркка.

---

Çавăн пек пуйан Микик
уйран килет,
Хăй прусна тăрăх ёмěрне
утса курман
Йал ђухăнсем ун патне
пěри те тара кěмесěр йулман
Килеле-им? терěм.
— Вара, суха пěтертěм-ха, тет.

# ПАЙАНХИ СĂН-СĂПАТ

## ЛАКЁРТЕ

### ÇЕРКЕЙЁВ ИВАН

ТНЕВНИК ТАТĂКĔ

Палаткăсене лартса, линейккăсене тасатса, йĕркене кĕртсе пĕтерсен, пумай кĕтнĕ лакĕрти пурнăç тапранса та карĕ.

4 сехет. Ир. Полкра тешурнăй çикналис хăйĕн трупипе кăшкăртса пĕтĕм лакĕре вăранма хушат. «Кăмпа» айĕнҫе тăракан тневаљнайсем.

— Рота, поднимайсь!—çуйăхма тытăнаççĕ. Ку комантă, електритсă токĕ мотторсене çавăрса йарса пĕтĕм савăтри машшинсене ĕçлеме тапратнă пек, хĕрлĕ салтаксемпе комантирсене тăвăллă ĕç кунне кĕртсе йарат. Хĕрлĕ салтак хăпăл-хапăл, питĕ хăвăрт çийелтк кĕпе-йĕмĕсене тăхăнат.

— Становись на прогулку!—кăшкăрат тневаљнăй малти линейккă çинҫе.

Таса линейккă (çул) çине çар çыпĕсем, пулĕ пек, сирпĕнсе тухаççĕ палаткăсенҫен.

— Хăвăрт! пĕр минут иртрĕ, хăвăртлантарат старшина, ытла ир тăма, ĕç ҫас тума йуратаканскер.

— На лево ша-гом марш!

— Раз, два, три...

2—3 минутран епĕр пурте тăваткал çерем çинҫе маршировкăпа уçăлса çÿретпĕр. Малтан утатпăр. Темп—120 утăм минутра. Унтан платс (тăваткал) тавралла пĕр-ик хут ҫупса çавăрнатпăр.

Кавкас ирĕ. Тăрă сывлăш. Пĕр йенҫе 40 çухрăмран Каçпи тинĕсĕнҫен хĕвел хĕрелсе тухса ирхи тĕтрепе хăвалат. Айакранах тинĕс çийĕ кĕмĕл хумсемпе çутăлса йалтăртатса выртни курăнат. Тепĕр йенҫе 50 çухрăмра çÿллĕ тусем шурă тÿписене каçăртса лараççĕ. Çакнашкал тĕнҫе илемĕнҫе пирĕн ыйăхсем питĕ хăвăрт уçăлса каяççĕ. Тăрă сывлăшра кимнаçтĕк вăййисем тăватпăр.

— Кончить прогулку!

Алпăли, супăҥ, шăл пăрашшукĕ илсе ҫупатăн тусем çинҫен шарлатса йухса анакан шыв çине çăвăнма. Кĕпе хывса, пите, кăкăра, нуçа, хăлхусене, шăлусене—пурне те çăван.

— Ах, уçă, аван—шăлăнса типĕнет палаткăра йунашар çывракан Тарасенко йулташ.

— Килте çăвăнни ес кун пек?

— Çук. Килте праçниксенҫе кăна супăҫпе. Прашшук тавраш пулман. Пурăннă упа манерлĕ.

Вăхăт çарта питĕ шутлă. Машшинăра кашни винтă хăй вырăнҫе тăнă пек, кунта кашни ĕç хăй вырĕнҫе.

— Становись на утренний осмотр!

— Винтовкăсене пăхмалла! Ĕç хушат отелени комантирĕсене комвсвот помошнĕкĕ.

Отелени пуçлăхĕ пире стройпа айаккарах илсе кайса кашни курсант патне пырса винттовккă тасипе тасамаррине, йусавпа йусавмаррине пăхма тытăнат.

— Винттăсене тасатса çитермен, ытла çăра сĕрнĕ çуне. Çу ăçта çитсрен сире? Пĕлес пулат винттовккăсене тасатма, çарта пĕр кун мар, кĕçех пĕр çул çитет есĕр килни.

Винттовккăсене пăхса пĕтерсен пирĕн атăсене, кимнаçторкăсене пăхат. Кашни тӳммене тытса пăхат. Пурте пури, вырăнта-и? Пурне тĕрĕслет.

— Отелени, çмирнă!

Отелени комантирĕ кĕлеткине çирĕп, тӳрĕ тытса всвот комантирне пулăшаканне:

— Отеленире пурте пур, винттовккăсем таса—тесе токлат тăват. Унтан вăл пире II-мĕш отеленипе винттовккăсене, пулеметсене йусав, таса тытма ăмăрту токăвăрĕ тума сĕнет. Епĕр уп сĕнӳне хапăл туса йышăнатпăр. Пурте пĕр харăс II-мĕш отеленнине çар технĕккине йусав тытма ăмăртăва ҫĕнетпĕр.

— Кончить осмотр. Становись на завтрак!

Ку команта пурте йуратаççĕ. Ҫасрах тревокă ҫухнехи пек питĕ хăвăрт, крушкă, сахăр, кашăк илеççĕ те всвотăн-всвотăн пуçтарăнса комвсвот помошнĕкĕн комантипе столовăйне кайаççĕ.

Шкул тешурнăйĕ курсантсем ваҫҫи ирхи апат кухҫăран илсе хатĕрленĕ. Вĕри, çуллă, ашлă пăрçа йашки кострӳлпе сĕтел çинҫе, мискăсем таптаса, пăхăр, пысăк ҫейникпе ҫей. Кашни кун тĕрлĕрен менӳ. Çупа, ашпа пăрçа, купăста, маккарон, вермишшел, улма, кĕрпе йашки, ҫей. Çиме тытăнсан, кашкăр аппетиҫĕпе çийетпĕр.

— Кама çăкăр çитмест?—ыйтат старшина.

— Сашшăна, кулаççĕ аҫасем. Ҫанах та Сашшă нумайрах çиме йуратат, ну, сывлăхĕ те пур çав хăйĕн, ахаҫтен мар вăл пирĕн пĕремĕш №, ҫас-ҫасах «Макçим» пулемета пĕҫҫенпе пĕрех çĕклесе çӳрет, пересс те лайăх перет. Хĕлле ҫи малтан нумайĕш аҫасене çăкăр çитмен пек туйăнатҫĕ. Кайарахпа çитсе ытлашши те пула пуçларĕ, виçи çав çавах—пĕр килокрам. Çийесси йенҫен хут те хăçан та тулăх.

— Пĕтертĕри çисе?

— Пĕтернĕ!

— Тăрăр!

Епĕр апатланса пĕтериҫҫен старшина пирĕн палаткăсенҫе вăйлă çилтăвăл пек аркатса тухнă вырăнсене.

— Ма пĕр майлă йусаман вырăнсене? Тепре курам ак, нарет парап! Çĕмĕрлет вăл. Питĕ хăвăрт вырăнсене тепĕр хут манерлĕ йусаса палаткăна йĕркепе кĕртме лекет.

Вăхăт 6. Саӈатти пуçланат̆. Пайан мĕн тăвасси паллă. Пĕлтерӳ хăми çинӡе пысăк саспаллисемпе расписсани çырса çапнă. Епер каçах отелени командирĕ пире пайан мĕн тумалли çинӡен каласа кăтартнă.

Малтанхи 2 сехет политтĕк урокĕ.

— Взвод, становись!

Епĕр кăранташ, тетрат̆ илсе ӡасрах стройа тухатпăр. Политсаӈатти вĕтлĕх вăрманта йури тунă уçă класра иртет. Класра хĕрлĕ хăмаӡ çине «Çĕр проӡӡăнĕпех политтĕк вĕрентĕвне ăнланса Пакку советĕн йалавне кĕрешсе илер!» лосăнк çырса çапнă епĕр.

Ку ернере Коминтернăн XI-мĕш пленăмĕн решенийĕсем çинӡен вĕрентет пире всвот командирĕ Лорийа, хăйулă, хастар командир. Ĕлĕк вăл ашшĕпе пĕрле Тифлисра тапак хапрăкĕнӡе ĕçленĕ. Кайарахпа вăрçă ĕçпе интересленсе, Тифлисри Пеххоттă шкулне кĕрсе вĕренсе тухнă. Хаӡ пире вĕрентет. Питĕ пысăк интереспа иртеççĕ политтĕк сехеӡĕсем.

Револ̧утси ыйтăвĕ ем, капиталисăм тĕнӡине криçĕс пăгăртат̆. Керманинӡе, Китайра револ̧утсиллĕ криçĕс паллисем ӳссе вăйланса пыраççĕ. Совет сойусĕ пĕр ӡарăнмасăр малалла кайса ӳссе пырат̆. Хĕрлĕ çарăн сотсиалисăм çĕршывне, пĕтĕм тĕнӡери пролеттариатăн утарлă прикатине сыхласа, тăшмана çапса антарма йаланах хатĕр пулмалла. Пуршуаçи вăрçа хатĕрленет. Промпартти, меншевиксен ушкăнĕ, кулаксен тусĕсем—Рамçинсем, Кромăнсем, Контратийĕвсем йаланах пире сийен кӳресшĕн çапăçаççĕ. Вăйлă класлă кĕрешӳ пырат̆. Çак вăхăтра пирĕн тата хытăрах çар ĕçне вĕренмелле... Тĕрлĕрен пăрăнӡăк шухăшсемпе вирлĕн кĕрешмелле. Мĕн пур вăйа çар ĕçне вĕренесси çине!

— Хĕрлĕ çар мĕншĕн Китайри Хĕрлĕ çара пулăшма каймаст?

— Хăçан Керманинӡе револ̧утси пулат̆?

Ыйтусем параççĕ курсантсем. Инттереслă темă. Ыйтусем нумай. Всвот командирĕ вĕсене ăнлантарса парат̆.

— Хĕрлĕ çар пĕтĕм тĕнӡери пролеттар револ̧утсишĕн тăрат̆ пулсан,епĕ апла—револ̧утси салтакĕ. Ӡасрах тăвасӡĕ вăл револ̧утсийе, тет Ентри Иванов, тĕттĕм йалтан килпĕскер, çар умĕн 5 çул кетӳ кĕтнĕскер. Иванов Ентри хĕлле хутла пĕлмесӡĕ, хаӡ лакĕре тухсан хаçатсем вула пуçларĕ, киле, колхоса, çуракине пол̧ьшевикла иртермекирли çинӡен çырусем çырма тытăнӡĕ. Нумайах пулмаст, парттине кĕӡĕ, утарнĕк пулӡĕ ĕçре.

Сехет хыççăн 10 минутлă перерыв ӡĕлĕм туртма.

— А, ну-ка, Тарасенко йул. каласа пар, кам вăл—фашиссем, сотсиал-фашиссем?

— Ăнланаймарăм, йулташ командир.

— А ну, каласа пар, йулташ Рышков.

Рышков—комсомолĕс, тăрат̆, тĕплĕн каласа парат̆.

— Йулташ Рыпиков, есё Тарасенко й-ша пукçира ил политтёк тёлёшпе вёренме.

— Пур, йулташ комантир!

— 100%-пех политтёке вёрентнине ăнланса полка малтанхи вырăна кăлармалла. Пакку совет йалавĕ пирĕн пулат. Хытăрах кĕрешер, аҕасем—тет Йăкăнат, Тонпасран килнĕ шахтор, всвотри парторк.

Ҕăнах та тытăнмаллипех тытăнса кĕрешмелле.

* * *

Нас побить, побить хотели,
Нас побить пыталися.
А мы тоже не сидели,
Того дожидалися.

— Раз, два, три!..

Аван тухат йурă. Ирхи сывлăша çурса инçене йанраса кайат хытă йурланакан йурă. Купăс каласа, йурăсем йурласа пулеметран пеме кайатпăр. Хулпуççи çинҕе пулемет станокĕ сана пусса пыпипе те сисместĕн. Пирĕн всвот пайан 3-мĕш сатаҕҕă перет пулеметран. Пемелли вырăна çитсен, пулеметсене ҕасрах вырнаçтарса лартатпăр та пеме те тытăнатпăр. Пулемет—хăрушă «пăшал». Минутра шатăртатса 600 патрун кăларса йарат. Пырса перĕнха ун айне, пуршуаçи. Пĕреçех тураса тăкат вал сана.

— Ахаҕ ан ларăр, Филаттăв линейккине вĕренĕр. Вĕренмелли пулемет патĕнҕе ĕçлĕр—ĕç парат всвот комантирĕ, ыттисем пепĕ вăхăтра.

Пемелли вырăнта ĕç вĕреме пуçлат.

— Трата-та-та-тат! шатăртатаççĕ пулеметсем.

— Ну, мĕнле тивретрĕни, Ваҕук?

— 6-ран 4-шне персе антартăм.

— А, маттур, лайăх пенĕ—ырлат отелени комантирĕ.

Лайăх персен питĕ савăнăçлă çӳрен, пысăк хаваспа ĕçлен. Питĕ хăранăҕҕĕ еп сатаҕҕăна тултараймăп тесе. Икĕ кун шутласа çӳрерĕм пайанҕен ку сатаҕҕăна лайăх пересси çинҕен. Вĕренмелли пулемет патĕнҕе темиçе вунă хут тĕллесе спуск рыҕакĕн пукăвкине (тӳммине) пусрăм. Пуçра лайăх перес, мушкăпа притсела тĕрĕс илес шут анҕах çаврăнат. Наҕар персен мĕн курапха, ак тамаша, намăса ăçта хуран? Кирук вара мĕн калĕ? Епĕр унпа ăмăртланатпăр вĕт перес йенҕен те, тистсиплинă, хĕçпăшала таса, йусав тытас йенҕен те. Епĕр иксĕмĕр лосăнк пăрахнă:

— «Степинĕса*) наҕар пеме намăс!»

Пирĕн 4-мĕш отелени 2-мĕш отеленипе сотсиалисăмлă ăмăртупа ĕçлет. 3-мĕш 1-мĕшпе.

Всвот пирĕн 2-мĕш всвотпа ăмăртланат.

*) Степин—враштăн вăрçи керойĕ. Ун йаҕĕпе пирĕн тивиçи тытăнса тăрат.

Пурте кĕрешетпĕр лайăх пересситĕн. Круçи правиттĕлстви кăçал лайăх перекен полка хаклă револͅутсиллĕ парне—хĕрлĕ йалав пама пулнă. «Лайăх персе Круçи тĕпĕçтавкомĕн хĕрлĕ йалавне алла илер!»

Ак мĕнле лосăнк хаваслантарса ҫ̌ĕнет кĕрешĕве.

Вут йĕрĕ (линия огня) çине Кирук пырса тăҫ̌ĕ.

— 4, тселик О, аварла!

— Сатершкă, йулташ командир. Руккойаткă ролик çине выртмаст.

— 2-мĕш отелени командирĕ, мĕншĕн патронсене лентта пĕр тан ҫ̌икмен?—ыйтат всвот командирĕ. Кирук йăпăр-йапăр руккойаткăна сиялесе ленттăна туртат. Пулемет хатĕр.

— Трат-та-та-тат!

— Ех, 2-мĕш отелени токăвăра пăхăнмаст. Ленттă çине пăхман пулмаляа кирлĕ таран—хумханаççĕ аҫ̌асем.

Пулемет, лайăх пăхмасан, кутăн машшинă. Ăçта перес умĕн çуне шăлса тасатмарăн шăвакан пайĕсем çинҫ̌е, ăçта салͅнĕкне ҫ̌ипер йĕркеллĕ ҫ̌ĕркемерĕн кĕпçи тавралла, ăçта патрунсене пĕр тан ҫ̌икмерĕн ленттăна, пĕтрĕп вара, машшин йе ҫ̌ăхăмлама тытăнат, йе тĕл пемест. Технĕккă.

«Полͅшевиксен технĕккăна çавăрса илмелле»—тет пире политрук ҫ̌ас-ҫ̌асах. Ҫ̌ăнах та, ку сăмахсем питĕ тĕрĕс.

Хĕрлĕ çара килсенех, пулемет илеймп креппăç пек туйанатҫ̌ĕ. Отелени командирĕ аллинҫ̌е пулемет çăри вылͅат кăна. Пирĕн алра ăçта пойевой прушинă, аçта латышкă, йе урăх йапала уткăнса кайат, йе вырăнта мар.

Пĕрре, пайанхи пек астăватăп, Шмит саватĕнҫ̌и рапоҫ̌ҫ̌исем (пирĕн шефсем) епĕр мĕнле вĕреннине тĕрĕслеме килсен, еп пулемета салатса пуçтарма тытăнтăм. Пурте лайăх, ĕç тухат ĕнтĕ—тетĕп еп хам ăшра. Утарнĕке, çăрана майлă тытмасăр, поевой всвотрап йамасăрах всаимнăй оçсене кăларма пуçларăм. Сасартăк ман латышкапа айалти спуск вăркăнса тухса пĕри çамкаран пырса çапрĕ, тепри йунашар пăхса тăракан ĕçлекен хĕр аллине çапăнҫ̌ĕ. Шефсем умĕнҫ̌е пите хĕретмелле пулҫ̌ĕ. Шеф та анҫ̌ах мар. Кăçал Кавкасри Хĕрлĕ çар Паккури нехтă пролеттариаҫ̌ĕпе сотсиалисăмлă ăмăрту токăвăрĕ тунă. Епĕр çар ĕçне утарлă вĕренме, вĕсем происвотствăра утарлă ĕçлесе промфинплана•тултарма пулнă. Пирĕн полкшкулта кашни курсант Шмит саватĕнҫ̌и уйрăм рапоҫ̌ҫ̌ипе токăвăр тунă. Мана шăп çак ĕçлекен хĕрпе токăвăр тума лекрĕ. Йурат вăл:

— Ну, ниҫ̌ево, вĕренĕнха пурне те, анҫ̌ах тейейрĕ.

«Креппăç» майĕпенех парăна пуçларĕ. Лакĕре тухнă çĕре «Максимкăна» алра тытма пĕлменни йулмарĕ пирĕн всвотра.

Халͅ ҫ̌и пысăк сатаҫ̌—лайăх пересси...

Аҫ̌асем персе пĕтерпĕ çĕре епĕр «Илйиҫ̌овккă» çырса та пĕтертĕмĕр. Унта сотсиалисăмлă ăмăрту пайан мĕнле иртни çинҫ̌ен çыртăмăр. Пирĕн отелененҫ̌е, Фоминсăр пуçне, пурте лайăх пенĕ. Пĕр

Фомин йулташ çех отелени сине хура панђă хуђĕ. Вал кăй те, отелени те пиtĕ хумханат.

— Ех, пĕтертĕн ес, Фомин, пирĕн токăвăра, ес лайăх пенĕ пулсан пирĕн 100% пулатђĕ, хаљ 86% çех...

— Ма лайăх тĕллемерĕн?

— Ма çирĕп тытмарăн пулемета аллусемпе?

Пулеметран пулĕсем сирпĕннĕ пекех сирпĕне пуçларĕç Фомин йенне ыйтусем.

— Йетинолитђнĕк вал, çавăнпа нађар перет, кулат унтан Ваççурă.

— Йулташ Ваççура, ес ху колхоса кĕнипе ан мухтан, йетинолитђнĕк мар еп пайантан, пайан пр епĕ политрука колхоса кĕме сайавлени пэтăм. Ытла ан йăслăрха, хамăн та пуç çаврăнат.

— Пукçира—терĕç пĕр харăс хĕрлĕ керойсем, лайăх перекен пулеметтђĕксем.

2-мĕш отелени 100% панă, епĕр кайра. Ĕçе тата вирлĕнрех тытăнмалла пирĕн. Правиттĕлствăн ђаплă парни—хĕрлĕ йалав пирĕн полка тивмеллех.

Çикналис саңђатти пĕтерме çикнал парат.

— Становись!

— Равняйсь, смирно!

— Лайăх пенĕшĕн Финокентăва (Йăкăната), Иванова, Васанăва (Кирука) слуппă патĕнђен тав тăватăп.

— Служим трудовому народу!

— Нађар перекенсен Фоминăн, Çитăрăвăн лайăх перекен йулташсенђен пример илсе тата ытларах ĕçлемелле.

Саңђатти пайан пĕтрĕ. Ну, хаљ йурăсемпе килэлле—хавасланtарђĕ всвот комантирĕ.

— Шагом марш! Раз, два, три! Раз, два, три!.. Епĕр пĕр харăс утса катан пир хулине:

> «Мы, степин-степинцы—орлята,
> Бойцы мы на подбор,
> За власть пролетариата
> Дадим врагу отпор!»

йурласа кĕрсе кайатпăр.

«Киле» таврăнсан, пулеметсене, винттовккăсене, кĕреçесене, противокассене тасататпăр та, 15 сехетре кăнтăр апађĕ тапранат. Ун хыççăн—«виле сехет».

Çийелти кĕпе-йĕмсене хывса пăрахса труссысемпе майккăсемпе çех йулса хĕвел айне «çунма» выртатпăр. Хытă пĕçерет Кавкас хĕвелĕ. Ак лакĕре килни нумайах пулмаст, ађасем пурте некăрсем пек çунса хуралса карĕç.

* * *

17 сехетре лакĕр каллех вăранат. Хĕрлĕ салтаксем пуçартнипе полкра капни кун утарнĕк сехеђĕ иртсе пырат. Ку сехетре хăшпĕр вĕренмелли пулеметран пеме вĕренетпĕр. План тăрăх ку уйăхра

пирĕн пулемета авăрласа 25 секунтра тĕл тума вĕренмелле. Хăш ҫух кранат перетпĕр, полевой короток илетпĕр.

Пайан полевой короток илме лекрĕ. Йĕплĕ пралук, канав, клаçĕс, пум, сапур (хӳме), карта. Пурне те ҫупса пырса çĕнмелле. Ҫи йывăрри хӳме, клаçĕс. Сан çинҫе шинел (скаткă), винттовккă, кĕреçе, противокас—ак çаксемпе сиксе каç çӳллĕ хӳме урлă, сик çӳлтен 2 ҫалăшран айала хăна та, йапалусене те ним амантмасăр. Малтанхи кунсенҫе хĕлле питĕ хăратҫĕç аҫасем çӳлтен сикме. Сапура илме—кĕлетке йăвăрҫҫĕ. Мĕнщĕнни палла: нумайĕш савăтри, колхоссенҫи топрисывнĕксем фискуҫтурă ĕçне хак паман, мăлатукпа çавасăр, кĕреçесĕр, пăҫкăсăр, кирккасăр пуçне урăх нимех те тытман. Епĕр те çавах, пухăннă çавăн йышшисем. Ак илерха Аҫошшăна, вăл—слессăр, хĕрлĕ çара килиҫҫен вăйлă фискуҫтурнĕк пулнă. Турник çинҫе вăл ик ал çине уртăнса кустăрма пек çаврнат.

Ма пулас мар кашни çамрăкăн фискуҫтурнĕк?

Хаҫ пирĕн всвотра полевой коротока пурте парăнтараççĕ. Çирĕплепетпĕр, вăйлапатпăр пулмалла. Пысăк поххотсем хыççăн та пулеметҫĕксемшĕн полевой короток ним те мар.

— «Поҫшевиксем илмен креппăç çук».

* * *

Каçпала тĕрлĕрен массăллă ĕçсем тапранаççĕ. Пĕр йăвăç айĕнҫе «арттисеем» веҫҫĕра хатĕрленеççĕ. Тепĕр çĕрте кармониссен крушокĕ поххотра марш выҫама вĕренет. Ленуколокра, клупра хаçатсем вулаççĕ. Фискуҫтурă тăваткалĕнҫе футполиссем футполла çапаççĕ, унта та кунта хĕрлĕ салтаксем, комантирсем воллей-полла выҫаççĕ. Шыва кĕрсе килсен, епĕр виççĕн роттăри «Илйиҫҫовкăна» çырма пуçларăмăр. Кирук всвот комантирĕпе шахмăтла çапăçма тытăнҫĕ. Ку вăхăтри комантирсемпе хĕрлĕ салтаксем хушшинҫе нимле уйрăм та çук. Пурте пĕр-пĕрне йулташ. Пурте ĕçлекенсем, колхоçнĕксем, ĕççыннисем. Пурин те пĕр сатаҫ—сотсиалисăм çĕршывне шанҫаклă сыхлăх парасси—ак мĕн пуçтарат вĕсене пĕр йыша.

Хĕвел йурлă тусем хыçнелле пытанат.

Каçхи ҫей. Комантирсем ыран мĕн пуласса каласа кăтартаççĕ. Линейккă урлă хĕрлĕ ленттăсем çине темиçе лосăнк кăларса çакрĕç. Пĕринҫе: «Пакку пролеттариаҫĕн темпĕсемпе ĕçлесе правиттĕлстваă парнине—хĕрлĕ йалав çаварса илер!», теприн҄е: «Империалисăм Совет сойусĕ çине вăрçă хатĕрленине хирĕç çар ĕçне хытăрах вĕренер!», «Сотсиалисăмлă ăмăртупа 30 километтăрлă поххота лайăх иртерер!» тата ытти те.

— Становись на проверку!

Пурте линейккă çине ҫупса тухса стройа тăратпăр.

Старшина всвот комантирне пулăшакансенҫен раппăртсем итлесен ҫылайҫҫен пире «йатласа» тăрат.

— Ҫелĕм йулашкисем пăрахатăр палаткăсем патне, вырăнсене лайăх пуçтармастăр. Йулашки хут калатăп. Тепрере тӳрех нарет паратăп. Вăл каланă ҫух аҫасен темĕншĕн кулас килет. Вăл тата каламалла, анҫах полк тешурнăйĕ:

— Смирно. Заря! команта парат.

Шăп тăрса итлет полк мусăк «Интернатсионал» йурланине.

— Палаткăсене!

Палаткăсенђе çурта çути. Сас. Килтен илнĕ çырусем çинђен пуплет Ентри.

— Арăм ывăл ађа çуратнă. Револђутсин лайăх салтакĕ пулат—тет вăл.

— Вăл ўсиђђен револђутси тĕнђишех туса пĕтерĕпĕр—хирĕçлет Алђошшă.

— Çутăсене сўнтерĕр. Сăмах пĕтерĕр! кăшкăрат роттă тешурнăйĕ.

Çыврасах килмест. Аса килеççĕ Райăпа иртернĕ кунсем. Пайан çыру илтĕм унтан: «Колхос пахђипђе ĕçлеме прикатире суйларĕç. Кĕркунне Пакку хулине, сан пата, колхосран куђђенеç илсе пыратăп»—тесе çырат. Мĕнле куђђенеç?—паллă мар.

Ыран 30 километтăрлă поххот.

Лакĕр çывăрат. Ыранхи кун валђђи вăй пухат. Пĕр тешурнăйсем, тневалђнăйсем, ђассовойсем, патрулђсем çеç куççене хупмасăр лакĕре сыхлаççĕ. Нимле сас-ђĕв те çук, пĕр çўллĕ тусем çинђен йухса анакан шывсем çеç шарлатса выртаççĕ.

**И. Çеркейĕв (Ухвађ).**

Кусары—Аçерпайтшан

---

# ТĔНЂЕ ВĂРÇИ КУНĔСЕМ

(МЕМУАР)

1917—18-мĕш çулсенђп алçырăвĕсем тăрăх.

## ЕЛКЕР

### I

Вунтăваттăмĕш çул.

Иҥуљ кунĕсем. Саралакан ыраш уйĕсемпе, йешĕрекеп улăхвăрмансемпе, тутлă сывлăшпа вăркăшакан хĕвеллĕ кунсем.

Çаран пуррисем утă çулма тухаççĕ. Улăхсемпе вăрман ĕшнисенђе çавасене хăйраса кăйăнклаттарни илтĕнет. Çарансенђи ђеђексем, вињкĕн çава çитсе лекнипе, уйар çанталăкăн шенкер тўпинелле йулашки хут ђалхăрса пăхса, йерипен тайăлса ўкеççĕ.

Çак вăхăтрах, хурахалăх кусĕнђен вăрттăн, пĕтĕм тĕнђери мул хуçисем ђĕртекен тĕнђе пушарĕн кăварĕ хĕрсе çитнĕ. Вăл йалкăшсах çулăм кăларма хатĕрленет. Çар штапĕсенђе сиксех ĕç вĕренĕ. Çар савăђĕсем кунĕн-çĕрĕн хыпаланса мĕлйуншар ĕççыннине пĕтермелли хĕçпăшал тавраш̆ĕ кăларса купаланă. Вилĕм кўрекеп катмар тупăсем, йĕтресем, пăшал-пулеметсем, патрон йешђĕкĕсемваскавлăн тийенсе пуйăсĕ-пуйăсĕпе тĕрлĕрен патшалăх ђиккисене турттарăннă. Кĕçех вăрçă, хăрушă империалисăм вăрçи сиксе тухмалла! Анђах та, пирĕн уй ĕçне пикĕннĕ хресђенсем ун çинђен нимĕн те сисмеççĕ-ха.

Вăхăт шăвăнат... Ыраш вырма тухаççĕ. Çивĕђ çурлапа касăлнă ыраш пайăркисем, хулпуççи урлă ваљтлетсе ўксе кĕлте пулса вырçаççĕ. Тырă выракан çемйе калаçса тăма та васкат. Апат çинĕ ђух çеç, хăмăл çине апат ђашăкки таврa ларнă çемйе, хуллен мăкăртатни илтĕнет.

Акă çамрăк мăшăр—упăшкипе арăмĕ. Вĕсем йунашар вырса пынă хушăра та çителĕклĕн калаçса савăнма йерçеймеççĕ. Хутран-ситрен çеç, кĕлте çыхнă ђух мĕн, кăшт хире-хирĕç пăхса йăлкăшаççĕ те, каллех вырма пикенеççĕ. Телейсĕр мăшăрсем! Йепле ыран-виçменех хăйсене—виç-тват çуллăха, йе ĕмĕрлĕхех уйăрса кайасса сисмеççĕ вĕсем!—Ђасрах уй ĕçĕсене пĕтерес, калаçасси-савăнасси кайран та пулĕ теççĕ вĕсем. Пурте малалла ĕмĕтленеççĕ, лайăха кĕтеççĕ.

Ик-виçĕ кун иртет. Ыраш пуссинђе кутамас çĕмелсем йăвăланаççĕ.

Сасартăк—«вăрçă!..»—тени илтĕнет. Ку усал хыпар, пĕр харăсах мĕлйун çăвартан тухнă пек илтĕнсе, пĕр самантрах пĕтĕм йалсенђе, уйри çĕмелсем хушшинђе, улăхсенђе, вăрмансенђе хайарран йантраса кайат.

Вăрçă тени илтĕнсенех, пур пек ватă салтаксене пĕтĕмпех харпăр уйес хулисене хуса карĕç. Мăн çулсем тăрăх стантсăсем йенне, пристăнђсем йенне кунран-кун, ернерен ерне çĕршерĕн-пиншерĕн ушкăнпа ват салтаксем иртеççĕ. Вăйвитти арçынсем патша прикасĕ тарăх, уй ĕçĕсене пăрахса, ађи-пăђисене хăварса, вăрçă вутĕнђе çунма тухса кайаççĕ. Йалхушши пушанат, куççуљ такăнат. Халăх куççулĕпе пĕрлех çанталăк те йĕрĕхсе, кашни кун сăмăр тăкма тытăнат.

Çамрăк арăмсем, ашшĕсĕр йулнă ађа-пăђасем: мĕнле пурнас-ши, тесе ўлеççĕ. Ваттисем: турă çилли çитрĕ пуљ, йăвăр самана килет!— тесе ахлатаççĕ.

II

Тĕнђе вăрçине пуçлакан вунтăваттăмĕш çул иртсе карĕ. Çитет 1915-мĕш çул.

Йанварĕн вăта ђислисенђе 94-мĕш çулта çуралнисене çара илеççĕ. Ку напорпа мана та, 20 çул тултарнăскерне, илсе йађĕç.

Атте-апие, вăрçă пуçлансанах унта пилĕк ывăлĕнђен икĕшне ăсатнăскерсем, мана ăсатнă ђух вилес пекех йĕрсе йулђĕç. Ăсатма пухăннă пĕлĕш-хурăнташсем макăрпипе кура, хамăн та кăмăл хуçăлђĕ.

Малтанах, вăрçă вăййин вĕренме, Пенсă кĕпĕрнин Мокшан хулине илсе карĕç.

Мокшанра пурĕ те пĕртен-пĕр касăрма çеç. Унта та туллийех тыткăна лекнĕ австрисем пурнаççĕ.

Пушă касăрма çук пирки, пире хула мешђенĕсем патне вырнаçтарђĕç. Кашни киле—2—3-шер салтак.

Епĕр çитсенех, пирĕн умран вĕрентсе хатĕрленĕ ватă салтаксене вăрçа кăларса карĕç.

Вырăсла пĕлмен, йе кăшт пĕлсен те каласма хăйман ђăваш ађисен пурнăçĕ хваттерте кансĕрђĕ. Ун пек пĕлменнисем пирĕн çурри ытла.

Халђђен ниçта та тухман, вырăс ђĕлхипе мешђен йăли-кăмăлне пĕлмен ђăвашсем хăйусăр, ђас-ђасах йутшăнса та лараççĕ. Çакна пула, хăш-пĕр мешђен майрисем ђăваш салтакĕсене пўртрен хуса кăларнисем те пулађђĕç. Кусем вара, пушă вăхăтра та хваттере кĕреймесĕр, хапха умĕнђе сĕнксе лараççĕ.

Маншăн хваттер килти пекех пулђĕ.

Кашни кунах, ирхине ир пуçласа хĕвел анса ларињђенех урамра— вăрçă вăййинђе.

Офитсерсем пирĕн пурте тин çеç йункkĕр шкулне пĕтерсе тухнă çамрăксем. Вĕсем пурте малалла çунатланакан çынсем, нумайĕш вĕçкĕн те вырăнсăр хайар. Вĕсем çирĕп тисђиплинăпа, салтаксене хытă пăрпипе çĕнĕрен çĕнĕ ђын хупса пыма ĕмĕтленеççĕ. Пирĕн рот кăмантирĕ—поручђĕк Киççељов, йаштак та вăрăм, каскăн çын, ђас-ђасах салтаксене пĕр айăпсăр хирсе çĕмĕрет, роттăна ђуптарса, çавăрттарса хăшкăлтарат. Çуррот кăмантирĕ потпоручђĕк Вйаçемски йăваш, аван çын. Офитсерсем хушшинђе ун пек лайăххи сайра, Вйаçемски хăй Отес çыннийĕ.

Свот кăмантирĕсем—упттĕрсем, пурте ватă салтакран. Вĕсем, офитсерсем курман ђух, ђас-ђасах шут тума, вăхăта ахаљ ђăсма çех йуратаççĕ. Пирĕн свотра пĕр кĕçĕн унттĕр Шурављов анђах салтаксемпе калаçма йуратмаст. Шурављов хĕрлĕ питлĕ, пĕркеленђĕк çамкаллă, пысăк уссиллĕ, йуман çуркамĕ пек йăвăр етем, пĕрмайах ўссĕр çўрет. Вăл, вăй выљаттарнă ђух йаланах уссисене шăрт пек тăратса, куçĕсене хайарлатса, сăмса виттĕр кăшкăрат, намăслă сăмахсемпе вăрçса пĕтерет. Шурављов—Сараттăв вырăсĕ.

Шурављовпа ман хушăра çакăн пек ĕç пулса тăђĕ. Пĕрре, март уйăхĕнђи тĕксĕм çанталăклă йĕпе кун, пирĕн çар склађĕсене хурал тăма каймалла пулђĕ. Епĕр пурĕ улттăн. 4-шĕ салтак, 2-шĕ «пуçлăх». Аслă «пуçлăх»—Шурављов. Унăн помошнĕкĕ—пĕр çамрăк йефрейтăр. Пыратпăр патталйун кăпђђелерĕ йеннелле. Сасартăк пире хирĕç патталјйун кăмантирĕ лашапа вĕçтерсе тухат. Вăл çитесси инçе-ха. Çапах та пирĕн «пуçлăхсем» хыпаланса ўкрĕç. Шурављов пирĕн умра, йефрейтăр хыçра. Акă Шурављов кăмантире йышăнса ирттермелли камантă парат. Камантă тăрăх манăн шăпах çул варринђи шыв çийĕпе утмалла пулђĕ. Манăн атăсем çĕтĕкђĕ. Епĕ, ĕлкĕрĕп-ха тесе, шывран пăрăнса çул хĕррипе утатăп. Çакна кура, хыçра пыракан йефрейттăр вутра çуннă пек хыпăнса кăшкăрашма пикенет: «Ваççилйĕв!» слушай команду!.. слушай!.. слушай!..»—çуйхашат вăл тапăртатса. Епĕ, йурийех ăна хирĕçтерессшĕн пулса, итлеместĕп:

— Ан кар çăварна, хăравçă!.. Ĕлкĕретпĕр!—тесе çеç хутăм çийелтен. Хам çаплах стройран ирĕк, çул хĕррипе утатăп.

Йефрейттăр пушшех çатăртатса ўкрĕ:—Итлеместĕн!?. Хоспотин оттељоннăй! Ваççилйĕв итлемест... хирĕç калаçат,—кăшкăрђĕ вăл малта пыракан Шурављова.

Акă сиксе пыђĕ хайар Шурављов, аçан та çиçĕммĕн талхăрса...

— А-ах ты, сволăђ!.. Су-у-укин сын! Итлеместĕн?.. Епĕ сана...—терĕ те тытăнђĕ мана ĕнсерен тăкăнтарма.

— Курмастăни-мĕн çул мĕнлине? Ман атăсем çĕтĕк!

Ан çап!—кăшкăртăм урнă Шурављова хирĕç.

Вăл виç-тăватă хут çапсан кайалла ђакрĕ те хыттăн мĕкĕрсе йађĕ:—Халех сан çинђен патталйун кăмантирне шалăпă паратăп... потлетсă!—терĕ.

— Кала! епĕ те шалăпă паратăп,—кăшкăртăм епĕ, хам мĕн каланине хам та пĕлмесĕрех.

Урăх вăрçса пыма вăхăт пулмарĕ. Кĕçех патталйун кăмантирĕ çитсе перĕнђĕ. Епĕр ăна пурте йĕркеллĕнех «ђеçт» парса ирттертĕмĕр. Никам та пĕр сăмах шарламарĕ.

Ку хирĕçў пирки Шурављов та, епĕ те хамăр вăрçа тухса кайиђђенех урăх сăмах хускатни пулмарĕ. Пĕр-пĕрне ђĕнместĕмĕр. Йефрейттăрĕ йалан тĕл пуласран пăрăнађђĕ. Вăрçа ик-виçĕ кунран тухса каймалла тенĕ ђух тин манăн тискер Шурављова тавăрма тĕл килђĕ. Ăна, урампа ўссĕр пыраканскерне, виççĕн тытса хĕнерĕмĕр.

Пирĕн «паттăрлăха» хамăр йулташсем ырласа мухтарĕç.

* * *

Апат ҫиме кашни кунах пурте хула айăккине, тыткăнри австрисем пурнакан касăрма патне кайатпăр. Австри салтакĕсем ушкăн-ушкăнĕпе касăрма умне тухса, ҫурхи хĕвел ҫуттинҫе ăшăнса лараҫҫĕ, нумайăшĕ пирĕн столовăй умне пырса ҫăкăр йе аш татăкĕ тархаслаҫҫĕ.

Епĕ австрисемпе паллашма йурататтăм. Йурийех вĕсем хушшине кĕрсе ҫӳретĕп, сăнап вĕсене, паллашатăп. Ҫехсемпе словаксем вырăсла ҫухланă пирки, пĕр-пĕрне ҫылайах ăнланатпăр. Ҫак хушăрах пĕр Франс йатлă ҫехпа туслă та пултăмăр.

Франс вĕреннĕ, йĕркеллĕ ҫын. Вăл 25 ҫулалла ҫитнĕ, вăтам шăмшаклă илемлĕ салтак. Халлапланса ларнă ҫух, пĕрре епĕ Франса:— Есĕ халҫ ĕнтĕ пит те аван ҫын, Франс... Калаҫҫĕ-ха тĕрĕссипе, хăвăр патшалăхра ҫух тыткăна лекнĕ Раҫҫей салтакĕсене есĕ те хĕрхенместĕн-и? Есĕ те вĕсене вĕлерме, асаплантарма хатĕрехҫĕ-и? Хăвăр вĕреннĕ халăх, йепле ҫавах та хĕрхенӳ ҫук сирĕн? терĕм.

Франс тĕлĕннĕ пек пулса: Мĕнле «асаплантарма» тетĕн есĕ?—терĕ.

— Пирĕн хаҫатсем ҫинҫе Австрипе Керманире тыткăна лекнĕ Раҫҫей салтакĕсене йăлтах асаплантарса пĕтереҫҫĕ, вĕлереҫҫĕ тесе ҫыраҫҫĕ,—терĕм епĕ Франса.

— Ан ĕнен. Пире те, Австрире ҫух, Раҫҫейри ҫинҫен ҫапла каласа хăратаҫҫĕҫ. Ăна тыткăна йарасшăн мар, пĕр-пĕрне курайми тăвасшăн ҫапла суйеҫтереҫҫĕ,—тесе хуҫĕ Франс. Малалла вăл мана Австри салтакĕсем те килĕсенҫен Раҫҫейри пекех ирĕксĕр, макăрса тухни ҫинҫен каласа паҫĕ.

* * *

Мокшана ҫитсен пĕр ернеренех, ҫырăва лайăх пĕлекенсене уҫҫеппи камантă шкулне йама уйăрҫĕҫ. Пирĕн ротран 6 ҫынна суйласа илҫĕҫ. Епĕ те ку шута кĕтĕм. Анҫах, шкулĕнҫе вырăн ҫуккипе, пурне те кайалла йаҫĕҫ.

Ҫакăн хыҫҫăнах пире, пĕр 10 ҫынна, ернере икшер кун ҫар пуҫнитсине ҫӳресе вăрҫă саниттарĕн ĕҫне вĕренмелле турĕҫ. Унта та йĕркеллĕ вĕренесси пулмарĕ. Пире мĕн? Вăрҫă вăййисенҫен хăтăлса пултăр. Ротран «вĕренме» тесе ыйтса кайатпăр та, пуҫнитсинҫе вĕрентекен ҫуккипе, куна ирĕклĕн ирттеретпĕр. Ҫас-ҫасах Мокшан ҫыранĕ хĕррине тухса, тăваллăн пăтранса йухакан ҫурхи шыв хăватне пăхса ларатпăр.

Вăрҫă вăййи вĕрентнĕ кунсенҫе, ирпе-каҫпа ирĕклĕ сехет пулсанах, йулташсемпе пухăнса пĕр-пĕрин хуйхи-суйхине сиретпĕр.

Манăн ҫывăх йулташсем: Ваҫинк, Йакку Коршков, Макҫăм, Петук, Урттем.

Ваҫинк—хамăр йалсем. Вăл, манран икĕ ҫул аслăскер, салтака кайсан та, кайиҫҫен те манпа хутшăнсах кайман. Вăйлăрах ҫемйерен тухнăскер, йалан пуйан аҫисемпе «куҫат» туса ҫӳретҫĕ. Халҫ ĕнтĕ вăл манпа уйрăла та пĕлмест: мĕншĕн епĕр йалта ҫух пĕрле ҫӳремен-ши, тесе тĕлĕнет. Йаккупа Макҫăм—ҫывăхри кӳршĕ йалтан. Вĕсем пĕҫĕкрен пĕрле ӳснĕскерсем, икĕш те ытла та пĕр йевĕрлĕ:

икĕш те лутрарах, тађка, хĕп-хĕрлĕ сăн-сăпатлă. Мĕн пур уйрăмлăхĕ те çакăнта çеç-ђĕ: Йаккăвин пиђĕ тăрăхларах та куç харшисем хура; Максăмин—пиђĕ ђăмăр, куçхаршисем сарăрах. Петук—пĕђђепех тепĕр кўршĕ йалтан, вăрăм, хура, хытканрах кађђă. Урттем—Нурăссем, çăмăлттай.

Ку йулташсемпе манăн вăрçăра та пĕрлех пулма май килђĕ.

III

Апрел уйăхĕн малтанхи кунĕсем. Уйсенђе йур улаланса унта та кунта та хура çĕр пиђĕ курăнђĕ. Ăшă йенђен таврăнакан кайăк-кĕшĕксен савăнăçлă сасеисем илтĕнеççĕ. Пĕтĕм çĕршыв вăранат: хирсем, хура вăрмансем папкаланаççĕ.

Епĕр пурнакан лапђăк Мокшан хули те хавассăн сывласа йаđĕ. Вăл çуркуннепе пĕрле кĕтет пысăк савăнăç. Мĕн-ха вăл ăна питех те хаваслантараканни? Акă мĕн. Куллен пекех вăйлă вăрçăран «ырă хыпарсем» килсе тăраççĕ. Тĕрĕссипе каласан, вăл хыпарсем вăрçăран мар, Питĕрпе Мускавран тухса сарăлаççĕ. Питĕрпе Мускав хаçаđĕсем, телекрамсем, тата ыт. те Раççей çарĕн пысăк çĕнтерĕвĕсем çинђен пĕлтереççĕ. Хуласемпе саласенђе ђас-ђасах, кĕтмен çĕртенех, ђан сасси кĕрлесе илет. Вăл ђансем аснă пек танкăлтатса, ђиркў тăррисенђен—«тăшман» халех килĕшў ыйтасси çинђен пĕлтереççĕ.

Хура-халăх кĕçех хăйĕн ывăлĕсем таврăнасса кĕтет. Вăл çавăнпа хаваслант. Мокшан хули те çавăнпах савăнăçлăн сывлат.

Епĕр Мокшанра 5 ерне пурăнтăмăр. Пилĕк ерне хушшинђех çамрăк салтаксене хыпалансах вăрçă вăййисемпе паллаштарса çитерђĕç.

Мокшан йăлăхтарђĕ. Çамрăк салтаксен шухăшĕ выљат, шăмшакĕ вĕрет. Никамăн та пĕр вырăнтах пăђăхса тăрас килмест. Нумайăшĕ çунакан вăрçă вутне харпăр ирĕкĕпе тухса кайма та хатĕрех. Ара, мĕн-ма хăвалас мар çав «кайалла таракан» Австрипе Кермани çарĕсене? Пит те ђаплă пулмалла-çке «çĕнтерекен» вырăс çарĕ ĕретне тăрса, «тăшмансене» хыçран хĕртсе кайма!? Вырăс çарĕ пысăк çĕнтерўсем тăват-çке: Љвова илђĕç, Перемышăљ крепĕçне илђĕç, Краккăва илес пекех! Пĕтĕм Калитси çĕрне илсе Карпат сăрђĕсем урлă каçса кайрĕç. Илеççĕ те илеççĕ: хула хыççăн хула илеççĕ, австрипе кермаљ салтакĕсене пиншер-пиншерĕн тыткăна çавăрса илеççĕ... вĕсенне çĕмĕреççĕ, пĕтереççĕ,—акă мĕнле «хаваслантаракан» хыпарсем пĕлтереççĕ хаçат-телекрамсем. Анђах, çак хушăрах Раççей çарĕнђи рапођђисемпе хресђенсем вуншар пинĕн пĕтни çинђен нимĕн те палли çук! Ун çинђен нимле хыпар та пĕлтермест.

Çакна пула, пирĕн çамрăксем вăрçăран нимĕн те хăрамаççĕ. Нумайĕшĕ унта ђасрах çитсе, вăрçă хирĕсене харпăр куçĕпех курасшăн çунаççĕ анђах. Манăн йулташсем,—Йаккупа Максăм та çавах: «е-е-й... мĕн куљанмалли! Пурĕ-пĕрех килте мар ĕнтĕ, луђђĕ ђасрах вăрçа çитсе курас»—тесе паттăрланаççĕ.

Йаккупа Максăм пекех, пĕр свотра вĕренекен хыткан та ђăсланкă Петук та, Микулайпа Пруххăр та вăрçă йеннех туртăнаççĕ. Вĕсене кура, вăрçа кайассинђен епĕ те туртăнсах тăмастăп.

Ҫак хушăрах вăрҫăран шикленсе, унтан хăтăласшăн тем те пĕр хăтланакансем те пур. Акă пĕр ырханкка, имшер ҫамрăк—Михала. Михала—Йаккусен йалех. Вăрҫăран хăтăлас сăлтавпа Михала текех ҫире перет. Хăй вырăсла вунă сăмахран ытла пĕлмест те пулĕ. Текех: вар полит, тесе пĕкĕрле-пĕкĕрле анат. Унттĕрсем унăн ҫирне ĕненмеҫҫĕ. Мăшкăласа «Варполит!» текен хушамат ҫех паҫĕҫ мĕскĕне.

Апрелĕн малтанхи кунĕсенҫе пире вăрҫă хатĕрĕсем паҫĕҫ. Килтен тăхăнса пынă ҫĕтĕк тумтирсене пăрахса, тинех симĕс тум—салтак тумтирĕ тăхăнатпăр.

Тинех ҫитет кĕтнĕ вăхăт! Апрелĕн 6-мĕш кунĕнҫе мусăкпа, йурăсемпе йăпатса, Мокшанран ăсатса йаҫĕҫ.

Ăсатнă ҫух, патталйун кăмантирĕ хĕрўллĕ сăмах каларĕ: патшапа патшалăхшăн тата ҫан тĕнлĕ ҫиркўшĕн паттăрăн ҫапăҫăр тăшманпа,—тесе ўкĕтлерĕ вăл пире.

Ҫамрăк салтаксем ҫăпахах та «паттăр», вĕсем патшалăхшăн ҫапăҫма хатĕр. Анҫах ҫак вăхăтрах пире нимĕн те паллă мар: ху пек ҫыннах пĕр айăпсăр ҫиксе йе персе вĕлересси, вăл—те выйă пек ҫăмăл, кулăшла ĕҫ? те хăрушă, йунлă тискер ĕҫ?!—«Вăрҫă»—тени, патне ҫитсе кураҫҫенех пирĕн умра пăтравлă, тĕтреллĕ, ăпланми йапала пулса йулҫĕ.

## IV

Мокшанран тухнă кунхинех Рамсай стантсине ҫитсе пуйăс ҫине лартăмăр. Хĕвел анаспа, пуйăс хускалса хăвăрттăн вăрҫă йенне вĕҫтерҫĕ.

Пирĕн ешшелонра 1000 ҫын ытла. Вĕсенҫен 600 салтакĕ ҫăваш.

Пуйăс, пысăк стантсăсенҫе ҫеҫ пăртак тăркаласа, хăвăрт йарăнат хĕвеланĕҫ йеннелле.

Ҫанталăк уйар та ăшă. Ҫавăнпа та Калитсири Лҫвов хулине ҫитиҫҫен вакун алăкне каҫсерен ҫеҫ хупатпăр. Ҫукунҫулĕн икĕ йенĕпе те ҫерĕллекен симĕс уйсем, вăрмансем, хуласем, йалсем—пире сывлăх сунса тăра-тăра йулаҫҫĕ. Ҫăваш салтаксем вакун алăкĕ умне кĕпĕрленсе тăрса, хыттăн йантратаҫҫĕ салтак йурринпе. Таҫти вырăссем, тĕлĕннипе йупа пек хытса тăрсах, итлесе йулаҫҫĕ пихҫан та илтмен ҫăваш кĕввисене. Ҫавăн ҫухнехи йурă кĕвĕсенҫен епĕ нихҫан та манас ҫук пĕр йуррине. Ҫапла йурлаҫҫĕҫ вăл йурра:

Ки-как, ки-как—хуркайăк
Кер кайат те, ҫур килет:
Ах, тăвансем-тантăшсем,
Епир ун пек килес ҫук;
Хуркайăк пек таврăнса
Сире урăх курас ҫук!..

Вирйал-ҫăвашсен ҫакăн пек йурри хурлăхлă кĕввисем таҫти йут ҫĕрсенҫе тăлăххăн йулатҫĕҫ йантраса. Ҫав кунсенҫе ҫак йурăсене йурласан, хытă ҫĕреллĕ ҫынсен те куҫĕсем шывланатҫĕҫ.

Парановĕҫ хулине ҫитиҫҫен пирĕн салтаксем малтанхи пекех пыҫĕҫ хăйуллă хавaслăхпа. Кунталла ҫитсен, кунсерен пуйăсĕ-пуйăсĕпе тыткăна лекнĕ австро-кермантсăсем, тата суранланнă салтаксем хирĕҫ

пулма пуçларĕç. Çак тĕлеллех, пирĕн пек вăрçа кайакан ешшелонсем те стантсăсене тулса ларма пуçларĕç.

Санитари пуйăссенҫен суранлă салтаксем йынăшни илтĕнет. Вĕсенҫен сывăраххисем пире:—спре унта сурăхсемпе пĕрех пĕтереççĕ, тесе хăратма пуçларĕç. Вĕсемех вăрçă вăйлă пыни çинҫен пĕлтереççĕ.

Парановĕҫран пирĕн пуйăса кăнтăрпа хĕвеланĕç йенелле кăларса йаҫĕç. Ҫикĕри Ратçивилăв хулине çитсен, ҫи малтан вăрçă йĕррисем палăрҫĕç. Унта, вăрçă пуçлансанах çапăçусем пулнипе, нумай çуртсем çунса ишĕлнĕ, йе снарет лекнипе пăсăлса пĕтнĕ. Стантсисенҫе ĕçмеçимелли сутакансем çук. Çыннисем шăппăн та салхуллăн мĕшĕлтетсе çӳреççĕ.

Кашни стантсăрах Раççейелле тухакан санитар пуйăссем тĕл пулаççĕ. Вăл пуйăссенҫе туллийех суранланнă, аманнă, ҫирленĕ салтаксем. Вĕсем ахлатса йынăшни пĕтĕм ăшҫике çӳçентерет. Санитар пуйăс кантăкĕсенҫен ҫас-ҫасах ҫирлĕ салтаксен хытса сарăхнă пиҫĕсем курăнаççĕ. Епĕр вĕсенҫен фронтри çинҫен тĕпҫетпĕр. Вĕсем пире ӳркенсе çех, кĕскен, фронтри ĕçсем ăнăçлă марри çинҫен каласа параççĕ. Хăшĕ тата çиленсе пек:—çитетĕр ака, хăвăрах куратăр мĕнлине!—тесе тӳррĕн тăрăнтараççĕ. Çаксене кура, пирĕн хушăри çăмăл йулташсем те ҫĕмсĕрленҫĕç. Салтак йуррисем ҫарăнҫĕç.

* *
*

Апрелĕн 14-ҫĕ Калитсин пуç хулине—Љвова çитсе кĕтĕмĕр.

Љвов пысăках мар, çапах та хăй паха хула. Хулан хĕвелтухăç хĕрринҫе пĕр шĕвĕр тăрлă, çаврака пĕҫĕк ту ларать. Çак ту тăрринҫен Љвов хули ывăç тупанĕ çинҫи пекех тĕпĕ-йĕррипе курăнать. Çак сăрт çинҫенех хĕвеланăçнелле тинкерсе пăхсан, Карпат тăррисем те курăнаççĕ. Вĕсем тусанлă çутă сывлăшра кăшт çеç, тĕнҫе хĕрринҫи аслати пĕлĕҫĕсем пек, мăкăлĕн-мăкăлĕн кăвакарса ларни палăрать.

Пĕҫĕк сăрт тавра илемлĕ сат-пахҫи. Унта пĕр килкарти пек лаптăк тӳремре кивелсе мăкланнă памĕтпĕксем лараççĕ. Вăл памĕтнĕксем, тен, ĕлĕкхи Калитси кiҫаçĕсенҫенех йулнă пулĕ. Пирĕн вĕсене пăхса тишкерме ирĕклĕ вăхăт пулмарĕ.

Љвов урамĕсем таса. Ăна вăрçа сийенлени курăнмасть. Урамсем тăрăх 2—3-шер хутлă ҫул çуртсем. Кĕтессенҫе унта та кунта ҫĕрĕ фонттансем тăп-тăрă шыв пĕрхĕнтерсе лараççĕ. Хула хушшинҫе тĕрлĕ халăх: руççин, паљак, йеврей, вырăс, нимĕç,—пурте харпăр ҫĕлхипе нăкăттатса утаççĕ.

Љвовра епĕр пĕр талăк анҫах пурăнтăмăр. Тепĕр куннех фронта кăларса йаҫĕç. Молепĕнпе, мусăкпа йăпатса ăсатрĕç.

Љвовран тухсанах, çутă тĕнҫерен уйăрса таçти вилĕм шăтăкне хуса кайнă пекех туйăнҫĕ. Мĕнҫухлĕ малалла кайнăçемĕн уйсемхирсем пăсăлаççĕ: вĕçе-вĕçĕм сăртламсем, хĕсĕк васансем, хуçкаланҫăк улăхсем—вĕçĕ-хĕррисĕр ҫăсăлаççĕ. Карпат çинелле çывхарнăçем сĕвек хысаллă тăвайкки йуппнсем çӳлленсех пыраççĕ, çутçанталăк тӳпи тăвăрланать.

Ҿвовран ҫукунҫулпа 80 ҫухрăм карăмăр. Кашни вакуна 60—70 ҫын лартса тултарнипе, ҫурри ытла ура ҫинҫех тăрса пыраҫҫĕ. Пуйăсĕ кунта, ҫулĕ наҫар пирки, суккăр ҫын хыпашланса утнă пекех аран мĕшĕлтетсе пырат. Ҫукунҫул икĕ йенĕпе те урапа ҫулĕсем. Вăл ҫулсем тăрăх ушкăн-ушкăн ҫурран салтаксем, лавсем, автомопил, тата ыт. те текех каллĕ те маллĕ вĕркĕшет. Пĕр йенҫен—фронтра ҫирленĕ, аманнă, суранланнă салтак ушкăнĕсем—Ҿвов йенне шăвăнаҫҫĕ. Ҫăмăл суранлисем—ҫурранах, йăвăррисем—лавпа. Тепĕр йенҫен—ласаретсенҫе сывалнисем, йе тип Раҫҫейран пыракансем—фронт йенне талпăҫаҫҫĕ.

80 ҫухрăм кайсан пуйăс ҫинҫен анса, Карпат сăрҫĕсем хушшинелле ҫурран утрăмăр. Умлăн та хыҫлăн темиҫе патталйун ҫар, тăватшар ҫынлă ĕретсемпе харăссăн утса, тусанлă ҫула макарлантарат.

Ҫула тăрăх икĕ йенĕпе те пĕр вĕҫĕмсĕр хуйхăллă карттин уҫăлса пырат. Ҫас-ҫасах ҫула урлă йĕплĕ пралукпа кармакланă таррăн оккопсем. Ку оккопсем нумайăшĕ ҫурхи шывпа исленсе ишĕлсе аннă. Унта та кунта снарет ўксе еирпĕнтернĕ тăм купиcем, таррăн путăкшăтăксем симĕс ҫереме вараласа выртаҫҫĕ. Лапамсенҫе (варсенҫе), сăрт тайлăмĕсенҫе унта та кунта ҫĕнĕ виле тăприсем. Вĕсем ҫинҫе шурă йăвăҫ хĕрессем. Йĕри тавраллах халҫен аса та илмен вилĕмпе асап ҫинҫен кăтартакан паллăсем.

Пĕрмайах ҫакăн пек ҫўҫенҫĕк карттинсене курса пынипе, пирĕн хушăри «ҫи паттăр» салтаксем те пуҫĕсене усса, лўпперĕн утма пуҫларĕҫ.

Ҫак хушăрах пире пĕҫĕк ушкăнсемпе тыткăна лекнĕ австрипе кермани салтакĕсем тĕл пулкаласа иртеҫҫĕ. Манăн Йакку, ҫав нимĕҫматар ҫыннисене курсанах шăртланса:—е-ех, йытăсем!.. Ҫавсем пирки килсе пĕтетпĕр епĕр!—тесе хĕрсех йатлаҫма пикенет. Хăш ҫух вăл вĕсене винттовккăпа хăмсарнисем те пулкалатҫĕҫ. Кайран, епĕ ўкĕтленипе, Йакку уп пек тума ҫарăнҫĕ.

Тыткăна лекнисене Йакку пек курайманнисем ҫамрăк салтаксем хушшинҫе сахалах мар. Ун пеккисем нимĕҫ-матар ҫыннисене ҫас-ҫасах уллах вырăнсенҫе пĕр хĕрхенмесĕр хĕнеҫҫĕ: пăшал куҫĕсемпе кисеҫҫĕ, тăрăнтараҫҫĕ, тапса ҫикелентереҫҫĕ, тата ыт. те. Капла хăтланни—мана хама ҫапнипҫен те ытларах ыраттарат. Ҫавăнпа та епĕ хам паллакан салтаксене ўкĕтлесе ҫарăнмашкăн ыйтатăп. Анҫах вĕсем, ҫарăнас вырăнне ҫас-ҫасах хирĕҫсе кайса, тавлашма пикенеҫҫĕ:—есĕ тăшман майлă!—тесе йунама тытăнаҫҫĕ.

Апрелĕн 16-мĕшĕнҫе, Лиҫко йатлă пĕҫĕк хула урлă каҫса, Карпат сăрҫĕсем хушшипе 35 ҫухрăм шалалла утрăмăр. Утнăҫем пирĕн ҫула ҫўллĕрен ҫўллĕ сăртсем хĕссех пыраҫҫĕ. Ҫула тăрăх йухакап Сан шывĕн ҫыранĕсем ҫăнкăланаҫҫĕ, симĕс улăхĕ ансăрланат.

Хăш-пĕр сăрт тăррисем ирĕлсе пĕтеймен йур кĕрĕҫĕпе улаланса выртаҫҫĕ. Мĕнҫухлĕ шалалла кайнăҫемĕн сăрт тавращĕсем вăрманпа хупланаҫҫĕ. Айалти вăрмансем ҫулҫă кăларса симĕсленнĕ ĕнтĕ. Ҫўлти, сăрт тăррисенҫи вăрмансем ҫарамасах лараҫҫĕ-ха. Анҫах, вĕсем те ҫулҫă сарма папкаланнă. Шурă йурпа улаланса выртакан сăртсем

çиййӗнҫе унта та кунта кăвак ҫуллă ту шӗврешкисем пӗлӗтелле кармашса тăраççӗ. Вăл сăртсем хушшисенҫе сайра тӗмӗсемлӗ, симӗс курăклă ансăр варсем хуçкаланса выртаççӗ.

Тӗнҫе маҫҫине хӗссех пыракан сăртсем хушшипе утнă ҫух, хăйне хăй кăткă пек пӗҫҫиккӗн туйакан çыннăн ҫунӗ вăрттăн çав çӳллӗ сăртсен тăрринелле туртăнат. Кайăк пек пулса, пӗр сăрт шӗврешкинҫен теприн çине ирӗклӗн вӗçсе йарăнас килет. Анҫах та, кăмăл туртнине тума çук!

Каç пулсан, пӗр лапамра ҫатăрсем карса выртса кантăмăр. Кунӗпе утса ывăннăскерсем, епӗр пурте хытă çывăрса кайнă. Вилнӗ пек ыйхăран епӗ хăрушă тӗлӗкпе вăранса карăм. Тӗлӗкре: темле, вăрăхурахсем хӗнесе, мана йур кӗрӗҫӗ çинелле ывăтса йаҫӗç пек. Кӗрӗт ăшне путсах антăм. Аран-аран тухатăп. Хам çумма çыпçăннă йура силлеме пуçлатăп. Анҫах, йурӗ уйрăлмасть. Вăл мӗнҫухлӗ силленӗ, çавăн ҫухлӗ ытларах çыпçăнат! Çыпçăннă йур шăмшакка шăнтма пуçлат. Çӳçеннипе çавăнтах вăранса кайатăп. Ҫăнахах та, палаткă (ҫатăр) ăшӗнҫе çарамасах выртнăскерне, ире хирӗç сулхăмлатнăран, ҫылайах шăнтса йанă. Çӳçеннӗ пек пулса, ӳпӗнсе тухатăп симӗс палаткăран.

Пăхатăп: тул çутăлса çитнӗ. Тикӗс çеремлӗ лапамра пирӗн патталҫйун палаткисем пӗҫӗк утă куписем пек йӗрки-йӗркипе лăпҫăнса лараççӗ. Палаткă ӗреҫӗсем хушшинҫе 5—6-шарăн таканласа тăратнă винттовккăсем, штыкӗсене шăрт пек çӳлелле кăнтарса тăраççӗ. Палаткă ӗреҫӗсен тăвату кӗтессинҫе 4 хуралçă-салтак.

Патталйун тăрса хускалиҫҫен каллех пăртак çывăрса илес тесе васкасах палаткăна ҫăмрăм. Епӗ хускалкаланипе палаткăри Йакку та вăраннă. Епӗ ăна хамăн тӗлӗк çинҫен каласа патăм. Вăл мана: ну, есӗ ҫирлетӗн еппин... йе канлӗ выртманран, шăннăран пулҫ, шухăшласа выртнăран та килет теççӗ те ăна, тем, тӗлӗкӳ ырă мар тесе хуҫӗ.

Ирхине, салтаксем ҫей вӗретнӗ хушăра, епӗ çумри вăрманла сӗвек ту çине хăпартăм. Унта, тин çеç лăссине сарнă çамрăк лиçтвӗннӗкпе уртăшсем хушшине ларса, хыçа йулнă пурнăçпа çӳçенҫӗк малашлӗх çинҫен шухăшласа пуçа çавăртăм.

## V.

Апрелӗн 18-мӗш кунӗ. Çанталăк тӗтреллӗ те тӗксӗм. Кунӗпех сăртри çулсемпе утрăмăр.

Акă вăрçă 15 çухрăм çеç йулҫӗ. Малта, катмар сăртсем хушшинҫе, аслати авăртнă пек вăрăммăн кӗмсӗртетнисем илтӗнме пуçларӗç. Çанталăк пӗлӗтлӗ пирки, епӗр—аслати авăртат, тетпӗр. Анҫах та, аслати лăпланмасть. Мӗнҫул малалла кайнă—кӗмсӗртетӳ вăйлансах пырат. Йулашкинҫен тин ҫухласа:—тупă сасси ку!—терӗç пирӗн çамрăксем.

Кӗмсӗртетни—тупă сасси иккенне пӗлсенех, çамрăк салтаксен ҫӗрисем çӳçенсе сикме пуçларӗç. Хамăр çапах та, ҫӗре тӗпӗнҫи

шиклĕхе пĕр-пĕрне систересшĕн мар пулса, паттăрăн та канлĕн пынă пек пулма тăрăшатпăр.

Хĕвел тахҫанах сăртсем хыҫне пытаннă. Анҫах, ҫапах та тĕттĕм пулайман-ха. Каҫа хирĕҫле тупăсенҫен пеме ҫарăнҫĕҫ.

Оккопсем пĕр 5 ҫухрăма йахăн ҫеҫ йулсан, пире умлăн-хыҫлăн пыракан 7—8 патталйуна пĕр лупашкари пĕҫĕкҫĕ йала пухса тăратрĕҫ. Ку йалта фронтри Виленски, Литтовски, Волынски полксен тивиҫи штапĕ тăрат.

Ҫак йалта пире пурне те Виленскипе Литтовски полксен тĕрлĕрен роттисем ҫумне хутшăнтарма уйăрса хуҫĕҫ. Ҫав вăхăтрах асăннă полксенҫен пире илме салтаксем те ҫитеҫҫĕ.

Епĕр Йаккупа иккĕн Литтовски полккăн 13-мĕш роттине, тата пĕр свотах ленкрĕмĕр. Максăм, Петук тата ыт. те урăх ротсене лекрĕҫ. Пирĕнпе Нурăс патĕнҫи, тата Упи йенҫи вирйал ҫăвашсем ытларах пулҫĕҫ.

* * *

Ҫĕрле. Ҫанталăк уйартрĕ. Тĕттĕм тўпере ҫăлтăрсем ҫăлкăшаҫҫĕ.

Литтовски полкран пынă ватă салтак пире, тĕттĕм виттĕр аран палăракан ҫинҫе сукмакпа, вăрманлă сăрт ҫинелле илсе карĕ. Хыҫахыҫăн пыракан ҫамрăк салтаксем ҫăнкă сăрт ҫинелле йăвăррăн талпăҫса хăпараҫҫĕ.

Сисетпĕр—фронт ҫывăхрах. Акă австрисем йенҫен ракketсем вĕсме тытăнаҫҫĕ. Раккеҫĕсем, пĕҫĕкҫĕ хĕм пĕрҫи пек курăнса хăвăрттăн ҫĕкленеҫҫĕ те, тўпере тулли уйăх пек йалкăшса каллех ҫĕр ҫинелле йарăнаҫҫĕ. Ку самантра пĕтĕм сăрт тăррисем ҫутăлаҫҫĕ. Раккетсем сўнсенех каллех лўп тĕттĕм пулса тăрат.

Тепĕртак утатпăр. Унта та кунта пăшал пени илтĕнме пуҫлат. Акă пулҫккăсем те шăхăрма тытăнаҫҫĕ. Ман хыҫра пыракан Йакку:—акă ĕнтĕ вăрҫă!—тесе ассăн сывласа йаҫĕ.—Ҫитрĕмĕр, Йакку!—терĕм епĕ ăна хирĕҫ.

Сăрт тăррине хăпарса ҫитсен Йаккупа харăс утса, анҫах хуллен калаҫса пыма пуҫланăҫҫĕ. Пирĕн умра пыракан ватă салтак тăп ҫарăнса тăҫĕ.—Ну, пратсы, ҫитрĕмĕр, терĕ хуллен пăшăлтатса.

Епĕр нимĕн те сисмен. Пăхатпăр малалла тинкерсе: хамăр лутра вăрман айĕнҫе пытанса выртакан пысăк оккоп умнех ҫитнĕ тăнă-мĕн! Кутамас йăвăҫсем айĕнҫе хупхура вăрăм шăтăк, унăн леш йенҫе тăпра купи ҫăсăлса выртни курăнат. Ҫак вăхăтрах унтан, ҫĕр тĕпĕнҫен, мăкăртатса калаҫнă сассем илтĕнҫĕҫ.

Нумай та тăмарăмăр. Сасартăк, умри шăтăкранах пирĕн ума пĕр вăрăм кĕлетке тухса тăҫĕ. Вăл пирĕн ушкăна ҫывхарса, хулăм сасăпа:

— Ҫĕннисем-и?.. Миҫен?—тесе ыйтрĕ. Пире илсе пынă ватă салтак:—ҫĕннисем... 32 ҫын,—тесе хуҫĕ хаваслă сасăпа. Ҫав вăхăтрах пирĕн пата татах виҫ-тăватă кĕлетке ҫупса пыҫĕ. Вăрăм ҫын вĕсене:—Свотнисем! кашни свота саккăршар ҫын уйăрса илĕр те, вырнаҫтарăр вĕсене,—тесе хуҫĕ. Хăй таҫта оккопа тăрăх утса карĕ.

Пире, 32 ҫынна, 4 пайа уйӑрҭӗҫ те малти оккоп тӗпне кӗртсе лартрӗҫ.

Тӗттӗм нӳрӗ оккопра икшер-виҫшерӗн тайӑнса выртнӑ салтаксем хуллен мӑкӑртатса калаҫаҫҫӗ, анҭах вӗсен сӑнӗ-кӗлеткисем пире курӑнмаҫҫӗ.

Оккопа кӗрсе вырнаҫсанах мана ҫав нӳрӗ ҫӗр шӑтӑкӗсенҭен хӑҫан суранланмасӑр йе вилмесӗр хӑтӑлайас ҫукки аса килҭӗ. Ӑна аса илнипе ӑшҭик пӑҭӑланса ҫитрӗ, шӑнӑрсем ҭӗтренсе илҭӗҫ.

Виҫӗ кун утса ӗшеннӗ пирки, епӗр илемсӗр оккопра ҭасах тӗлӗрнӗ пек пулнӑ. Нумай та ҫывӑрман, епӗ кансӗр ыйхӑран вӑранса пуҫа йӑтса пӑхрӑм. Мана киҭемлӗ карттин курӑнса карӗ: тул ҫутӑлса килет. Пирӗн умра та хыҫра та тӗпренсе тӑракан тӑпраллӑ-ҭуллӑ ҫтена. Кусем таррӑн та вӑрӑм оккоп ҫтенисем. Оккоп ҫийӗнҭе тин ҫеҫ симӗсленекен лутака ҫӑкасемпе крап йӑвӑҫҫисем сулхӑн ҫил шӑнтнипе тураттисене ҭӗтрентерсе лараҫҫӗ. Пирӗн оккоп—сылтӑм йенҭе тарӑн канав пек картлашкаланса сӑрт хушӑкнелле тӑрӑнат; сулахай йенҭе—ҫӳлелле хӑпарат.

Ура ҫине тӑтӑм: сӑрт ҫийӗсем курӑнҭӗҫ. Унта йӗри-тавраллах хуҫӑлнӑ, ҫурӑлнӑ, тӑпӑлнӑ йӑвӑҫсем выртаҫҫӗ. Ку йӑвӑҫсен тин ҫех сарӑлма пуҫланӑ ҫулҫисем типме пуҫласа, турат вӗҫӗсенҭе шерепеленсе тӑраҫҫӗ. Вӑл йӑвӑҫсене снаретсем ҫӗмӗрсе тӑкнӑ иккен!

Оккоп тӗпӗнҭе тӑршшипех кӑвак шенеллӗ, кӑвак тӑпрапа пӗр сӑнлӑ салтаксем: вӗсем—хӑшӗ ҫывраҫҫӗ, хӑшӗ ҭӗлӗмӗсене паклаттарса ман ҫине—ҫӗнӗ ҫын ҫине, сиввӗн пӑхса выртаҫҫӗ. Мана ку пӗтӗмпех тискеррӗн, ҫӳҫенҭӗклӗн туйӑнҭӗ. Никама та сӑмах хушма хӑйаймасӑр, епӗ каллех хам вырӑна кукленсе лартӑм. Никама та, нихҫан та хӑнӑхассӑн туйӑнмаст. Пурте йутӑ. Ҫак йутлӑхра ахалех хура шӑна пек пӗтессӗн туйӑнат. Ман ҫумрах—каҫхине пӗрле килнӗ ҭӑваш аҭпсем. Вӗсем виҫҫӗн йунашар выртнӑ та кӑрт-карт! турткалашса, ӑнтрашса ҫывӑраҫҫӗ. Паллах, вӗсен ыйӑхӗ кансӗр. Анҭах та, хытӑ ӗшеннӗскерсем, ҫаплах ҫывӑраҫҫӗ.

Ирхи сывлӑш сӑрт тӑрринҭе ҭылайах сивӗ. Шӑмшак шӑннипе епӗ текех ҫывӑраймарӑм.

* * *

Тепӗр икӗ сехетрен хӗвел хӑпарса ӑшӑтма пуҫларӗ. Ватӑ салтаксем, виҫшер-тӑватшарӑн пухӑна-пухӑна ларса, йерипен халлапа ҫапма тытӑнҭӗҫ. Епӗр те ҫамрӑксем пӗр тӗле пухӑнса лартӑмӑр. Ваттисем епӗр хӑш кӗпӗрне ҫыннисене ыйтса пӗлҭӗҫ. Хӑш-пӗрисем: ну, ҭӑваш ҭӗпписем, есӗр ӑшша ҫитрӗр-ха, сире аван—тесе йӑпатаҫҫӗ.

Ваттисенҭен пӗри, ӑшӑ кӑмӑллӑ салтак, пирӗн пата пыҭӗ те:—ну, тӑвансем, епӗ сирӗн оттелени пуҫлӑхӗ пулатӑп. Паллӑр мана, епӗ хушнисене итлӗр! Малалла ӗнтӗ сирӗн те ҭерет тӑрӑх хуралсене каймалла пулат... Халех сире патрунсем паратпӑр,—терӗ.

Епӗр ним ҭӗнмесӗр тӑратпӑр.

Малалла вӑлах пире ҭӗнтересшӗн пулса:—лайӑх выртса кантӑр-и, йе ҫук?—тесе ыйтрӗ.

— Ай-ай, мана сивĕ пулнă!.. пирĕн ку оккопа пăртак витмелле пулĕ,—терĕ пирĕнтен пĕри вырăсла лĕли-пĕлми ҫĕлхепе. Хăй ҫав вăхăтрах аллисемпе оккоп тăрринелле кăнтаркаласа илҫĕ.

— Е-е-ей, аҫсем... Халĕ мĕн сивви!? Пулнă пулăсăрҫҫĕ есĕр кунта теккапĕр—йанвар—февраҫ уйăхĕсенҫе! Унҫухне сирĕп пек ҫамрăксем нумай шăнса хытрĕҫ кунта. Пăрмайах—йе малалла, йе кайалла каймалла пулаҫҫĕ. Оккопсем алтма та вăхăт ҫукҫĕ... Йур кĕрĕҫĕ таррăн. Ишмелле те мар... Ҫанталăкĕ—пĕрре ҫăмăр ҫăват, тепре—тантапса шăнтса пăрахат. Шартлама сивĕ... Аттаккăсенҫе кам суранланса ӳкет, ҫас илеймесен—ҫавăнтах шăнса хытат. Хуралта ларакансем—ларнă ҫĕртех хыта-хыта вырттаҫҫĕ. Хăшин—алли-урине, хăшин—питне-сăмсине тăм илсе йарат... Е-е-х, нумай макăрнă!—терĕ ватă салтак куҫĕсемпе пĕре ман ҫинелле, тепре йунашар таракан салтак ҫинелле тинкерсе.

Акă вăл пĕр саманта шăп пулса тăрат. Унтан, йĕри-тавра пăхкаласа илет те, куҫĕсемпе тĕпренсе таракан умри оккоп ҫтени ҫинелле тĕллесе, йерипен пуҫлат:

— Хĕллех вилнĕ пулсан, пĕрехмай аван та пулатҫĕ. Унҫух, урасем шăнса пăсăлнипе коҫпĕттăле кайса ҫăлăнтăм. Ҫавăн пирки халĕ ку таранҫҫенех оккопсенҫе тертленсе пурăнатăп акă... тейейҫĕ оттелени пуҫлăхĕ—ватă салтак. Вăл татах та малалла темĕн калатҫĕ пулас. Анҫах та ҫак самантрах оккопа тăрăх пĕр вăрăм шенеллĕ ҫӳллĕ ҫын варкăштарса пынине курсан, оттелени пуҫлăхĕ халлапне пăрахса, вăл ҫын йеннелле тӳрленсе тăҫĕ.

Вăрăм ҫын пирĕн паталла ҫывхарат. Унăн кăккăрĕ ҫинҫе—виҫĕ ҫутă хĕрес, икĕ ҫавра метаҫ. Кĕлетки пысăк май, унăн пиҫĕ-куҫĕ те самăр. Таҫка та хĕрлĕ пит ҫăмартисем ҫинелле икĕ йенҫе те вăрăм сухал уссисем пĕтĕрĕнсе тăраҫҫĕ.

Пирĕн пата ҫитесси пилĕк-ултă утас пек йулсан:

— Ҫĕнĕрен килнисем, патрон илме пухăнăр!—терĕ ҫак ҫын йантраkан хулăм сасăпа. Ҫав вăхăтрах вăл, пирĕнтен иртсе кайнă май, патрон илме ăҫта пымаллине каласа хăварҫĕ.

— Ку пирĕн фелтфепĕл пулат,—терĕ пире, иртекен ҫынна ҫеҫт парса йулнă оттелени пуҫлăхĕ.

Епĕ, ҫĕрĕк, каҫхине оккоп патне ҫитсен, пирĕн пата тухнă вăрăм кĕлеткеллĕ ҫын ҫак фелтфепĕл пулнине палласа илтĕм.

Пире ҫасах патрунсем паҫĕҫ. Кăшт-кашт каласа ăнлантаркаланă хыҫҫăн, хăшне ҫав кунах оккоп умĕнҫи хуралла та йаҫĕҫ.

Ирхи апат вăхăтĕҫҫен, икĕ йенҫен те сайраран перекен пăшал сассисем ҫех илтĕнкелерĕҫ. Кăнтăрла ҫитеспе тупăсем те вăранса, кĕрĕслетме пуҫларĕҫ. Тупăсенҫен пени малтанах пире ытла та хăратаҫҫĕ. Ик-виҫĕ кунран тин ăна хăнăхса ҫитрĕмĕр.

## VI

Фронта ҫитсен тепĕр кунхинех.

Вăхăт каҫалла сулăннă. Ҫанталăк уйар та тӳлек. Сăрт ҫинҫи тин ҫеҫ ҫулҫă саран ырхан йăвăҫсем пĕр сикленмесĕр ларса, шенкер-

Тусенђи фронт лăпкă. Сайра хутран çеç Австри йенђен тупăсем кĕрĕстлетни, снаретсем ўхĕрни, йе вĕсем тĕлленĕ çĕре ўксе аçа çапнă пек хайаррăн шартлатса çурăлни илтĕнет. Хушăран пĕђђен вĕçекен нимĕç йеропланĕ кĕрлени илтĕнкелет. Пĕр çаксем çеç ху вăрçă хушшинђе пурăннине аса илтереççĕ.

**Пире, фронта ĕнер çех пынă çамрăк салтаксене, пĕр çĕре пухса тăратрĕç.**

Пирĕн умра кĕçĕн пуçлăхсем: оттелени пуçлăхĕ—ырханкка Алекçейĕв, свотни кăмантир—аслă унттĕр Тавытук, тата раçветкă команти пуçĕ—украинĕс Путкевиђ. Тавытук—кăнтăр йенђи вырăс ђĕлхипе пыр тĕппĕн калаçаканскер, кĕрнеклĕ, патвар, сухалсăр ватă салтак. Унăп кăкăрĕ çинђе—пĕр кеорки хресĕ, тепĕр çавра металђ çапкаланса çўреççĕ. Путкевиђ лутра та тађка, шăмшакĕ тăлпан çын.

Тавытук сăмах пуçлат.

— Раçветкăра çўреме сирĕнтеп икĕ паттăр суйласа тупмалла. Кам хăйне-хăй пултарассăн туйат? Кам маттуртарах, ну пĕлтерĕрха?—тет Тавытук хаваслă пек сасăпа.

Епĕр шарламасăр, пĕр-пĕрин çине пăхкаласа çех тăратпăр.

— Раçветкăра мĕн тумалла унта?—терĕ пирĕнтен пĕри, ђĕмсĕрлĕхе пĕтерес тенипе.

Тавытук Путкевиђ çинелле кăтартса:—ак çак çын сире вĕрентсе парĕ. Талăкра пĕрре çех тăшман оккопĕсем йенне çывхарса итлетĕр, çўретĕр, пĕлетĕр. Вара, унтан таврăнсан, хут те кунĕпех çывăр. Раçветђĕк ни хуралла тухмаст, урăх нимĕн те тумаст,—терĕ.

Йулашкинђен Путкевиђ раçветкă отређĕн мĕн тумаллисем çинђен каласа парат. Вăл каланă тăрăх, раçветкăра çўреме илемлĕ, çăмăл, аван, анђах та çав хушăрах пуçа «хĕрхенме йураман» самантсем те тĕл пулаççĕ.—Пикенсе матур çўренĕшĕн, керойла ĕçсем тунăшăн—кашни раçветђĕк «кеорки хĕресĕ» илме пултарат,—терĕ Путкевиђ хăйĕн сăмахне паттăрăн пĕтерсе.

— Та, та, та... матур раçветђĕк паллă ĕçсем тунăшăн кĕмĕл хĕрес—«кеорки хĕресĕ» илет,—тесе хуђĕ унттĕр Тавытук Путкевиђ сăмахне çирĕплетсе. Хăй çав вăхăтрах сарăхнă каккартлă симĕс картусне хывса, сылтăм аллипе тин çеç хырса тасатнă пуç тўпине кăшт-кашт шăлкалат. Сăмахĕ пĕтнине палăртса, кĕрнеклĕ кăкăрĕ çинђи симĕс мунтир çумĕнђе çакăнса таракан «кеорки хĕресĕпе» çавракапронсă металђ çинелле сăмса тăрăххăн пăхса илет.

Çак хушăрах оккоп хĕрринђе ђĕлĕм паклаттарса ларакан ватă салтак ушкăнĕнђен йершпен лăхлатса кулни, мăкăртатса калаçни илтĕнет. Вĕсенђеп пĕри, пирĕн йенне пăхса: кĕмĕл хĕрес мар, йăвăç хĕрес илме çăмăлтарах пулат унта, тесе хуђĕ.

Капла калакапа Тавытукпа Путкевиђ иккĕш те сиввĕн йунаса хуђĕç.

Темне илĕртсен те пирĕн çамрăк ђăвашсенђеп раçветкă отретне кĕрес текенсем çук. Çакна пула, «пуçлăхсем» ирĕксĕрех пирĕнтен икĕ çынна тĕллесе илеççĕ. Иккĕрен пĕрне—мана.—Вот, Ваççилйĕв!.. Ваççилйĕв!.. тесе кăшкăрђĕ оттелени пуçĕ Алекçейĕв,—Ваççилйĕв вырăсла

та лайӑх пӗлет,—тет вӑл. (Унҫухне мана атте йаҫӗпе—Ваҫҫилийӗв, тетҫӗҫ). Алекҫейӗв хыҫҫӑн Тавытук та, Путкевиҫ та мана тӗллеҫҫӗ.

Ну, килӗшетӗн, Ваҫҫилийӗв?—терӗ Тавытук влаҫлӑ хулӑн сасӑпа.

Епӗ хирӗҫме хӑйаймарӑм: килӗшмелле пуҫ... урӑх кайакан ҫук вӗт, терӗм.

Тавытук мунтир кӗсйинҫен хут кӑларса, ун ҫине ман йата ҫырса хуҫӗ.

* * *

Ҫанталӑка тӗттӗм сӑнӗ ҫапрӗ. Тупӑ сасси те, пӑшал сасси те илтӗнмест. Оккоп тӑрӑх ҫӑвартан-ҫӑвар: «раҫветҫӑксем, Путкевиҫ патне!» тенӗ сӑмах вӗҫсе ҫитрӗ.

Акӑ пирӗн пата Алекҫейӗв ҫитет.—Ваҫҫилийӗв! ил пӑшална, ил патронсем... ҫасрах вӗҫтер Путкевиҫ патне!—тет вӑл хыпаланса.

Пухӑнтӑмӑр Путкевиҫ плинташӗ патне. Роҫӗпе пурӗ 15 раҫветҫӗк. Ку пирӗн раҫветкӑ каманти. 15 ҫынран 5—6-шӗ ватӑ салтаксем.

Путкевиҫ кашнин ҫинех кӗскен, куҫаййӗн пӑхса илҫӗ те, ватӑ раҫветҫӗксемпе темскер калаҫса, пурне те хӑй хыҫӗнҫен утма хушрӗ.

15 ҫын хыҫа-хыҫӑн, васкамасӑр утса, оккоп умӗнҫи йӗплӗ пралук кармакӗ урлӑ каҫса карӑмӑр. Умра тӑракан хурал салтаксенҫен иртсе, пӗр сӑрт тайлӑмӗнҫи вӗтлӗх вӑрмана ҫитсе кӗтӗмӗр.

— Ларӑр-ха ҫакӑнта,—терӗ Путкевиҫ, пӗр вак йӑвӑҫсем хушшинҫи лупашкара ҫарӑнса.

Пурте пӗр ушкӑна ҫӑмӑртанса лартӑмӑр. Ушкӑн варринҫе ларакан Путкевиҫ хуллен калама тытӑнат.

— Пирӗн хамӑрӑнпа австри фронҫӗсем хушшинҫи пуша оккопа ҫитсе килмелле. Унта халҫ 16-мӗш роттӑн раҫветки хураллат... Тӗттӗм пулса ҫитсенех хускалатпӑр. Есӗр пурте мӗнле те пулсан шӑппӑнрах кашни сас-ҫӗвве виттӗр итлесе пырӑр. Ӳсӗрме те йурамаст... тесе вӗрентет пире Путкевиҫ.

Акӑ, каҫ пулса ҫиртӗ. Сӑртсем хушши тӗттӗм. Ҫатрака, лутра йӑвӑҫ тӑррисем пӗр сикмесӗр тӗлӗрсе лараҫҫӗ. Вӗсен хушшисемпе тӗттӗм тӳпере ҫӑлтӑрсем ҫӗтренсе йӑлкӑшни курӑнат.

— Атӑр ну, кайатпӑр... анҫах та питте шӑппӑн!.. терӗ Путкевиҫ пирӗн йенне пӳрнипе йунасах.

Пурте пӑшалсене алла тытса, тин ҫеҫ тапраннӑ йешӗл курӑк ҫийӗпе ура вӗҫҫӗн йӑпшӑнса утма пуҫларӑмӑр. Халӗ ӗнтӗ хыҫа-хыҫӑн мар,—йунашарӑн, сайран тӑрса карталанса пыратпӑр. Йерипен йӑпшӑнсах—пӗре тӑвалла, тепре аналла анатпӑр. Акӑ таррӑн сӑрт хушӑкӗ урлӑ каҫса, умра ларакан ҫӑнкӑ сӑрт ҫинелле хӑпаратпӑр. Йӗритавраллах хурӑнлӑ вӑрман. Кашни 50—60 утӑм хушшинҫех йе тӑрса, йе ҫӗр ҫумне выртсах таврара сас-ҫӳ пуррине итлетпӗр. Маттур та хӑйуллӑн тыткалаҫҫӗ хӑйсене Путкевиҫпа унӑн йулташӗсем. Епӗр ҫамрӑксем шикленетпӗр, ҫӗтретпӗр. Кашни утӑм пирӗншӗн—ҫӗнӗ, кашни утӑм—хӑрушлӑх! Кашни лаптӑк ҫӗре шӑрщласа, хыпашласа пымалла.

— Выртăр!!!—пăшăлтатса панă прикас илтĕнет. Пурте ҫупсăр пек выртаҫҫĕ, хăлхасене тăратса итлеҫҫĕ. Кĕҫвĕҫ кăвак шинеллĕ австри салтакĕсем сиксе тухассăн туйăнат, кĕҫвĕҫ пăшал сасси шатăртатса илтĕнессĕн туйăнат. Ҫылай выртса сăнасан, каллех тăрса малалла йăпшăнатпăр.

Акă, умри ту ҫине хăпарса ҫитесси те инҫе мар. Вăрмансем айа тăрса йулҫĕҫ. Сасартăк Путкевиҫ сасси йантратат: ҫупăр, хăвăртрах оккопа!..

Епĕ, малтанхи каҫ ҫеҫ пынăскер, нимĕн те пĕлместĕп: таҫта оккоп? Темшĕн кăшкăрат? Ҫапах та йулташсем хыҫҫăн ҫупатăп сăрт тăрринелле. Унҫен те пулмаст, икĕ йенҫен те пăшал сасси шатăртатма тытăнат. Ăҫта кайас, мĕн тăвас? Епĕ хамăрăннисене ҫухатрăм. Йулмасăр ҫупса пыраттăм. Анҫах, ҫп сăрт тăррине хăпарса ҫитсен, никама та курми пултăм. Тĕттĕм. Икĕ йенҫен те: сăрт тăрринҫен айалалла, айалтан—ҫӳлелле пăшалсенҫен ҫунтараҫҫĕ анҫах. Пĕлетĕп: ҫӳлтен переҫҫĕ вырăссем, айалтан—австрисем. Пирĕннисем инҫе мар, анҫах манăн вĕсем патне пыма ҫук. Малтан та хыҫран та вĕҫĕмсĕр пăшал сасси, пуҫккăсем шăхăрашни. Пуҫа йатса ура ҫине тăрсанах, темиҫе пуҫккă харăс тивмелле. Епĕ хăранипе, хам та пĕлместĕп, темшĕн хыттăн кăшкăрма тытăнап:—ей, не стреляйте, я свой!.. не стреляйте!—тетĕп хамран инҫе мар хам ҫинелле перекен вырăссене. Кăшкăрнă майпех хам ҫӳлелле шăватăп.

Пĕр ҫур сехет пек перкелешсен, икĕ йенҫен те шăпăртах. Ҫак вăхăтрах шуса хăпарса, епĕ пĕр ăшăх оккопа кĕрсе ӳкетĕп. Илтеп, сылтăмалла ҫын сассисем. Тепĕртак упаленетĕп. Куратăп—хамăр йулташсем. Кунтах сăрт тăррипе пĕр оккоп ҫасăлса выртат-мĕн. Пирĕн Путкевиҫ каманти ҫак оккопа кĕрсе вырнаҫнă. Тата унтах тепĕр 15 ҫынран—16-мĕш роттăн раҫветкă каманти. Ҫапла вара пирĕн 30 ҫынна йахăп пулҫĕҫ.

Епĕ йулташсене тупсан, нумай та тăмарăмăр, раҫветкă пуҫлăхсем васкасах кайалла ҫакма хушрĕҫ.

Сăрт тăрринҫен пĕр хурăнлăх вăрманалла ҫупнă пек апатпăр. Анса ҫитесси те инҫе мар. Сасартăк каллех пăшал сасси ҫатăртатма пуҫларĕ. Ши! ши! вс! вссс!.. Пуҫккăсем шăхăрса ҫитрĕҫ. Пирĕн ҫине ту тăрринҫен переҫҫĕ.—Пытанăр!—тенĕ сасă илтĕнҫĕ.

Пурте ăҫта май килнĕ унта лăпҫăнса выртрĕҫ. Епĕ те пĕр шуралса выртакан хурăн купташки кутне ҫупса пытăм. Унта пирĕн пĕр ватă салтак выртат. Вăл темшĕн шăртланнă: ан кил кунта! тесе хайаррăн кăшкăрҫĕ мана. Пуҫккăсем йăвăран йăвă шăхăраҫҫĕ. Епĕ хăранипе ҫаплах хурăн купташки кутне лăпҫăнап.—Кай халех урăх ҫĕре, атту сана ҫикетĕп те вĕлеретĕп!—терĕ мана хай салтак, пăшалĕпе хăмсарса. Епĕ нимне те ăнланмасăр, тĕттĕм сăрт айнелле ҫикеленсе антăм. Аран пĕр йăвăҫ хыҫне лăпҫăнатăп.

Пăшал сасси ҫарăнат, пуҫккăсем шăхăрма парахаҫҫĕ. Ҫылай выртсан, икĕ камантă пĕрлех йерипен тăрса, хамăр оккопсем йенелле утрăмăр.

Оккопсем пĕр 200 ҫалăш пек йулсан, пирĕн отретсем канмаларса халлапа ҫапма тытăнҫĕҫ. Кунта ĕнтĕ пурте матур, пурте паттăр. Хăшĕ австрисен отретне курнă: вĕсем 60 ҫынна йахăн, теҫҫĕ. Хăшĕ австри салтакĕ кăшкăрнине илтнĕ:—«не стреляйте... и свой!..» тесе йăлăнат тет австри салтакĕ.

— Вăл руҫҫин-салтакĕ пулнă, ҫавăнпа вырăсла кашкарат... вăл пирĕн пата тыткăна пырасшăн пулнă пулас...—теҫҫĕ Путкевиҫпа тепĕр икĕ ватă салтакĕ. Ҫав хушăрах тата аттаккăпа хăпарма пуҫланă австри салтаксенҫен пĕрне ҫиксе пăрахаканĕ те тупăнҫĕ. Пулкă лекнĕ «руҫҫин» ахлатса хăркăлтатса вилнине илтекенсем те тупăнҫĕҫ. Кунта епĕ кăшкăрнине «руҫҫин» кăшкăрнă вырăнне хурса, сăмаха вĕҫтерсе йани мана пит те тĕлĕнтерҫĕ. Анҫах та епĕ хамăн хăравăҫлăха тата пултарайманлăха никама та пĕлтерес мар тесе, ун пирки шăла ҫыртрăм.

Хĕвелтухăҫĕ шурăмпуҫпе витĕнет. Пирĕн отрет хамăр оккопа таврăнҫĕ.

Раҫветкăсем хĕрӳллĕн перкелешни пирĕн пуҫлăхсене те вăратса йанă-мĕн. Епĕр оккоп урлă каҫсанах, пире хирĕҫ фелтфепĕлпе свотни кăмантирсем ҫупса пыҫĕҫ.

— Ну?.. Мĕскер унта вăйлă перкелешӳ пулҫĕ?—терĕ васкавлă утăмсемпе йарăнса пыракан фелтфепĕл.

Путкевиҫ токлат тума тытăнҫĕ.

— Хамăр ҫитмелли ту тăрринҫи оккопа ҫитнĕ ҫух, 50—60 ҫынлă австри отреҫĕ пире хыҫран ҫавăрса илҫĕ. Епĕр, 16-мĕш роттăн раҫветкипе пĕрле, шăп 30 ҫын, вăл отретне вирлĕн ҫунтарса айăккалла тартрăмăр. Хамăр паталла ҫупса пыракан австрисенҫен пĕр виҫĕшĕ тӳннине хамăр та куртăмăр, терĕ Путкевиҫ. Ку сăмахсене вăл пурте ĕненмелле, хăйуллăн каласа паҫĕ.

— Матур!—терĕ фелтфепĕл.—Татах матур пулаттăр есĕр, анҫах та ҫав хăвăр ӳкернĕ австри салтакĕсене хăвăрпа пĕрлех ҫĕклесе килмеллеҫҫĕ сирĕн... Ҫим... ан саланăр. Халех кайалла кайса вăл австри виллисене йатса килĕр. Вара сирĕнтен ҫи маттуррисем хĕрес илме те тивĕҫлĕ,—тесе хуҫĕ ҫăсланкă фелтфепĕл.

Путкевиҫ килĕшет. Айтăр, пратсы, мĕн хушнине туса килетпĕр, терĕ вăл кайалла ҫаврăнса.

Каллех пралук кармакĕ урлă каҫса малалла утрăмăр. Ҫул ҫинҫе Путкевиҫ хăйпе ҫывăх раҫветҫĕксемпе,—4—5 ватă салтакпа, вăрттăн канашлу туса илҫĕ. Вĕсем мĕн канашланни пире паллă мар. (Ун пек пăшăлтатса калаҫни вĕсем хушшинҫе малтан та пулкаланăҫҫĕ). Сăртсем хушшинҫи тарăн васана анатпăр. Ҫанталăк ҫуталса ҫитрĕ.

— Ларăр-ха ҫакăнта, пратсы. Пăртак канашлар,—тет Путкевиҫ.

Пурте хавассăнах ларатпăр. Камăн-ха кайас килтĕр тин ҫеҫ тарса тухнă ҫапăҫу вырăнне?

— Акă мĕн, пратсы... кайсан та епĕр персе ӳкернĕ австрисем халҫен унта выртас ҫук. Вĕсене халҫен хăйсемех илсе кайнă ĕнтĕ. Епĕр акă кунта ларăпăр пĕр икĕ сехет те, кайалла таврăнса фелтфепĕле: вĕлернĕ салтаксене австрисем хăйсем илсе кайнă, вĕсем выртнă

вырăна йунпа хĕрелнĕ куракссем çеç палăртса тăраççĕ тейĕпĕр. Пурте, асту, пĕр сăмахлă пулмалла, терĕ. Путкевиҫ сăмахĕпе хаваслансах килĕшетпĕр. Çакна илтсен, Путкевиҫ хăй йулташĕсемпе вăрттăн мĕн çинҫен канашланни тинех пире те паллă пулҫĕ.

— Çук, никам та нимле австрийе те вĕлереймен. Ахалех суйеçтереççĕ вĕсем,—терĕм епĕ хам пек çамрăк салтака. Вăл та манпа килĕшсе пуçне сулласа илҫĕ.

Лартăмăр уллахра икĕ сехете йахăн. Хĕвел тухса çутăлҫĕ. Йерипен çĕкленсе оккопсене таврăнатпăр. Фелтфепĕле малтан сăмах татнă пек суйса паҫĕç.

---

Çакăн хыççăн епĕ урăх нихçан та раçветка каймасса тупа турăм. Анҫах та епĕ тупа тупи хăватсăр пулҫĕ.—Есĕ пĕре килĕшнĕ—сан каймаллах пулат,—тет Алексçейĕв.

— Епĕ пĕр хут кайма çеç килĕшнĕ, йаланлăха мар вĕт,—тетĕп.

— Çук ĕнтĕ, йаланах каймалла сан; çапла вăл,—терĕç ытти ват салтаксем те.

Анҫах та, телейе, ҫасах Карпатран ҫакса тухмалла пулнă пирки, çакăнтан кайран раçветкăна манăн пурĕ те икĕ хут çеç каймалла пулҫĕ.

## VII.

Епĕр фронта çитсе Раççей çарĕ Венкри ҫиккинҫен ҫакма пуçлиҫҫенех Карпатри пурнăç пĕр йевĕрлĕн шуса иртрĕ. Раççей çарĕ ку тĕле çитсе ҫарăнни пĕр уйăх йахăн шутланат. Кунтан Венкри çĕрĕ инçе мар. Вăйĕ хавшанине сиснĕ Раççей çарĕ текех малалла кайма хăйаймаст. Австрисем те хускалмасăр, Кермани пулăшасса кĕтсе тăраççĕ. Çавăнпа та хаҫ çине вăрçи вăйлах мар. Кашни кун кăнтăрла çеç тупăсемпе перкелешеççĕ. Йе малта тăракан хуралсемпе раçветҫĕксем вăхăтран вăхăт пăшалсемпе шатăртаттарни илтĕнет. Хăш-пĕр ҫух таçта, инçетре, пулемет такăртатса илет.

Апрелĕн йулашки кунĕсем. Çанталăк шăнкăр уйар. Сăртсем хушшинҫе—айалта шăрăх та пăҫă, çӳлте—уçă.

Çак кунсенҫе Карпатри тусенҫен пĕр-пĕр çӳлĕрехри тăррине хăпарса, унăн йăвăç-куракссăр кăвак сакăлти çине тăрса пăхсан, йĕри-тавра ҫĕрĕ карттин курăнса кайат: унта та кунта вăрманлă хĕсĕк хушăксем, симĕс лапамсем, хуçкаланҫăк таррăн çырмасем, хăмăрлă шанкав сăрт хысисем, вĕсенҫи сарă шырлансем, йурлă сăрт шĕврешкисем... Хăшпĕр варсенҫе—тăмпа шăлса лартнă сайра çуртлă пĕҫĕк йалсем курăнаççĕ. Вăл йалсем йаланах пĕр-пĕр пĕҫĕк йухăм шыв хĕррипе ларса тухнă. Ку йалсенҫе вилнĕ пек ҫĕмсĕр, салхуллă пурнăç шăвăнат. Йал çумĕнҫи айлăмсенҫе вăрçă пирки акаймасăр йулнă анасем. Вĕсем шурут куракпа кĕççеленсе выртаççĕ.

Сăртсем урлă айакри тĕнҫе хĕрри çутă шенкер сăнĕпе йăлтăртатса тăни курăнат. Хĕрӳ хĕвелĕ хăйĕн ҫĕрĕлĕх паракан çуттине пуринşĕн те пĕр танах йарса, пур ҫĕрĕ ҫуна та ырă пурăнăç парса

тăма шантарать. Унăн ҫутти Раҫҫей ҫĕрне те, унпа вăрҫакан Австрипе Кермани ҫĕрĕсене те, ҫавăн пекех ҫак патшалăхсем хушшинҫи вăрҫă хирне—Карпата та, пĕр пекех савса ăшăтать. Анҫах та етем, ĕмĕтсĕр сăхă етем! Ăна темĕн ҫитмест? Ырлăхлă хĕвел айĕнҫе пурин те ирĕклĕн савăнса пурăнас ҫух, вăл ахалех хăй пек ҫыннах кăшлать, вĕлерет, хăй пек ҫын пурнăҫнех вăхăтсăр сӳнтерет!

Ирхине ирех. Тупă-пăшал сасси сывлăша хумхатмасть. Лăпкă. Сăрт хушшисенҫи варсенҫе нимĕн сас-хура та ҫук. Фронт хыҫĕ те шăпах. Вăхăҫĕпе ҫех инҫетрен куккусем куклани, вак кайăк-кĕшĕксем ҫĕнкĕлтетни илтĕнсе, ҫуллă сăртсем ҫинҫе манми кил-йышшĕн, савнă тăванĕсемшĕн, ҫуралнă ҫĕршывĕшĕн тĕмсĕлсе ларакан салтак ҫунне йăпатаҫҫĕ. Ҫавăн пекех тата сăртсем хушшинҫи ҫуллă ҫăнкă ҫырмасенҫе шыв шăнкăртатса йухни илтĕнсе хăлхасене аҫашлать.

Акă хĕвел тухать. Сăрт тăррисем ăшăнаҫҫĕ. Тарăн хушăксенҫе йур кĕрĕҫĕ пек шуралса тăракан ҫăра тĕтĕре йерипен ҫĕкленсе, ҫӳлелле йавăнма пуҫлать.

Иртет тепĕр-икĕ сехет. Тĕтре сирĕлсе симĕс тĕнҫе уҫăлать. Ҫак самантрах тĕнҫе хĕрринҫен хыттăн тупă кĕрĕстлетни илтĕнет. Ҫĕр пиҫĕ ҫӳҫенет. Унҫҫен те пулмасть, кĕҫех сывлăша касса, ирхи кунпа паллашса, вĕҫсе те ҫитет курăнми ҫунатлă тимĕр кайăк—снарет. Вăл йуншăн антăхнă тискер кайăк пек усаллăн ӳлет, мĕкĕрет, шăхăрать. Тепĕр самант... Хайхискер ҫитсе те ҫапăнать. Вăл, аҫаҫапнă пек хайаррăн шартлатса, айри сăрта кисрептерет. Сасси сăртсем хушшинҫе аслати пек кĕрлесе кайать. Ку хайар сасăпа ҫын анҫах мар, таврари йăвăҫсем те сасартăк вăштăр сулăнса илсе, тепĕр саманта хытнă пек тӳрленсе тăраҫҫĕ. Кайăк-кĕшĕксем йурлама пăрахаҫҫĕ.

Акă каллех ҫавăн пек, хайар кĕрĕслетӳ! Акă каллех: иккĕ... виҫҫĕ... тăваттă!.. Тепĕр сехет иртет. Хайхи хăрушă кĕрĕстлетӳ умлăн та хыҫлăн, харăс та харăс илтĕнме пуҫлать. Ҫĕмрен сасă пуҫа минретет!

Ҫапла вара, касҫенех ҫав тупăпа снаретсем—кĕрĕстлетни, ӳлени, вĕсем аҫаҫапнă пек шартлатса ҫурăлни хăлхасене ывăнтарать. Хăш йĕтри (снарет) патах пырса вăркăнать. Вăл хăрушшăн ҫаритлатса ҫурăлса, ун татăкĕсем хайаррăн ӳхĕрсе сирпĕнеҫҫĕ. Хăш-пĕр катăкĕ ҫумранах шăхăрса вăркăнать. Пăхан, ҫумăнти йулташăвах ҫаврăнса анать... Ҫерем ҫĕкленсе таврана ҫапăнать. Пысăк кранат! Вăл есрел пек мĕкĕрсе вĕҫсе, акă патри вăрман ҫинех ӳксе ҫапăнать. Сасартăк, ҫĕр ҫул ӳснĕ авалхи йăвăҫсем тымарĕпе тăпăлса ӳкеҫҫĕ, йе вуллинҫен хуҫăлса, шăҫăр-шаҫăр луҫăркаиса ҫĕр ҫинелле тăрăнаҫҫĕ. Оккопсем кисренеҫҫĕ. Икĕ йенҫен те шăпăртатса тапра кĕрпи тăкăнать. Салтак ҫĕри хăрăк сулҫă пек ҫĕтренсе ҫӳҫенет.

Ҫак хушăрах куллен нимĕҫ йеропланĕсем 2—3-шер хут пирĕн пуҫ урлă вĕҫсе касҫкаласа ҫӳреҫҫĕ.

Каҫ пуласпа арттилери вуҫĕ тамалать. Унҫух фронтри салтаксен те сăн-сăпаҫĕ улшăнать. Кашни хăйне ыранҫҫенлĕх сывă тесе шухăшлать. Хăшĕ-пĕри, хуралла-мĕн кайас ҫук пулсан, килне ҫыру

çырма лараť. Теприсем виççěн-тăваттăн пухăнса ларса картла çаптараççě, йе хěçпăшал тасатаççě, йе оккоп тěпне пěр сикленми хутланса выртса вěçěмсěр шухăша кайаççě.

Каç пулаť. Йунлă сăрт таррисен сивлек шěврешкисем тěттěмпе витěнсе çухалаççě. Пăшал-пулемет хăй ěçне ěçлеме пăрахмасť-ха. Пуђккăсем шăхăраççě. Анђах кусем оккопри салтакшăн нимěн те хăрушă мар.

Вăрçă хыçěнђи çулсем тăрăх çутăлиђђенех сас-хура лăпланмасť. Ку çулсемпе суранлисене турттаракан автомопилсем, лавсем, вăрçă хатěрě турттаракан опоссем каллě те маллě васкаса ђупаççě.

Каçпа йе ирпе, арттилери лăпкă ђух, оккоп тăрăх çӳреме офитсерсем тухаççě. Вěсем кăнтăрла, лешсен арттилерийě çěмěрнě вăхăтра, таçта—плинташра (çěрпӳртре) лараççě. Ђăн та, ротпа çур рот кăмантирěсем кăнтăрла та çӳрекелени курăнаť. Аслă офитсерсем кăнтăрла курăнмаççě.

Полк кăмантирě ку вăхăтра пурě те пěреççех пырса карě. Вăл—полкковнěк, 50 йенне çывхарнă вăтам пӳллě, мăн хырăмлă арçын, тађка хěрлě пиђěпе йанахě çинђи çăмсене, кěске уссисенђен пуçне йăлтах хырса тасатнăскер, 3—4 офитсерпе пěрле ирěн оккоп хěррипе иртсе карě. Оккоп тěпěнђе ларакан салтаксене çӳлтен çеç пăхса пырса, вăл хăш-пěр кăлтăксене асăрхаť те вăхăтран вăхăт ђарăнса тăрса, хăй хыççăн пыракан офитсерсене аллисемпе сулкаласах ăс параť. Ку полкковнěке епě урăх курман. Анђах та «полкковнěк килет» тесе оккоппа хěçпăшал таврашне тасаттарнисем ђылай пулкаларěç.

Патталйун кăмантирě, тваткал хура сухаллă, патвар мушик кěлеткеллě капиттан, пит те хайар етем, оккопа тăрăх ђас-ђасах тěрěслесе çӳреť. Вăл салтаксене кăшкăраť, хăтăраť, çапкаласа илнисем те пулађђěç.

Анђах та фронтри салтаксем офитсерсенђен хăраманни мана малтанхи кунсенђе пит те тěлěнтерђě. Фронта çитиђђен офитсерсенђен хăрама, вěсене хисеплеме вěреннěскерсем, 'епěр фронтра та çавах пулě тесе шутланă. Кунта кěçěнрех офитсер пырсан, нумайшě хускалмаççě те, нимле «ђеçт» та памаççě иккен!

Пěрре çакăн пек ěç пулса тăђě. Патталйун кăмантирě пěр ватă салтака темшěн çапнă пулнă. Салтакě хирěç тавлашса кайаť. Кăпиттан ăна хытăрах хěсме тытăнаť. Çакна кура, салтаксем йулташě хутне кěрсе кăпиттан çине кăшкăрма пуçлаççě. Кăпиттан шикленет те, сассине йăвашлатса оккопран тухса вěçтерет.

Салтаксем офитсерсенђен хăрами пулса çар тисђиплинне хавшатни Раççей çарě ђакма пуçласан пушшех те уççăн палăрђě.

## VIII.

Апрелěн 24-мěшěнђе çěрле Карпат фронтěнђе пысăк ěç пулса тăђě. Çак вăхăтран пуçласа çěнтерӳ австри çарěсем йенне куçаť. Халђен малалла çěнсе пынă Раççей çарě паранса, сасартăк кайалла ђакма тапратаť.

Ҫак кунсенҫе Тарнов хулинҫен инҫе мар, Корлитсă тĕлĕнҫе, Керманин 11-мĕш ҫарĕ (Маккенҫен йăнрал арми) вырăс фронтне татса аркататĕ. Вырăссен ăна ҫарма хĕҫпăшал та, снаретсем те ҫителĕклĕ мар. Ҫакна пула Раҫҫей ҫарĕ Тарнов патĕнҫен ҫех мар, пĕтĕм Карпат талкăшĕпех кайалла ҫакма тытăнатĕ. Ҫапла вара, 9 уйăх таран текех малалла ҫĕнсе пынă австри фронтĕнҫи вырăс ҫарĕ ҫак каҫран пуҫласа кайалла тарма пикенет. Франтси ҫар штапĕ хушнипе пимне хĕрхенмесĕр малалла пынă Раҫҫей ҫарĕ Карпат сăрҫĕсенҫе мĕлйун ҫынна пĕтерни вырăс пуршуаҫишĕн ахалех пулатĕ.

Вырăс ҫарĕн снаретсем ҫитменни малтанах пуриншĕн те паллăҫҫĕ. Вырăссен арттилери сайраран ик-виҫĕ снарет персе йанă вăхăта, нимĕҫ арттилерийĕ 10—12 хут ҫаптаратĕ. Ҫавăн пекех тата пăшалпа та ытлашши персе пулҫккăсене «сайа йама» хушмаҫҫĕ.

Апрелен 24-мĕшĕнҫе, хĕвел анса ларсанах, пурне те хатĕр тăма хушрĕҫ. Ку прикас ҫар халăхне ҫӳҫентерсе йаҫĕ. Салтаксенҫен никам та нимĕн те пĕлмест: те малалла каймалла, те кайалла. Тĕлĕннĕ салтаксем кăҥ-каҥ ҫеҫ пĕр-пĕрин куҫĕнҫен пăхкаласа, йерипен мăкăртатса илеҫҫĕ: «Мĕн пулĕ ĕнтĕ?!. Пĕр уйăх йахăнах ку вырăнта лăпкă тăнаҫҫĕ те... ну, ĕнтĕ, пурнăҫ улшăнатĕ! Наступленийе йарсан, кайас пулатĕ: вилестĕк—пурĕ пĕрре вилмелле».. тесе пусараҫҫĕ хайсене хайсем.

Акă, тĕттĕм пулатĕ. Тусенҫе лăпкă. Тĕнҫе маҫҫи мĕлйун ҫăлтăрсемпе акăнатĕ.

Ҫĕрле, 12 сехет тĕлнелле, оккопсем тăрăх:—пурте кайалла ҫакмалла,—текен прикас вĕҫсе ҫитет.

Ку прикаса илнĕ хыҫҫăнах, пĕр самапт хушшинҫе пĕтĕм Карпат фронҫĕ кашăл хускалса, кайалла ҫакма тытăнатĕ. Кашни ҫар пулкки харпăр уйрăмĕсемпе йĕркеллĕн ушкăнланса, ансăр сукмаксемпе сăртсем хушшинҫи ҫуллă ҫулсем ҫинелле шăвăнатĕ. Свот хыҫҫăн свот, рот хыҫҫăн рот, паттаҫйун хыҫҫăн паттаҫйун, полк хыҫҫăн полк—ҫул ҫине тухса, пурте пĕр сассăр, васкаса хĕвелтухăҫнелле утаҫҫĕ.

— Мĕнле те пулсан шаппăнрах!—тесе тимлеҫҫĕ комантирсем. Ҫархалăхĕ ҫăнахах та шăп. Хыҫра ҫеҫ, нимĕҫсене улталаса тытса тăма йулнă отретсем пăшалпа пĕр тĕлсĕр, хăвăртран хăвăрт шатăртаттарни илтĕнет.

Вырăс ҫарĕн пăшал сассипе шуйханнă австрисем унтан та кунтан ракket вăркăнтарма тытăнаҫҫĕ. Вăл ракketсем ҫип хĕлхемлĕн йарăнса хăпарса, тӳперен вут кайăк пек вут-хĕм сапса анаҫҫĕ. Ракket ӳкекен сăрт тăррисем пĕр самантлăха йалтăр ҫутăлса каллех лап! тĕттĕмленсе лараҫҫĕ.

Ҫирĕм ҫухрăма йахăн утрăмăр тул ҫутăличчен. Акă шурăмпуҫ умĕпе хăпарнă уйăх ҫурли шурăхса ҫутă ăшне путрĕ. Хĕвел тухасси те инҫе мар. Тен вăл тухнă та пуҫ, анҫах пире сăртсем урлă курăнмаст-ха. Ҫак вăхăтрах пирĕн 51-мĕш полк ҫакма ҫарăнса, пĕр сĕвекрех сăрт ҫине хăпарса карталанҫĕ.

Оккоп ҫавма хушрĕҫ. Тытăнтăмăр ҫакăлтама ҫуллă сăртăн вăрăм ҫурăмне.

Ђылай ҫӳлө хӑпарнӑ пирки, сӑртсем урлӑ кас-кас вӗђкӗн сивӗ ҫил пырса ҫапӑнат. Йӗри-тавра тин ҫеҫ папкаланнӑ сайра йумансем сиввӗн карласа лараҫҫӗ. Ӑшӑнмалла тесе ӗҫлетпӗр пикенсех. Ђуллӑ сӑрт кӗреҫепе ђавӑнмаст. Киркӑсем кирлӗ. Анђах та киркӑсене, йӑвӑр пирки, пирӗн салтаксем нумайӑшӗ йурийех ҫухатса хӑварнӑ.

Оккопа пилӗк таран ђавнӑђђӗ. Сӑртсем урлӑ хӗвел курӑнат. Унђђен те пулмаст, хыҫал йенђен тупӑсемпе кӗрӗстлеттерни илтӗнет. Акӑ шӑхӑрса ҫитеҫҫӗ шрапнелсем. Вӗсем пирӗн тӗле ҫитиђђенех, унта та кунта тӳпере шартлатса ҫурӑлаҫҫӗ. Каллех тупӑ сасси, хайаррӑн шӑхӑрни, шартлатса ҫурӑлни!

Хуйханнӑ офитсерсем таҫтан ҫитсе тӑнӑ патталйун кӑмантирӗ тавра пуҫтарнаҫҫӗ. Ҫур пӳ таран оккопра тӑракан салтаксен куҫӗсем пурин те офитсерсем ҫинђе. Вӗсем пипоккӑљсемпе тупӑ сасси илтӗнекен ҫӗрелле, хыҫри сӑртсем ҫинелле тинкереҫҫӗ.

Нумай та иртмест. Патталйун кӑмантирӗ, тӑваткал хура сухаллӑ кӑпиттан:—ђакмалла!—тесе ласт сулат аллине.—Ђакмалла!—тесе кӑшкӑраҫҫӗ ротҫӑ кӑмантирӗсем.—Айтӑр, ђакмалла!.. теҫҫӗ йерипен свот кӑмантирӗсем.

Тупӑ сасси йӑвӑланат. Ђикелене-ђикеленех ђупса анатпӑр тарӑн хушӑкри ҫул ҫине. Пирӗн пекех ђупаҫҫӗ ытти патталйунсем те. Ђакаҫҫӗ ытти полккӑсем те.

Ђакатпӑр 5—6 ҫухрӑм. Каллех сӑрталла хӑпартаҫҫӗ. Каллех карталанса оккоп ђавма пуҫлатпӑр. Нумай та ђавман. Каллех тупӑсем кӗрӗстлетни... снаретсем, шрапнелсем хайаррӑн шартлатса ҫурӑлни! Айта, каллех хыпалансах ђакма!

Ҫапла вара, апрелӗн 25-мӗшӗнђе кунӗпех, темиҫе хут ђарӑнса тӑрса темиҫе хутђен те оккоп ђавма пуҫӑнтӑмӑр. Анђах ниҫта та ик-виҫӗ сехет таран ђарӑнса тӑни пулмарӗ. Кунӗпех пӗрре сӑрталла талпӑҫтарса хӑпартса, тепре—анаталла ђупса антарса хӑшкӑлтарђӗҫ.

Австри ҫарне пӑртак та пулин ђарса тӑрса, вырӑс ҫарӗн опоссене тартма, тата пахарах пурлӑх таврашне куҫарма май парас тесе шухӑшлани пурнӑҫа кӗмерӗ. Шуйханса арканнӑ кӗтӗве йеркелеме йӑвӑр. Ҫавӑн пекех аслӑ Раҫҫей ҫарӗ те, пӗрре арканнӑскер, нимӗнпе ђарӑнмасӑр кайалла тарма пуҫларӗ.

## IX.

Икӗ талӑк ђарӑнмасӑр ђакнӑ хыҫҫӑн, апрелӗн 26-мӗшӗнђе каҫаллапа, Лиҫко текен слопотана ҫитрӗмӗр («Мисточко Лисько»). Лиҫко тӗлнелле Карпатсем сӗвекленеҫҫӗ. Венкри йенђе ҫех ҫӳллӗ сӑрт шӗврешкисем кӑвакарса тӑни курӑнат. Сӑртсем сӗвекленсен те, ку тӗлте ђылайах ҫӳллӗ вырӑн-ха.

Ҫапла вара, Карпатсене илессишӗн нумай йун тӑкса 3 уйӑх ытла ҫапӑҫнӑ Раҫҫей ҫарӗ халӗ ӑпа виҫӗ талӑк хушшинђех кайалла парса хӑварат. Пӗр-пӗрипне кӗрешекен кӑпиталиссен кӑмӑлне, Карпат тӑвӗсем ҫинђе мӗлйун ӗҫсыпни хӑйӗн вӑйпитти пурнӑҫне вӑхатсӑр сӳнтерет.

Каçа хирĕç Лиçкоран тухса, пĕр-икĕ çухрăм ђакрăмăр та оккопсем ђавма пуçларăмăр. Пире пĕр пĕђĕк рашђа тĕлеш пулђĕ.

Çĕрле, хурал ђеретне тăрса ирттерсен, мана та рашђана кĕрсе çывăрма ирĕк пађĕç. Хытă ывăннăскер, епĕ выртсанах вилнĕ пекех çывăрса кайнă. Пĕр кана çывăрнă хыççăн куçсене уçса пăхрăм. Тул çутăлса кайнă. Ăшă, уçă. Вĕтĕ çăмăр лăстлатат.

Çĕрле, пăђ тĕттĕм ђух пырса выртнипе, епĕ хам мĕнле вырăна выртнипе те пĕлмен. Мап тавра çав тери илемлĕ вырăн иккен! Тавраллах йаштака кавăçсем, крапсем, вĕренесем пӳрĕ çилпе хуллен хумханса лараççĕ. Айалта—хунав-тĕмĕсем, унтах—сарă, кăвак, шупка ђеђексем. Вĕсем йешĕл курăк ăшĕнђен пытанмалла выђанă пек ђалхăрса пăхса лараççĕ. Çӳлтен тăкăнакан тумлак шывĕсене антăхсах çăта-çăта илеççĕ.

Çаксене пăхса ларса, епĕ хамăр вăрçă хирĕнђе тăни иккенне те йăлтах манса кайнă. Тинех пĕр-икĕ саманта çуркунне тивлеђĕпе киленмеллех киленнĕ. Лăпкă вăрман ăшĕнђе шухăшпа тăван çĕршыва çитсе тăнă. Кĕçех çав илемлĕ йăвăçсем хушшинђе хăвăн тăвану, йе çывăх тусу пырса тăрассăн туйăнат.

Анђах та... ку тутлă ĕмĕтсем нумайа мар. Сасартăк прикас: ђакмалла!—тени илтĕнет. Тăнна-пуçна каллех вăрçă хăрушлăхĕ илет хупласа. Васкасах хускалса утатăн.

Виçĕ çухрăма йахăн ђаксан, Литтовскипе Волынски полксем пĕр çӳллĕ тăвайкки тăрăх карталанса, пысăк оккопсем ђакалама пуçларĕç.

Епĕр йышăннă сăртлам икĕ йенĕпе те сарлака та тарăн васансем. Пирĕн малти ђи пысăк оккопа сăртлам тӳпи тăрăх ђакаламалла. Хыçалти оккопне хыçри васан тайлăмĕ хĕррипе ђавмалла. Икĕ оккоп хушшинђе пĕрлештерекен оккопсем тумалла.

Оккопсем тунă вăхăтрах, хăш-пĕр салтаксене çывăхри рашђаран йăвăçсем касса йăтма хушрĕç.

Кăнтăр вăхăтнелле. Çанталăк уйартат. Хăвăрт шăвакан таткаланђăк пĕлĕтсем çех тапхăр-тапхăр тӳпери хĕвеле хупăрлаççĕ.

Тăвайкки тăрăх вĕçĕхĕррисĕр çархалăхĕ вĕшĕлтетет: хăшĕ ђакалаççĕ, хăшĕ çумри рашђаран вĕрлĕх, çапă, йе çерем касса çĕклет. Ик-виçĕ кун хушши ђипер апат çименнипе тата нумай утса ĕшеннипе, хăш-пĕр салтакĕ ывăнса çитнĕ. Ун пеккисем кăшт та пулин ларса канма тăрăшаççĕ. Анђах та хăйар фелтфепĕлпе свот кăмантирĕсем, йе тĕл пулсан офитсерсем те, вĕсене ђасах пырса лепктерсе илеççĕ.

Каçаллапа икĕ оккопĕ те хатĕр. Вĕсен çийĕсене сайхалăхпа çапă сарса, çерем витсе хутăмăр.

Пайап кунĕпех австрисем пени илтĕнмест-ха.

Йăвăр ĕçпе ывăннă хыççăн, каçаллапа, çархалăхĕ лăпланса канма ларђĕ.—Е-ех, халех çитес марђђĕ ку австрисем!—теççĕ ĕшеннĕ салтаксем. Пирĕн ротри ђăваш салтакĕсем те пĕр ушкăна пухăнса ларђĕç. Ку ушкăнра пирĕн Урттем йатлă матур ђăваш халлапа çапма тытăнат:

— Ей-й, тăвансем, куђанса ĕç тухас çук... Калаçар, кулар пĕрре вилиђђен, тет Урттем. Акă пуслат вăл хăйĕн иртне пурнăçĕ

çинҫен çаптарма. Анҫах Урттем сӑмахӗ ҫӑваш çамрӑкӗсене илӗртмест. Калат вӑл хӑй ашшӗпе Нурӑс пасарне тухса аш-какайпа сут тунисем çинҫен, калат пысӑк услам илни çинҫен, ӗçсем ӑнни çинҫен, лайӑх апатсем çини çинҫен тата ыт. те.

— Урттем!.. Йевçейӗв!.. есӗ ун çинҫен мар, урӑххине кала...

— Мӗнле салтака .кайнине каласа пар!..

— Мӗнле туй тунисене кала!..

Тӗрлӗрен, савӑнӑçлӑрах халлап калама хушаççӗ Урттеме. Анҫах Урттемӗн урӑххине калас килмест, çакна кура, халлапа пуçлаççӗ урӑххисем. Акӑ Йакку Коршков пуçлат хӑй салтака мӗнле тухса кайни çинҫен. Ку çамрӑксене йӑпатат. Урттем Йевçейӗв хӑрах йеннелле тухса, нимӗн ҫӗнмесӗр тӑрат.

Çак вӑхӑтрах, пирӗнтен инçе мар, оккоп хӗррине тепӗр ушкӑн пухӑнса тӑрат. Пӑхатпӑр: ушкӑн варринҫе хамӑр рот кӑмантирӗ. Унӑн, тем майпа, кӑмӑлӗ çаврӑннӑ. Вӑл салтаксемпе ахаҫ çын пекех шӑкӑртатса калаçса ларат. Офитсерсем ун пек йӑвашшӑн калаçса ларнине епӗ халҫҫен курманҫҫӗ. Пыратпӑр ун патне.

— ... Епӗр кӗперсене çӗмӗрсе хӑвартӑмӑр. Çавӑнпа та австрисен çурран çарӗ çитсен те, арттилерийӗ халех çитейес çук-ха. Арттилери çитиҫҫен епӗр вӗсене 2—3 кун ҫарса тӑма пултаратпар,—тет офитсер.

— Калаҫҫӗ-ха, вашшӑ плохороти, мӗншӗн ҫакма пуçларӗ капла пирӗн Раççей çарӗ?—терӗ пӗр хисеплӗ ватӑ салтак. Ку салтак ыйтуне тата ик-виçӗ сасӑ хутшӑнса паттӑрлатрӗç.

— Акӑ мӗншӗн,—тесе пуçлат пӗр тӗмеке çине тайӑнарах ларнӑ ырхан поруҫҫӗк.—Нимӗçсем Тарнов патӗнҫе пирӗн фронта татрӗç. Вӗсем пирӗн хыçа çӗмӗрсе кӗрессипе хӑратаççӗ. Çавӑнпа пӑртак васкарах та ҫакмалла килҫӗ,—терӗ вӑл ура çине çӗкленсе.

Епӗр тинех хамӑр мӗншӗн ҫакма пуçлани çинҫен пӗлтӗмӗр. Поруҫҫӗк сӑмахӗ пухӑннӑ салтаксене шартах тӗлӗнтерсе йаҫӗ. Мӗншӗн тесен, Раççей çарӗн фронтне татни—унӑн тӗрекӗ хавшанине пӗлтерет.

— Ну, апла... ку вӑрçӑ ҫарнассин вӗçӗ-хӗрри курӑнмаст халӗ!—тесе алӑсене ласт! сулҫӗç ватӑ салтаксенҫен хӑшӗ-пӗрисем.

## X.

Еççенҫен пушансан, ҫей вӗретме шыв ӑсас тесе, епӗ хыçалти улӑха антӑм. Хӗвел анасси инçе мар. Унӑн йулашки çутти пирӗн тӑвайкки питне шӗвек йунпа сӑрланӑ пек шупкалатса хӗретет.

Кайалла хӑпарнӑ ҫух, каçпалахи çанталӑк сӑнӗпе йӑпанам тесе, лартӑм епӗ симӗс курӑклӑ тӑвайкки варрине. Пирӗн полксем тӑракан тӑвайкки, çӳллӗ пулсан та,—сӗвек. Çавӑнпа ӑна кунти руççинсем вӑрçӑҫҫен сухаласа тырӑ акнӑ. Халӗ вӑл шурут курӑкпа кӗççеленсе выртат. Пӑхатӑп улхалла. Унта ларат пӗр пӗҫӗкçӗ йал. Йал варринҫе виçӗ тӑрлӑ шурӑ ҫиркӳ. Тавралла йӑвӑç пахҫисем. Йалӗ таврашӗнҫе пӗр сын мӗлки те курӑнмаст. Епӗр ҫакаланнине кура вӑл йал унта

кĕҫех ҫапăҫу пуласса сиснĕ мĕн. Тăвăл умĕн кайăк-кĕшĕксем вăрман вĕтлĕхне ҫăмнă пек, кунти хресҫенсем те таҫта пытанса пĕтнĕ.

Мăнтарăн хресҫенĕсем, темĕн ҫисе темле пурăнкалаҫҫĕ! Тырă акман. Ҫĕрулми ларткаланă та, ăна та выҫă салтаксем ўснĕ-ўсменех тăпăлтарса пĕтереҫҫĕ.

Епĕ ларакан хысара пирĕн салтаксем хăшĕ анаҫҫĕ, хăшĕ хăпараҫҫĕ. Вĕсем пурте ман пекех шыв йăтакансем.

Йĕри-таврана пăхса ларнă вăхăтрах епĕ пысăк шухăша карăм.— Кĕҫех ку тĕлте акă ҫапăҫу пулĕ... Анҫах та, епĕ мĕнле халлĕн йулăп-ши? Тен, ĕмĕрлĕхех ҫакăнта ўксе йулăн та, вăрҫă ҫарăнсан руҫҫин аҫисем пирĕн ҫинҫе сухаласа тырă туса тăрĕҫ. Вĕсен тырпулĕ пирĕн шăмшаксенҫен пулнă тăпраран сĕткен сăрхăнтарса илĕ. Ăҫта унҫухне, вара, Ҫемен?! Санăн йатна асăнакансем пулĕҫ-ши? Айакри тăванусем есĕ ăҫта выртнине пĕлĕҫ-ши? Ҫук, никам та пĕлеймĕ!—тетĕп.

Ҫакăн хыҫҫăнах тата ҫамрăк ĕмĕр вăхăтсăр ирттесси те куҫантарат:—Ех, ҫамрăклăх! Вăхăтсăрах вăрҫă хирĕсенҫе пĕтмелле... Кам ирĕкĕпе ку? Турă ирĕкĕпе-и?.. Турă хăй тунă етемсемпе вĕсене асаплантарса вĕлермелле выҫат иккен!?.

Пĕрре пĕтсен хăна-ху нимĕн те пĕлмĕн. Анҫах, атте-анне, тăвансем те макăрсах вилĕҫ!.. Тата ҫун савниҫĕм... йуратнă Майкка... нихҫан манми Клавти... тепрер курайса ыталайтăмҫҫĕ сире!..

Вĕҫĕмсĕр шухăшпа ăшҫик кўтсе ҫитет.—Ну, ҫитĕ! Пуҫа усни уссăр,—терĕм те сасартăк сиксе тăтăм.

Хĕвеланăҫ хĕррипе ҫўхе шурă пĕлĕт карăнат. Уптах, пĕлĕт хыҫне анакан хĕвелĕн йулашки урисем тўпенелле хирĕнеҫҫĕ.

Оккопа таврăнса, тулли шывлă витрене кăвайт ҫине ҫакса йатăм. Ҫак вăхăтрах пирĕн полкка хамăрпа тантăш украин ҫамрăкĕсем пырса ҫитрĕҫ.

Епĕ ҫей ĕҫсе ларнă ҫĕре хамăр ротри вырăсла пĕлмен икĕ ҫăваш аҫи пырса тăҫĕ. Вĕсем ҫитсенех мана:—Пирĕн Йекорăв ҫирлерĕ. Вилес пекех... Калаха, Ваҫҫилйĕв, фелтфепĕле... ăсаҫҫăр ăна Раҫҫейалла, терĕҫ.

Ҫей ĕҫессе пăрахсах, карăмăр васкаса Йекорăв патне. Вăл таррăн оккоп хуҫланҫăкĕнҫе месерле выртнă та, путнă куҫĕсене ҫарса пăрахса вĕсене тискеррĕн выҫантаркалат.

— Йекорăв! мĕншĕн есĕ халҫҫен никама та каламарăн? Хут хăвăр свотнăйа ҫех пĕлтермеллеҫҫĕ, терĕм епĕ ăна.

Вăл аран, тытăнкаласа:—Епĕ сывмаррине свотни ĕнерех пĕлнĕ... хыпмаст... вырăсла калама пĕлместĕп,—терĕ.

— Мĕн ыратат сан?

— Ăшҫик... ҫĕре... темскер... Сив шыв ĕҫнĕҫҫĕ...—терĕ вăл аран-аран.

— Вăл васкаса ҫакнă хыҫҫăн, каннă ҫух сив ҫăл шывне ĕҫпĕрен ҫирлерĕ пулмалла,—терĕҫ унăн йулташсем.

Епĕ хыпалансӑх фелтфепĕл патне ҫупрăм. Каларăм Йекорăв

ҫинҫен. Вăл: ăсатма лавсем ҫук, ҫывăхра пулӑнитсă та ҫук. Вилсен те вилĕ ĕнтĕ,—терĕ те урăх нимĕн те ҫĕнмерĕ.

Каллех Йекорăв патне ҫупатăп.

— Калаҫҫĕ, Йекорăв,—есĕ хăш вулăс, хăш йал?.. Килте кам пур санăн?—тесе тĕпҫетĕп.

Йекорăв ăнтрашкаласа илҫĕ. Йерипен каласа парат. Вăл Кипек вулăсĕнҫи Мăн Йавăш ҫынни иккен. Килĕнҫе амăшĕ тата йăмăкĕ пур. Ҫухăн пурăнаҫҫĕ.

— Епĕ мĕнле вилнине аннепе ҫыру йарса пĕлтер,—терĕ вăл йулашкинҫен.

Ҫак самантрах оккоп тăрăх прикас илтĕнет. Ку прикас пурне те харпăр вырăнне тăрса хатĕр пулма хушрĕ. Ман Йекорăва пăрахса хăвармалла пулҫĕ.

* *
*

Ҫĕрле. Тĕттĕм. Пирĕн рот малти оккопра. Вăл сыхă. Оккоп умне вăрттăн хуралсем тăратрĕҫ. Кăмантирсем тăтăшах оккоп тăрăх ҫӳреҫҫĕ. Вĕсем ыйхăласа тайăннă салтаксене тапа-тапа иртеҫҫĕ.

Сыхă тăма хушнине пăхмасăрах, ире хирĕҫ пурте пекех оккоп тĕпне ӳпĕне-ӳпĕне ҫывăрса кайнă.

Сасартăк:—тăрăр!—тесе хайаррăн кăшкăрни шартах вăратса йаҫĕ. Сиксе тăратăп. Пурте ман пекех хăранипе хыпăнса ӳкнĕ. Хăшĕ оккоп ҫӳреҫипе лăпҫанса малалла пăхат, хăшĕ оккопран сиксе тухат. Пурин те пăшалсем алра. Пурте харăс сиксе тăрса кăштăртатма пуҫланипе, тултан нимĕн сасси те илтĕнмест. Епĕ те тухса пăхатăп. Австрисем курăнмаҫҫĕ. Йĕри-тавраллах, ҫӗртен пĕлĕте ҫитех ҫăра тĕтре тарат. Таҫта вăйлăн пăшалсемпе шатăртаттарни илтĕнет. Хамăр умри хуралсем те сайран перкелешеҫҫĕ. Ăҫта, кам кама перет? Нимĕн те курăнмаст. Умри хуралсем тĕрĕссĕн пенине илтсен тин лăплантăмăр.

Тул ҫуталат. Перкелешӳ вăйланат.

Кăнтăрла ҫитеспе австрисен арттилери те сасă хушрĕ. Тупăсемпе, австрисем 10—12 хут кĕрĕслеттернĕ пăхăта, вырăссем аран пĕрре, йе иккĕ персе йараҫҫĕ.

Тĕлĕнмелле: рот кăмантирĕ ĕнер ҫех—епĕр кĕперсене йăлтах сирпĕтсе хăвартăмăр, ҫавăнпа та вĕсен арттилерийĕ ҫасах ҫитес ҫук-ха, тесеҫҫĕ. Акă пайан, итле те савăн,—австри орутийĕсем урса кайсах кĕмсĕртеттереҫҫĕ!

Кăнтăрла пирĕн рот хыҫри сыхлăх оккопне куҫрĕ. Кунта куҫинҫен Йекорăв патне кайса пăхрăм. Вăл тăнран сулăннă, ҫăварне кап-кап карса ассăн сывласа ҫех выртат.

Сыхлăх оккопĕнҫе ларнă ҫух виҫкĕн сивĕ ҫил тухрĕ. Тĕтре куписем таткаланса ҫурҫĕртен кăнтăралла ҫупаҫҫĕ. Сыхлăх оккопĕн хыҫал йенĕ ăшăх пирки, улăх урлă вĕҫсе пыран ҫил вирлĕн ҫитсе ҫапса пирĕн шăмшаксене виттĕрлет. Ҫӳхе шенел хайар ҫиле ҫарай-маст. Шăнса шăлĕсене шаклаттаракан пулнă салтаксем аптранипе палаткă ҫĕркенсе выртаҫҫĕ. Палатка та ăшăтаймаст.

Хăшĕ-пĕри харпăр пуçĕпеле йатлаçса выртат: Мĕнле ку çĕршыв?! Айалта—вĕри, çӳлте—сивĕ! Виçĕмкун шăрăхпа кăштах пиçсе вилеймерĕмĕр,—пайан шăнтса вĕлерет... Акă сана Карпат—Калитси!.. Мĕне кирлĕ пулҫĕ-ха ку çĕршыв?!.—тесе хирĕçеççĕ.

Сиввине пăхмасăрах, австри снареҫĕсем хайаррăн ӳхĕреççĕ, мĕкĕреççĕ. Вĕсем, нимскере те уйамасăр, унта та кунта ӳксе аркатаççĕ. Хăш-пĕр снареҫĕ патах пырса вăраннат. Оккоп çипелло ҫалтăр-р! тăпра сирпĕнет. Снарет ванҫăкĕсем уласа иртеççĕ. Çакна пула хăш салтакĕ, хăй те сисмест, вăрах сасăпа тилмĕрет:

— Турă, çырлах-ах!.. Çăлсам турă!..

Хăшĕ тата, хыççăнах усал сăмахсем каласа йатлаçат те, сивĕ кăмăлпа:—çап! çап, айта лайăхрах!.. тесе, лăх! лăх! лăх!.. лӳпперĕн кулнă пек туса илет.

Тĕттĕм пуласпа арттилери вуҫĕ тамалҫĕ. Çантăлăк та лăпланат. Австри çарĕ, хытă пеҫĕ пулин те, хăй курăнмарĕ.

Тĕттĕм пулсан, пирĕн рота ирхине хыттăн перкелешнĕ рашҫа хĕрринелле илсе карĕç. Сĕм тĕттĕм виттĕр йăпшăнса утса, хура рашҫа хĕррине çитсе выртрăмăр. Австрисем пире сиссе пулас, вăрман ăшĕнҫен пăшалсемпе пĕçерттерме тытăнҫĕç. Вĕçĕмсĕр пуҙккă шăхăрат. Епĕр кашни хăйне ваҙҙи уйрăм тупăк шăтăкĕ пек ăшăх оккопсем туса выртрăмăр.

Хĕвелтухăçĕнҫе шурăмпуç кăвакарат. Пуҙккăсем алхасса шăхăрма ҫарăнмаççĕ. Каллех ҫакма хушакан прикас вĕçсе çитрĕ. Пурте шăппăн йăпшăнса хыçри улăхалла антăмăр. Çул çипҫе тĕррĕнлетсе вĕçекен пĕр-пĕр суккăр пуҙкки кĕç-вĕç пырса çапăнассăн туйăнат. Анҫах та ҫиперех улăха анса çитсе, пĕр пĕҫĕк çулпа хамăр полкка хуса çитрĕмĕр.

Тул çутăлса килет. Уппа пĕрлех çӳхе çурла пек йулнă уйăх куккăри те сиксе тухрĕ. Вăл пĕр тапхăр епĕр тарнине тиркерсе пăхрĕ те, йерипен сăнсăрланса хĕвел çутти айне путса çухалҫĕ.

Икĕ айăккипе те лапсака йăвăçсем ларакан ҫуллă аслă çул тăрăх вĕçĕ-хĕррисĕр çурран çар вĕркĕшет. Васкаса утнипе тинех шăмпаксем ăшăнса тарлама та пуçлаççĕ.

Хĕвел тухат. Апрелĕн 29-мĕш кунĕ пулса тăрат. Раççей çарĕ пĕр ҫарăнмасăр ҫакат. Çула тăрăх ларакан ҫеҫекленнĕ каштансем, априккоссем, хура вĕренесем, çăкасем—кăнтăр йенҫен çаврăннă йăваш çилпе вăшăл хумханса, пире сывлăх сунса ăсатаççĕ. Вĕсен ҫеҫекĕсен тутлă шăрши ирхи уçă сывлăша пыллантарат. Таçтан, инçетрен, Карпатсем хушшинҫен куккуксем куклани йантратăт. Çул хĕрринҫи ҫăтлăхсенҫен вĕт-шак кайăксем ҫĕнкĕлтетни илтĕнет. Кайăк-кĕшĕксем Карпатра пайанхи пек хавассăн йурланине епĕ илтменҫĕ. Мĕншĕн савăнаççĕ-ха вĕсем пайан? Раççей çарĕ ҫакса тухнăшăн мар-ши? Вырăс çарĕ кайсанах Карпатсенҫе йунлă вăрçă иртсе лăпкă кунсем çитессе сисеççĕ пуҙ вĕсем. Çавăнпа та хĕпĕртесе йурлаççĕ!

## XI

Апрелён 29-мёшёнҫех. Кăнтăр вăхăтнелле Сан шывĕ урлă каçрăмăр.

Сан васкаса шарлаккăн йухать. Вăл Карпатсенҫен тухса çитнĕ тĕлте унăн сарлакăшĕ—20—30 ҫалăш, тĕлĕпе ытларах та. Сан шывĕ Тнестăрăн ҫи пысăк йуппысенҫен пĕри.

Сан урлă лайăх кĕперех пурҫĕ. Вăл кĕпере апрелĕн 28-мĕшĕнҫех çĕмĕрҫĕç. Çавăнпа та пирĕн çурранах ишсе каçмалла пулҫĕ. Сан урлă каçма пĕр сарлака та ăшăх вырăна суйласа тупрĕç. Ку тĕлтре шыв ҫи варринҫе те пĕç кăкĕ таран çеç. Анҫах та, шывĕ тăвăллăн ҫупса йухнипе, урлă каçакансене çĕклесе каймах хăтланать.

Сан урлă каçнă вăхăтра пирĕн полк йăлтах арканса карĕ. Тепĕр çырана каçса, симĕс çаран тăрăх утнă ҫух, тĕрлĕрен ротсенҫи ҫăваш салтакĕсем ҫылайĕшĕ пĕрле пухăнса çитрĕç.

Тăвайккинҫи вăрман йеннелле хăпаратпăр. Пире паллакан ҫăваш салтакĕсем виççĕн хуса çитрĕç. Пăртак калаçкаласа пырсан, вĕсенҫен пĕри сасартăк:

— Ваççилйĕв!.. пирĕн Куçмин вилҫĕ, тесе хуҫĕ.

— Мĕнле Куçмин? Хăш вулăссем?

— Вăн, Мокшанра пĕр ротрах вĕреннĕскер... Кипек вулăссем,— Упи аҫи... палламастăн-и, вара?

— Йепле палламастăп,—паллап... Астумастăн-и, вăрçа килнĕ ҫух, вакун çинҫе епĕ: тепĕр уйахрап пирĕн çак вакунри вăтăр ҫăвашран çурри те йулмĕ—тенине хирĕç, çав Куçмин: ку тĕрĕс... нумайĕшĕ вилĕпĕр... такăшсен вилĕм шăпи те умрах тăрать ĕнтĕ çакăнти çамрăксен,—терĕ те пĕтĕм вакун шăп пулса çўçенсе карĕ, терĕм епĕ.— Астăватăп ăна, терĕ ман халлапçă.

— Мĕнле вилҫĕ вара?

— Плинташ çине спарет ўксе çиҫĕ çынна аркатрĕ. Вĕсенҫен 3-шĕ çавăнтах вилҫĕç. Куçминăн хырăмĕ çурăлса кайса, хырăмлăхĕ йăтăнса тухрĕ. Хăй çапах та ҫас вилеймерĕ: ахлатать, кăшкăрать, йынăшать... Шеремет, вăл хăйне хоçпиттăле йăтса кайнă ҫухне, ноççилккă çинҫех вилсе кайрĕ.

— Пит те шел аҫана... ăслă-пуçлă, йĕркеллĕ çынҫĕ вăл, терĕмĕр Куçминшăн куљљанса.

Çапла калаçкаласа пынă вăхăтрах, пирĕн çинелле икĕ йероплан вĕçсе пыни курăнҫĕ. Ку йеропланесем—нимĕççен.

— Ҫасрах—вăрмана!—кăшкăрнă сасă илтĕнҫĕ.

Пурте, йеропланесем кĕç-вĕç помпă пăрахаççĕ тесе сехĕрленсе, хурҫка хăвалакан кайăк ушкăнĕ пек ҫăл-пар! саланса, умри вăрмана тарса кĕтĕмĕр.

Йеропланесем помпă пăрахни пулмарĕ. Вĕсем епĕр мĕлле ҫакнине çеç хыçран пăхса пыраççĕ пулас. (Пĕрикĕ кун малтан çеç пирĕн арттилери хыçрап пăхса пыракан австри йеропланне персе антарнăҫҫĕ).

Тепĕр сехет пекрен пурте йĕркеленсе çитсе вăрмантан тухса утрăмăр.

Ҫылай ҫакрăмăр Сан улăхĕпе. Кăнтăрла тĕлĕнҫе ҫаранса тăрса, Сан çыранĕ хĕррипе оккопсем ҫавтарҫĕç. Оккопсене кашни рот хăйне уйрăмăн, татăкăн-татăкăн ҫакаларăмăр. Пирĕн 13-мĕш рот оккопĕ сакăлта та ҫăнкă çыранла Сан шывĕ хĕррипҫех пулҫĕ.

Оккопсене анҫах ҫавса пĕтертĕмĕр. Каçаллапа австри çарĕ пире çитсе те перĕнҫĕ.

Австрисем малтанах шултра арттилерипе çунтарма тытăнҫĕç.

Пирĕн оккопран икĕ çухрăма йахăн хыçалта Санок ҫукунçулĕ выртат. Ҫав ҫукунçул айăккинҫи çулсемпе пĕр вĕçĕмсĕр лав иртет. Вăл лавсем—пирĕн. Вĕсем кайалла ҫакаççĕ. Ҫак самантрах ҫукунçулпе, пĕр тăвайкки хыçĕнҫен, кайа йулнă пуйăс шуса тухрĕ. Австри арттилерийĕ ҫи малтан çав пуйăспа лавсене курса, вĕсене çаптарма пуçларĕ. Пуйăс умри сăрт хыçне тарса хăтăлҫĕ. Анҫах та лавсенҫен нумайăшне çĕмĕрҫĕ.

Лавсене пĕтерсен, австри арттилерийĕ ҫасах пирĕн оккопсене хыпашласа тупрĕ. Йĕтре хыççăн йĕтре тытăнҫĕ пирĕн çинелле вăркăнма. Арттилерипе çунтарнă вăхăтрах, австрисен çурран çарĕ те пирĕн çинелле кĕме пуçăнат. Кăвак тумлă çар колоннисем, умлăн та хыçлăн, ĕретĕн карталанса, Сан лешйенҫи тăвайкинҫен аналталла ҫупма тытăнҫĕç. Вĕсем анатри рашҫасене, вĕтлĕхсене йышăнса илме тăрăшаççĕ.

Вырăссем салпăн пенипе австрисен çурран çарĕ пытанҫĕ. Вĕсене Сан хĕррине йамарĕç.

Арттилери ҫарăнмаст. Ак умлăн та хыçлăн 3—4 пысăк снарет пирĕн çинех пырса вăркăнат. Сасартăк:—ао-ао-ао!.. О-о-о!..—хайаррăн кăшкăрни илтĕнет.

— Кам ку пĕтрĕ?!

Пăхсăн, пирĕн паттăр свот кăмантирĕн—Тавыҫукăн сылтăм ури ҫăркуççи таранах арканса кайнă. Унпа пĕрлех тепĕр салтакăн хул калакки çĕмĕрĕлнĕ. Сураланнисене çĕклесе кайрĕç.

Паттăр Тавыҫук вырăнне свот кăмантирĕ пирĕн оттелени пуçĕ Алекçейĕв пулат. Алекçейĕв манпа тусланса çитрĕ. Вăл кирек мĕнле ĕçре те мана хӳтĕлет: хуралла йамаст, раçветка йама та пăрахтарҫĕ.

Каçаллапа арттилери лăпланҫĕ. Анҫах та, çĕрле австрисем аттакă тăвассине кĕтсе, каçхине пире пит те сыхă пулма хушрĕç.

## XII.

Тĕттĕм пулҫĕ. Пирĕн хуралсем сыхă тăраççĕ.

Ҫуркаç вăхăтнелле сасартăк Сан лешйенҫен пăшал-пулеметсемпе шатăртаттарни илтĕнсе кайрĕ. Ыйхă пусмăрланă вырăс салтакĕсен куç-пуçĕсем ҫалах уçăлаççĕ.

Австрисене хирĕç вырăссем те çатăртаттарма пуçларĕç. Анҫах пулеметсем пирĕн пĕри те шарлаймаççĕ. Вĕсем пăсăлнă, йе патронсем çук. Кусем васкаса ҫакнипе çапла пулнă.

Ҫамрăк салтаксен сехĕрленсе ӳкнипе аллисем çыхăнаççĕ. Вĕсем нийепле те перейĕмеççĕ. Акă кĕç-вĕç австрисем вăркăнса çитсе штыкпа ҫике-ҫике пăрахаççĕ! Мĕнле те пулсан ҫарасҫĕ вĕсене, хӳт те пăшал

сасси туса хăратас...—текен шухăшсем сиксе тухаççĕ салтаксен пуçĕнҫе. Кирек мĕнле персен те пуçлăхсем курас çук, пăшал сасси туса пултăр! Çанталăк пăҫах тĕттĕм вĕт... Салтаксем пурте пуçсене оккоп тĕпнелле пĕксе, алписемпе пăшал сатворккине выҫантараççĕ. Тĕллемесĕр пенĕ пуҫккăсем Сан урлă вĕçсе, вĕçсĕр тĕттĕмлĕхе шăхăраççĕ. Австрисен пуҫккисем пирĕн çинелле çил-тăвăл кашланă пек шăхăрса пыраççĕ. Хăш-пĕр пуҫккисем оккоп умĕнҫи ҫуллă çырана шаҫлатаççĕ. Пăр çунă пек çуса тăракан пуҫккăсем шăхăрни тĕнҫене хупласа килекен тăвăл кашланă пекех туйăнат. Çапах та, оккопра ларнă ҫух вăл пуҫккăсем ним те хăруш мар.

Ире хирĕç, патрунсем пĕтнипе, епĕр пеме ҫарăнтăмăр. Епĕр ҫарăнсанах австрисем те лăпланҫĕç.

Каçхи сĕм тĕттĕмре пĕҫикçĕ хăрушлăх та вунă хут ӳссе, никам çĕнейми пек пысăк хăрушлăх пулса хăратат. Кун çуттипе вăл сĕрĕм сирĕлнĕ пекех ирĕлсе çухалат. Епир те кунта тул çутăлнă май хăйулланса лăплантăмăр. Каçхине нимĕн те пулман пекех туйăнат. Салтаксем пĕр-пĕрипе выҫаткалама та пăхаççĕ.

— Ну, Ваççилйĕв, епĕ ал-ура çыхăннипе пĕрре те переймерĕм... Пăшал сатворкки хăйăрпа хытса ларнă та, уçаймарăм... акă хаҫ тин уçрăм вĕт... терĕ маи пата оккоп тăрăх упалепсе пынă пĕр ҫăваш салтакĕ.

Акă тин çеç епĕр 4—5 ҫăваш пĕр çĕре пухăнса халлапа çапма тытăннăҫҫĕ. Каллех:—«ҫакмалла!»—текен прикас вĕçсе çитрĕ.

* * *

Хĕвел тухат. Сывлăмпа витĕннĕ Сан улăхĕ пин-пин вут-хĕм пĕрҫипеле йăлтăртатма тытăнат. Ирхи çил ҫылайах сулхăммăн лӳлӳ пырса çапăнат.

Пирĕн ҫакмалла. Анҫах та ку вырăнта епĕр оккопсенҫен тухса тарнипе австрисем уççăнах курма пултараççĕ. Çавăнпа та пире оккопран тухса пĕр тăвайкки хыçне çитиҫҫен шуса кайма хушрĕç. Çапла 50—60 утăма йахăн хырăм çинҫе шуса каймалла, унтан тăрса ҫупмалла. Анҫах çапах та епĕр тарнине австрисем курма пултараççех. Тухса тармасан та май килмест: пирĕн патронсем пĕтнĕ, пулеметсем пăсăлнă, арттилери тĕрексĕр. Ахаҫ те тата, кăнтăрла тĕлнелле австри арттилерийĕ пирĕн оккопа айĕн-çийĕнех пăтратмалла.

Ҫакма вăхăт çитрĕ. Акă пирĕн оккопран та 1-мĕш свот тухса шуса карĕ. Çак вăхăтрах хăш-пĕр ротсем шуса çитсе тăвайкки хыçнелле те ҫупма пуçларĕç. Австрисем ҫасах кураççĕ. Сасартăк:—шарттăн! шарттăн!—пăшалсемпе харăслатса пени илтĕнет. Çак хушăрах пулеметсем те шатăртаттарма пуçлаççĕ.

Пăшал сассисем илтĕнсех, пирĕн малта пыракан ротсем мĕнпур вăйпа ҫупма тытăнаççĕ. Свотăн-свотăн ҫакакан салтак ушкăнĕсем пĕр йĕркесĕр арканаççĕ.

Акă пирĕн свот та оккопран шуса тухрĕ. Пуç урлă шăхăракан пуҫккăсен сассипе шăмшак çӳçенет. Вăл пуҫккăсем пирĕн урлă вĕçсе каçса, тăрса ҫупакансене хăвалаççĕ. Çумри патрон сумккисем, па-

латкă, паклашкă, кĕреҫе, винттовккă тата ыт, те уҫҫăн шума кансĕрлеҫҫĕ.

Акă епĕр те тăрса ҫупас тĕле ҫитрĕмĕр. Тăтăмăр. Ҫупатпăр. Пирĕн умра—1-мĕш, 2-мĕш свотсем... малта та, хыҫра та ытти ротсем, полксем... Вĕҫĕмсĕр салтак тăвайкки хыҫнелле вĕркĕшет. Епĕр ҫупакан ҫул тăрăх ўкнĕ салтаксем выртаҫҫĕ. Вĕсем тискеррĕн кăшкăрни ҫанҫурăма сăркатать.

— Шарттăн! Шарттăн! Шарт!.. Та-та-та-та-та! тра-та-та та!.. Пĕр вĕҫĕмсĕр пăшал-пулемет ҫатăрттарни илтĕнет Сан шывĕ леш-йенҫен.

Акă хăрушлăх! Йе вилĕм, йе хăтăлу?! Пăр пек пуҫккă ҫăвакан уҫлăха ҫупса кĕтĕмĕр.—Вшш!.. вшии!.. ши-и!.. шў-ў!.. вш-ш!.. вш-ш!.. тр-рр-рнн!..—алхасаҫҫĕ суккăр пуҫккăсем. Мĕнпур вăйпа ыткăнса пынă ҫĕртенех ушкăнри ҫынсем пăлт та палт! ҫикеленсе йулаҫҫĕ. Вĕсем хыттăн ҫупса пынă май вирлĕн ҫапăнса ўкеҫҫĕ те хайаррăн ахлатса йараҫҫĕ.—Ак кĕҫ мана та ленкет! кĕҫ тивет! кĕҫ ўкетĕп!.. тесе нимне пăхмасăр малалла ыткăнатăн. Шăмшак хĕрсе кайнă, тăнпуҫ саланнă... урнă пек ҫупатăн. Унтан та кунтан пуҫккă шăхăрать. Ак умăнта ҫупакан йулташăвах пат! татăлса апать. Ăна кур, варт! ҫаврăнса кайалла вĕҫтерес килет. Анҫах... кайра та ҫавах. Ҫуп! ҫуп... хытăрах малаллах! Сыввисем, вăй пуррисем тăвăл пек вĕҫсе пыраҫҫĕ. Ывăнписем, ҫăмăл сурапланнисем аран лăпăстатаҫҫĕ.

Йулашкинҫен, сывă йулнисем аранах тăвайкки хыҫне ҫупса ҫитрĕмĕр. Кунта ĕнтĕ хăрамалла мар. Пурте ирĕклĕнех сывласа, нумайĕш—мухтав турра!.. тесе хуҫĕҫ. Пурте кайалла пăха-пăха, хыҫрисен шеллесе утаҫҫĕ.

Инҫе ҫакса тухрăмăр. Хыҫра ҫаплах пулеметсенҫен такăртаттарни илтĕнет.

Аркапнă полксенҫи салтаксем, ҫула тăрăх васканă май палла тăран йулташĕсене тĕл пулса, 3-шерĕн—4-шарăн ушкăнланса утаҫҫĕ. Тарласа ҫăлма шыва ўкпĕскерсем, пит-куҫĕсене кашни ик-виҫ минутра пĕрре ҫумма ҫĕркесе ҫакнă палаткă аркипе шăла-шăла пыраҫҫĕ.

Ҫул ҫинҫе епĕ те хамăр кўршĕ йал салтакĕсене—Йаккупа Макҫама тĕл пулатăп. Вĕсен ахаҫ те хĕрлĕ пиҫĕсем пушшех те хĕремесленсе кайнă. Йунпа тулнă куҫĕсем кăвар пек тĕлкĕшеҫҫĕ. Икĕшĕн те хара алра урлă усса тытнă винтовккă, теприн ҫе—карттус. Карттуссемпе текех пиҫĕсене варкăштараҫҫĕ. Хăйсен тусанпа пылҫăкланнă ҫўҫĕсем тăрăх хуп-хура тар шывĕ йухать. Виҫҫĕн пĕрле, пурте хамăр сын йулпăшăн хавасланса, умри йала ҫитиҫҫен халҫҫен курманлăх калаҫса пытăмăр.

* * *

Улт-ҫиҫĕ ҫухрăм пек ҫаксан, пĕр йала ҫитрĕмĕр. Йал варринҫе ҫăл (пусă). Ăшша пиҫнĕ ҫар халăхĕ сивĕ ҫăла сырса илнĕ. Епĕр унта ҫупатпăр.

Ҫăл патĕнҫи салтаксем нумайҫҫен шыв курмасăр тунсăхласа, хўр-кăвакал пĕвере лапăртатнă пекех лапăртатаҫҫĕ. Хăшĕ тусанп

гарпа тунхӑрланнӑ пуҫне ҫӑваҭ, хӑшӗ сӑххӑн сивӗ шыва ҫӑтаҭ. Ҫӑл кутӗнҗе пӗр саманта лапӑртатнӑ хыҫҫӑн, кашнийех ҫумри витрипе (коттолокпа) шыв илсе, айаккарах кайса ларaҫҫӗ. Унта, симӗс ҫерем ҫинҗе, харпӑр палла-тӑран йулташсемпе ушкӑнланса ларса, ӗнер панӑ кура сухари тӗпренҗӗксене сивӗ шывпа ислентерсе тутлӑн ӗмеҫҫӗ.

Ҫерем ҫинҗи салтаксем кашни халӑх сыпни харпӑр ушкӑнне җӑмӑртанса ларнӑ: пӗр ушкӑнра җӑвашсем, тепринҗе тутарсем, украинтсӑсем, Капкас ҫыннисем, тата ыт. те. Пурте халҗ ҫеҫ йепле хӑтӑлнп ҫинҗен, кам-кам ӳксе йулни ҫинҗен харпӑр җӗлхипе шакӑлтатса лараҫҫӗ. Епӗр те пӗр вунӑ җӑваш пӗрле ларатпӑр.

Айакра пулемет такӑлтаттарни илтӗнет.

— Итлӗр-ха, аҗасем, ку пулемет сасси җисти пирӗн җӑваш палӗсенҗе пир ҫапнӑ пекех илтӗнет,—терӗ пирӗнтен пӗри.

— Җӑнах та, җисти пир ҫапнийех ку!..—терӗ сухарипе ӗмсе йанӑ Йакку, пӗр саманта шӑнк хытса ларса.

— Ҫапла, Йакку тус... есӗ пулемет сассине илтсенех ҫуркунне җӑваш хӗрӗсем пир ҫапнине аса ил: кӑна хӗрсем пир ҫапаҫҫӗ, тесе шутла. Вара пулемет сасси нимӗн те хӑрушӑ мар,—терӗм епӗ пухӑша кайнӑ Йаккӑва йӑпатмалла.

Пурте кулса йаҗӗҫ.

— Вӑл тӗп пул-ха! Манӑн хырӑм выҫаҭ вӑт... Ҫийӗттӗм пулсан— пӗр виҫӗ кӳренке ҫӑкӑр,—терӗ Йакку ҫӗкленерех.

Пурте ҫӑкӑр ҫинҗен, хырӑм ҫинҗен калаҫма пуҫларӗҫ.

— Ик кунлӑха панӑ сухарийе епӗ йалан пӗр кунтах ҫисе пӗтеретӗп те, тепӗр кунне выҫах вара, тесе хуҗӗ Макҫӑм, хырӑм выҫҫипе ушшех те антраса ҫитнӗскер.

— Карпатран җакма пуҫланӑранпа епӗ тӑранса курман,—тет алҗҗен җӗнмесӗр выртнӑ лутака та патвар ҫамрӑк, Җупай вулӑс җи—Проххӑр.

Тутлӑ халлап вӑхӑтӗнҗех:—Встать!.. по своим отделениям и взводам!—тесе кӑшкӑрни илтӗнет. Ҫакӑн хыҫҫӑнах кашни свот, кашни отделени кӑмантирӗ харпӑр ушкӑнне хӑй тавра пухӑнма кӑшкӑра пуҫлаҫҫӗ.

Ҫур сехет пекрен, арканнӑ полккӑсем харпӑр ушкӑнӗсем тӑрӑх йеркеленсе, йалтан хӗвелтухӑҫнелле тухса утрӗҫ.

(Малалла пулаҭ).

---

# «ХĔНХУР АЙĔНҪЕ» историллĕ поемă

## Т. ТАНИЛĂВ

Патша Раççейĕн 17-мĕшпе 18-мĕш ĕмĕр тăршшĕнҫе икĕ хутҫен пит вăйлăн кисренсе илмелле пулнă: вăл кисренӳсем—пĕри Раçăн Çтаппанĕ йаҫĕпе тепри—Пăкаҫав Йемелйанĕ йаҫĕпе çыхăнса тăраççĕ.

Çак икĕ пысăк пăлхану Маркспа Ленин: «Хресҫенсен, вĕсене ытти клас сем йертсе пымасан, хăйсем тĕллĕн нийепле револҫутсиллĕ кĕрешӳре те çĕн терсе çийеле тухайрас çук»—тесе вĕрентнине лайăх кăтартса тăраççĕ. Раçăн та Пăкаҫав та хăйсен çарĕсемпе патша Раççейĕн, унăн помешҫĕкĕсен «лăпк пурнăçне» вăхăтлăха çех хумхантарса илнĕ: вĕсем патшалăхри пурнăçа нимĕнл тĕп улшăнỳ та кӳреймен.

1671-мĕш çулта ака уйăхĕнҫе Раçăн Çтаппанне тытаççĕ, кĕркуннепе, ça çулхинех, Раçăн çарĕн йулашки тĕрекне—Аçтăрхан хулине илсен, патшап унăн йыттисем пĕтĕм Раççейĕпе хресҫен йунне йухтарма пуçлаççĕ. Ак Арсамас районĕнҫе пăлханнă хресҫенсене йепле «лăплантарнин» карттинĕ

> «Йĕри тавра çынсене çакмалли йупасем. Кашни икĕ йупа хушшинҫ 40—50-шар çын çакăнса тăрать. Таврара—пуçĕсене касса татнăскерсем йу ăшĕнҫе йухса çӳреççĕ. Виçĕ уйăх хушшинҫе 11.000 çынна пĕтерҫĕç. Мĕн пу пăлханакан, патша йĕркине хирĕç пыракансене çакса, çунтарса, пуçĕсен касса тата ытти майсемпе пурне те лăплантарса çитерҫĕç»—тесе çыра çак «ĕçсене» курнă йут патшалăх çынни.

Анҫах, пусмăрта пурăнакан халăх хăйĕн ĕмĕтне çухатман: хресҫенсе хушшинҫе «Раçăн тата тепĕр хут килмелле» тенĕ «хыпар» çӳренĕ. Вăл «хыпар тăрăх—«Çтеҥккăн тем пысăкăш вилĕ ӳҫĕ Атăл шывĕн леш йенҫе, уша вырăнта выртать. Мĕн ҫухлĕ выртасси паллă мар, анҫах, вăхăт çитсен, вă ҫĕрĕлсе тăрать те вырăс çĕр-шывĕ тăрăх каллах ҫухăнсене йыхăрма пуçлать».

Ҫăнахах та тата çĕр çултан (1773 çулта) Патша Раççейĕн никĕсĕсе тепĕр хут питĕ вăйлăнах кисренме пуçлаççĕ. Ахалех мар ĕнтĕ Кĕтерне патш Пăкаҫав Мускава çитсе ĕлкĕриҫҫен тесе, турксемпе çапăçнă фронтран 7 пол 13 роттă пеххоттă, 9 çăмăл командă, 17 карнисон патталҫйонĕ, 11 еска рон кавалери, тон касакĕсенҫен 4 полк, 1000 украйнă касакĕ, Хусанпа Пенс творенĕсен корппусĕсене, унтан Толкоруккăвпа Теккалоик кҥаçсен йышл отреҫĕсене Пăкаҫавпа унăн çарне хирĕç çапăçма йанă.

Патша правиттĕлствин «шикленмелли» пулнах çавă: Пăкаҫав çарĕ кунра куп йышлăланса, ӳссе пынă. Ҫăнахах та, Пăкаҫав темиçе хутҫен хăйĕн çарн çухатнă вăхăтсем те пулнă. Анҫах, нумай вăхăт та иртмен, унăн йĕри-тавр каллах: вырăс хресҫенĕсем, Атăл таврашĕнҫи вак-халăхсен хресҫенĕсем, тĕрл

хĕнхур айĕнҫе пурăнакан халăх пĕрлешнĕ. Сăмахран: Хусан патĕнҫе Пăкаҫав хăйĕн мĕн пур ҫарне ҫухатнăпа пĕрех йулнă. Анҫах, Саранск хули патне ситнĕ ҫух унăн ҫарĕнҫе 800 ҫын пулнă, Пенсăна вăл 3000 ҫынпа пырса кĕнĕ, Сараттăва—10000-лĕ ҫарпа, 18 тупăпа пырса ҫитнĕ.

Анҫах, Пăкаҫав та 1774-мĕш ҫулта, авкустăн 20-мĕшĕнҫе патша ҫарĕсен аллине лекет, 1775-мĕш ҫулта йанварĕн 10-мĕшĕнҫе ăна вĕлереҫҫĕ. Пăкаҫавпа пĕрле пăлханнă халăха «лăплантарнă» ҫух та йун ҫырмари шыв пекех йухма пуҫланă, темиҫе пин халăха ҫакса, тата ытти майсемпе пĕтернĕ.

* * *

Ĕҫпе пиҫсе, шурă тар тухиҫҫен хĕнхур тӳссе пурăннă халăх хăйĕн паттăрĕсене манман: Раҫăнпа Пăкаҫав ҫинҫен мĕнҫул йурă, йумах, лекентă, халап ҫуралса тухса пĕр ĕмĕртен тепĕрне куҫса, улшăнса, пуйанланса пыман пулĕ, йе тепĕрисем ҫухалса пĕтмен пулĕ? Ҫакă икĕ йатпа ҫыхăнса тăракан сопыттисене пĕлес тĕлĕшпе историксем те сахалах ĕҫлемен. Маркҫисла вĕсене халерех тин тĕрĕссĕн ҫутатса пама пуҫларĕҫ, ҫавăнпа ҫак темăсен интересĕ ҫасах сӳнес ҫук теме пулат [1]).

Револҫутси писсаттĕлĕсем, поеҫĕсем, скулҫптăрĕсем, хутошнĕкĕсем, композиттăрĕсем те ҫак сопыттисене хăйсен пултарăвĕнҫе кăтартсах тăраҫҫĕ. Акă Мускаври «Револҫутси муҫейне» кĕрсен, пĕрремĕш картлашка ҫине хăпарнă ҫухне есĕр ирĕксĕрех тем пысăкĕш йăвăҫ статтуйапа унăн ҫийĕнҫе ҫакăнса тăракан сарлака та ҫӳлĕ карттинă умĕнҫе ҫарăнса тăратăр. С. Т. Коненккăв статтуйĕ Раҫăн Ҫтаппанĕпе унăн ҫыннисене кăтартат. Статтуйĕ ҫинҫе ҫакăнса тăракан карттинă (К. Н. Корелăвăн)—Раҫăн Ҫтаппанĕ пĕтĕм пусмăрта пурăнакан халăха патшапа унăн улпуҫĕсене хирĕҫ кайса, Мускава ҫитсе унти йĕркесене сирпĕтсе—«ҫĕнĕ, ирĕк, касак патшалăхĕ» тума ҫĕннине кăтартат.

1-мĕш сала кĕрсен, сылтăм йенҫе В. К. Перов ҫырнă «Пăкаҫав суҫĕ» йатлă карттинăна куратăр. Кĕтесре тимĕр ҫитлĕхпе сăнҫăрсем. Авалтан йулнă халапсем тăрăх, Пăкаҫава тытсан ҫак ҫитлĕхе хупса килнĕ: теҫҫĕ.

Ҫапла, хăйĕн тиктаттурне кĕрешсе илнĕ пролеттариат, хăйĕн пысăк, ҫĕнтерӳллĕ кĕрешӳвĕсен историйĕ умĕнҫен пулнă ҫапăҫусене асран йамаст: иртнĕ кĕрешӳ кун-ҫулĕсене искуствăн мĕн пур майĕсемпе сăнласа вĕсене пайанхи кунсемшĕн те, малашнехи кĕрешӳсемшĕн те усăллă тума тăрăшат.

Тӳрех каламалла, пирĕн ҫăваш литтераттуринҫе револҫутсиллĕ историрен илнĕ темăсемпе ҫырнă происветенисем питĕ те сахал. Ҫăнахах та краштăн вăрҫи ҫинҫен ҫырнă происветенисем хушшинҫе пирĕн мухтанма тивĕҫлĕ происветенисем те, автăрĕсем те пур (сăмахран—В. И. Краснов). Анҫах, маларах пулнă револҫутсиллĕ кĕрешӳсем ҫинҫен (акă, 1905 ҫулта ҫăвашсем хушшинҫе пулса иртнĕ револҫутсиллĕ ĕҫсене пĕр писсаттĕл те, поет та тĕплĕн илсе кăтартман вĕт-ха!) пирĕн литтераттурăра ҫукпа пĕрех; мĕн ҫырнисем—ытла та ансăр, йе вĕсенҫе темĕн те пур, револҫутси кĕрешĕвĕ—иккĕмĕш йе виҫҫĕмĕш вырăнта.

---

[1]) Йулашки вăхăтра «**Вестник Ком. Академии**» йатлă шурналта 12-мĕш №-те М. Н. Покровскийĕн „Новейшие данные о Пугачеве“ йатлă статйа тухнă. Ҫавăнах 13-мĕш №-те К. Мейерсонăн—„Ранняя буржуазная революция—пугачевщина“ йатлă статйа пиҫетленнĕ.

Мĕн каланине йăнăш ан ăнланђђăр тесе, кунта ак çакна каласа хăвармаллă: пирĕн «иртнĕ кун-çулсем» çинђен çыракансем сахал мар! «Ђăваш историйĕн ытти ĕмĕрĕ» çинђен «Пулхăр ылттăн патшалăхĕ» çинђен, ђăвашсен «мăн аслашшĕсем» тĕрлĕ «тĕреклĕ пурнакан» ђăвашсем çинђен çырнă происветенисем, «иртсе кайнă» (ĕçхалăхĕшĕн нихăçан та пулман!) «ђаплăлăхшăн» нăшăклатса çырнă йĕрўллĕ «йурăсем» çук мар, пур. Анђах, вĕсем пурри—пире хаваслантарма мар, пирĕн литтераттурăра тăшман пуррине, вăл тăшмана епир пĕтĕмĕшпех пĕтерсе çитерейменнине çеç кăтартаť. Çак «происветенисене» халиђђен те çителĕклĕ криттĕклейменха: автăрĕсене ђылайах «вăрçнă», анђах, вĕсен происветенийĕсем вырăнтан питех сикмен. Ленин вĕрентнине криттĕккăн тĕп никĕсĕ туса «пулхăрçăсен», натсионалиссен итеолокине шĕкĕлђесе илсе кăтартассçи—маркçисла криттĕк пайанхи сатађсенђен пĕри пулса тăраť.

С. Елкер çырнă «Хĕнхур айĕнђе», унăн пĕтĕм çитменлĕхĕсене шутра тытса тăрсан та, ђăваш литтераттурĕнђи историллĕ происветенисем хушшинђе пађах уйрăм вырăн йышăнса тăмалла происветени. Ăна уйăрса тăраканни: ытти автăрсен историллĕ происветенисенђе ирĕклĕхшĕн кĕрешни иккĕмĕш йе тата кайарах вырăнта тăраť пулсан, Елкер поеминђе çакă кĕрешў—тĕп темă; вăл ытти мĕн пур вак темăсене пăхăнтарса таракан темă пулса тăраť.

* * *

К. Маркс Л. Фейерпах çинђен çырнă теçĕсĕсенђе: «Философсем тĕнђене тĕпђесе, ăна пĕлсе илнĕ, анђах, тĕнђене пĕлни çитмест, ăна улăштарас пулаť»—тесе çырнă.

Сотсиалисăм економĕкăн никĕсĕсене туса çитернĕ вăхăтра, кăпиталисăм йулашкийĕсене пĕтĕмĕшпех пĕтерсе «тĕнђене улăштарас» тĕлĕшрен пĕтĕм ĕçре искуство, çак шутра—литтераттурă та, хăйĕн мĕн пур вăй-халне хурса ĕçлес пулсан, хăйне тивĕç вырăн йышăнса тăмалла.

Пайанхи строиттĕлстврăра йĕри-тавра пулса иртекен, йе халђ вĕресе тăракан кĕрешўпе çĕнтерўне, сотсиалисăм никĕсĕ йепле çитĕннине кăтартнă ђух пролеттари писсаттĕлĕн хăй кăтартакан «процесс» йепле улшăнса, урăх статийе (картлаç çине) куçса, ыран мĕнле пулмаллине кăтартса пымалла. Паллах, ку йывăр ĕç. Çавăнпах та хăшĕсем хăйсене çăмăлрах сатађђа илеççĕ: «сотсиалисăм проттоколçă» кăна пуласшăн! Мĕн пулса иртнине пăхса «опйективлă» проттокколласа çех пынине епир, паллах, хирĕç!

Халђхи вăхăтра пирĕн литтераттурăшăн ђи паха темăсем—револютсин пайанхи кунне, рекконструкси вăхăтне кăтартса, рапођђи класăн пайанхи ĕçĕсемпе çĕнтерĕвĕсене, сăнласа пырса пролеттариат умĕнђе йепле çĕнĕрен çĕнĕ сатађђăсем тухса пынине кăтартасси.

Анђах, совет писсаттĕлĕсен темăсене «пайанхи кунран» анђах илмелле тени йăнăш. «Краштăн вăрçи, револютсионерсем потпођйере (пытанса) ĕçлени, ытти хуť те мĕнле историллĕ темă та, ытлах писсаттĕл вăл темăна çутатнă ђух пролеттариат хăй умне пайан кăларса тăратнă ыйтусем йенђен пырса, пайанхи ĕçĕсемпе пайанхи сатађђисем йенђен пырса кăтартсан—çав происветени пирĕншĕн усăллă, кирлĕ происветени пулма пултараť»—терĕ.

Елкерĕн «Хĕнхур айĕнђе» йатлă поемине çак вичепе виçмелле те.

* * *

Елкере епĕр хăйне манерлĕ «историллĕ» поет теме пултарăттăмăр. Вăл историллĕ темăсене пĕрремĕш хут илмест. Унăн «Самана» йатлă, сăвăсен пуххине илсен, ку кĕнекери 41 сăвăран 21-мĕш иртсе кайнă кун-çулсен сăнне кăтартаҭ. Çак сăвăсенђе поет хăйĕн пысăк поеми валђи çул шыранине, иртнĕ (революутсиђђенхи) кун-çулсем çине йепле пăхмаллине, вĕсене йепле тĕрĕсрех кăтартассишĕн тăрăшса ĕçленине курма пулаҭ. Ђăнахах та, автăр хăш-пĕр çĕрте («ЂАССР-ĕн автономи кунне» «Шуçăм килнĕ ђух») хăй илнĕ темăна ђылайах тĕрĕс, революутсионер пек çутатса параҭ. Анђах, нумай тĕлте пусмăр вăхăтĕнђи асапсене кăтартнă хыççăн:

«Ак халђ урăх:
Иртнĕ хурлăх
Ирĕк пирĕн—хам хуçа!» тет те—лăпланса лараҭ.

Çапла, нумай сăвăра малалла кĕрешме ђĕнни вырăнне, умра тăракан хĕрўллĕ кĕрешўсене кăтартас вырăнне:

«Çара уйсем—пулĕç сатпахђи,
Хавассăн йантрĕ савăтсен сасси»—

тенипех сотсиалисăма кĕрсе кайас çуккине манса хăвараҭ.

Çак сăвăсенђех автăр хăй темине питĕ ансăрлатнине куратпăр: автăр ђăваш ĕççыннин асапне çех кураҭ, ытти халăхсен ĕççынийĕсене, вĕсем те ђăваш ĕççыннийĕсем пекех «хĕнхур» айĕнђе пурăннине автăр кăтартаймаи.

Елкерĕн çак сăввисенђен тата тепĕр йенĕ пур: вăл—пуринђен ытларах йепле асап тўснине, мĕн тĕрлĕ хурлăх курнине сĕре те çăра сăрпа, питĕ вăйлăн сăрлани. Куна најар йапала темелле мар. Анђах, çав хĕнхура, тĕрлĕ асапсене хирĕç ĕççыннисем йепле кĕрешнине кăтартмасан, епир тĕрĕс карттинăсем курасса шанма пултараймастпăр. Çак иккĕмĕш йенĕ Елкер происветенийĕсенђе ђас-ђасах курăнмасҭ. Ку тĕлĕшрен унăн тыткăнри пурăнăç çинђен çырнă сăввисем уйрăмăнах тăраççĕ.

«Хĕнхур айĕнђе» поемăра Елкер патша Раççейĕн историйĕнђе пулса иртнĕ паллă пăлхану—Пăкађав Йемелйанĕ йађĕпе çыхăнса тăракан пăлхану вăхăтĕнђи кун-çулсене илсе кăтартасшăн пулнă. Поемăри пĕр керой. Паххомккă:

«Пăкађав йатнĕ ес пĕлетне?
Пĕлетĕн пулсан, еп çав çын мĕлки»... тет.

Йе çав Паххомкках:

Çук, ĕнт, Пăкађав! Çирĕç ун пуçне!
Анђах, манас çук епир ун ĕçне!

Ак вун çул иртет... епир унтанпа
Йултăмăр виççĕн çех ак çак ушкăнран...—тет (V пайĕ).

Пăкађава 1775-мĕш çулта, йанварĕн 10-мĕшĕнђе вĕлернĕ, тенĕђђĕ çўлерех. Капла ĕнтĕ поемăри ĕçсем 1785—1787 çулсенђе пулса иртеççĕ. Çапла, автăр хăй поеминђе хăш вăхăта илсе сăнлама пикеннине тĕрĕсех тавçăрса илме пулаҭ: поемăри ĕçсем Пăкађав пăлхавĕ пулса иртнĕ хыççăн пĕр 10 çултан пуçланса кайаççĕ.

Историллě происветенисемпе паллашнă ҫух пирěн умра пěр тěп ыйту тărат: автăр хăй происветени ваҫҫи илнě вăхăтри опшҫěствăна, опшҫěствăри ěҫсемпе вěсен тěп сăлтавěсене маркҫисла ăнланса, опшҫěствăри кěрешӳ вăйěсене маркҫис куҫěпе курса, историре пулса иртнě кěрешӳсене, ěҫсене сотсиалисăм тăвакан клас—пролеттариат умěнҫе тăракан сатаҫҫăсем йенҫен пырса, вěсене илемлěх йенҫен тěрěс сăнласа парайнă-ши автăр? Елкер происветенийě, тӳрех каламалла, ҫак тěп ыйту ҫине пěтěмпех пур йенҫен те тавăрса калаймасť пулсан та, ыйтун нумай йенěсене тěпленех, ҫителěклě ҫутатса параť.

Историксем пěлтерне тăрăх, Пăкаҫав вăхăтěнҫи пăлханăвăн тěп сăлтавěсем: хресҫенсем вырнаҫса ларнă ҫěр-шыва ҫěрулпуҫěсем туртса илни, хресҫенсене улпутсем аллине пани, вак-халăхсен ҫěр-шывне туртса илсе хăйсене тěрлě ҫěре хуса йани, суту-илӳ тумалли ҫěнě районсем, ҫěнě ҫулсем тупма тăрăшни, хресҫенсемпе хулари вакпуршуаҫине суту-илӳ тăвас ěҫре хěссе ҫитерни пулнă.

Хусан таврашěнҫи йуман йăвăҫа карап тума кастарма сутнă. Ҫаплах Ҫěпěрти тěрлě тискер кайăк тирěсем, Уралти—тимěр, Перěмпе Аҫтăрханти—тăвар вырăс суту-илӳ капитталěшěн ҫи паха йапаласем пулса тăнă. Ҫак таварсене хресҫенсен вăйěпе туса тăнă. Акă, Хусан кěпěрнинҫе пурнакан хресҫенсене Оренпурк таврашěнҫи савăтсене ěҫлеме йараҫҫě. Хусан тутарěсене суту-илӳ тума пăрахтарса ним укҫа тӳллемесěр вăрман касма йараҫҫě. Вěсем пурте хăйсен кил-ҫурҫěсенҫен 100—300-шер ҫухрăмра ěҫлесе пурăнаҫҫě. «Вăрман—халăха тискеррěн курăнма пуҫланă. Йăвăҫсем хăрса кайнă пулсан та, ěҫлекенсем вěсене хăйсем ваҫҫи касса илме пултарайман».

(Томсинский «Пугачевщина» книга для чтения по ист. нар. СССР ст. 288).

Мăкшă, ҫăваш, воттак хресҫенěсем ларса тухнă ҫěр-шывсене туртса илсе вырăс йе тутар помешҫěкěсене парса пынă.

Куланай хěскěҫě—хăй ěҫне тунă. Кусемсěр пуҫне вак-халăхсен тěнне, йăлисене таптаса ҫěмěрни, вырăс пупěсене «христус йаҫěпе» туса панă тискер ěҫěсем те вак-халăх хресҫенěсен ҫиллине хăвăрт вěрсе хăпарма нумай пулăшнă.

1774-мěш ҫулта, ийуҫ уйăхěнҫе Пăкаҫав Атăлăн сылтăм йенне каҫсанах ҫăваш, мăкшă т. ыт. вак-халăх хресҫенěсем хушшинҫе питě хăвăрт, питě вăйлăн пăлхану пушарě тивсе кайаť. Кусем помешҫěксене ҫех хирěҫ мар, вырăс пупěсене те хирěҫ кěрешӳ пуҫласа йараҫҫě. Пăкаҫав пăлханакан хресҫене: «ирěклěх, ҫěр, вăрман, тăвар кӳллисем... харкам хăй тěнне, хăй туррине кěлтума «ирěклěх»—парасси ҫинҫен пěлтерсе манихвес кăлараť. Вак-халăх хресҫенěсем пиншерěн пыра-пыра кěреҫҫě Пăкаҫав ҫарне.

Ҫак пăлхану Пăкаҫава тытса вěлерсен те пěтěмěшпех лăпланса ҫитмест: вăл хăш-пěр ҫěрте тепěр хут аталанса, тивсе кайса вăйлăнах йалкăшма пуҫланă, ытти ҫěрте уйрăм пăлханусем пулса илеҫҫě. Паллах, ҫак пěҫěк пăлханусен сăлтавěсем те ҫӳлерех кăтартнисемех пулнă.

Елкер хăйěн поеминҫе ҫакăн пек «пěҫěк» пăлхануна кăтартаť те ěнтě.

Поемăри кěрешӳсен тěп сăлтавě—суту-илӳ кăппитталěн пусмăрě. Вăл пусмăрлăх, поемăра, ҫи малтан куланай йěррипе пыраť. Вăрман хӳттине вырнаҫса ларнă ҫăваш хресҫенěсемшěн куланай тӳлесси—хěнрен хěн йапала. Анҫах, тӳлес пулаť. Мěншěн тесен:

«Парăма йулсан—сěвеҫҫě тирне!»

Ăçтан тупас çук укçана? Пĕртен пĕр шанђăк—вăрманта çех:

«Аптранă халăх сахал укçашăн
Ваклаť вăрмана, касаť те касаť».

Анђах: «Ĕçлетĕн кунне—илен пилĕк пус,—
Ăçтан ес унпа тўсен тăкакна?»
...Кантур ђунилли çитет ак хĕсет,
Укçу пулмасан—тытаť те хĕртет!»

Ђăнах та, тытаççĕ те хĕртеççĕ, ним хĕрхенўсĕр хĕртеççĕ:

Ак, ват Итапай выртаť ђăсăлса.
Ак, ик теçетник, вăрвар васкаса,
Итапай тумне илеççĕ хывса;
...Тискер ђунилли пуçларĕ ĕçне—
Касма пикенет Итапай ўтне.
...Çапса пĕтерсен, вилнĕ пекскерне,
Хураççĕ кĕртсе хурал пўрт ăшне».

Çапла «тўлеттерессĕ» хресђенсене куланай! Патша хулли айĕнђе пĕр Итапай тирĕ кăна мар, ытти ђухăн хресђенсен тирĕ те сĕвĕнсе таткаланса ўкет. Нимле йăлăну, нимле ыйтни те пулăшаймаст. Акă пĕр çамрăк хресђен Ђакка йĕрсе йăлăнаť:

Ей, ырă пурмис, хĕрхенĕр мана...
Халех, ыранах кайап хулана:
Виç лав ман курăс кайса сутмалла:

Анђах, Ђакка йăлăнни ним вырăнĕнђе те çук:

...«Ни хурлăхлă сас, ни куççулђ, ни йун.
Нимскер хускатмаст шыçмак пуçсене».

Çак «йунлă минута» хыççăн Итапай вилет, ыттисене—хăйсен ылханлă пурнăçне, ирĕксĕрех, малалла ђăсма лекет.

Ђĕрĕ йулнисем çак тискерлĕхе хăйсен вăйĕ çитнĕ таран, хăйсем мĕнле пĕлнĕ çавăн пек хирĕçеççĕ, анђах Раççей творенĕсен патшалăхĕн машинĕ вăйлă ĕçлет, хресђенсем çине «инкек çине синкек» тийенет.

Акă «турă йађĕпе» ђăваш хресђенĕсем çине пуппа теђук мурĕ сиксе лараť. «Суйа» тĕнпе пурăнакан Ђакка çемйинђе иккона ђысламаннине курсан, пупĕ те «куланай» хырма пуçлаť:

«Тавай виç тенкĕ! Тавай, халех туп!
Ес унсăр пĕтен,—каттăркă!—тет пуп».

Патша ђинавнĕкĕсем, пупĕ, ђеђукĕ—пурте хĕсеççĕ, пурте укçа шыйăраççĕ.

Анђах, пурăнăç пуриншĕн ылханлă мар иккен! Акă çĕрме пуйан Алапитшĕн:

Пурмис та, пуп та—сирĕншĕн çĕлен!
А, маншăн вĕсем—ыр туспа пĕрех!»

Мулхуçисем, хуť те мĕнле халăхран пулђђăр, вĕсен интересĕ пĕреххине Елкер пĕр иккĕленмесĕр кăтартса параť. Çаплах, пуйан ђăваш Алапит интересĕсем те вырăс çĕрулпуђĕсен интересĕсенђен йепле урăх пулма пултарђђăр? Анђах, ђухăнсемшĕн ђăваш пуйанĕсем те—çав «çĕленех»: ђухăн-

сене хӗсес, мӑшкӑлас йенҫен алапитсем пӗрре те кайри вырӑнта тӑмаҫҫӗ. Акӑ, Алапит хӑй ывӑлӗ вырӑнне ҫухӑн Ҫаккана салтака илсе кайтарать. Йе вӑлах малалла та Ҫаккан пӗтӗм пурнӑҫне пӳлсе пырать.

Ҫакӑ виҫӗ тӗп сӑлтав: куланай асапӗ, тӗн тискерлӗхӗ, хресҫенсем хушшинҫи кулаксен хӗскӗҫӗ—поемӑри пулса иртекен ӗҫсен тымарӗсем пулса тӑраҫҫӗ. Поемӑри ӗҫсем йепле пӗрлешсе, пӗри тепринҫен тухса йепле пынине мӗнле кӑтартни ҫинҫе кунта ҫарӑнса тӑма май ҫук, анҫах поет вӗсен тӗп сӑлтавӗсене тӗрӗс курни ҫинҫен татӑклах калама пулать.

Поемӑри ҫынсене автӑр кашнинех хӑйӗн вырӑнне тӑратнӑ: вӗсене уйӑрса тӑраканӗ—вӗсен класлӑхӗ. Ҫапла поемӑри кӗрешекен ҫынсем икӗ хире хирӗҫ тӑракан ушкӑнра тӑраҫҫӗ. Паллах, ҫакӑ икӗ ушкӑн хушшине хутран-ситрен «виҫҫӗмӗшӗсем» тухса тӑнине те куратпӑр, ҫапах та поет хӑйӗн мӗн пур вӑйне икӗ тӗп вӑй-хӑвата кӑтартасси ҫине хурать.

Кӗрешӳре кам ҫӗнтересси паллах: ҫӗнтерӳ алапитсен аллинҫе йулать, мӗншӗн тесен алапитсем хыҫӗнҫе патша Раҫҫейӗн вӑй-хӑваҫӗ тӑрать. Алапитсен ҫӗнтерӗвӗ—патша Раҫҫейӗн ҫӗнтерӗвӗ. Анҫах, поетӑн тӗп шухӑшӗ—Ҫаккасен кӗрешӳне, вӑл кӗрешӳ кам айӑплине пӗлмесӗр тарӑхнинҫен, тӗллевсӗр ӳпкеврен пуҫланса, ҫӑн тӑшмана палласа ӑна хирӗҫ хайаррӑн кӗрешме пуҫлиҫҫен йепле ӳссе пынине кӑтартасси; йулашкинҫен, Ҫаккасен кӗрешӗвӗ малтанхи утӑмран пуҫласа вӗҫне ҫитиҫҫенех йепле йӗркесӗр, пӗрлешӳсӗр, пӗр паллӑ ӗмӗтсӗр, хаҙхи ҫӗлхепе каласан, пантиттисӑм йеверлӗ пулса пынине, ҫавӑнпах вӑл кӗрешӳ нимӗнле те ҫийеле тухаймассине кӑтартса парасси.

Ҫухӑнсен паттӑрӗ—Ҫакка ҫине пӑхсан, епир ҫакна курма пултаратпӑр. Поемӑ пуҫламӑшӗнҫе вӑл йӑлӑнакан ҫын кӑна; куланай тӳлеменнишӗн ӳтнетирне сӳсе хӑварсан та унӑн ӑшӗнҫе улшӑну ҫук-ха. Вӑл улшӑнӳ ак ҫакӑнтан пуҫланса кайать.

Пуйан Алапит ывӑлӗ салтака илес вырӑнне салтака Ҫаккана йамалла тӑваҫҫӗ, мӗншӗн тесен:

«Алапит усал хыпара илтсен,
Сикет те тӑрать мулне ӗненсе.
Пырать вӑл хӑвӑрт вулӑс кантурне—
Пыҙпе, мулӗпе ҫаврать тийеке».

Ҫакка салтака кайса килсе те ҫак ӗҫ ҫинҫен пӗлмен; кайран, ҫав куланай пирки хӗнесе хӑварсан ҫирлесе выртнӑ ҫух тин Тӗвенеш урлӑ хӑй тӑшманӗ кам иккенне пӗлет вӑл.

Ҫак ӗҫ ҫинҫен пӗлсен тинех Ҫакка ҫӑварӗнҫен пӗрремӗш хут пуҫласа:

«Пуйан ҫын кулли тума кӑтартам!..»

тенӗ сӑмахсем ҫуралса тухаҫҫӗ.

Малалла Ҫакка Пахомккӑ калани тӑрӑх, таврари пурнӑҫа лайӑхран тишкӗрсе илнӗ май етемсем хушшинҫе икӗ тӑшман: пуйансемпе ҫухӑнсем пуррине ӑнланса илет. Ҫапла вӑл (поемӑн тӗп геройӗ) «Каҫарӑр пайан» тесе йӑлӑнакан ҫынран ҫухӑнсен инкекӗ пӗтӗм таврари пурнӑҫ йӗркинҫен: «Саккунран»—патшалӑхри саккунран килнине тавҫӑрса илет.

Анҫах, Ҫаккасем ҫак тӗрӗслӗхе темӗнҫул аван ӑнласа илнӗ пулсан та вӑл тӗрӗслӗхшӗн кӗрешмелли ҫула тупаймаҫҫӗ: Пахомккӑ ушкӑнӗнҫе-и, йе урӑх майпа-и, вӗсен кӗрешни опҫӗствӑри пӳрнӑҫ йӗркисене вӗсен кӑшӑлӗнҫен сиктерсе кӑларма пултарайман.

Ҫавăнпа Ђакка хăйне ваљђи вăл вăхăтра илме пултарнă пĕртен пĕр «ирĕклĕхе» Атăл ҫине кайса пурлаксем патĕнђе «тупат̆»:

«Пурлак пурнăҫ те, ђăн та, ҫăмăл мар,  
Анђах ҫăмăлне ăҫта хаљ тупар?!  
Ҫапах та Атăл уҫă, вăл—тĕнђе!..  
Сан пек етемсем пинĕпех ун ҫинђе.  
Вĕсен хушшинђе ђунна йăпатан:  
Пĕрле канашлан... пĕрле халаплан...»

Ҫак сăмахсем—Ђаккан хăй вилес умĕн ывăлне каласа хăварнă сăмахсем. Вĕсенђе ирĕкшĕн ҫуннă ăшђик йулашки хут тивсе сӳнни, иртнĕ пăлхавлă кунсен йулашки сасси, пулнă ĕмĕтсем саланса кайни сисĕнет.

Ђанах та, Ђаккан ҫаккăн пек:

«Пурмис патакне пĕрре курнăскер,  
Нихҫан та урăх ахаљ парнас ҫук.  
Ҫук, ку пурнăҫ мар,—асап та тискер!  
Ҫапăҫас, пĕтес луђђа кун пек ђух»—

мăн кăмăллă сăмахсенђен—нимĕн те йулман ĕнтĕ. Вăл, сăпђăрланă арслан йевĕрлĕ, иртнĕ кĕрешӳсем нимĕн те паманнине йывăррăн аса илме ҫех пултарат̆.

«Текейпе Итрен пурнаҫҫĕ аван.  
Вĕсем Кушлавăш шывĕ ҫинђе хаљ  
Лартаҫҫĕ кашни ик ђуллă арман.  
Унтах Йăратав та илет хăйне ваљ»—

тесе пелтерет Елкер поемăн йулашки пайĕнђе.

Ҫапла, кĕскен кăна пăхнипех те, Елкер кĕрешӳ вăйĕсене тĕрĕс курса, вĕсене маркҫисла ăнланса илсе кăтартнă теме пултаратпăр.

Уйрăмăнах автăр хăй поеминђе натси ыйтăвĕ ҫине йепле пăхнипе ăна йепле кăтартса пани ҫинђен. Пирĕн историллĕ илемлĕ литтереттурăра ҫак темăна тапратса ђас-ђасах ҫак ыйтун пĕр йеннине: ђăвашсене вырăс ђинавникĕсем хĕснине, хуртунине кăна кăтартаҫҫĕ, ҫав вăхăтрах ђăвашсем хушшинђи классене мансах хăвараҫҫĕ. Хăйсене пытарма пĕлмен натсионалиссем тӳрех—«ђăвашсем вырăс мăшкăлĕнђе» пулнă тесе хуни те нумай, вĕсем вырăссем хушшинђе те нимĕнле класлă уйăру тумаҫҫĕ. Елкершĕн те ҫак ыйтусем йанках уҫă пулманнине «Самана» тăрăх курма пулат̆.

«Хĕнхур айĕнђе» поемăра Елкер натси ыйтуне, пĕтĕмĕшпе илсен, тĕрĕс кăтартса парат̆. Вăл ђăвашсем хушшинђи классене лакпа сăрласа хумаст̆. Ҫаплах Ђакка вырăс хресђенĕсем патне лексен унта пулăшу тупат̆. Йулашки пайра, Ђакка Атăл ҫинђе тĕрлĕ халăх ҫыннисемпе пĕрле ĕҫлесе пурăннине куратпăр. Ҫак карттинсенђе пуринђе те автăр хăйне маркҫисла кăтартат̆.

Ҫапах та кунта ҫитменлĕхсене те манма йурамаст̆. Поемăри пысăк ĕҫсене кăтартнă ђух Елкерĕн ытти вак-халăх, вырăс хресђенĕсене вăйлăрах, нумайрах кăтартмаллађђĕ, вĕсем ҫинђе ытларах ђарăнса тăмалла пулнă. Тепĕр пысăк ҫитменлĕх—йăласене кăтартнă ђух вĕсене ытла та ним криттĕклемесĕр кăтартни. Капла анђах та мар, хăш-пĕр ҫĕрте ĕлĕкхи пурăнăҫ «йĕркисене» ђылайах итеалисатсилесе кăтартнипе тĕл пулатпăр.

Поемӑн хаҫ пиҫетленсе тухнӑ текстне «Сунталӑн» 1925-мӗш ҫулта 8-ш номӗрӗнҫен пуҫласа пиҫетленӗ текстпа танлаштарсан, хаҫхи текст ҫылайах йакине, вӑйлӑраххине куратпӑр. Ҫырма пуҫланӑранпа автӑр хӑй пӗрмайах ӳссе пынине, унӑн происветенийӗн планӗ улшӑнса пынине те курма пулаť. Сӑмахран: «Хӗнхур айӗнҫе»—поемӑн йаҫӗ—«Айӑпсӑр таркӑн» йатлӑ историллӗ поемӑн малтанхи сыпӑкӗ ҫех пулмалла пулнӑ пулсан, ку текстра поемӑ хӑйӗ «Хӗнхур айӗнҫе» йатлӑ пулса тӑраť.

Ку ыйту пирӗншӗн халӗ ытла пысӑк вырӑнтах тӑмасť. Ҫапах та, поемӑн йепле ӳссе пынине, ӑна пӗтӗмӗшпе—ӑшҫикӗ йенҫен те, тулашӗ йенҫен те—тӗпҫесе пӗлес тесен, ҫакӑ икӗ текста танлаштарас ӗҫ умра тӑратех.

Поемӑ ҫӗлхе пуйанлӑхне ҫех мар, автӑр хӑйӗн ӗҫӗнҫе тӗрӗс меттӑтпа ӗҫленине те курма пулаť. Акӑ, поемри ҫынсене, кӗрешекен вӑйсене йепле кӑтартни ҫине пӑхар.

Кунта, леш пархатарсӑр «Литфронтҫӑсен» меттӑҫӗ ӗҫлесе, уйрӑм ҫынсене кӑтартмасӑр, ушкӑнпа ушкӑн кӗрешнине ҫех кӑтартма май пулнӑ. Анҫах, автӑр вӑл ҫӑмӑл меттӑта пӑрахса йывӑртарах та, анҫах пӗртен-пӗр тӗрӗс меттӑта суйласа илет.

Тӗрӗс, Елкерӗн икӗ ушкӑн, опшҫӗстврӑи икӗ вӑй кӗрешет, анҫах вӑл кӗрешӳре массӑсемпе пӗрлех уйрӑм паттӑрсене те кӑтартаť, ҫак паттӑрсен сӑпсӑпаҫӗсем урлӑ массӑсен сӑн-сӑпатне кӑтартса параť; Елкерӗн кашни ушкӑнӗ мӗншӗн кӗрешнине, вӑл ӑҫталла туртнине уҫҫӑнрах курас тесен, Алапитпе Ҫакка ҫине, тата вӗсен йӗри-тавра кӗрешекенсем ҫине пӑхӑр!

> „Общее существует в отдельном, через отдельное. Всякое отдельное есть так или иначе общее. Всякое общее есть частичка или сторона или сущность отдельного" тет Ленин („К вопросу о диалектике").

Елкер ҫак саккуна хӑй ӗҫӗнҫе ҫылайах вырӑна кӗртсе пыраť. Ҫӑнах та, илер-ха Алапите! Мӗнҫул кулак сӑн-сӑпатне, вӗсен ӑшҫиккине, ӗмӗҫӗсене, ӗҫӗсене курма пулаť ҫак кулак типӗнҫе.

Ҫапах та ӑсталӑх йенҫен Ҫакка ҫӳлерех вырӑнта тӑраť. Вӑл ҫав тери пысӑк ӑсталӑхпа пысӑк талантпа тӑвнӑ тип, вӑл ытла та сарлака, нумай йенӗллӗ тип, ҫавӑнпах ун ҫинҫен кӗскен нимӗн те калаймӑн. Ҫаккана пӗтӗмӗшпе пӗлес тесен, ӑна хӑйне уйрӑм тӗпҫесе ӗҫлесен те усӑсӑр пулас ҫук.

Ҫакка пирки калаҫнӑ ҫух ак ҫак йапала усӑсӑр пулмассӑн туйӑнаť. Пӑкаҫавпа унӑн ушкӑнне вӗлерттермелли прикӑвӑрта епӗр ҫакна вулатпӑр:

> „2. Яицкому казаку Ивану **Чике**... присному любимцу злодея Пугачева...—отсечь голову", тенӗ.

Тен, Елкер хӑй поеминҫи паттӑр—Ҫакка—йатне ҫех мар, унӑн хӑш-пӗр йенӗсене те ҫак Ҫикка-ран илмен-ши? Йепле пулсан та, Ҫаккана тӗпӗпе пӗлес тесен, ҫак Ҫикка ҫинҫен йулнӑ маттериалсемпе те паллашмаллах пек туйӑнаť.

Ытти—иккӗмӗш, виҫҫӗмӗш вырӑнта таракан ҫынсем те хӑйсен вӑхӑтӗнҫи истори условийӗсемшӗн «ҫӗрӗ ҫыннӑн» курӑнаҫҫӗ: Паххомккӑна илетре, Ахвоҥккӑна-и, йе Текейе, Итрене илӗр—вӗсем пурте пысӑк ӑста аллипе сӑнланӑ типсем.

Ҫапла, Елкерӗн пысӑк поеми ҫӑвашсен илемлӗ литтераттурӗнҫе хӑйне тивӗҫлӗ паллӑ вырӑнта тӑмалла происветени пулса тӑраť. Ун ҫинҫе ҫамрӑксенҫен нумайӗшӗ ҫыру ӑсталӑхне вӗренме те пултарӗҫ. Ҫавӑнпа та поемӑн ҫитменлӗхӗсене тӗ мӗн пур вӑйпа кӑтартса памалла.

Илер-ха поемăн IX-мĕш пайне «Алапит ĕçки»-не. Çак пайа вуласа тухсанах есĕр хăвăртан хăвăр: ăçтан ку пай, «Хĕнхур айĕнђе» поемăран-и, йе урăх çĕртен-и?—тесе ыйтăр. Ђăнах та, Елкер çак пуйан ĕçкине кăтартакан пайра хăйĕн револђутсионер ђĕлхине, сисĕмĕсене пĕтĕмпех çухатаť. Çак пайра пуйансен ĕçки-çики ђухăнсен вăй-халне сăхнипе, вĕсене пусмăрланипе пулнине, пуйансен ырлăхĕ ђухăнсен хурлăхĕ çинђе шăтса ӳснине кăтартас вырăнне Елкер çак «йĕркеллĕ» ĕçке-çике итеалисатсилесе, илемлетсе кăтартаť. Кун пек карттинăсене епĕр П. Оççиппăвăн «Айтарĕнђе», Шупуççыннин «Йеркĕнĕнђе» питĕ аван куратпăр. Анђах, асăннă просветенисен тĕп çитменлĕхĕ çакăнта выртаť те вĕт! Аса илер-ха:

«Урхан ĕçки-çики ернерен ернене
Кĕрлесе çеç тăраť аслă пӳртĕнђе.
Ђӳклеме сăрине, ђимми куркине,
**Такам та ĕççе курнă** аслă ĕçкинђе».

«Йеркĕнĕн» 1-мĕш пайĕнђе çакăн пек вырăнсене алтăрпа ăссан та ăсса пĕтерес çук. Вĕсем пурте аваллăх сăнне ђĕртме хăтланса иртнĕ асаплă кунсенђи пуйансен тулли пурнăçпе сăвăланине çех кăтартаççĕ.

Елкерĕн те çак IX-мĕш пайра çавах. Çитменнине тата çак пуйансемех:

«Ан шухăшла, пуçăм, тек ан хускан,
Патша саккуђ урлă ай пуласшăн»...

тесе хурланса йурлаççĕ. Вĕсемех Пăкађав çинђен ырăпа асăнса калаçаççĕ. Анђах çак йурăсене, Пăкађав çинђен ыррăн калаçнисем пуйансемшĕн пĕрре те типлă йапала мар, вăл йурăсем, сăмахсем ђухăнсем хушшинђе çех вырнаçуллă пулма пултараççĕ.

Тепĕр çитменлĕхĕ—вăл патша «тарçисене»—тийеке, пурмиса, офитсере шупкарах кăтартнинђе, Алапит, Интер, Итапай, Ђакка, т. ыт. çакăн пек типсем нумайђђен асра йулакан типсем пулсан, патша тарçисенђен вулаканшăн нумайђђен асра йулакансем пĕрре те çук. Кашнийех вĕсенђен пирĕн умран иртсе кайаť, тем тĕрлĕ ĕçсем тăваť, анђах çак тискер ĕç тăвакансене хăйсене астуса йулма май çук.

Виççĕмĕшĕ—лекентăллă ĕçсем ытла та вăйлă тухса тăни. Ђакка Паххомккă патне тарнă вырăнтан пуçласа вăл йулашки хут «йал суђĕ» умне тăриђђен ĕçсем йумахри пек пулса иртеççĕ. Ку вырăнсенђе «ђĕрĕ пурнăçпа кĕрешӳ» сăнĕсем сахалрах, фанттаçи тени хĕррипе шай пулса тăкăнма пуçлаť. Ку, путех, автăр халăх хушшинђе çӳренĕ лекентă маттериалне çителĕклех хăйне пăхăнтарайманнинђен килет пулĕ.

Тăваттăмĕшĕ—автăрăн ђĕлхинђе вырăнти сăмахсем (провинтсиалисăм) йышлăраххи. Ђăнах та, кун пирки калаçма йывăртарах ĕнтĕ, мĕншĕн тесен, пирĕн литтераттурă ђĕлхи хăйĕн çитĕнӳ çулĕпе тин пыраť-ха, çавăнпа та пайан провинтсиалисăм текен сăмахсем ыран литтераттурă ђĕлхин тĕп фонгне кĕрсе вырнаçма та пултараççĕ.

Йулашкинђен, Елкерĕн çех мар, пирĕн мĕн пур ђăваш литтераттурĕнђи пысăк çитменлĕх çинђен. Вăл çитменлĕх—искусство фронђĕ, вăл шутра литтераттурă та, реконструкси вăхăтĕнђи хăвăртлăхсенђен йулса пыни. Вырăç-

сен пролеттари литтераттурӗнҗе ку ҫитменлӗхе пӗтерес тӗлӗшрен вӑйлӑ кӗрешнине, йулашки вӑхӑтра ҫитӗнӳсем те пуррине куратпӑр.

Пирӗн җӑваш пролеттари литтераттурӗнҗе җи малтан, пирӗн пролеттари поеҫине сотсиалисӑм хӑвӑртлӑхӗсемпе танлаштарассишӗн кӗрешмелле. Ҫак лосӑнка пурнӑҫа кӳртсен пирӗн поеҫи, литтераттурӑ рапоҗҗи класӑн, колхоҫнӗксен умӗнҗе пайан тӑракан сатаҗҗисене ӗҫе кӳртме вӑйлӑнах пулӑшӗҗҗӗ.

Историллӗ происветенисем ҫыракан автӑрсен те Демьян Бедный поетран вӗренмелли сахалах мар. Аса илер-ха унӑн ҫӗнӗрен «Слезай с печки» йатлӑ т. ыт. происветенийӗсене. Вӗсенҗе вӑл тем тӗрлӗ историллӗ маттериала илсе унӑн урлӑ пайанхи ҫитменлӗхсене хӗртет. Истори маттериалне, вӑл хут те хӑш вӑхӑтран пулсан та, лекентӑллӑ, йумахла маттериал пулсан та,—Демьян Бедный ӑна пӗтӗмпех пайанхи куна пӑхӑнтарать, пайанхи строиттӗлствӑшӑн усӑллӑ тӑвать. Пирӗн җӑваш литтераттурӗнҗе ҫех мар, вырӑссен те историллӗ происветенисем ҫырнӑ җух Д. Бедныйӑн ҫак пахаран паха меттӑҗӗпе усӑ курасси хӑйне тивӗҫлӗ вырӑнта тӑмаст. Историллӗ происветенисене сотсиалиҫӑм тӑвакансем умӗнҗе тӑракан сатаҗҗӑсемпе ҫыхас тесен, Д. Бедныйран вӗренес ӗҫе пуҫламаллах.

Елкерӗн поеминҗе те ҫак ҫитменлӗх җи пысӑк ҫитменлӗх пулса тӑрат. Анҗах, 6—7 ҫул кайарах ҫырма пуҫлана происветенири ҫитменлӗхсене, паллах, пайан ҫырнӑ происветенири ҫитменлӗхсемпе танлаштарма май ҫуккине те манма йурамаст. Елкер хӑйӗн малашнехи ӗҫӗнҗе сотсиалисӑм строиттӗлствипе таҗӑрах ҫыхӑнса ӗҫлӗ тесе шанас килет.

Совет сойусӗнҗи ӗҫхалӑхӗ, Комуниссен парттийӗ йертсе пынипе, сотсиалисӑмӑн кӗрешекен фронтра ҫӗнтерӳ хыҫҫӑн ҫӗнтерӳ туса пырать. Пӗтӗм тӗнҗе пуршуаҫийӗпе вӗсене сутӑннӑ сотсиал-фашиссем, меншевиксем, пуршуаҫи урине җуптуса унӑн сӗтелли ҫинҗен ӳкекен татӑксемпе тӑранса пӳрӑнма вӗреннӗ пуршуаҫи инттелекентсийӗ, вак-халӑхсем хушшинҗе пуҫӗсене ҫӗклеме тытӑннӑ натсионал-шовиниссем хӑйсен мӗн пур вӑйӗпе сотсиалисӑм строиттӗлствине тытса җарасшӑн, Совет сойусне тӗнҗе пуршуаҫи хӗҫ-пӑшалӗпе вакласа пайласшӑн ҫунаҫҫӗ. Ӗҫхалӑхӗ сотсиалисӑм еккономӗкӗн никӗсӗсене туса ҫитернӗ вӑхӑтра вӗсем мӗн пур пирӗн ҫӗршыва ӗҫхалӑхӗн йунӗпе шӳтересшӗн, йалсене, хуласене ҫунтарса ишсе пӗтересшӗн, рапоҗҗи класпа хресҗенсен тирне Колҗак, Тениккин, ытти шурӑ йанралсен саламаҗӗ сӗвсе илесшӗн тӑрӑшса «ӗҫлеҫҫӗ».

Ҫакӑн пек вӑхӑтра—иртнӗ «ырӑ» пурнӑҫӑн хӑрушӑ, тискер сӑн-сӑпатне кӑтартакан, патша вӑхӑтӗнҗи саламат сассине, ылханлӑ вӑхӑта аса илтерекен происветенине—усӑллӑ, вӑхӑтлӑ пиҗетленсе тухакан происветени тесе шутламалла.

---

Ответлӑ ретактӑр **Н. ВАҪАНККА.**

Реtколлеки җленӗсем: **И. КУҪНЕТСОВ, А. СОЛӐТТӐВ, ИВАН МУҖИ УЙӐП МИШШИ, ЙЕМ. САХХАРӐВ, МИТТА ВАҪЛЕЙӖ, П. Н. ОҪИППӐВ**

Тех. ретактӑр **А. ТЕМИТӐВ.**

## ТУПМАЛЛИ:


Стр.

1. Е. ЕЛЛИЙЁВ. „Çаран çинҫе“ (*отътъёрк*) . . . . . . . 3
2. АРК. ЁÇХЁЛ. „Çамрăк вăй“ (*поемă*) . . . . . . . . 22
3. В. И. КРАСНОВ (АСЛИ). „Тăвалла“ (*роман II-мёш кёнеки*) 43
4. ШАЛАНКĂ „Ытарма çук“ (*йурă*) . . . . . . . . . . 87
5. АЛАКЁР ВАÇЛЕЙЁ „Ураса“ (*пйессă*) . . . . . . . . 89
6. Н. ЙЕВТОККИМĂВ (*йуптарусем*) . . . . . . . . . . 132
   1. Акахвунпа кăрмахвун . . . . . . . . . . . . 132
   2. Аҫипе амăшё . . . . . . . . . . . . . . 132
   3. Ҫăпăркка . . . . . . . . . . . . . . . . 133
7. И. ÇЕРКЕЙЁВ. „Лакёрте“ (*тневникран*) . . . . . . . 134
8. С. ЕЛКЕР. Тёнҫе вăрçи кунёсем (*мемуар*) . . . . . . 142
9. Т. ТАНИЛĂВ. „Хёнхур айёнҫе“ историллё поемă (*крит. статйа*) . . . . . . . . . . . . . . . . 173



Редактор Чувашгиза Н. Васянка.
Сдано в производство 3-I—1933 г.
Подписано к печати 10-IV—1933 г.
Технический редактор А. Демидов.

Уп. Чувашлита № 1180. Заказ № 33. Тираж 4100 экз.

Ст. ф. б. 62×94. Об'ем 11,5 п. листов. 52.000 п. з. в п. л.